С(Чув)
У-99
23928-чув

Хветĕр Уяр

# Ҫăмах мехелĕ



Национальная библиотека ЧР
4-023928

КОНТРОЛЬНЫЙ ЛИСТОК
СРОКОВ ВОЗВРАТА

КНИГА ДОЛЖНА БЫТЬ
ВОЗВРАЩЕНА НЕ ПОЗЖЕ
УКАЗАННОГО ЗДЕСЬ СРОКА

Колич. пред. выдач

3 ТМО Т. 1 млн. 1171—79

23928-муб

Кф
К С(Чув)
У99

# Хветĕр Уяр

# Сăмах мехелĕ

**Писатель. Литература. Пурнăç**

Чăваш кĕнеке издательстви
Шупашкар — 1980

84.3 (Чув)
У99

23928-чув

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

ПРОВЕРЕНО
20

**Уяр Ф. Е.**

У99 Сӑмах мехелӗ.— Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1980.— 224 с., 90 п.

Кӗнекене писательпе унӑн ӗҫӗ-хӗлӗ, пултарулӑхӗ ҫинчен ҫырнӑ калавсемпе очерксем, статьясемпе тӗрленчӗксем, асаилӳсем кӗртнӗ

84.3 (Чув)

У $\frac{0733-070}{М136(03)-80}$ 47—80 © Чӑваш кӗнеке издательстви, 1980 ҫ.

# КАЛАВСЕМ

## КĔНЕКЕ

Хветут пиччĕшĕ Микулай хут пĕлменнисен шкулĕнче вĕренет. Паян вăл кĕнеке илсе килнĕ те вулама хăтланса ларать.

— «Хĕ... хĕл-ле... му... мул-кач... ял ҫывă... ҫывă-хĕнче пу... пу-рăн-нă»,— тет вăл асаплăн, сăмахсене тытăнчăклă калаҫакан ҫын пек вакласа. Вара урай шăлакан шăллĕне ăнлантарса парать: — Мулкач вăл пирĕнле куян пулать, ҫавна та пĕлместĕн.

Кĕнекери ӳкерчĕкне куриччен ăна вăл хăй те пĕлмен-ха. Ҫитĕннĕ Микулай чӳрече патне пĕшкĕнет те маларла вулама тытăнать:

— «Тĕт... тĕм пул-сан... мул-ка-ач...» — тăсать вăл.

Хветут итлемест ăна. Ун вăхăт ҫук. Урай шăлса тухать ак вăл. Унтан ҫӳп-ҫап тăкса кĕрет. Ашшĕпе амăшӗ таврăннă ҫĕре урайне сĕрсе хурсан та пăсмастчĕ. Выльăх пăхас хуйхă ҫук-ха, ун паян — пиччĕшĕн черечĕ. Тусĕ патне каҫĕччĕ Хветут урам урлă — сиверен хăрать. Тӳрех сăмсинчен ярса илет ăна хĕл мучи. Сăхманĕ те ун ала пекех ав.

— «Мул-кач... хă-рах... хĕл-хине тă-рат-рĕ»,— илтĕнсе каять ăна пиччĕшĕн сасси.

— «Хăлхине» мар-и? — тӳрлетме пăхать Хветут.

— Ак ҫакна-и? — тесе, пиччĕшĕ Хветута хăлхинчен шăтăр пăрать.— Пĕлмеҫҫĕ пуль сансăр. Кĕнекере ҫапла ҫырнă. «Хĕлхине» тенĕ,— кĕнекерине юриех пăсса вулать Микулай.

Еҫне тирпейлесе пĕтерсен, Хветут сентре ҫине хăпарса выртать. Ҫилленмест вăл пиччĕшне. Пысăккисем хăйсем ҫавăн пек вĕсем. Пурин те аллисем ҫӳлте. Ӳссен ак Хветут та ҫапăҫма тытăнать пуль-ха. Ҫитменне айвантарах вăл. (Мăннисем ҫапла калаҫҫĕ ăна.) Айвана кам ӳркенмест, ҫавă кӳрентерет.

Ашшĕпе амăшĕ пирки шухăшлать Хветут. Çĕрле таврăнма пулнăччĕ-ха вĕсем. Кучченеç парса ярать ĕнтĕ ун валли аппăшĕ. Халь çывăрса илет те ак Хветут çĕрле куç хупмасăр кĕтсе ларать.

Анчах ыйхи çук та çук ун. Кăштах шухăшласан, мĕншĕн ыйхă килменнине те тавçăрса илет ача. Піччĕшĕ кĕнеке вуланине итлесе выртать-мĕн вăл. Микулай пўрнипе йĕрлесе пырса кĕнеке вуласа ларать, Хветут ăна курса пырать. Курса çеç те мар-ха, вăл хăй те çавăнта. Кĕнекере çырса кăтартнă çĕрте.

Уй варринчи хĕллехи каç. Таçта кайма тухнă тиевлĕ лавсем. Лаша тулхăрни, çуна ўречисем çăтăртатни илтĕнет. Çул хĕрринче куян ларать. Вăл лавсем иртсе пĕтессе кĕтет. Куян пуçĕ тĕлĕнче сивĕ пăс тăрать, ун витĕр пысăк çутă çăлтăрсем курăнаççĕ. Хветут ĕнсине хыçалти лаша сывлăшĕ кăтăклать пек.

Ача тўрленсе ларма хăтланать те, маччана лексе, хăй ăçтине аса илет. Тĕлĕнет вăл. Мĕн чĕртсе тăратрĕ ун пиччĕшĕ вуланине?

Хветут сентре çинчен урайне анма тытăнать. Микулая вулама чарас мар тесе, хуллен анать. Урисене çўлтен кăмака çинелле тăсать те кĕтсе тăрать. Кăмака сакки çине пусать те тата тепĕр хушă хускалмасть. Çĕрте те вăл пиччĕшĕ çумне мар, алăк патĕнчи кравать çине ларать, пиччĕшĕ еннелле мар, шăпăр шăтăкнелле пăхать.

Шăллĕ мĕн тума аннине Микулай пурпĕр ăнланать. Вулама чарăнать те вăл Хветутран ыйтать:

— Сана мĕн кирлĕ?

— Мана-и? — тет лешĕ, ним калама аптраса.— Темĕн...

— Вуланине итлесшĕн эс. Çапла-и? Кала тўррипе.

— Çапла.

— Эппин, акă мĕн. Малтан эс маншăн карта хырса кĕрен. Вара курăнать унта.

— Эсĕ унччен вуламăн-и?

— Ан хăра, вуламастăп.

Хветут васкаса амăшĕн кив кăçатне, хăйĕн сăхманне, çиелтен ашшĕн кĕрĕк лăстăкне тăхăнать те картишне вирхĕнсе тухать. Кĕрсен, вăл алăк патĕнчех кĕпе вĕççĕн курăнса каять. Тумтиррисем хăшĕ кăмака çине, хăшĕ урайне ыткăнаççĕ.

— Тумтиррўне пуçтарса çак.

Хветут сăхманĕпе кĕрĕкне алăк патĕнчи çекĕле илсе

çакать. Алсишне кăмака шăтăкне чикет. Çĕлĕкне пуçне тăхăнать те хăюллăнах пиччĕшĕ çумне пырса ларать.

— Вула малалла.

— Сан çӳçсĕр юлас килет-им? — тет Микулай, Хветут пуçĕнчи çĕлĕке хывса.— Юрамасть пӳртре çĕлĕкпе.

Хăй такăнса вуланине пĕлнипех васкамасть пулас Микулай. Юлашкинчен пурпĕрех кĕнекине тытма тивет. Каллех сăмахсене ваклама тытăнать вăл. Анчах Хветут асăрхамасть ăна. Ун пуçĕнче пĕтĕмĕшле картина пулса пырать.

...Обоз иртсе пĕтсен, куян çул урлă каçать те майĕпен анкартинелле лăнкăштатать. Обозри усал анчăк куяна курнă-мĕн, пĕрех вĕрсе ярать те ун хыççăн ыткăнать. Куян кĕртсем çийĕпе чупать, ăна чăтать кĕрт. Йытă юр ăшне путать те чарăнать. Унран тăрăхланă пек, куян та чарăнать. Кăштах ларса тутине сиктеркелет, шăршласа пăхать те кайăк (Хветутсен енче куяна кайăк та теççĕ) хуллен анкартинелле сулăнать. Çара çĕрте калча çинче икĕ куяна тĕл пулать вăл. Лешсем выля-выля çисе çӳреççĕ. Пирĕн куян та юлташĕсемпе вылякалать, шăн юра чавса, калча çиет. Ялта пĕр сас-чĕв те çук-мĕн, хăй çутисене те сӳнтерсе пĕтернĕ. Таçта пĕр ача макăрни те сивĕпе пӳрт пĕрени шартлатса çурăлни çеç илтĕнет...

Хветут тĕлĕнсе хытсах каять. Мĕнле пурте çав тери ĕненмелле, куçа курăнмалла! Чĕрипе туять ача — йăлтах çапла вăл. Нимле те урăхла мар, шăп кăна çапла.

— Хăш тĕлте вăл пӳрт пĕрени çурăлни? — тесе, Хветут кĕнеке çине тинкерсе пăхать.

Микулай та тĕлĕнет.

— Мĕнле пӳрт пĕрени? Ак тата санпала.

— Ара, хăв вуларăн-çке?

— Кĕнекерех пуль, эппин. Эп ăçтан пĕлем.

— Куянне тытса курам-и, пичче?

— Хăш куянне тата? Ун хӳри кĕске, тыттармасть вăл.

— Кĕнекине кăтартмастăн та...

— Ăна тытма малтан аллуна çумалла-ха.

Хветут йăпăр-япăр аллине çуса пырать.

— Халь юрать-и?

— Йӳтетмĕш эс, ача та мар. Ме! — тесе, Хветута хупнă кĕнекин пĕр кĕтессине тыттарса кăтартать Микулай.

Кĕнекен пĕр хĕррине çеç тĕксе пăхнипе Хветутăн ни ăшĕ канмасть, ни кĕнекин вăрттăнлăхне пĕлмест вăл.

Лăпланма мар, тата ытларах хускалса каять кăна.

— Пичче тетĕп, тепĕр хут вуласа пар-ха ĕнтĕ.

— Халь анчах вуласа пĕтертĕм-çке. Унта урăх халапсем те пур.

— Халап мар вăл, чăн пулни. Эсĕ çакнах тепре вула. Паçăр тăнламарăм эпĕ.

— Хăлхасăр пупшăн икĕ хут чан çапмаççĕ.

— Вуласа кăтарт ĕнтĕ.

— Қай, ан çыпăç. Сурăхсене тухса утă антарса пар ав.

— Вĕсене эп паçăрах апат патăм. Çинчĕкне те пуçтарса хутăм. Қартине те хыртăм. Ыран та хырăп.

— Хăвăн черетӳнте-и? Тата кам хыртăр? Ытла чееçке эс. Аппа кучченеçне, хăвăн тӳпӳне, çитерме пулсан, вулăп.

«Тытман тилĕ тирне сутас-и?» — шухăшлать Хветут ашшĕ сăмахĕпе. Анчах пĕлес-илтес килни çĕнтерет-çĕнтеретех ун.

— Юрать, вула,— тет вăл татăклăн.

Пиччĕшĕ çавна çеç кĕтнĕ-мĕн. Вăл Хветута çупăрласа илет.

— Ан хăра, эп юри каларăм. Хам пая та сана парăп, санăн ӳсмелле-ха.

Вара каллех ниçта кайса кĕрейми хĕпĕртесе те тĕлĕнсе итлесе ларать Хветут. Сасартăк асамлă тĕнче уçăлчĕ пек ун куçĕ умĕнче. Қĕнекери ытарма çук тĕнче. Микулай: «Мулкач лупашкана анса шăтăк турĕ, унта кутăн май кĕрсе ларса, хăлхисене çурăмĕ çине вырттарчĕ те куçне хупмасăрах çывăрса кайрĕ», тенĕ тĕлте Хветут пиччĕшне пырса ыталаса илет.

Хăй çĕрĕпе çывăраймасăр ирттерет.

Мĕне çитсен те, ӳсерехпе çак кĕнекене тупса илме тĕв тăвать вăл. В. И. Ленин вилнĕ хĕл шкула çӳреме тытăнать ача. Вулама вĕренет. Тупать çав кĕнекене. Çемçе сăрă хуплашкаллă çеç-мĕн вăл. Хучĕ те чӳпĕкленсе тăрать. Ӳкерчĕкĕсене лăп-лап каскаласа тунă. 1921 çулта Хусанта чăвашла куçарса кăларнă ăна. Çиеле çапла çырса хунă:

Л. Н. ТОЛСТОЙ

Ачасем валли çырнă калавсем

Хветут ăна хăйĕн чи хитре тăркăчĕпе улăштарса илет.

*1978.*

## ХУПАХРИ ТЫТĂÇУ

## (1840 çул)

«Çук, чăвашран нимĕн те пулмасть,— пат татса хучĕ эрех ĕçсе хĕремесленсе кайнă этем, хăйпе килĕшменнисемпе çапăçма хатĕрленнĕ пек, пысăк чышкине вăрăм сĕтел çине хурса.— Çук, нимĕн те пулмасть!» — терĕ те вăл тепĕр хут, хăйне хирĕç ларакан çамрăк йĕкĕт çине чăркăшса пăхса илчĕ.

Лешĕ умĕнчи тулли эрех черккине сĕтел варринерех куçарса лартрĕ.

«Мĕншĕн нимĕн те пулмĕ?» — терĕ вăл, юлташĕ çине лăпкăн та тăп-тăр уррăн пăхса.

«Çук пирĕн нимĕн те, çук, çук, çук! Илтетĕн-и? Пуш-пушă та яп-яка. Кирек ăçталла пăхсан та, пушă хир. Таврара çеç мар, чунсенче те пирĕн сўннĕ кĕл кăна. Мана ĕненмесен, ак хуçаран ыйт, эппин,— тесе, ўсĕрри сĕтел çинчи аллине эрех черкки еннелле тăснăччĕ — сасартăк каялла туртса илчĕ.— Э, шуйттан мурĕ, ку манăн мар-çке. Эсĕ ма ĕçместĕн тата? Çынсенчен ăслăрах пулас тетни?»

«Илсе парас-и сана? — терĕ те хитре йĕкĕт, юлташĕ каласса кĕтмесĕрех, хупах хуçине кăчăк туртса чĕнсе илчĕ: — Тепĕр пулăштух ярса кил-ха, наччас».

«Манăн яниех пур, хатĕрех»,— тесе, хуçа пушă черккене шăкăр-шăкăр-шăкăр эрех тултарчĕ. Ĕçес текенни, ўсĕртерехххи, пĕрре ун çине, тепре эрех çине пăхса илчĕ те темшĕн ĕçмерĕ, кĕсйинчен чĕлĕм кăларса чĕртсе ячĕ. Юлташне вăрçтарас мар тесе-ши, çамрăкки хăй черккинчен кăшт тăррине татрĕ. Пĕр хушă пўлĕмре лампа çăтăртатса çунни те урамра ача-пăча алхасни çеç илтĕнсе тăчĕ.

Вĕсем, çак икĕ çын, каç пулнăранпах ĕнтĕ Атăл хĕрринчи пĕчĕк хупахра лараççĕ. Хупахĕ улах çĕрте, Чикме хулин пристанĕ патĕнче, çыран хĕррине аяла вырнаçнă. Сулла унта иртен-çўренсемпе бурлаксем ĕçсе çиеççĕ. Хĕлле кĕрĕшсе ĕçлекен платниксем татăла пĕлмеççĕ. Атăл шăннă-шăнман пуçтарăнаççĕ те вĕсем çуркунне пăр кайма тытăничченех каскалаççĕ — баржа-кимĕсем юсаççĕ, çĕнĕрен тăваççĕ. Йывăç турттаракансем унта, сулă çыхакансем... Вырăсĕ, чăвашĕ, çармăсĕ... Паян иккĕмĕш кун уяв та, халăх тăва, хулана хăпарнă.

Ку икĕ çынна, ав, улах вырăн кирлĕ пулнă-мĕн.

Хупах лутра маччаллă, чĕрĕ. Икĕ чӳречине те шал енчен тимĕр решетке тыттарнă. Алăк урлашки те тимĕртен. Хупахăн шалти пуçне хăмасемпе пӳлсе лартнă та кăкăр çӳллĕшĕнчен çӳлĕк пекки тунă. Стена çумĕнче те çӳлĕксем. Унта эрех кĕленчисем йăлтăртатаççĕ. Варри тĕлĕнче — пурăнмалли пӳлĕме кĕмелли алăк. Малти стойка-çӳлĕк çине кӳпшек питлĕ çамрăк çын чавсаланса тăнă. Вăл — хупах хуçи. Сĕтел хушшинчи икĕ çын калаçма тытăнсанах, унăн куçĕсем те эрех кĕленчи пек тĕксĕммĕн йăлтăртатма тытăнаççĕ. Вăл хăлхине тăратсах итлет, анчах калаçăва хутшăнмасть. Эрех ĕçмест вăл, чĕлĕм туртмасть, кампа та пулин ятлаçнă тенине те никам та илтмен ăна. Хупахра ятлаçу-харкашу тапрансан, хуçа урай варрине тухса тăрса питне макăрнă пек кăна тăвать — çапăçу чарăнса та ларать. Ютран килнĕ çын пулсан çеç, кунти йăла-йĕркесене пĕлмесĕр çаплах çапăçма пăрахмасан, çамрăк хуçа ăна кула-кулах пĕрре ыталаса чăмăртать те сывлайми пулса ларнăскере алăк патне кайса хурать. Лешĕ, тăна кĕркелесен, хуçана эрехпе хăналама тытăнать, йăпăлтатса калаçать, хуçа — йышăнать. Эрехне вăл çынсен куçĕ умĕнчех хăйĕн савăтне каялла ярать те çавăнтах ăна тепĕр хут сутать. Пирус парсан, пирус та илет. Анчах пăртакран ăна та çавăн пекех сутать.

Çамрăк тенĕрен, вăл ытла çамрăках та мар пулас. Сахалтан та вăл пĕр вăтăр пиллĕк — вăтăр саккăрсенче. Е хĕрĕхеллех çывхарнă-и. Пичĕ кӳпшеккипе кăна вăл темле ача сăнарлă пек курăнать.

Çынсем калаçма чарăннă хушăра хуçа часрах мĕн тумаллисене тума васкать: ăна-кăна илсе кĕрет, апат лартса парать. Калаçу хускалсанах, вăл хăй вырăнне кайса тăнă та, хуралçă пек, пĕр хускалмасăр итлесе тăрать.

Халĕ вăл тепĕр пӳлĕме тухрĕ. Алăкне уçă хăварнă та, пӳрте тип çупа ăшаланă пулă шăрши кĕрсе тулчĕ.

Икĕ юлташран асли кăшăлласа каснă хура çӳçлĕ, пĕчĕк хура сухаллă. Пичĕ ырхан. Шалти куçĕсем çивĕччĕн пăхаççĕ. Ку çын та пĕр хĕрĕхсенчен ытлах мар пулас, анчах çав тери тарăхнă, кӳтсе çитнĕ сăнлă та хăй çулĕнчен аслăрах пек курăнать. Тарăхăвĕ вара унăн пĕтĕм сăнне çапса лартнă. Калаçнă чухне кăна мар — калаçасса вăл яланах тенĕ пек çĕтĕлсе те чĕрре кĕрсе, çынтан мăшкăлласа калаçать,— апат çинĕ вăхăтра та,

шухăша кайса урамалла пăхнă самантсенче те пичĕ çинчен хаяр сăн каймасть, çаплах чунĕ тулашни, вĕчĕрхенни сисĕнсе тăрать. Çынна темĕнле курăнман çатма çинче хĕртеççĕ тейĕн çав.

Тепри — çамрăк йĕкĕт. Вăл имшер кĕлеткеллĕ, синçе мăйлă, шуранка. Те унăн çаплах ачалăх сăнĕ кайса пĕтмен-ха, кĕлетки-çурăмĕ çирĕпленсе çитеймен, те чирлĕрех вăл. Хăмăр куçĕсем çеç йĕкĕтĕн мăн çынла тĕпчесе пăхаççĕ. Сулахай куçĕнчен кăшт аяларах авăнчăк çĕвĕк палăрать. Ку вăл Чикме хулинчи земски полицинче çыруçăра ĕçлекен чăваш ачи Спиридон Михайлов. Вăл паян хăй çирĕм тултарнине паллă тума килнĕ. Унăн юлташĕ те чăваш. Анчах вĕсем, вырăс хушшине тухнă чăвашсен йăлипе, пĕли-пĕлми те пулин вырăсла калаçма тăрăшаççĕ. Михайловăн чиперех тухать. Ватти вара хăй мĕнле калаçнине сăнама хăнăхнă пулас, хăшпĕр çĕрте пўлĕнсе чарăна-чарăна тăрать, кирлĕ сăмах тупайманнипе тарăхса хĕрелсе каять. Вырăсла калаçма вăл халăх хушшинче пурăнса мар, ытларах кĕнеке вуласа вĕренни сисĕнет. Вăл хăй чăваш иккенне пытарма хăтланса кĕнекесенчи пек «тĕрĕс» калаçма тăрăшнăçем тата ытларах чăвашне палăртать. Шăртланса çитнĕ самантсенче çеç вăл сăмахсене ним пăхмасăр перет, перет.

Вĕсем камсем, çак икĕ чăваш? Асли, Янтул, тепĕр тăват-пилĕк уйăхран Шурча вăрçине хутшăнса пуçне хурас пăлхавçă. Вăл мĕн хăй астăвассах çынсем патĕнче пурăннă — усравра, тарçăра... Хуçа ачисем вĕреннине илтсех вĕсенчен иртсе кайнă. Ал айне мĕн лекет — вуланă. Мĕн илтнĕ — астуса юлнă.

Хăйĕнчен чылай аслă хĕрпе пĕрре «çылăха» кĕнĕ те вăл, ăна авлантарса янă. Çапла пупăн хăрах куçлă ватă хĕрĕ упăшкаллă çын пулса тăнă, «çын ретне» кĕнĕ. Панкратти атте те парăмра юлман — çĕнĕ мăшăра Чикме хулинче çурт илсе панă. Пĕр условие çех пăхăнмалла пулнă Янтулăн — хăй чăвашне палăртмалла мар. Çур çула яхăн чĕлхесĕре персе çўренĕ вăл, анчах урăх тўсеймен: эрех пехлесе тултарнă та килне чăваш юрри юрласа çĕмĕрттерсе пырса кĕнĕ...

Кантурсенче те ĕçленĕ вăл. Анчах кунта та нумай тытăнса тăрайман. Ăна кантуртисем килĕшмен, вăл кантуртисене килĕшмен. Халĕ вăл арăмĕ илсе килекен ĕç хучĕсене çĕрĕ-çĕрĕпе килте куçарса çырса ларать. Кăнтăрла çывăрать е, арăмĕпе ачисене курас мар тесе,

Атăл хĕрне анать. Килтисем те юратмаççĕ ăна, вăл чăваш пулнишĕн çынсенчен вăтанаççĕ.

Спиридон Михайловăн йăлтах малта-ха. Пурăнмалли ун тата çирĕм çула яхăн. Çав хушăра вăл авланать, тĕпчевлĕ ĕçсемпе калавсем çырма тытăнать, чăваш пурнăçĕ çинчен кĕнекесем кăларать...

Хупах хуçи сĕтел çине çатмапа ăшаланă пулă пырса лартрĕ. Михайлов каллех эрех ĕçнĕ пек турĕ те пуллине астивсе пăхрĕ. Ун юлташĕ эрехне çеç·ĕçрĕ. Чĕлĕм кĕлĕ шăлаварĕ çине тăкăнчĕ — çын ăна-кăна асăрхамарĕ те. Чавси йĕпе çĕре лекрĕ — ăна та сисмерĕ. Тен, сиссе те ним вырăнне хумарĕ-ши?

«Эсĕ ĕненмен Фома пекех»,— терĕ ăна Михайлов, ăшшăн кулкаласа.

Çын чĕркуççийĕ çинчи кĕлне вăшт-вашт шăлкаларĕ те тасатас вырăнне тата ытларах сĕркелесе пĕтерчĕ. Ку ăна пушшех тарăхтарса ячĕ пулас.

«Мĕне кирлĕ кунта Фома! — тесе, вăл куçне-пуçне хаяррăн йăлкăштарса илчĕ.— Алăпа тытса пăхмалли, куçпа курмалли мĕн те пулин пулсан, эп ăна хамах куратăп, суккăр мар. Чăваш, чăваш, тесе ларать, мĕн пур унăн, сан чăвашун, мухтанмалăх? Вулама-çырма пĕлмест вăл, хулисем çук унăн, историйĕ те çук. Нимĕн те çук! Кĕллинче те ав мĕн калană: «Пирĕн кĕллĕмĕре илт, эпир кĕнекеллĕ çынсем мар. Пĕлни пулĕ, пĕлменни пулĕ, çырлах!» — теççĕ. Çăпата тума ăста чăваш. Çавăнпа кăштах мухтанма пулать. Манăн асатте пурччĕ те, ун патне пĕтĕм таврари хĕр çăпата тутарма çӳретчĕ вара. Качча тухнă чухне ун çăпатине сырса каяйманнисем ĕмĕр тăршшĕпе ӳкĕнетчĕç, тет. Ну, тӳррипе каласан, хăй те ĕçлетчĕ ĕнтĕ! Пĕр-пĕр пырсан, кăтартăп-ха эп сана. Çăпата мар, чăн-чăн искусство произведенийĕ темелле. Урана сырса сая яриччен хул урлă çакса йăтса çӳрес килет... Ытти енчен эпир хăй камран çуралса ӳснине пĕлмен Ивансем кăна, тусăм. Хăть çиллен эс мана, хăть ан çиллен. Шăпăр илмелле те пире Раççей тăрăх сапаласа ямалла. Вырăс хушшине лекни вырăса тухтăр, çармăса килни çармăспа хутăшса кайтăр. Çавă кăна! Хăйĕн ун нимĕн те çук».

Михайлов ирĕксĕртерех хĕн кулса ячĕ.

«Ку сăмаха пуçласа санран илтнĕ пулсан, эпĕ шутсăр тарăхса каяттăмччĕ пулĕ, ача. Халĕ унччен вуланисене аса илтĕм те, атя, лĕпĕртеттĕр, терĕм. Татах пур-и сан каламаллисем?»

Асли йёкёт çине кăлин пăхрĕ те хĕрелсе кайнă куçĕсене çара аллипе сăтăрса илчĕ.

«Эс асăрханса перкелеш, йĕкĕт. Атту эпĕ эс тӳрешарине те пăхса тăмăп. Мĕн тени вăл «лĕпĕртеттĕр» тени? Тата эпĕ саншăн ача та мар».

«Вăл юмахĕ çапла пырать, Янтул пичче. Шăпăрĕ пирки калас-тăк, вăл сан шухăшу мар, ăна санчченех каланă. Çырса та хунă».

«Ман шухăша çырса хунă-и? Мĕн сӳпĕлтетсе ларатăн эсĕ! Хăшĕ ӳсĕртерех пиртен?»

«Никам та ӳсĕр мар, Янтул пичче. Паçăр эс каланă сăмахсем çĕнĕ мар, тетĕп-çке. Чăвашсене курайман улпутсем ăна санран малтан каланă. Пĕркун мана пĕр учитель темле «Ученые записки» ятлă кĕнеке пачĕ те, çавăнта чăвашсем валли кĕнекесем кăлармалла мар, чăвашсене хăйсене те пĕтермелле тенĕ. Тепри чăвашсене выльăхпа танлаштарать».

«Эсĕ мана улпутпа танлаштаратăн иккен. Ну, тавтапуç сана, Михайлов. Кĕтменччĕ кун пек чыса».

«Эпĕ те санран ху çине ху сурасса кĕтменччĕ. Хăюллă çын, ĕç хурчĕ — çавăн пек калаçса ларать. Мĕскĕн чунсене эпĕ кунта, Чикме хулинче те, куркаланă. Вĕсем хăйсен мĕлкинчен хăйсем хăраса çӳреççĕ. Хăйсем чăваш иккенне палăртас мар тесе е чăвашсене юратманнине кăтартса ырă ят илтес тесе, тăван ашшĕсене сутма хатĕр. Иудăсем ĕлĕк те пулнă, ыран-тепĕр кун та пĕтмĕç-ха».

«Ахалех мухтатăн эс мана, йĕкĕт. Пурпĕрех хăвăн тĕнне куçараймастăн. Эп сана хам шухăша каласа патăм. Килĕшет-и вăл сана, килĕшмест-и — сан ирĕк».

«Вăл кам шухăшĕ иккенне каларăм вĕт эп сана».

Асли, Янтул текенни, кӳ! хĕрелсе кайса, сĕтеле карт туртрĕ те эрех кĕленчине йăвантарса ячĕ. Эрехĕ нумаях тăкăнса ĕлкĕреймерĕ, сĕтел варрине кусса çитнĕ кĕленчине Михайлов тытса тăратса лартрĕ. Черкки урайне ӳксе ванса кайрĕ. Михайлов пичĕ нимĕн те улшăнмарĕ. Вăл арки çинчи тĕпренчĕксене тасатрĕ те сĕтел хушшине тӳрленсе ларчĕ.

Хупах хуçи вырăнтан та тапранмарĕ.

«Ну, юрĕ, сан шухăшу пултăр,— терĕ Михайлов лăпкăн.— Халь ĕнтĕ ман шухăша итле. Мĕншĕн эсĕ чăваша нимĕн те пĕлмест тетĕн? Элек-и ку сан е çав тарăхăвах тăсăлать-и? Чăвашăн тĕлĕнмелле тĕррине ăçта хурас

тетĕн эсĕ? Чăваш тĕррине, чĕнтĕрĕсене выставкăсем валли Питĕре илсе каяççĕ, ют патшалăхсенчен киле-киле илеççĕ. Тата юмах-халапĕ, ташши-юрри мĕн тĕрлĕ! Çук, чăваш халăхĕ нихăш енчен те катăк мар. Вăл ĕçчен, сăпай. Кăштах вĕрентес пулсан, ун ывăл-хĕрĕсем ăмăрткайăк пек çĕкленмелле».

«Каларĕ! Вĕрентсен, упа та ташлама вĕренет, тет»,— тăрăхласа хушса хучĕ Янтул текенни.

«Упа ташлама вĕренсен те, вĕçме пултараймасть, ун çуначĕ çук. Этемĕн шухăш-ĕмĕчĕ çунатлă, эс ахалех тăрăхласа ларатăн, Янтул пичче. Пирĕн халăх халь шурă хут пек. Унта темĕн те çырма пулать».

Янтул Михайлов çине интересленсерех пăхса илчĕ.

«Пăх-ха эсĕ... Тăп-тăр ухмахах мар-çке эсĕ, шăллăм. Ну, юрĕ, ырра-и, усала-и, мана чăвашла калаçма вĕрентрĕн ĕнтĕ. Вăл шурă хучĕ çине мĕн çырас тетĕн вара эсĕ? Мĕнле чĕлхепе çырăттăнччĕ унта?»

«Вырăссем вырăсла вĕренеççĕ, тутарла та, çармăсла та мар. Нимĕçсем е французсем те хăйсен чĕлхипе вĕренеççĕ, теççĕ. Чăвашсене те эпĕ çырма-вулама чăвашла вĕрентĕттĕмччĕ. Унсăр хăйсен сăвви-юррине, юмахĕ-халапне мĕнле çырĕç вĕсем? Вырăс патшалăхĕ варринче пурăнаççĕ тесе, çине тăрсах вырăсла та хăнăхтарасчĕ. Вырăс ăслăлăхне тахçантанпа пуçтарса пыраççĕ, вăл пирĕн çынсене те юрĕччĕ».

«Чăвашла вĕренни ниме те кирлĕ мар,— терĕ Янтул çĕтĕлсе.— Сăр урлă каçсан, чăвашла ыйтнипе сана никам та пĕр татăк çăкăр памасть. Пурпĕрех пĕтмелле вăл хăçан та пулин. Эпир Атăл хĕрринчи пĕр ывăç вĕт чул кăна. Пĕр хум пырса çапмалăх та çук».

«Пурпĕрех вилмелле тесе, çын хăй çуралсанах шыва сиксе вилмест-çке,— терĕ Михайлов, тарăхма тытăнса.— Ман шухăшпа, этем тени хăйне хисеплеме пĕлтĕр. Кашниех хăйне çын тесе шутлатăр, вара тин унран мĕн те пулин кĕтме пулать. Капла, эс каланă пек, кашни утăмрах кама сутăнас-ши, ăçта куçса каяс-ши, мĕнле халăх тĕнне йышăнас-ши тесе юхха хĕрарăмла кускаласа çӳресен, хăвна ху та хисеплеме пĕлмесен, паллах, сана та ыттисем хисеплемеççĕ. Çын хăйĕн вăйне шансан çеç мĕн те пулин тума пултарать. Ыйткаласси пирки каластăк, ăна эп нимле чĕлхепе те ыйтмăттăм. Çын хăй ĕçлесе çитĕр».

Михайлов питне тĕмпĕл-тĕмпĕл хĕрлĕ çапрĕ. Вăл чарăнчĕ те, те килне кайма хатĕрленсе, те хăйне ырă

мар туйнипе ĕçлĕ пулнă пек кăтартса, йӳле янă кĕрĕкĕн аркисене хуплаштарчĕ, хăй çумне хунă çĕлĕкне аллине тытрĕ.

Қалаçу таçта сапаланса кайрĕ, çывăх туйăм та çуралмарĕ. Қăштах курпунне кăларса ларнă Янтул Михайлов çине çаплах юратмасăр пăхать-ха. Куçĕсем те унăн паçăрхи пекех хĕм сирпĕтеççĕ. Вăл çине-çинех чĕлĕм мăкăрлантарать, пысăк аллипе çӳçне сăтăркаласа илет. Михайлов хускалнине вăл курмарĕ те темелле. Хăй парăнасси-сутăнассисем çинчен каламан пулсан та, Михайлов сăмахне хирĕç Янтул нимĕн те шарламарĕ. Ăна халь çĕнĕ шухăш çавăрса илнĕ пулмалла. Тĕрĕссипе, паçăртанпах, паçăртанпах та мар-ха, тахçантанпах тĕлкĕшсе тăракан шухăш канăç памасть пулмалла ăна. Тен, вăл кунта та çав ĕмĕтпе килнĕ мар-и. Михайловпа тавлашассин сăлтавĕсенчен пĕри те, тен, кăвар пек вĕри шухăшах пулман-и.

Вăл, чăн та, тем калама хатĕрленсе, малтан хăйне хавхалантарма сĕтел çине юлнă черккипе пĕр черкке эрех шалт ӳпĕнтерме ĕлкĕрнĕччĕ кăна, кĕтмен чăрмав сиксе тухса, ĕçе йăлтах урăх еннелле пăрса ячĕ. Вĕсем калаçнине сывламасăр итлесе тăнă хуçа, çĕмрĕкки вырăнне тепĕр черкке йатса, сасартăк сĕтел патне пырса тăчĕ. Черккине вăл Михайлов умне лартрĕ те сарлака питне тата ытларах сарса ячĕ.

«Хе-хе-хе... Мыскараçăсем эсир, господа... Чăнах, ара».

Тĕлĕнсе кайнă Янтул çăварне карса пăрахрĕ.

«Кур, шăллăм, Валаам ашакĕ сас пачĕ!»

Михайлов та хуçа еннелле пуçне каçăртрĕ.

«Эсир ним çукран нимĕр юрса ларатăр,— терĕ хуçа, кулас килмен çĕртен кулкаласа, çĕлен сăхнă пек, хĕсĕк куçĕпе пĕрре пĕрин çине, тепре теприн çине сиввĕн пăхса.— Мĕне кирлĕ вăл — чăваш чĕлхи? Кама мĕн парать вăл? Чăвашĕсем те, вĕсен чĕлхи те никама та кирлĕ мар. Чăрмав кăна кӳреççĕ вĕсем. Эпĕ пĕр чăваш ялĕнче пилĕк çул пурăнса пилĕк сăмах вĕренеймерĕм. Ма тесен, кирлĕ мар вăл мана»,— терĕ те хуçа сĕтел çывăхĕнче çакăнса тăракан лампине пăрса пĕчĕкletsе хăварчĕ. Çути лăп-лăп-лăп тукаларĕ те сӳнсе ларчĕ.

Пăч-тĕттĕме тăрса юлнă Янтулпа Михайлов анăраса ним тума пĕлмесĕр ларнă хушăра тĕпелтен каллех хуçа сасси илтĕнчĕ:

«Кайăр тухса, господа, манăн ыйхă килет. Усламĕнчен ытла сиенĕ сиртен. Çăва патне...»

Малалли ĕçсем куç хупса илнĕ хушăра пулса иртрĕç. Тарăхнипе чĕтреве ернĕ Михайлов çĕлĕкне тăхăннăччĕ кăна, Янтул тенкелĕ хуçа тăнă çĕре пырса çапăнса чанкăртатрĕ. Унтан хăй айĕнчи вăрăм сакка йăтса илнине сисрĕ Михайлов. Вăл сак та таçта кайса çапăнчĕ пулас, темĕн ӳкни, темскер ванса кайни илтĕнчĕ. Унтан ăна такам ĕнсерен çавăрса илсе çĕклерĕ...

Михайлов юр ăшĕнче тăна кĕчĕ. Вăл тăрса силленчĕ те юлташне тăма пулăшрĕ. Янтул çĕлĕксĕрех-мĕн. Ёнсе хыçне, çанăсем ăшне юр кĕрсе тулнă. Çӳлтен те юр вĕçтерет, çил вĕрет. Янтул пуçĕ кĕçех шурă мĕлке пек пулса кайрĕ.

«Ну, мĕн тăвăпăр?» — терĕ Михайлов.

«Малтан эрехне ĕçсе ярар-ха,— тесе, Янтул кĕтмен çĕртенех чăвашла калаçма тытăнчĕ, кĕсйинчен пулăштух кĕленчине туртса кăларчĕ.— Куратăн-и? — тесе, эрехне Михайлов сăмси умĕнче шăмпăр-шăмпăр тутарчĕ.— Ме, ĕç. Куна эпĕ пуринчен малтан илсе чикрĕм. Тĕрĕссипе каласан, хупаха килни пире ытла хаклах та лармарĕ пулĕ. Эп унта сахалтан та пĕр пилĕк-ултă тенкĕлĕх ватса хăвартăм. Е ытларах та-и. Атя, асăнмалăх усратăр ĕнтĕ манăн çĕтĕк калпака».

Михайлов пĕр çăвар сыпрĕ те кĕленчине каялла пачĕ. Пĕтĕм çанçурăмĕ тăрăх кăмăллă ăшă сăрăлтатса кайнине сисрĕ вăл.

«Часрах каяр, Янтул пичче. Атту шăнса вилĕн».

«Эрех пур çинче-и? — терĕ Янтул.— Тăхта ĕнтĕ, эпир ку чĕмерене тата тепĕр кучченеç парса хăварар, чăвашсене лайăхрах астуса юлтăр».

Эрехне ĕçсе пĕтерсен, вĕсем чӳречесем енне ашса тухрĕç те пăртак каялла чакрĕç. Вара Янтул пуш кĕленчипе тĕллесе-тĕллесе тăчĕ те пĕр кантăкĕнчен яра пачĕ. Чăнкăр! тунă сасă янăраса кайрĕ. Вĕсем алла-аллăн тытăнчĕç те çыран çинелле çӳлелле чупрĕç. Хупах куçран çухалчĕ.

Янтул хула урамне çитсе кĕрсен тин чарăнчĕ.

«Тăхта,— терĕ вăл, пӳлĕнчĕклĕн сывласа,— кăштах шухăшласа пăхар. Çанталăкĕ шăпах мана килĕшекенни».

Вĕсем Атăл хĕрринчи урамра тăраççĕ. Атăл çинче çил-тăман урать. Пӳртсем те кĕрт ăшне путнă, пĕр-пĕрин çине ютшăнса пăхса лараççĕ. Пуçсем тăрринче, тĕн-

че пĕтнĕ пек, çил кĕрлет-ахăрать, алă тăратсан, алла татса каяссăн туйăнать. Анчах юрĕ пĕртте сивĕ мар. Пите лекни, ирĕлсе, ӳте кăтăклантарса юхса анать.

Янтул Атăл çинелле пăхса тăчĕ-тăчĕ те хаш сывласа ячĕ.

«Хитре мăнтарăн çанталăкĕ. Калпак пулнă пулсан, çĕрĕпе тăма та хатĕр.— Унтан хупах хуçине аса илчĕ:— Ну, вăйлă та, эсрелĕ! — Вăл йĕпе сухалне çара аллипе тытса пăрчĕ.— Ман алла тĕреклĕ, теççĕ. Тытса чăмăртасан, эпĕ сан пӳрнӳсене пĕр çĕре çыпăçтарса лартма пултаратăп. Ак ку чăн-чăн упа хăраххи ĕнтĕ. Мана тытса çĕклерĕ те алăкран кушак çурине кăларса пенĕ пек кăларса çапрĕ. Сиссе те ĕлкĕреймерĕм, пăхатăп — хăлхара çил шăхăрса пырать. Ăçталла пырса çапăнăп-ши ĕнтĕ тесе вĕçсе пыратăп... Ну, пулаççĕ те иккен çынсем! Мĕн çисе пухнă вăл ун чухлĕ вăй?»

Михайлов хаяр Янтул савăнса калаçнинчен тĕлĕнсе тăрать. Мĕскер улăштарчĕ ăна сасартăк?

«Ну, каяр,— терĕ Янтул, утма хатĕрленсе.— Атту пуç шăнса ларĕ».

«Ăçта кайăпăр?» — ыйтрĕ Михайлов.

«Сан патна. Эп сана пĕр юмах каласа парăп. Килте халь ман пурпĕрех канăç пулмасть».

Вĕсем урам тăрăх утса кайрĕç.

Михайлов хупаха мĕн сăлтавпа пынине аса илчĕ те кулса ячĕ.

«Ну, маннă пашалусем эпир».

«Эсĕ те темскер манса хăварнă тем? Атя, пуйтăр ĕнтĕ. Хăçан та пулин пырне ларĕ-ха».

«Çук, эпĕ япала мар, эрех ĕçме манса кайнă. Сăлтавне килте калăп».

«Пĕлсен те калăп, пĕлмесен те калăп»,— терĕ те Янтул ваттисен сăмахĕпе, хир сысни пек, урамри юр кĕрчĕ урлă çурса каçрĕ.

*1964.*

## СĂПАЙ ВАÇУК

Вăхăт-вăхăт ăна савăнăç пăвса илет. Ним тăва пĕлменнипе аллисене хире-хирĕç сăтăрать вăл, йĕри-тавра алчăраса пăхать. Пĕччен пуласчĕ çакăнта. Вара мĕн тăвассине вăл хăй те пĕлмĕ. Е çул тăрăх чупĕччĕ ухмах

пек, е, пуçхĕрлĕ тăрса, аллисемпе утса кайĕччĕ. (Ваçук ун пек те пултарать.) Вăт мыскара пулĕччĕ. Пуп... хир варрипе пуçхĕрлĕ çӳрет, тейĕччĕç.

Кирек мĕн тесен те, лайăх çут тĕнчере! Йăлтах майлашăнса пырать Сбоев Ваçук пурнăçĕнче. Кăçал вăл вунсаккăр тултарса вунтăххăра пусрĕ. Мĕнтен çитĕннĕ çын мар? Кĕлетки-çурăмĕпе ырхан та ĕнтĕ, теприне ватăлса виличчен те ӳт кĕмест. Кам мĕнле çуралать вĕт. Ун çулĕнче килйыш пуçĕ пулакансем те пайтах. Иртнĕ эрнере Ваçук Хусанти духовнăй семинарирен вĕренсе тухрĕ. Кĕркунне Петербургри академие вĕренме каять.

Çын ӳкĕтленипе мар, хăй ирĕкĕпе, çавна асăрхăр. Кам та пулин ăна: «Санран пурпĕрех йĕркеллĕ священник пулас çук—ытла нишлĕ эс; çитменне—уксах. Чиркӳ çынни кĕрнеклĕ пулмалла. Пĕртен-пĕр çул сан — малалла вĕренесси»,— тенĕ пулсан, Сбоев çине тăрсах, юриех приход илме тăрăшĕччĕ. Мĕн кирлĕ священник пулас тесен? Авланмалла. Ку тĕлĕшпе те ун чăрмав пулмĕччĕ.

(Шухăшне сисмерĕç-ши тенĕ евĕр, Ваçук ку тĕлте лавçă еннелле вĕлт çаврăнса пăхрĕ. Лешĕ хĕрсех утсен çурăмĕ çинчи пăвансене тилхепепе тĕке-тĕке ӳкерет.)

Вĕсем яла çитсе кĕнĕ çĕре килте мунча хутса кăларaççĕ ĕнтĕ. Сĕтел çинче тутлă апат-çимĕç пулать...

«Тата инçе юлчĕ-ши, Ухатер пичи?» — Йĕкĕт вирьялла о-па калаçать — «йолчĕ», тет.

«Пур-ха каймалăх. Майĕпе çеç юрттаратпăр та, ара. Часрах çитес килет-и?» — тĕпри утне хулăпа чăшт тивертсе илет лавçă.

Пĕр хушă вĕсем сиккипе чуптараççĕ. Кĕпер халтăртатса хыçа тăрса юлать. Хирĕç килекен ачасем ана çинелле тарса кĕреççĕ. Хура пусă ерипен шуса иртет. Çул ик айккинчи ешĕл курăк лаптăкĕсем çеç, пир тăрăхĕсем пек, вĕçĕмсĕр тăсăлаççĕ.

...Йăрт-йăрт-йăрт-йăрт юртаççĕ лашасем. Лăст-лăст-лăст-лăст силлесе пыраççĕ хӳрисене. Мăкăлт-мăкăлт, мăкăлт-мăкăлт сиктереççĕ тусанлă купарчисене. Ялти пурнăçа аса илтерсе, ут тарĕпе тислĕк шăрши кĕрет. Çĕр пичĕ тăрăх вĕри хум юхать, тырăсене пултарать. Ыраш кĕçех пиçсе çитет ĕнтĕ. Тулăпа сĕлĕ сарăха пуçланă. Улăхра ула-чăла тумланнă çынсем утă тавăраççĕ. Ку ĕç, уяври пек, йышпа пĕрле пулса иртет. Вырмара çеç кашнин хăйĕн ани. Пуррине пытарма тăрăшать çын. Çукки пытарсан та курăнать.

Çамрӑк Сбоев, чӑвашсем пек каласан, Сӑпай Ваçук, Хусантан килет. Çулӗ çывӑх мар ун. Хусанпа вӑл каякан Урхас Кушкӑ хушши çӗр çухрӑма яхӑн. Ĕнер кӑнтӑрлапа хуларан тухнӑ вӗсем, Атӑл урлӑ каçма хӑтланса чылай ирттернӗ, Сӗве хӗрринче çӗр каçнӑ. Халӗ ак чӑваш çӗрне çитсе кӗчӗç. Хӗвел хӗртнӗçем хӗртет, пӑвансем çыртаççӗ, тусан йӑсӑрланать.

...Хӑйне асӑрхать йӗкӗт. Типшӗм те лутра ача (аякран пӑхсан, ачах çав ӗнтӗ, никам та ӑна вунтӑхӑр çул парас çук) çатан урапа çине саркаланса хӑпарса ларнӑ та, мӑн çын пек курӑнма тӑрӑшса, лавçӑпа калаçса пырать. Пӗчченçи паврать. Ним курмасӑр-илтмесӗр тенӗ пек, хӑйпе хӑй киленсе палкать, палкать. Уншӑн çын, лашисене те, хӑйне те ӗçрен пӑрса, инçетри хулана пушӑлла килнӗ, чӑрманса çӳренӗ. Халӗ, ав, пӗрле яла таврӑнаççӗ. Ытла та час манать-çке çын хӑйӗн чӑн хакне! Е çуралассах çапла çуралать-ши вӑл? Виçӗ пус тӑраканнин çине тӑрсах виçӗ тенкӗ тӑнӑн курӑнас килет. Хитре марри хитреленме тӑрӑшать. Ма пӗрмаях ют роле вылямалла, хӑвӑн мӗн пур пеккипе çырлахмалла мар?

Утсем, туртӑшса, кахалланса, лӗнк-лӗнк-лӗнк-лӗнк юртса пыраççӗ. Урапа та çавнашкалах кӑрт-кӑрт, кӑрт-кӑрт туртӑна-туртӑна илет. Кур-ха эс, утсем те пулин, чупнӑ пек туса, хуçине улталасшӑн.

«Сирӗн çаксем çеç-и лашасем?»

«Пур-ха тепре. Иртнӗ кӗркунне юпах тиха туянса ятӑмӑр та, пулчӗ лаша. Кӑсене çех шанма çук-çке, килте те кирлӗ пулма пултарать. Йыш пысӑк пирӗн. Вуниккӗн тан пурӑнатпӑр».

«Уйрӑлса тухасси пирки сӑмах тапратмаççӗ-и?»

«Тапратӗччӗç те-ха, май çук. Малтан йӳнеçмелле кӑштах».

Ниепле те пӗр çӗре пуçтарӑнаймасть Ваçук. Куçӗ пӗр япалана курать ун, шухӑшӗ тепӗр çӗрте. Хӑлхи лавçӑ сӑмахне илтет, чӗлхи йӑлтах урӑх сӑмахсем калать. Те кӗтет вӑл темскер, те хӑрать унран. Те савӑннӑ вӑл, те кӑмӑлсӑр.

«Чар-ха лашусене, анам. Чикен аптратрӗ».

«Тӑрр, пахча мӗлки. Хӗрсе çитрӗç те чарӑнасшӑн та мар. Тен, вар ыратать сан? Ма паçӑрах каламарӑн?»

«Халь кӑна чике пуçларӗ. Иртсе каять вӑл,— текелесе, çӗре анчӗ те Ваçук çул хӗррине тухрӗ.— Халь уттар ӗнтӗ хуллен».



23928-чув

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

«Тен, тăрам кĕтсе? Ун пекех васкамалли çук».

«Çук, çук, каях хуллен»,— терĕ те йĕкĕт хăй çул айккипе малалла утса кайрĕ.

Лашасем ăна ярăнса утса часах хăваласа çитрĕç, ирте пуçларĕç. Капла вĕсем чупнă пек туса пынинчен те ÿсĕмлĕрех каяççĕ-мĕн. Сбоев аран-аран, урапапа тан ĕлкĕрсе, тĕкĕлтетсе пырать. Хулара хăй уксаххине пытарма хăтланса асăрханса çÿреме хăнăхнипе кĕçех чăм шыва ÿкет вăл. Хытса ларнă ури ыратать ун. Урапа çăвĕпе таçта шăлавар пĕççи вĕçне вараланă вăл. Куçне тар кĕрет унне...

Çук, çуран утас тени те суя-мĕн. Сбоев вăтанса каялла урапа çине хăпарса ларать. Питне-куçне тутăрпа шăлать. Ăçта, мĕнре, эппин, чăнни?

Йĕкĕт сасартăк чĕнми пулнипе лавçă ун еннелле кĕтевлĕн пăхать. Эп кÿрентермерĕм-и сана? — тет пулас. Паллать ăна Сбоев Васук. Урхас Кушкăпа юнашар ялтан вăл. Вырăсла перкелешме те пĕлет. Васука курсан, калаçăва хăй тапратнă чух, пĕли-пĕлми те пулин, кашнинчех вырăсла калаçма тăрăшать вара. «Стуруви гак?» (Сывлăху мĕнле?) — тет. Пĕр хĕрĕхсенче вăл. Тĕреклĕ ал-ураллă, сарлака питлĕ, уçă сăнлă. Сбоев шухăшĕпе, пурте вĕсем (Ухатер вăйли те, вăл кăмăллă сăнли те) ун ĕçĕнче кирлĕ. Виççĕмĕш çул ĕнтĕ вăл ямшăк чупать.

«Çул çинче хăрушă мар-и, Ухатер пичи? Тĕрлĕ çĕрте çын тĕрлĕ пулать».

«Темĕн. Халиччен чиперех çÿренĕччĕ те. Тата эп пĕччен те мар. Халĕ санпа иксĕмĕр ав...»

«Мана шансан, усси нумаях пулмĕ».

«Ма? Вăйпитти çын эс. Чĕлхе те пĕлен. Араскал та хÿтĕлет пуль çынна. Кукамай мана ăраскаллă ача тенĕ».

...Виçĕ енлĕ этем пек çÿрет Васук çынсем хушшинче. Виçĕ тĕрлĕ чун ун ăшĕнче.

Пĕри — уçă кăмăлли, кунни; çынсемпе хутшăнма юратать вăл, вăй çитнĕ таран пулăшать вĕсене, хутсемçырусем çыра-çыра парать. Чееленсе-мĕн туса мар, пĕтĕм кăмăлтан, юратса. Хăйне те килĕштереççĕ ăна ялта. Унтан та ытларах — шелleççĕ. Тăлăх-турат, теççĕ. Çитменнине тата — уксах вăл. Ун пеккине ялта пурте пулăшма хăтланаççĕ. Ял мĕскĕнне ялах пăхмалла, теççĕ. Кам та пулин усрава е тарçа илет, анчах ыйткалама кăларса ямаççĕ. Ĕмĕрхи йăла çапла пулнă чăвашăн.

Васука хӑнанах чӗнмесен те (хӑнасем тӑрӑх ҫӳреме ҫамрӑкрах-ха вӑл), пӗри те тепри кӗрсе тухма йыхӑраҫҫӗ. Ҫырласем, пахча-ҫимӗҫ йӑттара-йӑттара яраҫҫӗ. Хӑйсене нумай пурӑннӑ ҫынсем тесе, ялти ватӑсем унпа пӗчӗк ачапа калаҫнӑ пек калаҫаҫҫӗ вара. Кӑштах вӗрентнӗ евӗр, хута кӗнӗ майлӑ, ҫӳлтен аялалла пӑхса...

Малтан тарӑхатчӗ Васук. Ҫынна кӑтартса мар, паллах. Мӗнле ача пултӑр вӑл, вуннӑран иртнӗ ҫын? Кайран — хӑнӑхрӗ ав. Ҫилленес тесен, ӑна хӑйне те ҫилленме пулать-ҫке. Кунта килсе ярсанах, пӗр кун тӑрас килместчӗ ун чӑваш хушшинче. Пурте ют пекчӗ уншӑн. Ӑнланмалла мар. Курман кӗпе-тумтир. Пӗлмен чӗлхе. Илтмен ятсем. Хӑнӑхман йӑласем. Туррисем те хӑйсен иккен вӗсен. Вӑрманта пурӑнакан турӑсем.

Ҫук, хамӑрӑнах лайӑх пирӗн, тетчӗ вырӑс ачи Васук ун чухне татӑклӑн. Анчах килне пӑрахса кайма — килӗ ҫукчӗ. Ашшӗ те ҫук Васукӑн. Амӑшӗ те.

Пӗрне вилнӗ теме хӑнӑхнӑ ӗнтӗ. Теприне тем каламалла. Качча тухнӑ.

Пӗри ҫук ҫинчех пур пултӑр. Тепри пур ҫинчех ҫук.

Халӗ хӑнӑхрӗ те Васук, чи ырӑ кӗтес ӑна ҫакӑнта пек туйӑнать. Чӗлхи те ытарма ҫук-мӗн чӑвашӑн. Йӑлисем те этемле йӑласемех. Сӑвви-юрри те такам кӑмӑлне ҫавӑрмалла. Тата мӗнле ӗҫчен вӗсем, чӑвашсем. Мӗнле сӑпай. Туйӗ кӑна темле оперӑран-балетран иртерӗ.

Тӗрӗс, тӑван-пӗтен сахал Васукӑн ку енче, ун вырӑнне юлташӗ-пӗлӗшӗсем нумай. Тусӗсем пур. Пурӑнма пулать.

Пирӗн чӑваш, теҫҫӗ ӑна хӑй ҫуралнӑ яла, Чулхула кӗпӗрнинчи Чернухӑна, кайсан тӑрӑхласа. Ҫамрӑк Сбоев мухтанать кӑна унпа. Ҫапла, чӑваш, тет. Вӑл халӑх чунне ҫывӑхрах пӗлес пулсан, эсир те хӑвӑра чӑваш тейӗттӗр, тет, хӑйсен ялӗсене.

...Пӗлтӗр ҫеҫ-ха вӑл, кӑшт ҫеҫ вӗренме пӑрахса, Урхас Кушкӑна пуҫӗпе юлмарӗ. Мӑнаккӑшӗ чарчӗ. Мана вӗлерес мар тесен, малалла вӗренӗн. Кун пирки урӑх калаҫмӑпӑр. Хулара пурӑнсан, чӑвашусене эс ытларах усӑ кӳретӗн, ухмах, терӗ. Хӗрне тиркеместӗп эп, тархасшӑн. Чӑнах та хитре вӑл, ӑсӗ те ҫук мар ун. Анчах ун пек ҫырлана пӑхма та пӗлмелле-ҫке. Апачӗ-ҫимӗҫӗ те ӑна уйрӑмрах кирлӗ. Кӗпи-тумтиррине те лайӑхраххине пар. Э, ҫапла-ҫке, Ульти нимӗн те ыйтмасть пуль-ҫке. Пурпӗрех малтан вӗренсе тухмалла сан. Халиччен тӳснине, тепӗр ҫула чӑтса иртерӗн. Вара, малалла вӗренессӳ

килмесен,— паллах ёнтӗ, унччен Ульти те шухӑшне улӑштармӗ,— кирек мӗн тӑвӑр вара, терӗ.

Васукӑн иккӗмӗш енӗ — вӑл пурне те пӗлме тӑрӑшни. Пӗлӳлӗхшӗн ҫунни. Вӑл хӑй тӑрӑшас тенипе тӑрӑшни те мар-ха, ҫутҫанталӑк ҫавӑн пек туса янӑ ӑна. Авӑ нӳрӗ ҫӗрте хӑй тӗллӗнех чӗрӗлнӗ евӗр, Ваҫук та вӗренмесӗр тӑма пултараймасть. Чӑваш хушшинче пурӑнать вӑл — вӗсен пурнӑҫне пӗлмелле ун. Хӑй ӑссӗнех чӑвашла калаҫма вӗреннӗ ав. Вӗсен сӑвви-такмакӗсене ҫыра-ҫыра илет. Юмахӗсене итлеме юратать. Хусанти пӗр юлташӗ тутар ачи те — Ваҫук тутарла перкелешме тытӑннӑ. Ирҫе-мӑкшӑ хушшине лекес пулсан, вӗсенне те ҫавӑн пекех вӗренӗччӗ вӑл.

Мӗн унта кӳршӗ халӑх чӗлхисемпе кӑна калаҫмалли, авалхи чӗлхесене чухлать вӑл, нимӗҫле те французла вулать. Ҫапах та чи кӑмӑл туртакан, асра юлакан халӑх ун пурнӑҫӗнче чӑвашсем пулаҫҫӗ. Ӑна вӑл тахҫанах сиснӗ.

Сбоевӑн виҫҫӗмӗш енӗ — вӑл хӑйне йӑвасӑр кайӑк пек туйни. Таҫта та пурӑнма пултарать вӑл, ҫав вӑхӑтрах ниҫта та тымар яраймасть. Пӗрмаях ҫул ҫинче. Пӗрмаях таҫталла туртӑнать.

«Тата миҫе ҫухрӑм юлчӗ-ши, Ухатер пичи?»

«Ҫирӗмрен те катӑлчӗ пуль ёнтӗ. Энтри апатне киле ҫитетпӗр».

Хевтесӗррисем пулаҫҫӗ-мӗн ытларах кил шутлӑ. Пурнӑҫ пӑтӑрмахӗсенчен килте пытанса юласшӑн та вӗсем— май килмест-ҫке. Нумай чухне май килмест. Ӑнман пурнӑҫӑн яшки тӑвалла тӑкӑнать...

...Малтан нимӗн те асӑрхаман-ха вӑл ҫак чӗрӗ ҫӑмха, мӗншӗн тесен пӗчӗккӗ пулнӑ. Вилекенни, ҫуралаканни — темӗн те пулса иртнӗ ялта та, вӗсен килӗнче те, анчах пурте ӑна тивмесӗр иртсе кайнӑ-ха. Ытла тивмесӗрех те мар пуль те, ун асӗнче тивӗҫлӗ йӗр хӑвармасӑр. Хӑйне майлӑ курнӑ вӑл, сиснӗ, илтнӗ. Ҫиелтен. Ҫӑмӑллӑн. Ашшӗ ҫук-и ун? Эппин, ҫуккипе пурӑнӑпӑр. Ашшӗн ырлӑхне курман та вӑл, ашшӗсӗр пурнӑҫӑн хурлӑхне те туйса илеймен-ха. Вылянӑ. Кулнӑ. Ял тӑрӑх чупса ҫӳренӗ. Пур ҫӗрте те юлташсем пулнӑ Ваҫукӑн, хаваслӑ ачан. Пурте шелленӗ ӑна, ҫурма тӑлӑха. Ял ҫыннисем ун умӗнче, пӗр-пӗринпе тем пӑшӑлтатса, пуҫӗсене мӗншӗн сулкаланине те ӑнланман-ха вӑл.

Сусӑрланса ӳксен тин шухӑшлама вӗрене пуҫланӑ Ваҫук. (Кӳршӗ лашине ҫитерме кайнӑ чух кӗпер ҫинчен

тип çырмана тирĕнсе анса, урине икĕ çĕртен хуçнă пулнă вăл. Пĕр çула яхăн вырăнпа выртнă, темиçе уйăх туяпа çӳренĕ. Ĕмĕрлĕхе уксах юлнă.) Кĕнеке вулама хăнăхтарнă ăна амăшĕ. Пĕччен выртакан Васук вара вуланă, вуланă. Вăл утланнă лашана кĕрĕкне тӳнтер тăхăнса хăратнă ача, Васук тусĕ, ун патне халь ура та ярса пусман. Туяллă Васука урамра тĕл пулсан та, аяккалла пăрăнса утнă. Вăл мар Васука, Васук ăна инкек тунă тейĕн çав. Васукпа амăшĕ ӳпкелешме пултарасси çинчен шухăшланипех вĕсем ăна курайми пулса çитнĕ...

Хăйĕн çухатăвĕсене çеç астунă Васук, çавсене çеç шутласа пынă. Вăл çеç асап тӳсет иккен, мĕскĕн ача. Çепĕç чун. Ыттисем—е хыт чĕреллĕ этемсем, е ырă курса тăраннисем. Нимĕнле шухăш аптратмасть вĕсене. Пурте паллă вĕсемшĕн... Шăпчăк çăмарта тунă чух ула куракăн кучĕ ыратни ĕмĕрте пĕрре пулать пуль вăл. Çын çинчи — йывăç çинчи-çке.

Тĕрĕссипе каласан, инкек-синкекне ытлашшипех те курнă Васук. Ашшĕне астумасть вăл. Кĕçех амăшне те çухатать. Унтан килсĕр тăрса юлать...

Кусем кăшт каярахпа пулаççĕ-ха...

Вĕсен килĕнчи чи нумай хут илтĕнекен сăмах «çук» пулнă. «Аçу çук сан — вилнĕ вăл,— тенĕ ăна амăшĕ.— Укçа та çук пирĕн — чухăн эпир...»

Кайран Чăвашра илнĕ ячĕ те Сбоева çавна аса илтерсе тăнă — Ва-çук.

«Шкула аçуна ертсе кил»,— тенĕ ăна вĕрентекен.

«Атте çук ман,— тенĕ Васук хăнăхнă сăмахпа.— Вилнĕ вăл...»

Сасартăк аçа çапнă, çиçĕм çиçнĕ.

«Суять Сбоев! — кăшкăрса янă çавăнтах Васукăн тусĕ пулнă ача хыçалти ретрен.— Пур ун ашшĕ! Ăна Çĕпĕре пуçиле янă!»

Килне вирхĕнсе пырса кĕнĕ пĕчĕк Васук.

«Анне! — тенĕ вăл, сывлăшне аран çавăрса.— Чĕрĕ пирĕн атте!»

Чуста çăрса тăракан амăшĕ сак çине лак ларнă.

«Ăста вăл — аçу?»

«Çĕпĕр ялĕнче. Пăрамун каларĕ».

«Каллех Пăрамун. Суять вăл!.. Ну, эппин, касамата тытса хупнине тĕрĕсех калать-ха. Кайран вилнĕ сан аçу. Çĕпĕрте вилнĕ. Çук вăл тĕнчере!»

«Ма хупнă ăна? Ăста ĕçленĕ пулнă вăл?»

«Мĕне кирлĕ вăл сана? Хамăр чиркӳре ĕçленĕ. Тиечукра... Çук халь сан аçу, çавна пĕл эс. Вилнĕ вăл. Саншăн та, маншăн та вилнĕ!» — хĕремесленсе кайса кăшкăрашнă Ваçукăн çамрăк амăшĕ.

«Апла пулсан, чĕрĕ ман атте»,— тесе шухăшланă пĕчĕк ача.

«Киле хăçан таврăнать вăл, пирĕн атте?»

«Эсĕ мĕн — ăслă-и, ухмах-и? Çук, тенĕ вĕт сана аçу. Çук! Çук!»

Эппин, ваттисенчен ыйтса пĕлĕп атте пирки, тесе урамалла тухса чупнă пĕчĕк Сбоев. Анчах пĕлсе ĕлкĕреймен. Амăшĕ ăна Чăвашра, Урхас Кушкă ялĕнче пурăнакан тăван аппăшĕ патне, Золотницкий пупăн килне, ăсатнă. Хăнана тенĕ. Тĕрĕссипе усрава пулнă-мĕн. Кĕркунне амăшĕ качча тухни çинчен илтнĕ Ваçук.

Çапла вăл чăваш ялĕнче пурăнма тытăннă.

Мăнаккăшĕ ăна ăнланман тесе шутлать Ваçук. Вĕренме пăрахас тесе мар яла юласшăнччĕ вăл (вĕренес тесен, таçта та вĕренме пулать), хăй ялта кирлĕ çын иккенне сисе пуçланăччĕ Ваçук. Парăмлине ăнланса илнĕччĕ. Хăйне тăван амăшĕ пек йышăннă ял халăхĕ умĕнче те, Ульти умĕнче те. Вĕсене пăрахса кайни тарнипе пĕр тетчĕ. Эрне ун пек-кун пексене калаçман вăл никампа та, Ультипе пушшех çăвар та уçман, анчах ăшри шухăш-туртăмсене сăмахсăр та ăнланма пулатьçке.

Пуçĕпех яла юлма хăтланнин тепĕр сăлтавĕ вара акă мĕнре пулнă: нумая тăсăлнă туслăх сĕвĕрĕлесрен хăранă Ваçук. Вăхăт иртнĕçем Ультирен сивĕнĕп те ирĕксĕрехултавçа тухăп, пĕрех хут халех качча илсе пăрахам та, ĕçĕ пĕттĕр, тенĕ. Анчах юратнă хĕрĕпе калаçман ун пирки. Вăл килĕшессе шаннă кăна.

Мăнаккăшне илсен, Елизавета Ивановна нумайăшне сиснĕ пулнă, çавăнпа хăраса ӳкнĕ те вăл. Ун шухăшĕпе, Ваçукпа чипер Ультин нихçан та пĕр чĕлхе пулмалла мар. Пулма тивĕç мар. Халь вĕсем туслă пулсан, вăл иртсе каймалла. Иртменни — йăнăш. Вĕсем пĕр çулхисем мар, ку — пĕрре. Чăваш ачисем тантăшсемпе çеç выляççĕ-кулаççĕ. Кусенни пек, пĕри тепринчен виçĕ çула яхăн аслă пулни вĕсем икĕ ăру çыннисем иккенне пĕлтерет. Чĕлхе те расна вĕсен. Ывăлне çамрăкла авлантарма тытăнсан çеç чăваш этемми кинне ывăлĕнчен иквиçĕ хут аслине илме пултарать. Ывăлĕ çитĕниччен вара кинĕ ĕçлет, вăл ватăлнă çĕре ывăлĕ çитĕнет.

Ҫусен ак хӗрӗ (Ульти) виҫ ҫула яхӑн кӗҫӗн. Йӗркеллӗ-и вӑл? Ҫук. Темиҫе хут — ҫук!

Тата. Пӗри вӗреннӗ ҫын вӗсен (Ваҫук), тепри — сӗмтӗттӗм (Ульти). Пӗри хытанка, тепри тата хытанкарах. Ун пек пулассинчен тур хӑтартӑр та, пӗрне-пӗри перӗнсен, вут тухса кайӗ. Арҫын темле те пулӗ, кин тенине Ваҫук мӑнаккӑшӗ кервен те кӗрнеклине курасшӑн.

Кай-кай-кай та ҫав! Мӗн пуҫласа вӗҫне ҫитиччченех ваттисен йӑлине те, ҫутҫанталӑка та, закона та хирӗҫле вӗсен хушшинчи ӗҫсем. Пӗтӗмпех ӳпне-питне. Кутӑн-пуҫӑн. Юлташла ҫех ҫӳренӗ чухне хӑяматаччӗ-ха. Ҫӳрӗҫ те, чарӑнӗҫ те, тетчӗ Елизавета Ивановна. (Чӗрере вӗсем уйрӑлса каясса кӗтсе.) Халь пӑхать те — ӗҫ шалтан шала каять. Ҫавӑнпа чармалла вӑл ҫыхӑнӑва! Пӑсмалла вӗсене! Ура хумалла.

Пур енчен те ют вӗсем пӗр-пӗриншӗн. Ҫут тӗнчене те тӗрлӗрен кураҫҫӗ-ӑнланаҫҫӗ вӗсем. Пӗриншӗн тӗнче упа йӗнни пек тӑвӑр, теприншӗн — кӑвак тӳпе пек аслӑ. Пӗри хаяр киремете пуҫҫапать, тепри — ҫӳлти турра. Пӗри вӗсенчен чӑваш, тепри — вырӑс...

Ку сӑмаха вӑл никам ҫӗнтерейми тесе шутлать, ҫавӑнпа чи юлашкинчен калать. Ҫапла, пӗри — тӳпе, тепри — ҫӗр. Вӗсем нихҫан та пӗрлешеймӗҫ...

Ульти хӑй умӗнче ырӑ пулма хӑтланса ҫӳренине курас килет Елизавета Ивановнӑн, ялти пуп майрин. Е макӑрнӑ куҫпа ҫӳретӗрччӗ вӑл. Вара хӗр Ваҫука тыткӑна илме ӗмӗтленни сисӗнӗччӗ, халӑх умӗнчех ӑна хӑртса тӑкма пулӗччӗ. Ҫук вӗт, ҫаплах евӗк те никама пӑхӑнми сӑнлӑ вӑл.

Ӑнланать пурнӑҫ курнӑ хӗрарӑм: хӗрача мӗн чул мӑнкӑмӑллӑрах, ҫавӑн чул ытларах каччӑ чунне вут хыптарать...

Ку туслӑх ҫапла пуҫланнӑ-мӗн.

Сакӑр ҫул каялла пулнӑ вӑл. Пӗчӗк Ваҫук Урхас Кушкӑ ятлӑ ялта мӑнаккӑшсен садӗнче ларнӑ. Макӑрасси килнӗ ун — макӑрма вӑтаннӑ вӑл: пахча карти витӗр пур енчен те чӑваш ачисем пӑхса тӑнӑ. Ҫывӑрасси килнӗ — килӗнче Ваҫук кӑнтӑрла ҫывӑрса илме юратнӑ — кунта ҫывӑрма выртма та хӑранӑ. Сасартӑк ют ҫынсем хушшине лекнӗскер, хӑйне вӑл тымарӗ-мӗнӗпе тӑпӑлтарса кӑларса, урӑх вырӑна чиксе лартнӑ ҫамрӑк йывӑҫ пек туйнӑ. Пурте ют пулнӑ ун йӗри-тавра. Ӗмӗрне те хӑнӑхас ҫук эп кунти пурнӑҫа, хӑнӑхма та

кирлӗ мар, пирӗн хамӑр ялтах лайӑх, тесе шухӑшланӑ Ваҫук. Унтан амӑшне аса илнӗ те, чӗри лаштӑр ҫурӑлса кайнӑ ун.

Ма пӑрахса хӑварнӑ ӑна амӑшӗ? Пӗр эрне пӗрле нурнӑпӑр та яла таврӑнӑпӑр тенӗскер, Ваҫук сывӑрнӑ чух тухнӑ та тарнӑ. Чӑнах, ара. Тен, эппин, Ваҫука ҫеҫ мар, ӑна та килӗшмен кунти пурнӑҫ?

«Аннӳ усал тӗлӗк курнӑ, ҫавӑнпа килне васкарӗ. Сана илме килет вӑл»,— тенӗ Ваҫука йыснӑшӗ.

«Килмесӗр, килет. Пирӗнсӗр пуҫне ун тӑванӗ те урӑх ҫук. Кунта килмесӗр тата ӑҫта кайтӑр вӑл?» — тенӗ мӑнаккӑшӗ те.

Тепле-ҫке. Хальхинче те лаша аран тупнӑскер, мӗнле килӗ вӑл тепрехинче? Ҫуран — инҫе. Ҫулне те астуса юлмарӗ Ваҫук.

Малаллине вӑл пӗр хушӑ тӗлӗкре курнӑ тейӗн. Такам ӑна пуҫӗнчен панулмипе ҫатлаттарнӑ. (Тен, панулмийӗ улмуҫҫи тӑрринчен ҫапла ӳкнӗ пулнӑ?) Пӑсӑк ҫӑмартапа ун кӗпи умне вараланӑ. Таҫтан пӗчӗк хӗрача сиксе тухнӑ ҫав самантра, Ваҫука чӑвашла тем кӑшкӑрнӑ вӑл. Лешӗ ӑнланманнине кура, ӑна хӑйӗн пӗчӗкҫӗ ҫирӗп аллипе аллинчен ҫатӑрласа тытнӑ. (Ваҫук ун ҫирӗп аллине лайӑх астӑвать.) Вӗсем картишне чупса кӗнӗ. Хӗрача Ваҫука пусӑ патне ҫавӑтса пынӑ, валашкари ӑшӑ шывпа ун кӗпине ҫуса тасатнӑ. Ачан ҫамкинчи мӑкӑльне кӑтартса кулнӑ. Ваҫукран вӑл пусахласах тем пӗлесшӗн пулнӑ-мӗн, ун еннелле кӑтартса тем палканӑ.

«Не понимаю»,— тенӗ вырӑс ачи хуллен.

«Ни пӑнимуй? — тӗлӗннӗ хӗрача.— Нимуй? — тата ытларах тӗлӗннӗ вӑл. Вара хӑй ҫине тӗллесе кӑтартнӑ та: — Ульти»,— тенӗ. (Ультилете кӗскетсе ҫапла каланӑ.)

Э, мӗн ятлине ыйтать пуль-ҫке вӑл.

«Васёк»,— тенӗ вуннӑри Сбоев.

«Ваҫук, Ваҫук»,— тесе сиккеленӗ хӗрача.

Унпа пӗр чӗлхе тупнӑшӑн Ваҫук та савӑннӑ.

Тепӗр кун сада тухнӑ-тухман каллех ӗнерхи пӗчӗк хӗрачана курнӑ Ваҫук. Вӑл тенкел ҫинче пуканелле выляса ларнӑ. Хӑш вӑхӑтра кӗнӗ вӑл сада, ӑҫтан кӗнӗ? (Қаярахпа картишӗнче те ҫавахчӗ. Ёҫке-мӗне кайнӑ чух мӑнаккӑшсем хапхи алӑкне шалтан сӑлӑп хума калатчӗҫ. Хапхи айӗнчен те кӑткӑ кӗрес ҫук. Картишне тухсан, пӑхатчӗ те Ваҫук шалт тӗлӗнетчӗ: ҫенӗк умӗнче

Ульти кулкаласа тăра паратчĕ. Ăçтан пырса кĕретчĕ вăл «вылямa» — паян кунччен те пĕлмест йĕкĕт.)

Çĕтĕк-çатăкран çĕленĕ пурнеккее кăтартнă Ульти Ваçука.

«Пу-ка-не!» — тенĕ вăл хыттăн, хăлхасăрпа калаçнă чухнехилле. (Ваçук сăнанă тăрăх, пĕр-пĕрин чĕлхине ăнлансах кайман çынсем кăшкăрса калаçаççĕ.)

«Пу-га-ни»,— тенĕ Ваçук ун хыççăн.

«Пу-ка-не!»

«Пу-га-не».

«Лайăх! — савăннă Ульти. Вара тенкел çинчи çĕççе кăтартнă.— Çĕ-çĕ!»

«Си-зи»,— тенĕ Ваçук, такама çиме сĕннĕ евĕр.

Ульти каçса кайса кулнă.

«Çĕ-çĕ! — тенĕ вăл çемçен, тӳсĕмлĕн.— Çĕ-çĕ!»

«Се-зе».

«Юрать, икĕ сăмах пĕлен ĕнтĕ. Маттур. Малалла кайăпăр».

Çапла Ваçука чăвашла вĕрентме тытăннă Ульти. Мĕн курнă — ăна каланă. Пĕчĕккĕскер, хăйне мăн çын вырăнне хурса, виçĕ çул аслă Ваçука хăйĕн хӳтлĕхне илнĕ вăл: ăна аллинчен тытса, вырăнтан вырăна куçара-куçара лартнă, çăварне çырла хыптарнă, çӳçне тураса якатнă. Чăвашла пĕлмен Ваçук Ультие калаçма вĕренеймен ача пек туйăннă пулмалла. Хĕрачара халех пулас амăшĕн туйăмĕ палăрнă.

Чăваш ачисемпе паллашса пĕтнĕ Ваçук. Вĕсемпе пĕрле вăрмана мăйăра, йĕкеле, кăмпана чупнă. Лаша утланса, выртмана кайнă. Çынсем калаçнине илтсе тата Ульти вĕрентнипе чăвашла перкелешме тытăннă вăл. Кăмăлне пĕр япала пăсас мар пулсанах, Ваçук хăйне телейлĕ çын тейĕччĕ. Чăнах, ара. Юлташсем пур ун халь. Чăвашла ăнланать вăл. Чăваш пурнăçне те хуллен хăнăхса пырать. Çынсенчен уйрăм вăл, çавă ырă мар. Калаçса-кулса ларакан ушкăнра Ваçук курăнтăр кăна — çынсем шăп пулаççĕ. Ачасем те яланхи пек мар унпа. Темле тăлланчăк. Вăл эп вырăс пулнăран çапла, тетчĕ те Ваçук — тĕрĕс мар-мĕн. Священник патĕнче пурăннăран вăл. Юратмаççĕ чăвашсем пупа. Ун тăванĕ-хурăнташĕсене те килĕштермеççĕ.

Ваçука пĕлсе çитерехпе çеç вĕсем ăна хăйсен йышне илнĕ. Халĕ Ульти кăна унпа ним суясăр калаçать. Кăшт пушансанах (ерçсен), урам урлă чупса каçать вăл. Яланах выçă сăнлă хăй. Сĕтел хушшине чĕнсен, лармасть.

Апата ларма мар, хӑй Ваҫука мӗн те пулин тыттарать. Лешӗ — илет.

Ку — пӗрре. Тепри — акӑ мӗн. Хӑй пысӑкланнӑҫем, чӑвашсен пурнӑҫне ытларах та ытларах ӑнланнӑ пек вӑл. Йӑлисене те чылайӑшне ӑнкарать Ваҫук. Ҫав вӑхӑтрах, тӗрӗссипе — нимӗн те пӗлмест. Ҫиелтен курать— шала кӗреймест. Икӗ хутлӑ пурнӑҫ тейӗн чӑвашсен. Икӗ хутлӑ тир пек. Ҫиелти — суйи, хӳтлӗхшӗн уртса яни. Чӑнни — шалти, чӗрӗ ӳт ҫумӗнчи. Ӑна пытарса усрас тесен, чӑваш ҫынни ухмаха персе ҫӳреме те, патак ҫиме те хатӗр.

«Уй чӳкӗ турӗҫ-и кӑҫал, Ухатер пичи?»

Юнашар ларса пыракан лавҫӑ аяккалла карт туртӑнчӗ те йӗкӗт ҫине сехӗрленсе пӑхса илчӗ.

«Ма ыйтатӑн эс ӑна манран? Мӗн тума кирлӗ вӑл сана, хула ҫыннине?»

«Ара, ӗнтӗ... хамӑр ял-ҫке-ха. Пӗлес килет».

«Нумай чухне килте мар эп. Халӗ те ак эпир кунта. Ҫав хушӑра ялта тем пулса иртет. Чӳкне тӑвас тесен... пур-ха вӑхӑчӗ. Ӑна ыран ӗҫҫине тухмалла тенӗ чух тин тӑваканччӗ».

«Эп килсен тепӗр ҫул вӑйлӑ пулнӑччӗ».

«Унран каярахпа та темиҫе хут чӳкленӗ! — пӳлчӗ Ваҫука лавҫӑ ҫӗткеленсе.— Халӗ пӗрмай чарма пӑхаҫҫӗ ав. Ҫулсеренех пурнӑҫ хытса пырать. Ҫынсем нумайланса карӗҫ ялта. («Ют ҫынсем нумайланса карӗҫ», тесшӗн пулчӗ Ухатер, сисрӗ ӑна Ваҫук.) Уй чӳкӗ тума юрамасть теҫҫӗ. Киремете пуҫҫапма та юрамасть... Йӑлтах тӳресем хушнӑ пек тумалла, вара тин тӗрӗс пулать иккен».

«Пӑх-ха, мӗнле шӑртланса кайрӗ йӑваш ҫын»,— тесе шухӑшласа пычӗ Ваҫук.

«Ун ырӑнне выльӑхсем тӗрӗс-тӗкел пулӗҫ. Атту киремете ҫырлахтарма кӑна мӗн чул выльӑх пусатчӗҫ».

«Халӗ пупа ҫырлахтармалла»,— теме тӑчӗ те Ухатер — шӑп пулчӗ. Ырӑмарланса, тилхепине туртрӗ:

«Но!.. Ҫывӑрсах карӗҫ ӗнтӗ».

Выльӑха парне кӳнине ӑнсӑртран Ваҫук та курчӗ.

Ун мӑнаккӑшсем патне пӗррехинче каҫкӳлӗм Ульти хыпӑнса пырса кӗчӗ. Килӗнче ачасемпе кил хуҫи ҫеҫчӗ, Золотницкий пуп. Ульти, тӗпелелле иртсе, Ваҫука ҫавӑтрӗ те пӗр сӑмах каламасӑр картишнелле туртрӗ. Тӑ-

лăх ачан йыснăшне, ялти пупа, юратмасть те вăл, унпа та, ун умĕнче те çăвар уçмасть. Тутине тăп тытать те вара, лешне тухса каясса кĕтнĕ евĕр, чалăшшăн кăна пăхса тăрать. Е, хальхи пек, хăй тухса утать.

«Никама та каламастăп тесе тупа ту!» — терĕ вăл картиш варрине чарăннă-чарăнман. Терĕ çеç те мар-ха — хушрĕ. Çине тăрса каларĕ.

Ваçук тăнн пăхрĕ. Шухăшласа тăчĕ.

«Мĕн — каламалла мар?» — ыйтрĕ вăл сых ятне.

«Нимĕн те калама юрамасть! — куçне-пуçне вылятса илчĕ хĕрача.— Çур сăмах, чĕрĕк сăмах та! Чĕрне хури чухлĕ те. Никама та! Ваттисем калаçнине илтрĕм».

«Мĕн илтрĕн?» — тесе ыйтасшăнччĕ Ваçук — хĕрачан хаяр сăнне курчĕ те пуçне çеç сĕлтрĕ.

«Юрать».

«Ун пек çеç сахал! — тарăхса кайрĕ Ульти.— Мĕнле эс ытла лăпкă! Тĕлĕнмелле япала-çке ку. Хăрушă япала. Тупа ту эс! Çĕр çырт!»

Ваçук пуçĕнче урăх шухăш пулас, вăл пӳртум еннелле анасласа пăхать.

«Ну, çак ачапа! — тесе, ăна хулĕнчен тытса лăскать макăрма хатĕр Ульти.— Эсĕ мĕн, çывăрса тăман-и? Халиччен çур çула çитеттĕмĕр».

«Ман выляс килмест,— тет юлашкинчен Ваçук.— Эпир каçхи апат çимен... Хырăм выçрĕ».

Ульти куçĕсене чарса пăрахать.

«Эс мĕн, вăйă тетни кăна? Чĕлхесĕр янавар выçă вилет, тăрайми пулнă, эсĕ пĕр апат çименнишĕн калаçан. Халех çăкăр илсе тухса парап та — кайрăмăр».

Вăл пӳртелле ыткăнчĕ те унтан часах пĕр пысăк чĕлĕ çăкăр та çур витре шыв йăтса тухрĕ.

«Ку — мĕн тума?» — тĕлĕнчĕ Ваçук, витре çине хăраса пăхса. (Тен, ăна шыв ĕçме хушĕç?)

«Кирлĕ! — Ульти ачана кăштах çăкăр хуçса пачĕ. Ыттине хуçаланса хăйĕн хĕвне чикрĕ.— Кирлĕ!»

Вĕсем витрене ик енчен тытрĕç те хыçалти алăкран пахчана тухрĕç, уялла талкăшрĕç. Харăс утманнипе витри чӳхенет, шывĕ сирпĕнет, урисене хăмăл тăрăнать. Утрĕç-утрĕç вĕсем. Лупашка урлă каçрĕç, каялла çаврăнчĕç. Ваçук Ультие шаннă та, хăйсем ăçталла утнине те пăхмасть. Пăхсан та пĕлсех пĕтерес çук вăл — уншăн ют хир ку. Пуçне чикнĕ те вăл çăкăр чăмласа пырать.

Юлашкинчен таçта çитсе чарăнчĕç вĕсем, шывне çĕре лартрĕç.

«Куратни?» — терӗ Ульти пӑшӑлтатса. Хӑй ача хыҫне пытанчӗ.

Ваҫук йӗри-тавра пӑхкаласа илчӗ. Мӗн курмаллаши ун? Шурӑ чул муклашкисем ӗнтӗ, канав, ҫӳҫе тӗмӗ... Пӗр минутран тин вӑл хӑйсем кив ҫӑва патӗнчине асӑрхарӗ. Пулнӑ кунта Ваҫук унччен те. Выльӑх ҫитерме килсен курса ҫӳренӗ. Анчах ял енчен килнӗ. Халӗ вӗсем юри, ҫынсем курасран, уй енчен ҫаврӑнчӗҫ иккен. «Шыва кӗнисене» — Христос тӗнне йышӑннисене ялта ҫапла калаҫҫӗ — халь урӑх ҫӗре пытараҫҫӗ. Кунта «суя» тӗнпе пурӑнаканнисем ҫеҫ вӑрттӑн-карттӑн килкелеҫҫӗ. Ҫын пытарма чарнӑ.

Ҫывӑхрах такам те сывлӑш туртрӗ, те ассӑн сывларӗ — харт! турӗ те, Ваҫук шарт сикрӗ. Ульти ҫӑварне аллипе хупланӑ та Ваҫук хыҫӗпе сехӗрленсе пӑхса тӑрать.

«Сана мӗн пулчӗ?» — ыйтрӗ Ваҫук хыттӑн.

Пӳрнипе ҫӳҫе тӗми еннелле тӗлленӗччӗ Ульти — сасартӑк ҫӗре хутланса анчӗ, пӳрнине ҫӑварне хыпрӗ.

«Мӗн пулчӗ теп?»

«Акӑ, кур, юн тухрӗ!» — юнланнӑ кача пӳрнине Ваҫук сӑмси патне илсе пычӗ савӑннӑ Ульти.

«Мӗн сӑхрӗ?»

«Нимӗн те сӑхман, хам ҫыртрӑм,— терӗ пӗчӗк хӗрача мухтанса.— Эпӗ астумасӑр ҫӑва еннелле тӗллесе кӑтартнӑ».

«Вара мӗн пулчӗ уншӑн?»

«Юрамасть ун пек».

«Ак, эппин, эпӗ те...» — тесе, ҫӑва еннелле кӑтартма тӑнӑччӗ Ваҫук, хӗрача, хӗрелсе кайса, ун аллинчен уртӑнчӗ.

«Ан ухмахлан. Часрах сулахай кача пӳрнене ҫыртса юн кӑлармасан, пӗр ҫул хушшинче вилет ҫын».

«Ытла нумай пӗлетӗн!» — терӗ Ваҫук тӑрӑхласа. Анчах урӑх тӗллесе ашкӑнмарӗ.

«Пӗрне-пӗри ятран чӗнме те юрамасть кунта»,—терӗ Ульти.

Хӗрача каланине хирӗҫ вӑл ялта чух пӗр сӑмахпа тавӑраканччӗ: «Тӗшмӗшленни»,— текенччӗ. Халь нимӗн те шарламарӗ. Ҫитменнине, каҫ пуласси те инҫе юлмарӗ...

«Киле кайӑпӑр-и?» — терӗ вӑл ҫӑмӑлттайӑн, хӗрача урӑхла шухӑшласса кӗтмен пек.

Лешӗ Ваҫук ҫине тӗлӗнсе пӑхрӗ.

«Эсĕ мĕн, çакăншăн çеç килтĕн-и? Лаç хӳми витĕр те пулин пăхмарăн-çке. Вилекен чĕлхесĕр янавара та курмарăн... Тен, халиччен вилсе те выртнă вăл...»

Ваçук ним калама, ним тума аптрарĕ. Тата ытларах хăраса ӳкрĕ.

«Тем сӳпĕлтетет... Мĕнле лаç? Кам вилме выртнă?»

«Ав лешĕ мĕн?» — çӳçе тĕми еннелле пуçне сулчĕ Ульти.

Сăнарах пăхрĕ те Ваçук, йывăç тĕми çумĕнче çăва çинче темле хуралтă ларнине асăрхарĕ. Çынсене питех ан курăнтăр тесе пуль, ахăртнех, çиеле çулçăллă туратсем уртса янă.

«Мĕн вăл? Унта мĕн?» — чĕлхи типсе ларнине туйса, çăварĕнчен аран темиçе сăмах хĕссе кăларчĕ Ваçук.

«Пырса пăх, ара,— сĕнчĕ Ульти.— Эс арçын вĕт».

«Хăратăп,— тӳррипех каласа хучĕ Ваçук.— Темĕн выртать унта. Тен, сиксе тăрĕ те...»

«Сиксе тăрассинчен иртнĕ вăл. Арихве инке лашине вилме килсе хупнă».

«Лашана хупнă?!» — Халь кăна хăраса чĕтресе тăнăскер, Ваçук сасартăк савăнса кайрĕ. Лаша яланах çыннăн тусĕ, ăна пулăшаканĕ пулнă-çке. Иккĕмĕшчĕ вĕсем кац еннелле сулăннă пушă уйра, кив çăва çинче, ак виççĕне çитрĕç.

Вăл хăюллăнах хуралтă патне утса пычĕ, алăк шыраса, пĕр енчен пăхрĕ — çара стена пулчĕ; тепĕр енче те çавах. Виççĕмĕш стенара та ни алăк, ни чӳрече касман. Хуралтăн тăваттăмĕш енне çеç йывăç тĕмĕ хупласа тăрать. Пĕтĕм витене-лаçне çуркамсенчен хăпартнăмĕн. Тăррине хуп витнĕ.

Паçăрхи вырăнтах тăракан Ульти витре хĕррине тăнкăр-тăнкăр тутарчĕ.

«Сана мĕн?» — лаç кĕтессинчен пуçне кăларчĕ Ваçук.

«Эс тaçта ан кай-ха, хăратăп эп пĕччен»,— терĕ Ульти çурма саспа.

«Хайхи паттăр мĕн калаçать,— кулчĕ Ваçук хăй тĕллĕн. Халь вĕсем чăн та улшăнчĕç темелле. Хăраканни хăрами пулчĕ, хăраманнин пуç тӳпинчен сĕрĕм тухса тăрать.— Эп чӳрече шырарăм».

«Ав çав турат куçĕ панчен лайăх курăнать»,— куçĕпе кăтартрĕ Ульти.

Ваçук çавăнтан кайса пăхса тăчĕ-тăчĕ те хĕрача патне таврăнчĕ. Сăнĕ-пуçĕ хăйĕн шап-шурă.

«Ку мĕнле япала, Уль?.. Çăва патне тĕшмĕшне-мĕнне! Мĕн мыскари ку?!»

«Ан кăшкăр-ха эс, ача. Ялта мар-çке эс. Кунта ваттисем çывăраççĕ, киремет кати те инçе мар... Мĕнле, вилеймен-и лаши?»

«Итле-ха, малтан ăнлантарса пар эсĕ мана. Ку мĕне пĕлтерекен йăла? Ма выçăхтарса вĕлереççĕ ĕç выльăхне?»

«Эп ăçтан пĕлем? Ăна Сухвун мучи ячĕпе парне кӳнĕ, тет. Пĕлтĕр вилнĕ усал старик пурччĕ пирĕн урамра...»

«Пусса пăрахма çук-и лашине, кирлех пулсан? Ма асаплантараççĕ мĕскĕне?»

«Вăл хăй вилĕмĕпе вилмелле, тет».

«Тет». Ытла нумай пĕлетĕн эс. Атя, кайрăмăр!» — тесе, Ультие аллинчен ярса тытрĕ Ваçук.

«Ăçта, киле-и?»

«Киле» сана. Витине кĕретпĕр. Вĕренне салтса яратăп...»

Хуралтă çумне çитнĕ Ульти аллине карт туртса илчĕ.

«Ун пек ăна пурпĕрех каялла килсе кăкараççĕ. Хăй татса кайсан çеç çăлăнма пултарать вăл».

«Ăçтан таттăр чӳхсе çитнĕ лаша? Тен, вилнĕ вăл? Атя-ха кĕрсе пăхар».

Çӳçе тураттисене сиркелесе, вĕсем лаçа пуçĕсене чикрĕç. Леш стена çумĕнче урапа ларать. Туртисене çӳлелле çĕкленĕ. Вĕсен хушшинче тепĕр стена çумĕнче кӳлмелли хатĕрсем. Çĕр урайĕнче çӳрен лаша выртать. Ăна сӳс вĕренпе, чĕлпĕр тăршшĕ ярса, кутсăр ӳречинчен кăкарнă — пыр та тат эс ăна. Шакăр шăмă тăрса юлнă мĕскĕнĕн. Ĕçлесе ывăннă урисене ачасем еннелле тăснă, пуçне çĕре хунă та паш-паш-паш сывласа выртать. Тути юнăхса çуркаланса пĕтнĕ. Пуçĕ çитнĕ таран пĕтĕмпех кăшланă лаша. Урапа ӳречи, кустăрма тукунĕн çӳл енĕ шап-шурă. Курăк тымарĕ шыраса, çĕре кăшланă вăл. Хăйĕн тислĕкне çисе янă...

Хăйне кăкарнă вĕрене татма çеç ăс çитереймен янавар. Хăйĕн хуçине — çынна шаннă ĕнтĕ, айван, мана вăл усал тăвас çук, тенĕ пуль.

Ачасем çине пăхас тесе, пуçне çĕклерĕ те вăл ăна лашт çĕре ӳкерчĕ, пĕтĕм кĕлеткипе туртăшса, ӳсĕрсе илчĕ. Хупнă икĕ куçĕнчен шăпăртатса куççуль юхса анчĕ.

«Çук, пăхаймастăп»,— тесе, Ульти каялла чакрĕ, анчах каймарĕ, йывăç кутне çĕре хутланса ларчĕ.

Ваçукăн çилли килсе çитрĕ. Кирек мĕн пултăр, тепĕр тесен, кĕрет те вĕренне салтса ярать вăл. Йыснăшне каласа парать. Лаша хуçисене намăслантарсан та аванччĕ, ÿлĕмрен ан хăтланччăр ун пек. Е... хăйне валли туянасчĕ ку лашана, хăй çиес çăкăра ăна парĕччĕ ача.

Çапла сĕмленнĕ май вăл пĕр енчен кĕме тăчĕ витене — лаша уринчен шикленчĕ. Сасартăк тапса ярĕ те... Вара лаша пуçĕ патĕнчен иртрĕ те вĕренне салтма тапратрĕ — салтаймарĕ: вилĕ тĕвĕпе çыхса, пурантарса лартнă-мĕн. Ытти шухăшĕ те пустуй кăна ун: яла çитсе, çынсемпе калаçса çÿриччен лаши те вилсе кайĕ... Ун çинчен çынсене пĕлтерме те юрамасть ав. Йыснăшĕпе те çывăх мар вăл...

Тахăш вăхăтра ун çумне Ульти пырса тăнă, куçĕнчен пăхса йăл кулчĕ.

«Эс пирĕн çăкăр çинчен манман-и? Тен, мĕне парар ăна?..»

«Лашана-и? — савăнсах аса илчĕ Ваçук.— Чăнах та-çке. Шывне те ĕçтерĕпĕр-и?..»

Ульти çÿçе турачĕсем хушшинчен витрине йăтса кĕчĕ. Хĕвĕнчен çăкăр чĕллине кăларчĕ. Вĕсем лаша пуçĕ вĕçне кукленсе ларчĕç.

«Çăкăрне пĕр тăруках парса пăхар-и?» — ыйтрĕ Ваçук.

«Тен, икке уйăрар?» — терĕ Ульти.

Çăкăрне Ваçук çурмаран уйăрчĕ те пĕр татăкне Ультие пачĕ, теприне хăйне хăварчĕ.

Хĕрача хăйĕн тÿпине витрене чиксе кăларчĕ.

«Ма шыва чикрĕн?» — терĕ Ваçук.

«Анне çапла тăвать»,— ăнлантарчĕ Ульти.

Вара Ваçук та çăкăрне шывра тытса тăрса нслетрĕ те çĕре лаша сăмси умне хучĕ. Хăйсем стена çумне чакса тăчĕç.

Чĕре сури тумалли шăрша туйса илнĕ лаша куçне чал уçса ячĕ те çăкăр татăкне хыпрĕ. Урисене хăй айне пуçтарса тирпейленсе выртасшăнччĕ вăл — вăй çитереймерĕ.

«Кĕлермелле кайса ÿкмен-ши вăл?» — терĕ ача.

«Çу-ук. Куран пулĕ — вилме выртнă. Выçă пурăнса пăх-ха хăв».

«Эппин, часрах çăкăрна çитер».

«Ме, эсĕ пар».

«Ма ху памастăн? Сан пай-çке вăл».

«Эс арçын, сана килĕшет. Çылăхран хăрамалли те çук сан — эс вырăс ачи. Анне каларĕ — сана тем тума та юрать, терĕ».

«Мĕнле вăл — тем тума та юрать? Пуçхĕрлĕ çӳресен те вăрçмаççĕ-и?»

«Тăрса пăх-ха пуçхĕрлĕ, мĕн пулĕ унта. Лашана вилĕмрен çăлас пирки калаççĕ сана, çавна та ăнланмастăн...»

«Ачасене кайса чĕнеп те...»

«Никама та пĕлтермелле мар тесе каларăм-и эп сана?»

«Пĕччен мĕнле вăй çитерес ман ăна ура çине тăратма?»

«Ма пĕччен? Эпĕ те пур-çке».

«Ну, иккĕн пулар. Пурпĕр сахал».

«Шухăшла эс. Пуç пур вĕт сан. Хамăр иккĕн эпир, пуççем иккĕн. Алăсем миçен».

«Çапла та-ха вăл... Атя-ха, эппин, ута хускатса пăхар».

Вĕсем кутсăр патне пырса çĕре ларчĕç те тĕкрĕç, тĕкрĕç лашана çурăмĕпе хурçинчен, лешĕ тапранмарĕ те. Анчах çăкăр таткине каллех хыпрĕ. Шыв ĕçтерме хăтлансан çех сасартăк хускалчĕ те витрене сирпĕтсе ячĕ. Лаша çăварне шыв пĕр тумлам та лекмерĕ.

«Шăвартăмăр лашана»,— терĕ макăрас патне çитнĕ Ваçук.

«Ма, шăвараймаççĕ тетним, шăваратпăр,— хатарланса, витрине тытрĕ Ульти.— Атя, кайса ăсса килетпĕр».

«Халь тин-и? Кĕçех тĕттĕм пулать».

«Луччă никам курмасть. Усал-тĕселе хăратма пирĕн алăра тимĕр пур».

«Вĕсем хăраççĕ тет-и тимĕртен?»

«Хăрамасăр. Тимĕре ăна вут çинче хĕртеççĕ, тет. Вут-кăвар — таса япала».

Туссем шыв хĕрнелле анса кайрĕç.

Вăл çĕре Ваçук тĕлĕкри пек ирттерчĕ. Куçне хупать кăна — вилме выртнă лаша курăнса каять. Шакăр шăмă вăл. Пуçне çĕклемелĕх вăйĕ юлман. Хăй вилĕмрен çăлăнассине те шанми пулнă пулмалла, çăкăр шăршине туйсан, мĕнле тĕлĕнсе, анăраса, хăраса пăхрĕ ачасем çине. Тата шыва мĕнле антăхса çăтрĕ кайран.

Нумаях ĕçеймерĕ, каллех тăкса ячĕ, çапах çунакан ăшне кăштах пусарчĕ пуль.

Тарăхнипе Васук утиялне сирсе пăрахать. Кур-ха эсĕ: ытти лашасем ĕç хыççăн курăк çисе çÿреççĕ, куна çăва çине кайса хупнă, çынсен темле йăлине пула унăн выçă хăрăнса вилмелле иккен. Мĕншĕн?

Унтан тепĕр майлă шухăшласа пăхать ача. Лаша вырăнĕнче хăй пулас пулсан, унта пĕр кун тăмăттăм тет. Вĕренне кăшласа тат та тухса тар.

...Урапа çинче халĕ çавăнпа сĕмленсе пырать çамрăк Сбоев, вунсаккăрти йĕкĕт. Кашни чĕрчунăн, вăл шутрах этемĕн те, пурăнмалли, сисмелли-туймалли, ăнкармалли хăйне уйрăм «тĕнче», уйрăм «чикĕсем» пур пулĕ тет. Сăмахран, çак тавралăх пире пĕр майлă курăнать, çавнах пĕр-пĕр чĕрчун, тен, йăлтах урăхла курать, хăйне майлă «ăнланать»? Эпир, чĕрчунсенчен чи ăсли, лаша мĕншĕн хăйĕн вилĕмне лăпкăн кĕтсе выртнинчен, хирĕçлеменнинчен, вĕренне çыртса е кăшласа татма пĕлменнинчен тĕлĕнетпĕр. Ну, эппин, ача тĕлĕнет тейĕпĕр.

Çав вăхăтрах, тен, йытă е лаша, хурт-хăмăр «шухăшĕпе» эпир те, этемсем, нумай чухне ухмахла хăтланатпăр, çиелтех выртакан япаласене курмастпăр? Урма тытăннă йытă, ăслăраххи, хирте темле курăк тупса çисе сывалать. Тен, этемлĕхе хĕн-хур кÿрекен йывăр чир-чĕртен хăтăлма та çавăн пекех ансат, асăрхамастпăр çеç эпир ăна?

...Касса татма юрамасть иккен ута кăкарнă чĕлпĕре. Апла, тен, пĕр-пĕр чул катăкĕпе сăтăрса çийĕнтерес ăна, хăй татăлнă пек курăнтăр? Е хăйрапа хырас?

Çенĕкре выртакан Васук, тăрса, хуллен пÿрте кĕрет, сĕтел сунтăхне уçса, хăйра шырать. Аллине хытса кайнă çăкăр таткисем лекеççĕ, Васук вĕсене те арки çине пуçтарать. Ыранччен çеç ан вилтĕр лаша, вара ура çине тăратаççĕ ăна Ультипе Васук.

Те кăтăш пула пуçланă ача, ун хăлхине такам ĕнĕрлени пырса кĕрет. Е йытă улать-ши? Сасă таçтан çĕртен тухнă евĕр илтĕнет. Пĕр тикĕс тахçанччен янăраса тăрать, вĕçнелле çеç йытă вĕрнĕ пек пĕтет. Ăна хирĕç çинçерех сасă тăсса ярать. Тепĕр сасă хутшăнать. Тата...

Васукăн çÿçĕ чăшăл! хускалать. Вăл, тăрса, çенĕк алăкне тытса пăхать — сăлăп хунипех-мĕн-ха. Пурпĕрех хăрушă кунта. Çĕр те пĕр алă тăсăлать тейĕн ача

еннелле тёттёмрен. Вăл пӳрте вирхёнсе кёрет, алăкне кёрслеттерсе хупать.

«Эсё-и, Васёк?» — ыйтать мăнаккăшё.

«Эпё».

«Ма çывăрмастăн? Мён пулчё?»

«Темён улать унта... Хăратăп эп».

«Йытă пуль, ара. Кашкăрсем çывхарнине сиссен, çапла канăçсăрланаççё вёсем. Халех пӳрте сарса парăп».

«Йытă мар ку. Сассисем урăхла».

«Ăçта-ха.— Урай хăмисем йывăррăн шатăртатаççё. Чӳрече уçăлса стена çумне çапăнать. Тулта çынсем мăкăртатни илтёнсе каять.— Мен унда сирень?» — тет Васук мăнаккăш.

«Тукмаксем яла хупăрласа илнё!» — кăшкăрать урамри хăранă сасă.

«Тукмак» мённе пёлет Ваçук. Вăл, халтан кайса, çёре ларать. Пётрё лаша, пётрё лаша, тет вăл, сăмахё суяна килессе тилмёрсе.

Пӳртре халь пурте вăраннă, чӳречесем патёнче тăраççё. Йыснăшё, хунар çутса, картишне тухать. Аллинче пуртă ун.

Ваçук та унран юлмасть. Арçын арçынсен çывăхёнче пулмалла-çке-ха. Картасене тёрёслеççё вёсем. Пахчана тухса, хунарпа сулласçё.

«Кашкăр — тёттём кайăкё, çутăран хăрать вăл»,— тет Золотницкий.

Хапха умёнче вёсен тавра тата темиçе çын пуçтарăнать. Кашниех мёнпе те пулин авăрланнă — айпăлтипе, тимёр сенёкпе... Тёттёмре вут çути чăлт та чăлт сикет: такам чёлём тивертесшён. Таçта питлёх çапаççё, шакăртма шакăртатать. Йытăсем татса хыпас пек вёреççё; ача макăрни, алăк сасси... Кашкăрсем уласа ярсан çеç пётём ял шăпланса пусăрăнать.

«Паçăр виç енчен улатчёç,— тет Васуксен кӳрши Мирун-Мăрси,— халё пёр çёре пуçтарăнчёç. Тапăнма хатёрленеççё пулас».

«Ял тулашне тухса вут хумалла мар-ши?»

«Кам кайё унта вут хума? Эс хирте вут хурса çӳрён, тукмакёсем çав вăхăтра сан сурăхусене пусса кайёç».

«Тен, вёсем шăп çак самантра пирён картара хурах тăваççё? — тет Ульти ашшё çӳçенсе.— Эпир кунта юмах çаптарса тăратпăр, вёсем пирён сурăх юнне сăхаççё».

«Чёлхе çине килни ума килет тенё, ан асăн».

Ваçук Иван Васильевич çумне тёршёнет.

«Кĕрер, йысна. Ыран ман ир тăмалла».
«Мĕншĕн тăмаллине ыйтать те ак вăл, эп ăна лаша ҫинчен каласа паратăп»,— шухăшлать пысăк вăрттăнлăха хăй ҫеҫ пĕлнипе ывăннă Ваҫук. Анчах Золотницкий ыйтмасть.
«Кĕрĕпĕр,— тет вăл.— Ҫĕрĕпе тăраймăн урамра. Пурте турă аллинче эпир».
...Тахҫанччен ҫывăраймасть вăл. Лăпланма кăна тытăнать — хĕрарăм тăванса макăрнисем илтĕнеҫҫĕ: пĕринне ĕнине ҫурнă, теприсенне сурăхĕсене пăвса кайнă...

Тул ҫутăлнă-ҫутăлман Ультисем патне чупса каҫрĕ Ваҫук. Пăхать — ҫук хĕрача. Амăшĕ яшка ҫакса янă, тĕпелте хуран айне ҫатрака хурса тăрать. Вырăс ачи ҫине кăмăллăн пăхать. Кил хуҫи хытă та хаяр ҫын, вăл килте чух Ультипе амăшĕ чĕрне вĕҫҫĕн утса ҫӳреҫҫĕ. Халĕ — чип-чипер ав, кулманни ҫех.
Ашшĕ курăнмасть.
«Аван-и, Хвелюк инке?»
«Килях, ачам. Тĕпелелле ирт».
«Ларса тăма вăхăт ҫук ҫав. Мана Ульти кирлĕччĕ».
«Мĕн тума-ши тата? Кĕтӳ хăвалама ятăм-ха эп ăна».
«Эпĕ ăна хирĕҫ тухам-и?»
«Хăвăнне ху пĕл ĕнтĕ. Кирлĕ пулсан, тухăн та ҫав. Ӳлĕмрен килсе лар, эппин».
«Мĕн-и, Хвелюк инке... Яшка пиҫсе аниччен Ульти пирĕн пата каҫтăр-и?»
«Юрĕ, ара. Ашшĕ киличчен ҫеҫ таврăнтăр. Унччен йăмăкĕ те ҫывăрать-ха».
Картишĕнчен тухсанах Ультие курчĕ Ваҫук. Хулă йăтнă та васкамасăр утса килет.
«Эс хатĕр-и?»
«Мĕн тума?»
«Ара, ĕнтĕ... лаша патне кайăпăр, терĕмĕр-ҫке?»
«Кайни те ахаль пуль унта халь тин? Анне калать — ял ҫине пĕр кĕтӳ кашкăр тапăннăччĕ тет...»
«Тет». Эпĕ хам пăхса тăтăм. Пурпĕр ҫитсе курмалла ăна. Ҫисе янă пулсан, шăммине ҫĕр чавса пытармалла. Пирĕн тус-ҫке вăл. Мĕнле шанса пăхрĕ ĕнер».
«Вара мĕн туса тăратпăр эпир кунта? Халех кĕреҫе илсе тухам та...»
«Манăн та илмеллисем пур. Уйра кĕтсе тăрăп эп сана».
Пĕр вăхăтрах хире тухрĕҫ вĕсем. Кив ҫăва еннелле

васкарĕç. Пĕчĕк Ульти пысăк кĕреçе йатнă. Ваçук аллинче хыт çăкăр таткисем чикнĕ хутаç.

Хир варринче малтан çÿçе тăрри курăнчĕ. Унтан вите палăра пуçларĕ. Шурă чулсем хур кĕтĕвĕ пек тухса выртрĕç. Çăва çывхарнăçем ачасен утăмĕ хулленленсе-хулленленсе пычĕ те, вите ик-виçĕ чалăш юлсан, чарăннăччĕ вĕсем — лаша кĕçенсе ячĕ. Вăйсăррăн кĕçенчĕ, çапах хăй савăннине систерчĕ тыткăнри ут. Ваçук — хутаççине, Ульти — кĕреçине ывăтрĕç те витене-лаçа вирхĕнсе кĕчĕç. Лаша урисене пуçтарса, тирпейленсе выртнă та ачасем çине пăхать... Лешсем, савăннипе макăрса та кулса, ăна мăйĕнчен ыталаса илчĕç.

«Чĕрĕ, Чĕрĕ!» — кăшкăрса сиккелерĕ Ваçук.

«Чарăн,— терĕ ăна Ульти.— Çынсем илтсен, иксĕмĕре те лекет. Лаша та пĕтет».

«Э, чăнах-çке. Атя, курăк татса парар. Шыв ăсса килер. Ĕç нумай пирĕн...»

Вĕсем йăрансем тăрăх упаленсе çÿресе ухлĕм татрĕç. Лаша сывлăмлă курăк çине пуçне чикрĕ, кăмăрт-кăмăрт тутарса, çиме тытăнчĕ.

Ачасем лапчăнса пĕтнĕ витрепе шыв хĕрне чупрĕç.

...Кăнтăрла иртсен, яла мăйне вĕрен татăкĕ çыхнă ырхан лаша сулланса пырса кĕчĕ. Вĕрен вĕçне урипе пуссан вăл, кĕлтунă пек, пуçне çĕрелле пĕксе илет.

Малтанах ăна никам та асăрхамарĕ-ха. Урам хушшинче кĕр енне темле выльăх та çÿрет. Унтан пĕр старик сăнаса пăхрĕ те ун çине — кăшт çеç кайса ÿкмерĕ. Тепри кутăн кайса ларчĕ.

Тапранчĕ вара ялта шăв-шав, калаçу. Лашана курни-пĕр хăраса аяккалла тарать.

Курăк çикелесе çÿресен-çÿресен, ырхан ут тăлăх Арихве алăкĕ умне пырса тăчĕ, ура çинчех сывăрса кайрĕ. Çавна кĕтнĕ ватăсем ăна хупăрласа илчĕç те вĕрен вĕçне тыта-тыта пăхрĕç, канашларĕç.

Сăмах пĕрре пулчĕ вĕсен.

«Сухвун йышăнман парнене. Вăл унсăрах çырлахнă. Лашан пурăнас кунĕ пĕтмен»,— терĕç.

Çапла çăлăнса юлчĕ ĕçчен лаша тискер вилĕмрен.

Ваçука е Ультие курсан, вăл, лавпа пулсан та, вĕсен патнелле пăрăнса кĕме пăхатчĕ. Е кĕçенсе те пулин хăй иртсе кайнине систерсе хăваратчĕ.

Ачасене вăл мĕншĕн килĕштернине туятчĕç пулмалла та ял çыннисем, калаçу-тăву тухмарĕ ял çине. Ĕнтĕ пурнăçĕ те хуллен çĕнелес еннелле çаврăнса пыратчĕ

пулĕ çав. Тĕне кĕмен чăвашсен хисепĕ чакнăçем чакатчĕ. Чиркӳсем, шкулсем уçăлатчĕç. Чиркĕвĕсем — ытларах, шкулсем — сахал, çапах вĕсем те халăхсене хутшăнма пулăшнă...

Ульти ашшĕне ялта кăнтăш (хытă çын, куштан) теççĕ. Нумай чухне вĕсем тип яшкапа çеç пурнаççĕ-мĕн. Пĕртен-пĕр ĕне сĕтĕнчен пулакан çăва Яшмул Шĕнерпуçне кайса сутать...

«Тимĕр пăрçа вăл! Ачисене хăртса усрать!» — Ультие курсан, çине-çинех ун ашшĕне аса илет Ваçук мăнаккăш.

Йыснăшĕ ун пек каланипе килĕшмест. Прихутри пуп ял çыннисем кам мĕнле йӳнеçсе пурăннине пĕлет вăл. Пурнăç никĕсĕ чăвашăн, тĕпрен илсен, çĕр-çке-ха. Ăна та пулин арçынна çеç параççĕ. Çав пĕр ят çĕрĕпе Ульти ашшĕн тăвата çынна усрамалла. Тăрантармалла та тумлантармалла вĕсене. Хырçă-марçă тӳлемелле... Тыррине те ачана пăхнă пек пăхмалла. Апла та е пăр çапса каять ăна, е çумăр çумасть...

Юлашки çуне кайса сутать, теççĕ. Тата ăçтан туптăр Яшмул пĕр пус укçа?

Унтан... Темле чухăн пулсан та, чăваш кĕр мăнтăрĕпе, выльăх пусса, чӳклеме туса ирттерет, унсăр тырпул перекетне кĕтмелли çук, теççĕ. Тыră киветме кĕр сăри пăтти пĕçереççĕ. Килйыш сывă пурăнтăр тесе, килйыш пăтти, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетĕр тесе, карта пăтти пĕçерсе чӳклеççĕ...

Тата вилнисене асăнса, юпа тунине илĕр. Кашнинчех выльăх пусаççĕ, ĕçкĕ ĕçеççĕ.

Выльăх пусмалли сăлтавсем урăх та нумай: пĕр-пĕр инкек пулать — киремете парне кӳмелле, туй-çуй чухне — хăна кӳртмелле... Пысăк уявсенче пĕтĕм хурăнташ-тăван, кӳршĕ-аршă пуçтарăнать. Ун чул хăнана пĕрре кĕртсе кăлармах çур çул ĕçлемелле. (Уявра мĕн тумаллине палăртса, чăвашсем ăна *ĕçкĕ* теççĕ çеç.)

Çапла вара пĕр уйăхсем-уйăх çурăсем чăваш йĕркелле урăлаймасть те. Кĕрекерен кĕрекене. Ĕçкĕрен ĕçке.

Урăлкаласан, пăхать те пирĕн пĕлĕш — пуснă пек выльăхне тĕм-тĕкĕр çисе янă, çăнăх — ырçи тĕпне тăрса юлнă. Хĕл пуçланнă кăна-ха. Ун вырăнне «çынтан юлман» вăл...

Чăкăлтăш теççĕ Яшмула (Ульти ашшĕне). Мĕнле чăкăлтăш пулмăн ун пурнăçĕпе?!

Хăйне кӳрентернине час манаймасть вăл. Пĕр урлă

сăмахшăн çĕр сивĕ сăмах каласа хума пултарать. Ачисене ним мар тăрласа илет. Шăллĕ, Мăрси, «шыва кĕнĕ» — унпа хутшăнма пăрахнă вăл. Золотницкий пуп çемйине «курмасăр» çӳрет.

Мĕнле кăлармалла тĕрĕс çул çине Яшмул пеккисене? Епархирен васкатаççĕ. Турă ĕненĕвне япăх саратăр, тăрăшмастăр, теççĕ. Ĕç тĕне кĕртнинче çеç мар-çке. Тĕрĕс çул тени кашни халăхăн хăйĕн унăн. Пурне те пĕр евĕрлĕ шухăшлаттарма çук. Прихутри çынсенчен тăхăрвунă проценчĕ тĕне кĕнĕ. Чиркĕве çӳреççĕ. (Астусах тăрсан, тет хăй ăшĕнче Иоанн атте, Иван Васильевич Золотницкий пуп.) Çав вăхăтрах киремете пуççапаççĕ. Пĕрнепĕри хăйсен «чăн» ячĕпе чĕнеççĕ. Чӳксем тăваççĕ...

Чăвашсем калашле, чăн сăмахăн суйи çук. Тĕрĕссине тĕрĕсех калас пулать: тĕне кĕмесĕр юлнă вунă процентне Иван Васильевич «шыва кĕнĕ» тăхăрвунă процентĕнчен мала хурать. Кусем — юлашки вунă проценчĕ — ăслă, мăн кăмăллă, ятлă-шывлă. Ял вĕсен хыççăн тĕне çеç мар, вута кĕме хатĕр. Вĕсем — ял кĕтӳçисем.

Православие малтан йышăннă тенисенчен икĕ çын, чиркӳ таврашĕнче ăшă вырăн тупма ĕмĕтленсе, Золотницкий таврa йăпăлтатса çаврăнаççĕ. Кусене ĕненӳ мар, тупăш илĕртет. Хăйсен интересĕ. Паян вĕсем Христус тĕнне йышăннă. Ыран лару-тăру улшăнтăр кăна, çавăн пекех çăмăллăн, пуринчен малтан мусульман тĕнне, буддизма е тата мĕне те пулин урăххине йышăнма пултараççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсен пуçĕнчи турă — укçа ятлă. Хăйсене çеç ăслă теççĕ вĕсем.

Май килес пулсан, ачасене çеç вĕрентĕччĕ Иван Васильевич — шкул çурчĕ çук, кĕнекесем тупма кансĕр, вĕренекенсем сахал.

Ульти савăк хĕрача. Хăюлăхĕ те ытлашшипех ун. Ашшĕн хытлăхне хирĕç вăл пиллĕкре чухнех çапла протестлеме ăс çитернĕ. Мăннисем ĕçре чух хăйсен кассинчи ачасене пуçтарнă та, пĕр услам çăва пĕтĕмĕшпех шăратса, çара çупа,— пĕр тумлам шыв ямасăр! — пăтă пĕçерсе панă. Пĕçересси-мĕнĕ ĕнтĕ... Кĕрпи ним чухлĕ те сарăлман, хуралса çунса çеç ларнă. Ачасем тиркесе тăман, каçса кайсах çинĕ. Хуранне тап-таса туса хăварнă. Хăйсем хуп-хура пулнă.

Килти «лару-тăру» çинчен нихçан та калаçмасть Ульти çынсем патĕнче. Апата та лармасть. Тавах, тутă, халь çеç çирĕмĕр, тет кăна кĕскен. Хĕр чăмăркки иккенне туять пуль, мĕскĕн. Хăйĕн ӳсмелле те ӳсмелле-ха.

...Золотницкисем патне уяв чухнехилле тумланнӑ Хвелюк пырса кӗчӗ.

«Аван пурнаҫҫӗ-и? — терӗ те вӑл куҫӗпе Ваҫука шыраса тупрӗ, унран ыйтрӗ: — Ульти кунта мар пуль? Намӑсӗ-симӗсӗ ҫук та вӑл ачан, такам патне те пырса кӗме пултарать вӑл».

«Ма? Ульти лайӑх ача,— матӑшки сас париччен сӑмах хушма ӗлкӗрчӗ шалти пӳртрен тухнӑ Иван Васильевич. Унтан кӗнеке вуласа ларакан Ваҫук еннелле ҫаврӑнчӗ: — Паян килмен пуль вӑл кунта?»

«Ҫук,— терӗ леш.— Тем пулман пулӗ вӗт?»

«Пуласси-качки...— тытӑнарах тӑчӗ Хвелюк. — Эпир хӑнана кайма хатӗрленнӗччӗ те, ачасене хампар тӳпинчен мӑйӑр антарма кӑларса ятӑм. Кӗтсе ларатпӑр-ларатпӑр — ҫук ачасем...»

«Тен, картара-мӗнте вӗсем?»

«Тухса чӗнсе те, шыраса та пӑхрӑмӑр — ниҫта та ҫук».

«Мыйӑрӗ-мӗнпех?» — тӗпел кукринчен пуҫне кӑларчӗ матӑшкӑ. Чӑвашсем кӗркунне татса типӗтнӗ тутӑ мӑйӑра хутаҫпа темиҫешер ҫул пӳртум е хампар тӳпинче ҫакса усранине пӗлеҫҫӗ Золотницкисем. Хӑйсем те нумай иле-иле ҫинӗ.

«Ҫук, мӑйӑрӗ вырӑнчех, пӑхрӑм тухса. Эпир ӑна кӑштах кучченеҫлӗх илесшӗнччӗ»,— ӑнлантарчӗ Хвелюк.

Вӑл кайрӗ.

«Тен, пӑхкалӑн тухса? — терӗ Иван Васильевич Ваҫука вырӑсла.— Лаша кӳлсе тӑратнӑскерсен кӗтесси пуль. Е, ҫӑмӑл ача пулса, мӑйӑр хутаҫне антарса пар».

Ваҫук йӑпӑр-япӑр тумланчӗ те урам урлӑ чупса каҫрӗ. Ультисен картиш алӑкне уҫса кӗнӗччӗ кӑна, хампартан Яшмул тилӗрсе тухрӗ, вӗрен таткипе пумӑкласа ҫыхнӑ темӗнле хутаҫа тапа-тапа ывӑтрӗ.

«Ҫӑва патне ачу-пӑчуна! — ахӑрашрӗ вӑл.— Пурринчен ҫукки вӗсем!»

«Мӗн пулчӗ? — хутаҫ патне сиксе ӳкрӗ Ульти амӑшӗ. Хутаҫҫине ҫӗклерӗ те вӑл анӑраса хытса тӑчӗ.— Кӑна... кам хӑтланма пултарнӑ?»

«Хӗрӳсенчен ыйт! — кӑшкӑрчӗ Яшмул.— Акӑ кур — мӗн туса хунӑ арҫурисем!» — Хутаҫҫине ҫумӗнчи пеккипе чашт тутарчӗ те вӑл, пылчӑк ҫине ҫӗре улӑм муклашки тухса ӳкрӗ.

Урамра сынсем курӑна пуҫланӑччӗ, Хвелюк, хутаҫ ҫӗтӗкӗпе улӑмне кӑпӑр-капӑр пуҫтарса, кӳлсе тӑратнӑ

урапа çине хучĕ, кут айĕнчи улăма кăпкалатрĕ.

«Мăйăрĕ çукпа пĕрехчĕ унта,— терĕ вăл, никам çине пăхмасăр.— Эп хам маннă пашалу».

Яшмул та шăпăртах пулчĕ. Сасартăк васкаса ӳкрĕç вĕсем. Сăра лакăмне урапа çине мала тухса лартрĕç. Кучченеç хучĕç. Хвелюк кӳршĕ карчăкне чĕнсе пычĕ,— пытаннă ачисем тухиччен кил хураллĕх терĕç пуль, ахăр. Вара урапа çине ик енне ларчĕç те хапхаран тухрĕç, уялла пăрăнчĕç.

Такамран тарнă пекех туйăнчĕ çакă Васука.

«Чӳклеме ирттерме кайрĕç, кăрчама пехлеççĕ ĕнтĕ»,— терĕ Мирун-Мăрси ăмсанса.

«Çук, автан сăри ĕçме»,— тӳрлетрĕ карчăк.

«Тен, мăйăр çитерсе кăтартма?» — йĕплесе илчĕ Мирун.

Пурте кулса ячĕç.

Тарăхнă, тĕлĕннĕ, вăтаннă Васук хăйсен еннелле каçрĕ, анчах пӳрте кĕмерĕ, лупасайне иртсе, юпа çумне таянчĕ.

«Ухмах, тăмсай, анра-сухра! — терĕ вăл шăл витĕр. Унтан каллех: — Ухмах, тăмсай, анра-сухра!»

Кĕçĕн алăка уçса хупни илтĕнчĕ. Çын карталла лаплаттарса иртрĕ, ним уямасăр пылчăк çăрса çӳрерĕ— Мирун-Мăрси ку. (Çитĕнсен тин тĕне кĕртнипе ялта ăна икĕ ятпа та чĕнеççĕ. Хăшĕ Мирун тет, хăшĕ—Мăрси. Хăй ĕлĕкхи ячĕпе чĕнсен çилленет.) Çывăхра пурăнать тесе, Васук йыснăшĕ ăна выльăх пăхма, карта-хура тасатса тăма хушнă. Темшĕн юратмасть Мирун Васука. Васук хăй пек çук çын иккенне кашни утăмра систерсе тăрать. (Эсĕ ăраскална пула çех шурă пӳртре пурнатăн. Ахаль пулсан, эс манран та япăх çын, тесшĕн вăл. «Эй, уксах!» — тет вара чĕннĕ чухне.)

Мирун куçĕ тĕлне пулас мар тесе, Васук пусмапа лупас тӳпинчи утă çине хăпарса выртрĕ, шăннă аллисене çанă ăшне хире-хирĕç чикрĕ. Никама та курас килмест халь Васукăн. Мируна пушшех те вара. Пиччĕшĕ, Яшмул, хăйсемпе хутшăнма пăрахнине никама систермесĕр пурăнас вырăнне, Мирун-Мăрси пиччĕшсем çинчен ял тăрăх сăмах акса çӳрет. Çав вăхăтрах хăй, паянхи пек, ялан пиччĕшсем тавра явăнать, çаврăнкалать. Хăв ухмаха юлнине ма çынсене кăтартас?

«Эй, ăссăр, ăссăр»,— кирлĕ сăмаха тепĕр хут аса илчĕ Васук. Анчах унччenхи хĕрӳлĕх сисĕнмерĕ ун сассинче.

Вăл шухăша кайрĕ. Кам — ăссăр? — терĕ вăл. Кама питлерĕ паçăр Ваçук? Малтан çав йăлăхтармăш Мируна-ха. Унтан вара? Хăйне-и?

Тарăхни паллă-ха. Ăна хапха умĕнче çăвар карса тăракансем тарăхтарчĕç. Мĕнле вăл çын килĕнчи вăрттăнлăха курса шăлйĕрсе тăмалла? Çын çумĕнче камăн мĕн ĕç пур? Ырă та мар вăл — çынтан кулни. Кулăшĕ те çук унта, Мирун сӳпĕлтетнинче.

Тен, ытлашши çилленме те кирлĕ мар çынсене? Усал сунса кулмаççĕ вĕт вĕсем Яшмултан. Паян вĕсем санран кулаççĕ, ыран эсĕ вĕсенчен кул. Çăкăр-тăвар хирехирĕç. Пурнăç çавăн çинче тытăнса тăрать. Кашни япалана трагеди вырăнне шутласан, тĕнчере пурăнма та çук.

Вăтанни пирки тесен, Ультипе ун йăмăкĕшĕн вăтанчĕ Ваçук. Тата — ăмсанчĕ вĕсене. Кур-ха эсĕ — хĕрачасем пуççăн ампар тӳпинчи хутаçа пушатса, улăм тултарса хăварнă. Мĕнле хăпарма пултарнă вĕсем унта?

Ваçук çĕрелле пăхса илчĕ. Хăй вăл çакăнта тем парсан та хăпараймасть пуль пусмасăр? Хăпараймĕччĕ те, хăпармĕччĕ те. Вăл урăхла çын çав.

...Пĕр эрнекун (ун чухнехи «пушă» кун) Ульти йăмăкĕ Сетруна урамран чупса кĕнĕ.

«Ульти теп, Ульти,— чĕвĕлтетнĕ вăл тĕпелте чашăктирĕк çăвакан аппăшĕ тавра,— пулăшам-и сана?»

«Çуса пĕтерсен-и? — тенĕ лешĕ, йăмăкĕ çине кулкаласа пăхса.— Ытла чее-çке эсĕ. Ĕçе тытăннă чухне вăл тухса тарать, ĕç пĕтсен, килсе кĕрет».

«Ну, ан çиллен ĕнтĕ, ырă аппам,— Ультин алли ерçӳллĕ маррине кура, ним хăрамасăр сĕртĕннĕ ăна Сетруна.— Урай шăлса парам-и, эппин?»

«Мĕнле вăл — «шăлса парам-и?» Ман валли çеç-им вăл?»

«Шăлам-и урай?»

«Ма эс ăна манран ыйтса тăран? Ак тата санпала. Тыт та шăл».

Сетруна армутирен çыхнă шăпăрпа ун-кун шăлкаласа илнĕ те каллех аппăшĕ патне пынă.

«Урамра эп кама курнине пĕл, Ульти?..»

«Пупа пуль, ара».

«Пупа мар, вĕсен тарçине, Ваçука. Икĕ чул катăкĕпе мăйăр катса ларать».

«Маншăн пулсан...» — тенĕ Ульти калаçу ăçталла пăраннине туймасăр.

«Хёрсем те мăйăр çиеççĕ. Пурин те пур мăйăр, пирĕн çех çук».

«Ма çук? Пирĕн те пур. Ав, хампар тӳпинче çакăнса тăрать».

«Э, ун пекки вăл, çиме юраманни, таçта та пулĕ. Эсĕ илсе кĕр ăна, çисе пăхар».

«Илсе кĕрсе пăх-ха, мĕн тути калĕ».

«Мăйăртан мĕн тути калатăр, мăйăр тути ĕнтĕ».

«Çапла пулмасăр! Пĕçеркки тути калĕ. Ăна кучченеçлĕх усраççĕ».

«Çынсем валли-и? Вара хамăр çимесĕрех юлатпăр-и?»

«Çынсем пире кучченеç çитерĕç».

«Мăйăрах-и? Эп пĕрре те çисе курман кучченеç мăйăр».

«Хальччен çимен пулсан, ӳлĕмрен çийĕн...»

Çук, ăна шанса пурнасшăн мар Сетруна, унăн халĕ çиес килет.

«Урамра пурте мăйăр шаклаттарса лараççĕ, эпĕр çех шăп-шăпăрт»,— йĕрмешет вăл.

Ăна Ульти те асăрханă-ха. Çынсем çăкăр çиеççĕ, Ультисен çук çăкăр, çынсем мăйăр катаççĕ ав, вĕсем «шăп-шăпăрт». Ма вĕсем пĕрмаях çынсенчен катăк?

Тен, Ультисен мăйăрĕ — мăйăр та мар вăл? Чапшăн çакса янă пăрçа хутаççи. Е мăйăр пулсан та, ăна хальччен хурт çисе яма пултарнă. Тутанса пăхмалла ăна. Пĕр-ик курка илнипех нумаях иксĕлмĕ.

Хăвăрах куратăр ĕнтĕ, Ульти кăшт çеç çисе пăхасшăн пулнă мăйăрне. Çынсене кăтартмалăх. Пĕтĕм хутаççине пушатасси ăнсăртран килсе тухнă-мĕн.

Мăйăр патне çитме виçĕ чăрмава çĕнмелле иккен.

Пĕрремĕшĕ — хампар алăкне питĕрсе тăракан йывăç çăра. Уççине ашшĕ пытарса тăрать. Ăна тупмалла. Тупсан — уçма пĕлмелле. Уçсан, алăк хыçĕнчи пĕрнери йĕрĕхе парне памалла. Унсăр вăл хăйĕнчен иртсе мĕн те пулин илнĕшĕн çăпан кăларма пултарать. Е куçа пăсĕ. Чиркӳ умĕнче тупнă юратнă теттине — хуртпуççине хурĕччĕ Ульти,— ашшĕ курĕ ăна. «Мĕншĕн хунă-ха ку япалана пирĕн хĕр?» — тейĕ. Эппин, е нухрат тупса хумалла, е çимелли мĕн те пулин памалла. Ку — иккĕмĕшĕ пулчĕ. Виççĕмĕш чăрмав — мăйăрне çӳле çакни. Ăна мĕнле хăпарса илмелле?

Пĕр эрнерен пур чăрмавсене те çĕнмелли майсем тупса пĕтерчĕ Ульти. Ашшĕпе амăш ĕçе, йăмăкĕ урама

вылăма кайсан, хампара уçса, йĕрĕх пĕрнине пĕр кашăк нимĕр хурса пачĕ. Çакăнпа çырлах, йĕрĕх, ыттине ан кур, терĕ. Вара малтанах хатĕрлесе хунă шĕвĕр вĕçлĕ шăчă илсе кĕчĕ те мăйăр хутаççине курăнман айккинчен так! тĕкрĕ. Хутаç ун-кун сулланкаласа илчĕ те шăпланса тăчĕ... Аçтан та пулин шăтма мар, йĕр те пулмарĕ ăна. Тепре тĕкрĕ — каллех çапла. Виççĕмĕш хут тĕксен, шăчă вĕçĕ хуçăлса ӳкрĕ, хутаççине нимĕн те пулмарĕ. Паллах, амăшĕ ăна çăлкăш пиртен çĕленĕ, ĕмĕре пымалли япала вăл.

Пӳртрен çĕçĕ илсе тухрĕ те Ульти пукан çинчен çӳпçе çине, çӳпçе çинчен ӳпĕнтерсе хунă кăвас чĕресĕ тăррине, унтан хампар кашти çине хăпарчĕ. Вара аллине тăсрĕ те — çитмест алли! Мăйăрне ашшĕ ачисем илме пултарассине асра тытса çакнă-мĕн хампар тӳпине — шăп икĕ каштан варри тĕлне, каштасем çинчен алă çитмелле мар çĕре çакнă.

Ашшĕ чееленнĕ пулсан, Ультин те чееленмелле! Вăл, анса, стена çумĕнчи авăрсăр çавана илсе хăпарчĕ те ун вĕçĕпе хутаçа чашт! тутарчĕ. Мăйăр çĕр урайне шапăр! юхса анчĕ. Пĕр чашăк шакки чул урайне сапса янă пек сирпĕнчĕ. Вара те хутаç шăтăкне мăйăр капланса ларчĕ, сасартăк юхма чарăнчĕ.

Пĕр саппун мăйăр пуçтарчĕ те хĕрача пахчари мунча çенĕкне кайса пытарчĕ. (Мунчине тепĕр эрнесĕр те хутас çук-ха.) Йăмăкĕ киле таврăнсан, вĕсем, мăйăрне урамра çынсен умĕнче çиме хăварас тесе, кăшт çеç тутанса пăхасшăнччĕ, шаклаттарма тытăнчĕç те чăрăнаймасăр йăлт çисе ячĕç. Хайхискер, ирĕксĕрех тепре кайса «антармалла» пулчĕ. Шăччипе тĕкрĕ çеç Ульти — мăйăр шапăртатса анчĕ, пуçтарса кăна ĕлкĕр. Тăкăнчĕ-тăкăнчĕ те, пĕр енĕ пушана пуçласан, йывăр енĕ кашт! туртса антарчĕ, хутаç çĕре лаплатса ӳкрĕ...

Çакăн хыççăн чылай вăхăт хушши Ультипе ун йăмăкĕ мăйăр катса çӳрерĕç. Çынсене те вĕсем ывçи-ывçипех паратчĕç. Тархасшăн.

«Ха, Ульти пĕртте хытă мар»,— тени хĕрачана темле мухтанинчен те хаклă пек туйăннă.

Хăй мĕнле çын иккенне, чăвашла мĕнле калаçнине çынсен питĕнче «вулать» Ваçук. Э, ку сăмаха шухăшламасăр персе ятăм, тăхтамаллаччĕ кăштах: куна пĕлнĕ çĕртех йăнăш каласа хутăм, шел, çаплах чăвашла вĕренсе çитеймест тейĕ; ку çын мана темшĕн шеллет-

çке — хайне тăрантаймĕ тет-ши? Иванкка тете паян никама та курмасть, ачисем выçă пуль ĕнтĕ, тет т. ыт. те. Çунать Ваçук, хĕрхенет, савăнать, хурланать, ÿкĕнет, тиркет, тарăхать. Хăй тутă çÿренĕшĕн вăтанать. Ультипе ларнă чухне çеç чунĕ канать ун. Нимĕн те хĕсмест, пусса тăмасть. Хăй вырăсĕпе чăвашне те, уксаххине те манса каять вăл. Этем иккенне çеç астăвать. Ҫирек мĕн каласан та вырăнлине курать. Чĕнмесĕр ларсан та лайăх вĕсене. Ҫилĕшет ăна Ульти. Хĕрача та ун еннелле туртăнать ав.

Пĕлтĕр вĕсен хушшинче çакăн пек калаçу пулса иртнĕччĕ.

Ульти. Тĕрĕс ят панă сана ялта. Эс чăнах та сăпай.

Ваçук. Эп сăпайран каламаççĕ ăна. Ман хушамат вăл. Сбоев сăмаха калама йывăр чăвашсене. Çавăнпа Сăпай туса янă. Сăпай Ваçук, теççĕ. Уксах текенсем те пур.

Ульти. Юратса калаççĕ ăна, ухмах.

Ваçук. Паллах ара.

Ульти. Хушамат терĕн-и-ха эс — мĕн вăл?

Ваçук. Ят, эппин. Çынсене пĕр-пĕринчен уйăрмалли сăмах. Эп Сбоев, тепри Петров, пирĕн йысна Золотницкий...

Ульти. Ҫай, ним тусан та кала пĕлес çук эп. Çынсене уйăрмалли ят... Пĕрлештермелли çук-и?

Ун пек сăмах та пур-мĕн тĕнчере. Ҫаччă чĕринче те пур вăл. Çунтарса тăракан вĕри сăмах. Анчах нимĕн те шарламарĕ ун чух Ваçук. Ҫалама хăймарĕ. Хĕрача хăех туять пуль терĕ. Халĕ ак ун пек туйăм пуррипе çуккине те пĕлмест вăл. Ультие часрах курас килет ун, çавă çеç паллă. Малаллине тĕтре хупласа тăрать...

Çамрăк Сбоевпа лавçă вăрмана çитсе кĕчĕç. Çул лакăм-тĕкĕмлĕ те, çатанлă урапа ывăннă лашасене турткалать-лăскать кăна: лăнк та ланк каять, кăрт та карт туртăнать, çăтăр та çатăр тăвать. Ваçук халь тăрантас хуçăлса анать, ак кустăрма кĕпчекĕ çурăлать, шăлĕсем тухса ÿкеççĕ тесе кĕткелесе пычĕ-пычĕ те, лăпланса, каллех шухăша путрĕ. Шăмшаккине хытарса тытнă вăл, тутине кулнă майлă тунă та ним курмасăр чалхăртса пăхса пырать. Лавçă çул хĕррипе утать, пĕшкĕнмесĕрех темĕн тата-тата хыпать. Ярханах вăл, йÿле пилĕкĕн, çурăмĕ тарпа шуралнă. Малтан ăна Ваçук тĕлĕкри пек çеç курса пычĕ-ха. Унтан сасартăк хăмла

çырли шăрши çапрĕ ун сăмсине, хурлăхан тĕмĕ куçĕ тĕлне пулчĕ. Пуçне лăстăр силлерĕ те вăл çул айккине çĕре сиксе анчĕ, уксахласа вăрманалла талкăшрĕ.

Ăна хăйне евĕр ăнланнă лавçă лашисене пӳлчĕ.

«Тăрр, шереметсем!»

«Ма чартăн, Ухатер пичи?»

«Эп сана мĕн пуль терĕм...»

«Атя, уттарах хуллен. Эс мĕн çинине пĕлес килчĕ ман».

«Қур, ав, хăв çумăнтах».

Пăхрĕ те Васук — хăмла çырли! Никам татса та, çисе те пĕтерес çук. Хĕп-хĕрлĕ, шултăра, тĕклĕ...

«Ма татмаççĕ кăна?»

«Сан валли хăварнă»,— терĕ лавçă кулса.

«Çук... Чăнах, ара... Ытла нумай».

«Çавăнпа татса пĕтерейместĕ те. Иртен-çӳренсем çеç кăшт-кашт çикелеççĕ. Ял çыннисем ĕçре. Ваттисемпе вĕттисене вăрман хĕрринчи те çитет».

«Татар мар-и пăртак?»

«Ма пăртак çех? Ытларах тат. Кучченеç пек пултăр».

«Çак пурака-и?»

«Ман чĕрес те пушă. Эпир çикелех тăнă, мана кирлĕ мар. Қулленех вăрманта пирĕн ачасем. Сире хулара питех лекмест пуль çырла».

«Ма, унта та çиме пулать, укçуна çеç ан шелле».

«Укçу пулсан-и? Çапла çав вăт. Кунта ани çинче, ав, çи те çи. Васкамалли çук пирĕн. Қиле çитрĕмĕр темелле ĕнтĕ».

Чăн та иккен. Йăлтах паллаиă вырăнсем йĕри-тавра. Пĕлекен вăрман. Курма хăнăхнă тӳпе. Сипетлĕ сывлăш. Хăйсен ялĕнчи, Урхас Кушăкри сывлăша Васук куçне çыхса пырса кĕрсен те уйăрса илет. Ку пирĕн енчи сывлăш тет. Урăх çĕрте ниçта çук ун пекки. Пĕр пек панă юр-вартан, пĕр кĕрперен, пĕр шывранах тĕрлĕ хĕрарăм тĕрлĕ тут калакан яшка пĕçернĕ пек, кунти сывлăша та чăваш пурнăçĕн техĕмĕ витнĕ. Ял ятне те Васук чăн чăвашла калать — Урхас Қушăк тет. (Тӳре-шарапа пуп килйышĕшĕн вăл Урхас Кушкă.)

Сбоевăн чĕри савăнăçлăн тапать. Çав вăхăтрах ун кăшт хăрасси те пур. Çырлана ыран та килме пулатчĕ ĕнтĕ, вăл ав халĕ вăрманалла пăрăнса утать. Хулара чух кашни пушă самантра яла аса илсе пурăннă, чунĕпе унталла ăнтăлнă йĕкĕт халь яла пĕртте васкамасть

тейĕн. Темĕн шухăшласа çитереймен пек вăл. Яла курăнма чунĕпе хатĕр мар пек.

Тен, тĕлпулу савăнăçне ытлараха тăсасшăн Васук? Е — вуçех урăхла: пурне те пĕр харăс курасшăн, ыталаса илесшĕн вăл? Вăрманне, тăван тавралăхне, ялне, унти çынсене?

Ультипе унчченхилле ним шухăшсăр çÿреме юраманнине çеç лайăх туять ача. Çитĕннĕ хĕрпе выляни — вутпа выляни.

Васукран курмалăх лавçă та çырлана пикеннĕ — лашисене чарнă та çултан инçе те мар çисе çÿрет. Апла пулсан, тусан ларман çырлинех татас-ха тесе, Васук вăрмана чылай шалах кĕчĕ. Уçланкăсенче хĕрлĕ лăстăксем типме уртса янă тейĕн — пиçсе çитнĕ хăмла çырли; йывăçсем айĕнче — кăмпа. Кирек хăшне тат. Çырли тытнă-тытман кăпăлт та кăпăлт çеç хăйпăнса тăрать. Кăмпи тата — те путек хăлхи вăл, те йĕрĕлче.

Вăрманти чухлĕ ниçта та савăнмасть пуль Васук. Чунĕпе канать вăл кунта. Пурте çывăх ăна, ăнланмалла. Хăй те вăл çак тавралăхăн уйрăлми пайĕ. Ни хăвăнтан ăслă, ни хитререх курăнма тăрăшмалла мар сан. Никам та тиркемест сана, вăрçмасть, ура хурса ÿкермест. Мĕнле пур эс, çавăн пек ларатăн, выртатăн, çÿретĕн: хăвăн ирĕк.

Çынсем хушшинчех апла мар. Пурнăç кăткăс, хаяр, пăтранчăк. Мĕн те пулин пултăр тесен, ялан кĕрешмелле, тапаçланмалла, сыхă пулмалла. Хăвна лăнчă ярса, пурнăç юхăмне парăн кăна — эс пĕтнĕ çын. Нимĕн те тухмасть сан.

Пĕр пурак çырла та пĕр арка кăмпа татнă йĕкĕт, кайма хатĕрленсе, пуçне çĕклерĕ те тăнн итлесе тăчĕ. Ура сасси çывхарса килет. Таçта палăртса хунă вырăна васканă евĕр, хашкаса утать çын. Тен, лавçă Васука шырать? Çук-мĕн, вăл мар. Урхас Кушăкри Анахвăр пулчĕ вăл. Пĕр аллăсене çитнĕскер. Çывăхранах Васук çулне пÿлсе касса кайрĕ. Пичĕ хăйĕн тĕмпĕл-тĕмпĕл хĕрлĕ, куçĕ урнă çыннăнни пек. Чирли те чирлĕ пулмалла вăл, кирек хăçан та тути вĕрипе çуркаланса юнăхса çÿрет.

Ялта юратмаççĕ ăна. Тухатмăш теççĕ. Ывăлĕ Атăл çинче бурлакра, арăмĕ хăнара чух чипер сĕртенех пÿкле вилĕмпе вилнĕренпе никампа та хутшăнмасть вăл. Пĕччеңех суха тăвать, тырă вырать, авăн çапать. Çырласем, кăмпасем, юман йĕкелĕ пулнă вăхăтра вăрман-

тан таталмасть. Йыват хăвăлĕнчи пыла чĕресси-чĕрессипе йатать. Çынсене курсан, е пăрăнса утать, е çерелле пăхса иртсе каять. Ёçкĕ-çикĕ чух ун хура пӳртĕнчен те пĕччен сасă ĕнерлени илтĕнет. Те юрлать вăл, те макăрать.

Ачасем чулпа пере-пере ватаççĕ ун чӳречине, пахчинчи йăрансене таптаса пĕтереççĕ, Анахвăр çав-çавах çын çинче çук. Çаплах пĕччен вăл.

Чăвашсем хушшинче сарăмсăр вилĕмпе вилекенсем нумай. Çавсенчен курмалăх, çакăнса вилме шухăш тытман-ши ку, апла Ухатер пичине чĕнес, иккĕн мĕнле те пулин чарăпăр тесе, Анахвăр хыççăн утрĕ Ваçук. Лешĕ пĕчĕк уçланка тухрĕ те шлепкине хывса пăрахрĕ, вĕрӳсуру сăмахĕсем мăкăртатса, ĕсĕклесе, çĕре чĕркуçленсе ларчĕ. «Тархасшăн... Тархасшăн...» — тенисем çеç Ваçук чĕрине çурса илтĕнчĕç.

Нимĕн те ăнланмарĕ йĕкĕт. Анчах Анахвăра мĕнле шеллесен те, ун куçĕ умне курăнма хăрарĕ вăл.

«Мĕн ку? — тесе шухăшласа тăчĕ ача шĕшкĕ тĕмĕ хыçĕнче.— Эп пĕлмен йăла-и? Пулма пултараймасть. Хăшпĕр йăлине эп чăвашсенчен ытларах чухлатăп. Вĕсем хăйсен çывăхĕнчи йĕркесене пĕлеççĕ, эпĕ пур чăвашсен пурнăçĕпе паллашнă. Пĕлтĕр «Северный архив» хаçатра, сăмахран, мĕнле ăслă статья тухрĕ... А, тен, вилес умĕнхи кĕлĕ ку? — хăраса ӳкрĕ Сбоев.— Кĕлтуса пĕтерĕ те — çакланса ларĕ? Е макăрса ăшне кантарма килнĕ вăл?»

Çав хушăра Анахвăр ура çине çĕкленчĕ, кĕпи-тумтирне вăшт-вашт хывса печĕ, урине салтрĕ те, çаппаçарамасскер, хĕвелтухăçнелле тилмĕрсе пăхса, тем пăшăлтатрĕ, çапла-çапла тенĕ пек, пуçне сула-сула илчĕ. Унтан сасартăк элес-мелес çухăрса-уласа ячĕ, питнекуçне тăрмаларĕ, çӳçĕпе сухалне туртрĕ. Çĕре персе анчĕ те енчен енне йăваланса кăшкăрчĕ, макăрчĕ, çĕре кăшларĕ...

Ёнтĕ пĕтĕмпе юнланса, хуралса пĕтнĕ вăл, хăй çаплах улать-ха, кусса çӳрет, ылханать. Сăмахĕсем те юнлă пек ун.

«Аслă киремет! Хаяр киремет! Итле ман сăмаха, тытса хутлат ăна часрах! Вĕлер ăна! — антăхса кайса йăлăнать, хушать, хĕтĕртет, вĕслетет Анахвăр курăнман вăя.— Ман тăшман çурчĕ-йĕрĕ кĕл пулса вĕçсе кайтăр. Выльăхне-чĕрлĕхне çĕлен-калта ертĕр, хĕртсурчĕ, сивĕнсе, вĕсем панчен тухса тартăр...»

Тем чул вăхăт иртрĕ çапла, Анахвăр тăчĕ те хĕвелтухăçнелле пуçне тайрĕ, тем каларĕ хуллен. Вара кĕпиййĕмне хыпаланса тăхăнчĕ, урине сырчĕ те каялла çаврăнса пăхмасăр килнелле васкарĕ.

Ун ури сасси йăмсан, вăл хускатса хăварнă йывăç тураттисем лăплансан тин Вaçук хăй йĕри-тавра пăхса илчĕ. Çакăнта Анахвăр патне тухнă пулсан, пĕр самантра пăвса вĕлеретчĕ вăл Вaçука.

Тăнă çĕртех ача çĕре лак! ларчĕ те çырлине тăкса ячĕ. Анчах курмарĕ ăна. Кăмпине вăл хăй çумне хĕстерсе тытса ватса пĕтернĕ-мĕн. Ăна та пăртакран тин асăрхарĕ. Халĕ вăл хăй вилес пек ыйăннине, халтан кайса çитнине çеç йывăррăн туйса тăчĕ. Пăркăчласа лартнăскерĕн пăявне лашт! касса ячĕç тейĕн çав.

Киремете сулчĕ иккен Анахвăр. Кама тĕп тăвасшăнши вăл?

Кун пек тискер япалана нихçан та курманччĕ Вaçук. Курма мар, ун пек тамаша тĕнчере пулма пултарасси çинчен шухăшламанччĕ. Чăн та — ĕмĕр пурăн — ĕмĕр вĕрен иккен.

Ан та кала, ан та кала. Вaçук аякри хуласем тăрăх вĕренсе çӳрет. Хăйпе юнашар çакăн пек мыскарасем пулса иртнине тĕлĕкре те тĕлленмен вăл.

Пăртакран çул хĕррине тухрĕ Вaçук. Пăхать йĕкĕт — ни лавçă, ни лашисем çук таврара. Ирĕксĕрех ун çуран ланкăштатмалла пулчĕ яла.

Йыснăшсем панче те çук Ухатер. Вaçук япалисене парса хăварнă та вăл килне чуптарнă.

«Ма мана кĕтсе тăман-ши вăл, çул укçине тӳлесе ямаллаччĕ»,— терĕ Вaçук.

«Эсĕ мĕн, хулара пурăнса, çынсене шеллеми пулса кайнă-и?» — тĕлĕнчĕ йыснăшĕ.

«Ма ун пек калатăр?» — терĕ Вaçук.

«Ара, çынну сиксех чĕтрет-çке. Мĕнле яла çитнĕ-ха вăл? Аран пĕр-ик сăмах каларĕ те урапи çине тӳнчĕ, тилхепине хускатрĕ...»

«Пĕр сехет каялла та чип-чиперччĕ-çке. Вăрманта пĕрле хăмла çырли çисе çӳрерĕмĕр. Кулмасăр çăвар уçмасть Ухатер пичи».

«Мăнаккунтан ыйт, эппин. Çынну вут пек çунать».

«Ман шухăшпа, ӳсĕрччĕ вăл»,— терĕ Елизавета Ивановна кăмака кукринчен.

«Çук, чирлĕ, матăшкă. Куçĕ тăп-тăр урахчĕ».

«Куçĕ урă пуль те, хăй ÿсĕр. Çавăнпа килне васкарĕ вăл».

«Укçа леçмелле, кайса курас ăна ыран»,— тĕв турĕ Васук.

«Тата тепри тупăнчĕ! — кăмака умĕнчен тухрĕ Васук мăнаккăшĕ.— Эсĕ те пулин ăслăрах пул, ачам. Халь тин пĕчĕккĕ мар ĕнтĕ эс, хамăр камне те чăвашсем камне ан ман. Ытлашши ачашлама юрамасть вĕсене. Укçа кирлĕ пулсан, хăйсем те урасăр мар».

Татрĕ те хучĕ çапла. Чăвашсемпе çывăхлансан, хак ÿкет иккен çыннăн. Темĕн те пĕлет ун мăнаккăшĕ! Пуринчен ăслă, пуринчен ятуллă тет пулмалла хăйне. Ниçта вĕренменскер, упăшкине вĕрентет кăна.

«Манăн каламалли пур сана,— терĕ вăл Васука, Иван Васильевич чиркĕве каçхи кĕлле кайсан.— Анчах савăнмалли хыпар мар, мана ан çиллен эс. Çирĕплен...»

Хурланнă чухнехилле, сасси аран тухать ун, куçĕ хăйĕн кулма хăтланса çиçет.

Ниме тăман япала кĕтсе, хăрушă хыпар илтиччен, чи хăрушши çинчен шухăшласа, ниме тăман хыпар илтесчĕ. Усаллине асăнмасан, ырри пулмасть теççĕ чăвашсем. Мĕнпе çапса хуçĕ мăнакка? Неушлĕ... анне вилнĕ?

«Итлетĕп, мăнакка».

«Тен, ыран пĕлтерем? Паян ывăннă эс. Мунча кĕр, кан... Капла ытла пĕр тăрук пулать».

«Ан хăра, мăнакка, ывăнман эп. Паянах кала».

«Ултие... вăрларĕç вĕт, мĕн тăвăпăр?»

Темле хăрушă сăмах илтме хатĕрленнĕ пулсан та, кăна кĕтменччĕ Васук. Пĕрре шурса кайрĕ вăл. Унтан сасартăк питне юн çапрĕ. Тăчĕ те йĕкĕт картишнелле ланкăштатрĕ.

«Ик-виçĕ хут та тарса килсе пăхрĕ вăл, каяллах тыта-тыта ăсатрĕç»,— калаçрĕ çенĕк умне тухса тăнă Елизавета Ивановна.

«Камсем тытса ăсатрĕç?»

«Ашшĕ... Упăшки енчи тăванĕсем...»

Халь ĕнтĕ упăшки çинчен ыйтса пĕлессе кĕтет тесе, Васук садалла утрĕ. Мăнаккăшĕ сад алăкĕ патĕнче курăнсан, карта шăтăкĕ витĕр кÿршех каçрĕ.

Çĕрле вăл пĕрре куç хупмарĕ. Мĕнле ватать, аллать, унать иккен пурнăç çынна, мĕнле вылять унпа! Пĕр кун хушшинче мĕн курмарĕ-илтмерĕ те ача, утса тухмалли кунçулĕ тăршшĕпе мĕн-мĕн тÿссе ирттерме пÿрмен пуль ăна.

Сасартăк хăраса тăрса ларчĕ вăл. Мăнаккăшĕ ăна Ультие вăрлани çинчен ăшĕнче савăнса пĕлтерчĕ. Йĕкĕт макăрать ав, анчах вăрттăн вăл та хĕпĕртенĕ темелле. Эппин, Васук та икĕпит-и?

Çапла, кирек мĕн тесен те, ун пурнăçĕнчи пĕр тапхăр вĕçленчĕ. Халь ĕнтĕ малалла тапаçланмалла, вĕренмелле. Май килсен, чăвашсем хушшинче курнине ыттисене каласа памалла.

Тепĕр эрнерен Васук Ухатере тĕл пулчĕ. Вăл чиркÿрен тухатчĕ. Хăй хуралса, начарланса кайнă, пуçне уснă.

«Ухатер пичи, аван-и! — ун патне чупса пычĕ Васук.— Атя пирĕн пата».

«Ма тÿрех унта? Тен, кăштах канса ларар, ăшăнар? Чиркÿре шăнтăм эп».

«Ăçта ларăпăр?»

«Ак çак каска çинче те юрать пуль».

Вĕсем чиркÿ карти тулашĕнчи пĕрене пуçĕ çине ларчĕç.

«Сана тем пекех тав, Ухатер пичи,— терĕ Васук, лешĕ хăйне вăрмана пăрахса хăварнине асăнмасăр ырă тăватăп тесе.— Эс пыман пулсан, çаплах Хусанта çÿреттĕм-ха эп».

Ухатер чĕнмерĕ.

«Укçине виçĕмкун-тăватăмкунсенчех пырса памаллаччĕ те — ерçмерĕмĕр пулмалла...» — укçа леçме пырассипе пымасси хăйĕнчен çеç килменнине систерсе аларĕ Васук.

«Эпĕ хам сирĕн пата кĕрсе тухма пулнăччĕ, чирленипе пыраймарăм»,— айăпне хăй çине илчĕ Ухатер.

«Йысна та мăкăлтатрĕ-ха. Мĕн пулчĕ вара сана?»

«Киремет тытрĕ»,— терĕ лавçă, ачана куçран пăхса.

«Ăçта тытрĕ? Хăш вăхăтра?»

«Çырла çиме чарăнмалла пулман пирĕн вăрманта. Пĕтĕмпех эп ухмаххипе пулчĕ вăл. Çултан инçе мар хаяр киремет иккенне маннă эп. Виçĕ кун йывăр чирлесе выртрăм, пурăнас хура мăкăра киремете парне кÿтĕмĕр... Çын кăшкăрашни хăлхана пырса кĕчĕ кăна, киремет тапăнчĕ мана. Ал-ура вăйĕ шалтăр пĕтсе ларчĕ; пуç çаврăнса кайрĕ, ăш пăтранать, шăмшак сурать — вырт та вил çавăнтах. Киле мĕнле çитсе ÿкнине те астумастăп. Икĕ кун тăнсăр пулса выртнă. Юрать, Илюк юмăç урам урлă çеç те, çавă пулăшнă...»

«Мĕн туса пулăшнă-ха вăл?»

«Хура мăкăра пусса чÿклеме хушнă... Çавăн хыççăн

тин хаяр киремет çырлахрĕ. Сых ятне паян Микул турă умне те çурта лартрăм. Атя пурте кăмăллă пулччăр ĕнтĕ. Çитĕннĕ мăкăра шеллеменнине, çур пуслăх çуртана та шеллесе тăрас мар».

«Пĕр тухатмăш мĕн чул сиен тунă».

«Мĕнле тухатмăш?»

«Анахвăр, ара. Сан хурăнташу».

«Çавăччĕ-и вăл? Хуплантăр!»

«Анчах сана сулмарĕ вăл киремете. Эсĕ унпа мар, сехрӳ хăпнипе чирлесе ӳкнĕ».

«Эх, уксах, пĕлместĕн-ха эс киремет мĕнлине. Вĕсилетсен, вăл хăй çывăхĕнчи çынна такама та тытса хутлатма хатĕр. Вĕлерсе пăрахма та ӳркенсе тăмасть».

«Мана тытмарĕ-çке вăл? Эпĕ Анахвăр мĕнле пынине, вăл киремете сулнине — йăлтах пăхса тăтăм. Тата, сан пек, аякран та мар, вунпилĕк-çирĕм утăмран киремет картинчен».

Ухатер, тем калама хăтланса, çăварне карчĕ те Васçук çине аптраса кăлин пăхрĕ.

«Эсĕ... мĕн-çке... вырăс пулнă,— терĕ вăл юлашкинчен,— урăх ĕненӳ сан. Вăл пирĕн тӳркĕлли. Сиртен хăрать пуль вăл. Вырăссем киремет йывăçĕсене касса пĕтерчĕç, картисене ишрĕç».

«Итле-ха, Ухатер пичи. Эсĕ ăслă çын, таçта та пулса курнă. Чылайранпа ямшăк чупан. Намăс сана ун пек ухмахла япаласене ĕненме. Мĕнле хаяр турă вăл, чăвашсемпе çармăссене, мăкшăсене çеç хĕн кăтартакан-скер? Е эсир уйрăммăнах çылăхлă-и? Сăмахран, ак эсĕ. Мĕн туса çылăха кĕрсе пĕтме пултарнă эсĕ?»

«Ман çылăхсене никам шутласа пĕтерейменĕ. Çул çинче çеç эпĕ санран укçа сахал илме пулнăшăн ӳкĕнсе килтĕм. Эсĕ йăваш çын, ытларах тӳлеме те килĕшетчĕ, терĕм. Унтан вăрманта та эсĕ чарса тăратман пулсан, пирĕн мăкăр сывă юлатчĕ тесе шухăшласа килтĕм...»

«Вăл чăн та çапла-ха. Çылăхĕ хамăн та мăй таранах. Айăпăм та нумай. Эп урăхла каласшăн. Киремет чăнах пулас пулсан, ма вăл нимĕççене е тутарсене тивеймест, тетĕп?»

«Тен, тивесшĕн мар, çавăнпа? — терĕ Ухатер, шухăша кайса.— Тен, пӳлĕхçĕ кашни халăха хăйне тивĕç асап панă? Ытлашши иртĕхесрен? Пирĕн — киремет ав, сирĕн — турă...»

«Киремете юмăçсем шутласа кăларнă,— терĕ вăл

татăклăн.— Юмăçсем — ултавçăсем, çăткăнсем, харам пырсем! Çын инкекĕпе ырă кураççĕ вĕсем!»

«Ма эп хыттăн кастарса ларап? — асăрхарĕ вăл хăйне хăй.— Лăпкăн та ăнлантарма пулать-çке çынна».

«Ĕçлемесĕр тăранса пурăнакансем халь таçта та пур»,— килĕшрĕ Ухатер ĕшенчĕклĕн.

Ваçукшăн ку çăпанĕнчен тĕкнĕ пек пулчĕ. Пĕрмай йыснăшĕпе питлеççĕ ăна. Хĕрелсе кайрĕ те вăл аллине сулчĕ.

«Юмах кăна вăл, киремет. Çук вăл тĕнчере».

«Чим-ха, уксах,— пӳлчĕ ăна Ухатер.— Эсĕ ху пĕлмен япаласем çинчен калаçма юратан. Киремете курман та эсĕ — çук тетĕн. Эп курнă та ăна — пур тетĕп».

«Эсĕ курнă-и киремете?»

«Ак халь сана курнă пек курнă».

«Хăш тĕлте? Хăçан?»

«Кирек хăçан пултăр, кирлĕ мар вăл сана. Эс пурĕпĕр ĕненместĕн».

Калаçнă май вĕсем Золотницкисем патне çитсе кĕчĕç.

Пĕр курка эрех ĕçтернĕ хыççăн тин Ухатер кăмăлĕ çемçелчĕ.

«Ун чух эпĕ хăнаран таврăнаттăм,— тесе пуçларĕ вăл.— Киле ман икĕ çулпа килме пулатчĕ, тавра: ку — инçе, вунă çухрăм ытла; е тӳрĕ — пилĕк çухрăм та çук. Анчах хаяр киремет çумĕнчен иртмелле. Каçараха юлнăччĕ те эпĕ, тӳрĕ çулпа таврăнам терĕм... Киремет патнелле çывхарнăччĕ çеç, сасартăк çĕр кисренсе илчĕ. Мана хирĕç хура утсем кӳлнĕ кӳме сирпĕнсе килет. Лашисем авкаланаççĕ кăна. Кустăрмисене тимĕрленĕ те, аслати пек кĕмсĕртетет кӳме. Станувуй хосподин вулăс тăрăх тухнă тесе, эпĕ çул хĕррине пăрăнса тăтăм, çĕлĕке хыврăм. Кӳми манпа танлашрĕ те — кăшт çеç тăнсăр пулса ӳкмен эпĕ. Чӳречинчен хаяр киремет карăнса пăхса пырать!»

Калавçа пӳлес килсен те, вĕçне çитиччен тӳсесшĕнччĕ Ваçук. Анчах ку тĕлте ниепле те чăтса тăраймарĕ вăл, тăрăхласа ыйтрĕ:

«Хаярриех-и?»

«Мĕн?» — ăнланмарĕ Ухатер.

«Киремечĕ чăн хаярриехчĕ-и, тетĕп?»

«Самай çавăччĕ,— терĕ хĕрĕнкĕ Ухатер.— Шăп кăна Илюк юмăç калана пекки. Вăрăм питлĕ, мăйракаллă, сухаллă. Хĕрлĕ сăхманпа. Сухалĕ пайăркан-пайăркан

усăнса тăрать. Мăйраки качаканни майлă. Кашнин вĕçне пĕчĕк шăнкăрав çакса янă. Куçĕ шĕл-кăвар пек çунать... Киремет çихĕрни, урапа сасси, чăпăркка шартлатни мана вĕлерсе-лапчăтсах хăварчĕç».

«Эсĕ хăнара пулнă-и-ха ун чух?»

«Çапла. Туйра».

«Пăртак эрехне те, пыллă сăрине те ĕçнĕ ĕнтĕ?»

«Çителĕклех ĕçнĕ, çынсенчен юлман, хуçана кӳрентермен. Гакшă».

«Киремет таврашĕнче мĕн те пулин сиксе тухасран та хăранă ĕнтĕ?»

«Хăрамасăр, ара. Киремет хурăнташ мар-çке вăл. Пĕр çыпăççан, унран хăпса пĕтме çук».

«Тĕттĕмре эс чăн та пĕр-пĕр урапана тĕл пулма пултарнă. Вутă турттарса таврăнакана, сăмахран. Çынни чĕлĕм туртса пынă пуль-ха. Е çулу çапнă. Эс ăна, ӳсĕрскер, киремет тенĕ».

Ухатер, пилеш хыптарнă пек, питне пĕркелентерчĕ, çăварне карчĕ те Васук еннелле сехĕрленсе пăхрĕ. Лешĕ кулса ячĕ.

«Лайăх çын эс, Ухатер пичи. Кăмăллă çын...» — теме тытăннăччĕ йĕкĕт, чăваш сиксе тăчĕ те картишĕнчен тухах кайрĕ. Кĕтсе ларчĕ-ларчĕ ăна ача, таврăнмарĕ Ухатер. Укçине илме те хăй пымарĕ. Пĕр хушă урамра-мĕнте курсан та аяккалла пăрăнса утатчĕ. Кайран калаçкалакан пулчĕ вăл. Анчах чăваш ĕненĕвĕсем, йăлисем пирки нихçан та тапратмастчĕ. Вуçех.

Хăйне килĕштерсе пăрахнă Васук çилленсе те пăхрĕ ăна, ӳпкелешсе те илчĕ. Вăхăт çитмесĕр Ухатер çиллипăшши пурпĕр иртсе каймарĕ. Малтанхи çывăх туйăм та çĕнĕрен амаланмарĕ.

Киреметсене, йĕрĕхе, эсреле, хĕртсурта, вутăша тата ыттисене Васук вунвиççĕре-вунтăваттăра чухнех суя ĕненӳ теме хăнăхнă. Золотницкий килĕнче çапла вĕреннĕ. Турă çеç аслă чăнлăх, тенĕ вăл. Субстанци, семинаристсем калашле. Ун пирки ни тавлашма, ни сӳтсе явма юрамасть иккен. Ăна мĕнле пур тенĕ, çаплипе йышăнмалла-мĕн. Ĕненмелле. Кам та пулин турра та тиркеме хăяссси пирки ĕмĕрне ун пуçне пырса кĕмен.

Халь шухăшлать те йĕкĕт — вăтанать. Пирĕн ĕненӳ çеç тĕрĕс, ыттисен пурин те суя тени — эпир çеç аслă, ыттисем пурте айван тени патнех илсе пырать пуль вăл? Ухатер Васуксен тĕнне çапла тиркесе тăкма пултарайман-и? Çăмăллăнах пултарнă. Анчах вăл, çынпа

ун ёçне-хёлне, ун ёненёвне хисеплеме пёлекенскер, Васук пек павраса тăмарё, пăрăнчё те утрё çеç.

Уншăн Ухатере çилленес пулсан, Васукăн вăрçмалли çук-и? Вăл çылăхсăр çын-и?

Семинарин кёçён класёнче вёреннё чухнех-ха вăл, чăвашсем çинчен кала-кала парса, пёрле вёренекенсен кăмăлне тыткăна илнё Васук. Кăшт пушă вăхăт тупăнсанах ачасем анăратнă ăна.

«Тата мён те пулин каласа пар, Сбоев».

«Туйне мёнле ирттереççё вёсем?»

«Вăл чăн-чăн мистери! — тенё çамрăк Сбоев.— Балетпа опера пёрле! Кăштах фантази пулсан, хăвăрах ăнланатăр».

«Сахал кун пек çеç! Эс тёпё-йёрёпе каласа кăтарт. Куçа курăнмалла пултăр. Пёркунхи пек».

«Киремет тени мёне пёлтерет?»

Яла тунсăхланă Васук савăнсах калама тытăннă вара. Хёрнёçем хёрсе кайса, пурин кăмăлне хускатнă. Ун шухăшёпе, çуллахи чăваш ялёнчи пек илемлё вырăн ниçта çук. Уй чўкё тума тухнă шур кёпе-йёмлё халăха Васук авалхи жрецсемпе танлаштарнă...

Çав кунах каçалапа Сбоева инспектор патне чёнсе кёртнё.

«Сан пирки ачасем ўпкелешсе калаçççё»,— суйнă хулăм пуп.

«Мён пирки-ши?» — тенё Васук.

«Сирён калаçăва итлесе тăтăм та эп, эсё вёсене вёренўрен пăратăн. Хăв çеç лайăх вёренни сахал пире...»

«Каçарăр та, инспектор господин, ачасене мён туса чăрмантаратăп эп?»

«Вёсен çирёпленсе çитмен шухăшне пăсма часах. Кирлё мар япаласемпе ачасен кăмăлне хускатма та çăмăл. Калаçма ăста эсё, аван вăл. Сăмахусем çыпăçуллă. Анчах вăл пуянлăха турра юравлă ёçе парнелесчё».

«Ачасем хăйсем ыйтаççё. Ăна каласа пар та кăна каласа пар, теççё...»

«Тёрёс, каласа пар эсё. Анчах кирлине кала. Чăваш ялёнче ырри нимён те çук унта, пёлетёп эпё. Чир-чёр те тасамарлăх. Кайăкла пурăнăç. Тискер йăласем. Аллăутмăл султан вёсен ячё те юлмё тёнчере. Вилекенни — вилсе пётё, вырăса тухакани — вырăса тухё... Юрё, каласу пёттёр çакăнпа. Урăх хускатар мар ку сăмаха. Каях!»

Çамрăк Сбоев анăраса кабинетран тухнă, аялти хута аннă. Унтан Атăл хĕрринче асăрханă вăл хăйне. Чул çинче ларать-мĕн ача. Инспектора аса илнĕ те вăл — кулса çеç янă.

«Сан яту хăв виличчене те çитмĕ,— тенĕ Сбоев.— Эпĕ те çухалăп. Анчах чăваш халăхĕ ĕмĕр пулĕ. Пыр та чар эсĕ Атăл юхăмне. Халăх пурнăçĕ те çавах!..»

Çавăнтан пуçласа мĕн хăй вĕренсе тухиччен инспектора пĕрре сывлăх сунмасăр ирттернĕ Васук.

Кам пурнăçĕн сыпăкĕсем иртрĕç пирĕн куç умĕнчен? Автор шутласа кăларнă япала-и вăл е чăн пулни-и?

Иван Васильевич Золотницкий пуп каярахпа чăваш халăхĕн культурине тĕпчесе палăрнă Николай Иванович Золотницкий ученăйăн ашшĕ пулнă. Вăл чăнах та Урхас Кушкă ялĕнче пурăннă. Чăваш ачисене пуçласа чăвашла ăнлантарса парса вĕрентме тытăннă çын вăл. Повеçре кăтартнă Васук, каярахпа Хусан университечĕн профессорĕ, чăвашсем çинчен çырнă «Исследования об инородцах Казанской губернии. Заметки о чувашах» тата «О быте крестьян Казанской губернии» кĕнекесен авторĕ Василий Афанасьевич Сбоев пулса тăнă. 1980 çул пĕр вăхăталлах ун ячĕпе çыхăннă икĕ датăна палăртма тивет: çав паллă çын çуралнăранпа 170 çул, вилнĕренпе март уйăхĕнче 125 çул тулать. Эпĕ çак пĕчĕк повеçре В. Сбоевăн çамрăк чухнехи кунçулне чĕртсе тăратма хăтланса пăхрăм.

## ПИЧЧĔШĔПЕ ШĂЛЛĔ

### 1

Ытти çулсенче Александр Яковлевич отпуск вăхăтне çемйипе ăçта та пулин тинĕс хĕрринче иртterекенччĕ. Кăçал вăл пиччĕшĕ патне яла кайса курма шутларĕ. Пĕр енчен укçа сахалтарах кирлĕ (лайăх пултăр тесе, Александр Яковлевич васкамасăр ĕçлет: ик-виçĕ çулта та пĕр кĕнеке лăстăкĕ çеç кăларать, çавăнпа унăн «ытлашши» укçи çук). Тепĕр енчен тата, чăн та, мĕншĕн «пурнăç çывăхнерех» пулас мар? Яла кайса курмалли урăх сăлтав та пур. Ун пирки вăхăт çитсен калăпăр.

Тăван ялĕнчен Александр Яковлевич вăтăр çула яхăн ĕлĕк тухса кайнă. Пуçламăш шкул пĕтернĕ те çывăхри хулана иккĕмĕш сыпăклă текен чăваш шкулне вĕренме кĕнĕ. Унтан институтра вĕреннĕ, анчах ăна

пĕтерейменҫ,— вăрҫа кайма тивнĕ. Аманса таврăнсан, учительте ĕҫленĕ, хаҫат-журнала ҫырма тытăннă. Халь Александр Яковлевич хулари пĕр учрежденире ĕҫлет. Службăра мар чухне статьясем, очерксем, калавсем ҫырать. Уйрăммăн тухнă кĕнекисем унăн пиллĕк-улттă. Унсăр пуҫне вăл пĕрлешсе кăларакан сборниксене хутшăнать. Шкулта вуламалли кĕнекесенче пичетленет.

Кантурти ĕҫне пăрахса, ҫырса ҫеҫ пурăнма, писатель-профессионал пулма унăн хăюлăх ҫитмест. Те ҫырăнĕ, тен, ҫырăнмĕ те. Лар вара выҫă...

Александр Яковлевич ĕҫчен ҫын. Унăн пĕрмаях кускаласа ҫӳремелле, вăй хурса ĕҫлемелле, мĕн те пулин тумалла. Хăйне вăл хускатса янă машинăн пĕр пĕчĕкҫĕ пайĕ пек туять. Пайĕ куҫа курăнми пулсан та, машина унсăр та ĕҫлеймест. Вăл кирлĕ ҫын! Ун пек чухне вăл килĕнче те савăнсах ҫырса ларать.

Александр Яковлевич тăван чĕлхен техĕмне аван туять. Сăнарсене куҫа курăнмалла ӳкерет, теҫҫĕ ун пирки критиксем. Вулакансене вăл тĕлĕнмелле ĕҫ-пуҫсене ҫырса кăтартнипе мар, ҫынсен кăмăл-туйăмне хускатма пултарнипе илĕртет. Ҫиелтен пăхма нимех те ҫук: калăпăр, урамри сценка. Александр Яковлевич ҫав пĕчĕк ӳкерчĕкпе те вулакана савăнтарма е хурлантарма, тарăхтарма е шухăша яма ĕлкĕрет.

Хĕрсе ĕҫленĕ вăхăтра унран лайăх ҫын та ҫук. Калаҫать, кулать, шӳт тăвать. Ҫыру ĕҫĕ ăнман чухне вара хăйпе хăй тулашать, ҫĕтĕлет, ҫемйисене тарăхтарса пĕтерет...

Ана пĕчĕк ачана пăхнă пек пăхмалла.

Статйисенче те вăл, пурнăҫри пекех, тӳррĕн кастарать: лайăх, начар, чăвашла пĕлмест... Ҫавăнпа унăн туссенчен ытла тăшмансем нумай. Ĕҫсĕр те пурăннă вăл, пĕр пус укҫасăр та ларнă. Халĕ ун пек-кун пекрен питех хăрамасть: шалу пур. Ачисем те ҫитĕнсе пыраҫҫĕ.

Хăй сисмест-ши вăл е, сиссе те, ăна лайăх ен тесе шутлать-ши, е унăн пурнăҫа анлăн кăтартса пама хал ҫитмест-ши — пĕлместĕп, анчах вăл очеркĕсемпе калавĕсенче те ҫавах: полюсран полюса ҫапăнать — е унăн ытарма ҫук этемсем кăна (ҫĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕҫлесҫĕ, йывăрлăхсене ҫĕнтерсе тухаҫҫĕ, темтепĕр...), е — путсĕрсем. (Тыт та фельетон ҫыр вĕсем пирки.) Е тап-таса, шап-шурă, сеп-сенкер, е — хуп-хура. Варринче вара, ҫак икĕ полюс — икĕ тĕс хушшинче — урăх нимĕнле тĕссем те ҫук тейĕн...

Вăтăр çул хушшинче хăйсен яленче темиçе хут та пулса курнă вăл. Укçаллă та, укçасăр та, пĕччен те, çемйипе те пыра-пыра кайнă. Кашнинчех ăна пиччĕшĕ тĕрлĕрен кĕтсе илнĕ. Хăюллă пырса кĕрсен (эппин санăн кĕсйӳнте укçа нумай),— кăмăллăн йышăннă; чухăннине те никам каламасăрах пĕлнĕ. Эсĕ кăштах канса пурăнам-ха тесе шухăшланине пăхмасăрах, тепĕр кунах вăл сана килне хăвалама тытăннă: «Ĕçлекен çынна хăнаран хăнана çӳрени килĕшмест вăл... Эсĕ ан çиллен, Элексантăр. Эпĕ асли, вĕрентме тивĕç». Ахăртнех, пĕр сăнлă, пĕр пек кăмăллăрах пулнăран (вĕсем иккĕшĕ те ансăр та вăрăм питлĕ, çӳллĕ, ырхан. Пиччĕшĕ куштан сăнлă, пысăк мар çемçе сăмсаллă), вĕсем пĕр-пĕринне пĕчĕк кăлтăк-çитменлĕх таранчченех асăрханă. Александр ялти шкулта вĕреннĕ чух унăн пиччĕшĕ, Уçăп, чиркĕве йăрккама юратнă.

Мĕнле кăна ӳкĕтлемен ăна шăллĕ! Çук турăшăн çăпатуна ан çĕт, сан çултисем никам та чиркĕве çӳрекен çук, манран ачасем кулаççĕ, тенĕ. Пиччĕшĕ итлеменнине кура, ним тăвайман енне, кăра çилĕллĕ Александр ăна усал сăмахсем каласа пĕтернĕ: «Тăмана эсĕ, турă çуккине ăнланса илейместĕн, сурăх, ухмах! У-у-у!..»

Патак лекнипе мар, тарăхнипе макăрнă Александр.

Кайран пиччĕшĕ турра ĕненми пулнă, халăх çӳременнипе чиркĕвне те хупса лартнă, анчах шăллĕ каланă йывăр сăмахсене манман Уçăп. Тата шăллĕне хăй часчас хĕнени те ăна унран пистернĕ. Çынна усал туса, чи малтан хăвăн чунна сиен кӳретĕн иккен.

Колхозсем пуçлансан, вĕсем тепре ятлаçса илнĕ. Александрпа пĕрле пурнăç хальхинче те парăнтарнă пиччĕшне: çынсенчен кая юлса та пулин, колхоза кĕнĕ вăл. Анчах хăй утас тенĕ çĕре утма, хăй пурăнас тенĕ пек пурăнма май килменшĕн Уçăп кунçула мар, шăллĕне айăпланă.

Тăвансем — тăшмансем пулса тăнă.

Пурăна киле Александр пиччĕшĕ колхозра та чипчиперех ăнтара пуçланă. Ĕçлессе ыттисенчен нумай ĕçлемен вăл, çапах ыттисенчен пуян пурăннă. Çĕнĕ костюм туянса янă, авланма хатĕрленсе, çĕвĕ çĕлемелли машина илсе лартнă...

Сахăр ун чухнехи хакпа пĕр килограмĕ аллă тенке çитнĕччĕ, пируспа махорка та унтан йӳнĕ марччĕ. Александр пиччĕшĕ пурпĕрех сахăрсăр чей ĕçмен, хаклă йышши пируссем мăкăрлантарнă...

Александр хăшпĕр çынсем хаçатра эпĕ телейлĕ пурăнатăп тесе çырнисене вулать те шухăша каять. Чăнах пур-ши вăл ун пек тăрă пурнăçлă этемсем? Нивушлĕ çапла тăршшĕпех ним хуйхă-суйхăсăр пурăнма пулать? Тата мĕнле япала вăл телей? Александр шухăшĕпе, кĕске вăхăта телейлĕ пулма пулать. Тархасшăн. Сăмахран, çыру ĕçĕ ăнса пынă вăхăтра унран телейлĕ çын та çук. Ĕç такăнсан, пушă вăхăт нумая тăсăлсан, унран мĕскĕн те çук.

Çиелтен пăхма ун пиччĕшĕ те телейлĕ пек ĕнтĕ. Авланнă, ачаллă-пăчаллă. Пурнăçĕ çителĕклĕ. Тата мĕн кирлĕ?

Анчах ку вăл çиелтен кăна çав. Кăшт çывăхарах паллашсан, урăххи палăрма тытăнать.

Акă вăл авланнине илес.

Вĕсенчен виçĕ килĕ урлă Маля ятлă пĕр чипер хĕр пурăннă. Вăл хăйĕнчен хитрипе Александр пиччĕшĕ ун еннелле питех пăхман. Хресчен çыннин ăçта унта хитре арăмпа аппаланса пурăнма, тенĕ. Ăна ялан лайăх çипуç пар. Ĕçре ан хуç. Хăнаран хăнана илсе çӳре. Пĕрмай ун умĕнче ташласа тăр. Йăпăлтат. Ерĕшки-хӳрешкисенчен сыхла...

Вуçех пăхман мар ĕнтĕ, паллах. Пĕр ял çыннине мĕнле асăрхамăн? Вĕсем пĕр ялсем çеç те мар, пĕр урамрисем, кӳршĕсем тенĕ пекех. Çитменнине тата Маля каччăсен чĕрине хускатма ăста пулнă. Çĕнĕрен çĕнĕ кĕпе тăхăннă. Кусне-пуçне вылятма, хăйĕн хитрелĕхĕсене палăртса çӳреме пĕлнĕ. Лутра та чăмăр кĕлеткеллĕскер, каччăсем умĕнчен вăл пуçне каçăртса та йăл-ял кулкаласа çеç иртсе кайнă.

Пурте хăй еннелле асăхса пăхнине сиссе, тепĕр чух вăл варт каялла çаврăнса тăнă:

— Ытлашши ан пăхăр, куçăр пăсăлать!

Александр пиччĕшĕ тăсăк питлĕ, салху кăмăллă ырхан йĕкĕт пулнă, вăйăсене хутшăнман, пули-пулми сăмах ваклама пĕлмен. Хăйĕн пĕчĕк çемçе сăмсишĕн, хĕсĕк куçĕшĕн вăтаннă. Вĕçкĕн хĕр чĕрине парăнтармалли нимĕн те пулман унăн. Тен, çавăнпах пуль, Александр пиччĕшĕ Маляна сасартăк юратса пăрахнă.

Мĕн унта «юратса пăрахни»! Ку сăмахсем кăна ниме те пĕлтермеççĕ. Уçăп Маля çумне пăван пек пырса çыпăçнă... Ăна ниçта пĕр утăм тума паман, никампа каластарман. Хăй çывăраймасăр начарланса кайнă, ça-

пах — ҫӗнтернӗ. Маля, ҫураҫнӑ каччине пӑрахса, Александр пиччӗшне качча тухма килӗшнӗ.

«Ген, шӑпам ҫакӑнта пуль,— тесе шухӑшланӑ анӑраса ҫитнӗ хӗр.— Телей сӑнра мар теҫҫӗ вӗт. Тӑршшӗпех ҫакӑн пек юратса пурӑнсан, тата мӗн кирлӗ? Эп ӑна юратмастӑп та... Ун пирки вӑл хӑй те ыйтмасть».

Туя Малян малтанхи каччи те пынӑ. Пусма кӗпе тӑхӑннӑ хӗрлӗ питлӗ йӗкӗт алӑк патӗнчен Маля ҫине вилес пек тарӑхса пӑхса ларнӑ. Унӑн ӗҫни те пуҫ патне пыман. Курасса та вӑл хӑйне улталаса хӑварнӑ хӗрсӗр пуҫне урӑх никама курман. Хӑй те йӑмӑх хӗрлӗ кӗпепе ҫынсенчен уйрӑммӑн курӑннӑ.

Кӑмӑлӗ тулнӑ Уҫӑп тур кӗтессинче кулкаласа ларнӑ. Вӑл пулас арӑмӗн малтанхи каччине ҫине-ҫинех эрех сӗнме хушнӑ. Лешӗ, ҫунакан ӑшне сӳнтерме тӑрӑшнӑ пек, панӑ сӑри-эрехне шалт тутарнӑ та куҫне каллех пӗркенчӗк айӗнче ларакан Маля ҫине тӗлленӗ. Унтан вӗсем, икӗ йӗкӗт, тӗкӗшсе ӗҫнӗ. Унтан каллех хӗрлӗ кӗпеллӗ йӗкӗте ӗҫтернӗ...

Ана ӳсӗртсе, Уҫӑп Маляна та, унӑн малтанхи каччине те намӑс тӑвасшӑн пулнӑ-мӗн. Анчах, вӑйсӑрскер, хӑй ӗмӗрлӗхе мӑшкӑла юлнӑ. Пӗрер ҫӑварӑн сыпа-сыпах, вӑл туй саланнӑ ҫӗре урине те аран сӗтӗре пуҫланӑ.

Вырӑн вӗсене лупасайӗнчи утӑ тултарнӑ урапа ҫине сарса панӑ. Ҫӗнӗ арӑмӗ ҫумне Уҫӑп мӗнле пырса тӳннӗ — ҫаплипех ыйӑха путнӑ.

Вӑл кӑвак ҫутӑлла урапана такам хускатнипе вӑранса кайнӑ. Сиксе тӑнӑ... Пӗрех хут ма вӑраннӑ вӑл ҫавӑн чухне! Е ма пӗрер сехет маларах е пӗрер сехет каярах вӑранман-ши!.. Уҫӑп хӗрлӗ кӗпеллӗ этем урапа ҫинчен ҫӗре, унтан хӳме урлӑ кӳршӗ картишне сикнине ҫеҫ курса юлнӑ. Мухмӑрлӑ пуҫпа пуртӑ шыраса тупиччен ҫӗн арӑм тӳрленсе выртма ӗлкӗрнӗ, ҫӗрлехи хӑнан ури сасси те йӑмнӑ...

Упӑшки Маля патне таврӑннӑ.

— Сан ҫумран кам тӑрса кайрӗ?

— Эсӗ ара, урӑх кам пултӑр.

— Эп халӗ ҫеҫ вӑрантӑм, йыт ами!

— Эппин, тата ытларах ҫывӑрмаллаччӗ...

— Ан чӗн, шуйттан! Кала, кампа аскӑнтӑн? Касатӑп пуртӑпа!

— Хытӑрах кӑшкӑр, атту ҫынсем илтеймӗҫ,— тенӗ ҫӗнӗ ҫын, тӑртаннӑ тутипе кулкаласа.— Юратмастӑн

пулсан, кас ара. Эпĕ сан çумăнта çыварнă, ниçта та кайса çÿремен. Мĕн пулсан та, санпа пулнă.

— Халĕ çеç тăрса кайрĕ! Хам куçăмпа куртăм!

— Çынсем илтеймерĕç пуль-ха эппин, хытăрах кăшкăр. Ан тив, ял култăр... Сансăр пуçне никам та пулман кунта. Çук, пулман, пулман...

Халĕ те, унтанпа вăтăр çула яхăн иртсен те, Александр пиччĕшĕ çаплах иккĕленет: те тĕлĕк курнă вăл ун чухне, те чăн пулнă?

...Маля упăшкине ыталаса илнĕ те хăй çумне вырттарнă. Пурттине аслăк çине пенĕ...

Çур сехетрен Уçăп тăрса арăмне çивĕтрен лăскама тытăннă.

— Кала, камччĕ вăл?!

— Эсĕ, эсĕ, эсĕ,— тенĕ Маля, çаплах кулкаласа.— Ӳсĕррипе эсĕ хăв мĕн тунине те маннă. Ан ĕç ÿлĕмрен ытлашши.

Çапла пуçланса кайнă вĕсен çемьеллĕ пурнăç. Çапăçмасăр е ятлаçмасăр кун иртмен. Маля час-часах кăвакарнă пит-куçпа çÿренĕ. Анчах хăйĕн пĕрремĕш телейне — малтанхи юратăвне вăл пурпĕрех манасшăн пулман. Пĕрин упăшки, теприн арăмĕ кирек мĕнле сыхласан та (хĕрлĕ кĕпеллĕ йĕкĕт çур çултанах авланса янă), вĕсем пĕр-пĕринпе курнăçмалли май тупнă-тупнах.

Малян малтанхи ачи те Уçăп пек мар парка та хăюллă çуралнă.

Икĕ çултан вĕсем уйрăлнă. Тунă ĕç татăклă пултăр тесе, Уçăп часрах авланма васканă. Хальхинче ăна чĕмсĕр те ĕçчен арăм лекнĕ. Чĕркуççийĕсем унăн шалалла кĕрсе тăнă, куçĕ ĕненни пек йăваш пулнă. Вăл ирхине тăнă-тăманах арçын ĕçне кÿлĕннĕ те çĕрлеччен те пăрахман. Упăшкипе йăпанма унăн вăй та, кăмăл та юлман.

Уçăп кив арăмĕ патне вăрттăн чупа пуçланă. Унтан куна хăваласа янă та каллех Маляпа пĕрлешнĕ.

Халĕ вĕсен икĕ ывăл, икĕ хĕр. Ывăлĕсем хытанка, нишлĕ, ялан кĕххĕм-кĕххĕм. Вĕсем ашшĕне хывнă пулас. Хĕрĕсем çырла пек хĕрлĕ, хитре...

## II

Александр яла кăнтăрла тĕлĕнче çитсе кĕчĕ. Ĕлĕксенче вăл кунти чи тунсăхланă вырăна килнĕ пек ки-

летчĕ. Халĕ вăл кăшт хăранисĕр, тем кĕтнисĕр пуçне ăшĕнче урăх нимĕн те туймарĕ.

«Нивушлĕ хула çынниех пулса кайрăм-ши? — тесе шухăшларĕ Александр Яковлевич.— Эпĕ хресчен ачиçке ĕнтĕ? Ялти тымар çирĕп пулаканччĕ-ха манăн. Нивушлĕ татăлчĕ?..»

Мĕн тăвас тен эсĕ, халлĕхе хула пурнăçĕ ялтинчен çăмăлтарахах çав. Ялта чылай ĕçе çаплах вăй хурса тума тивет-ха. Вутă хатĕрлес тесен, кайса вăрман касмалла, тиемелле, турттарса килмелле, татмалла, çурмалла... Хула çынни çав хушăра газпа апат пĕçерсе çиет те аллине кĕнеке тытса ларать е театра каять. Ялти хĕрарăмсем кĕпе çунине илĕр-ха тата. Мĕн чухлĕ чăрмав унта! Мĕн чухлĕ ĕç! Шутласа кăлараймăн. Выльăх-чĕрлĕхпе мĕн чул вăхăт иртет тата. Хула хĕрарăмĕ ваннăна вĕри шыв тултарса çăвать те — ĕç те пĕтрĕ. Тĕрĕс, хĕрарăмсене хулара та арçынсенчен ытларах ĕçлеме тивет. Ну, ку ĕнтĕ вăл эпир хамăр аннесене, мăшăрсене, йăмăк-аппасене çителĕксĕр хисепленинчен те килет.

Александр Яковлевич хĕрĕхрен иртнĕ çын. Ватăлнăçем этем канлĕхе хăнăхса пырать-мĕн. Вăхăтне те ытлашши сая ярасшăн мар.

Хаçатра калашле, ялти пурнăç условийĕсене хулари шая çитермесĕр те ялпа хула хушшинчи уйрăмлăх пĕтеймĕ-ха. Пурнăç çавăнталла шăвать.

Александр шухăшĕпе, ялти лайăх енсем (шăплăх, таса сывлăш, çутçанталăка çывăх тăни т. ыт. те) хулара та пултăрччĕ, хула культурине яла парасчĕ. Шел, этем мĕн те пулин тупнăçем мĕн те пулин çухатсах пырать. Пураннăçем ытларах та ытларах пĕлме тытăнать, анчах пурнăçĕ иртсе каять...

Александр Яковлевич пĕр пушă урампа тепринпе тухрĕ те (сентябрь пуçламăшĕ, пурте уйра е тырă кĕлечĕсем патĕнче), ял варринчи шурлăх урлă каçса, пиччĕшĕн пӳрчĕ умне çитсе тăчĕ. Ку пӳрт хула хĕрринче те ытла пăсăккăн курăнас çук. Шултра пĕренепе хăпартнă, çине тимĕр витнĕ, чӳрече хупписене сăрланă...

Пиччĕшĕ урамра пӳрт кĕтессинче тăпрас çинче чикаркка туртса ларать. Ури çумне йывăç кĕреçе тайăнтарса хунă. Вăл аллă пиллĕк-аллă улттăсенче, анчах хăйĕн çулĕнчен те ватă курăнать. Пичĕ пĕркеленсе пĕтнĕ, мăйĕнче çĕр те пĕр хутлам, курпунĕ тухса кайнă. Хытанка вăрăм аллисене вăл, йывăç тымаррине типме хунă пек, чĕркуççийĕ çине лашт тăсса хунă.

— Аван-и? — терĕ Александр Яковлевич, ун патне çывхарса.

Пиччĕшĕ тĕссĕрленнĕ куçĕпе шăллĕ çине темле чалăшшăн пăхса илчĕ те аллине пачĕ.

— Ăçта кайма тухрăн?

— Сирĕн пата килтĕм,— терĕ Александр, çаплах ура çинче тăрса.

— Қаллех ĕçрен кăларса ямарĕç пуль те?

— Çук, отпускра эп. Пăртак канса пурнасшăн.

— Ĕççинче-и?

Укçасăр вăхăтра ун пек чухне Александр хĕрелсе каяканччĕ. Халĕ шăлаварĕн хыçалти кĕсйинчи укçине тытса пăхрĕ те кулса çеç ячĕ. («Май-тăк май, май map-тăк — хўрене тĕвĕленĕ», тесе шухăшларĕ.)

— Луччă никама чăрмантармастăп.

— Чăрмавĕ тем марччĕ-ха та вăл...

«Мĕн тăвас тен эс — хресчен чунĕ», тесе шухăшларĕ те Александр, пиччĕшĕ хускалманнине кура, ун çумне тăпрас çине ларчĕ. Пĕчĕк чăматанĕ çав вырăнах тăрса юлчĕ. Ма çынна кўренес? Вăл хăй те кунта пиччĕшне курасшăн çуннипе килмен. Ăна курнипе те савăнса ўкмерĕ. Май килсен, кăштах ĕçлесе ларасшăн вăл, çынсемпе калаçасшăн...

Пиччĕшĕ ўсĕре-ўсĕре чĕлĕмне туртса пĕтерчĕ те теп-ре чĕркерĕ.

— Ытлашширех туртмастăн-и эс, пичче?

— Тепле... Хăнăхнă та пĕрре...

— Пăрахасчĕ сан ăна. Вара ўслĕкў те иртсе кайĕччĕ.

— Э, çук, тивес мар. Чĕлĕме те пăрах, ĕçме те пăрах, вара мĕн пурăнни? Савăнăçĕ те çавă çеç ĕнтĕ.

— Тупăнкалать-и ĕçмелли?

— Ма ан тупăнтăр? — терĕ те пиччĕшĕ Александр чăматанĕ çине пăхса илчĕ.— Чĕкĕнтĕр акатпăр вĕт.

«Малтан ху ĕçтер-ха, эпĕ хăна», тесе шухăшларĕ шăллĕ. Ун хырăмĕ çатăр выçса кайрĕ. Тем пекчĕ халь пĕр-пĕр уçă апат... Анчах пиччĕшĕ тăчĕ те кĕреçине тытрĕ.

— Эпĕ карта хырма пуçланăччĕ-ха...

Вĕсем килкартине кĕчĕç. Александр Яковлевич аслăк çинчен кĕреплепе шăпăр илсе анчĕ. Пиччĕшĕ кĕреçепе тĕмеске-тĕкĕмсене хускатса пырать, шăллĕ кĕреплепе тĕксе пĕр çĕре пуçтарать. Унтан шăпăрпа шăлаççĕ. Çапла вĕсем сурăхпа ĕне картине тасатса тухрĕç. Тислĕкне пĕчĕк урапапа пахчари купа çине турттарчĕç.

Хĕрсе кайнă Александр картишне те, хапха умне те шăлса тасатрĕ. Хăй халиччен питех асăрхаман урам шăлакансем пирки вăл ыррăн шухăшларĕ. Çынсене савăнтарса, таса пурăнма, лайăххине курма вĕрентсе, пысăк ĕç тăваççĕ вĕсем! Ĕçĕ те кашни самантрах куç умĕнче.

Хĕвел каç еннелле сулăнсан тин Уçăп, аллине çуса, нӳхрепрен сивĕ сĕт илсе тухрĕ.

— Инке ăçта, пичче?

— Силос хывнă çĕрте ĕçлет-ха. Килет те пуль ĕнтĕ.

Александр сĕтпе тулă çăкăрне савăнсах çирĕ.

— Халь ĕнтĕ мĕн ĕçлĕпĕр?

— Эсĕ кăштах выртса кан-ха,— терĕ пиччĕшĕ.— Эпĕ тăвансене систерсе тухам. Каçхине килсе ларччăр... Шалти пӳртре вырăн янтă унта.

Вĕсем лаçра çинĕччĕ. Александр пӳрт алăкне уçрĕ те çав самантрах каялла хупса лартрĕ. Такам ывăçласа сапнă пек, ăна питрен шăнасем пырса çапăнчĕç.

— Пӳрте хуртсем кĕрсе тулман пуль те? — хăраса ыйтрĕ Уçăп.

— Çу-ук, шăнасем нумай...

— Вăл усалсене нимпе те пĕтерме çук. Çав тери хунавлă. Халех чӳречисене хупатăп. Эсĕ алăксене уçса хур.

Пăртакран шăнасем çутта туха пуçларĕç. Юлнă пеккисем мачча çумĕнче çăт-çат çапăнкаласа çӳреççĕ. Алăкран ӳкнĕ çутăра пӳрт урайĕнче ырхан хура кушак анасласа ларать. Ӳхĕнни пек сарă куçĕпе вăл пĕрре маччаналла шăнасем çине, тепре Александр еннелле пăхать. Пуçне çӳлелле каçăртнă чух ун куçĕнче тĕмсĕлни, ют çын еннелле пăхнă чух шикленни палăрать. Уçăп кушака нихçан та апат памасть. Ун шухăшĕпе, кушак та, йытă та хăйсене хăйсем тăрантма пĕлмелле.

«Тимĕр пăрçа!» — тет Александр пиччĕшне.

Малти кĕтесре пăрсах çитереймен радиоприемник тем хăйăлтатать. Минтер пĕçертет, сывлăш пăчă...

«Çук, пулмасть çывăрасси»,— тет те Александр тăрасси пирки шухăшласа выртнă хушăрах çывăрса каять.

Вăл тĕттĕм пулсан вăранчĕ. Тулти пӳртри сĕтел çинче пĕр чашăк аш пăсланса ларать. Тĕпелтен панулми кукли шăрши кĕрет. Александр çывăрнă хушăра пиччĕшĕ хур пусса тасатма, инкĕшĕ ĕçрен таврăнса апат-çимĕç пĕçерме ĕлкĕрнĕ иккен. Халĕ вĕсем çенĕкре сăра

ăсаççĕ пулас, шăнкăр-шăнкăр юхтарни илтĕнет. Хăйсем хуллен калаçаççĕ.

Александра курсан, инкĕшĕ ĕçне пăрахсах аллине шăлчĕ те кĕрсе алă тытрĕ.

— Э, ывăлсем вăраннă. Кантăн-и кăштах? Сывлăшĕ те тин уçăлса çитрĕ.

— Шăп кăна ĕç-пуç тирпейлемелли çанталăк. Пирĕн енче çумăр хупларĕ. Çумасăр пĕр кун иртмест. Пуçлать те вара чарăнма та манса каять.

— Кунта аван-ха çанталăкĕ.

Çемьесем çинчен йăлишĕн мар, юратса, кашнин ятне каласа ыйтса пĕлнĕ хыççăн инкĕшĕ шалти пӳрте кĕрсе электричество лампине çутрĕ, Александр сывăрнă вырăна пуçтарса чаршав карса хучĕ. Урам енчи чӳречене пиччĕшĕ унчченех уçнă-мĕн, пӳлĕм урлах уçă сывлăш вăштăр-вăштăр юхать.

Апат-çимĕçе шалти пӳрт сĕтелли çине куçарчĕç.

— Эсир темĕн те пĕçерме ĕлкĕрнĕ, инке...

— Темех çук та... Пирĕн апачĕ çавнашкал ĕнтĕ... Нина килсе пулăшрĕ.

Вăл ята кашни самантрах кĕтнĕ пулсан та, Александр чĕри лаштăр татăлса аннă пек пулчĕ, пичĕ пĕçерсе кайрĕ. Мăнтарăн кивĕ суранĕ, тӳрлетсе те тӳрленместĕн-мĕн эсĕ...

Хăнасем киле пуçларĕç.

— Паян лайăх-и?! — терĕ те çенĕкренех пĕр сасă, тулти пӳрте пĕр çитмĕл-сакăрвунналла çитнĕ тĕреклĕ старик кĕрсе тăчĕ. Вăл шуралма тытăннă лапсăркка çӳçлĕ, чăмăр хура сухаллă, кулса тăракан чĕрĕ куçлă мучи. «Куртей хăта», теççĕ ăна кунта. Анчах хăш енчен хăта тивет вăл, Александр пĕлмест ăна. Ашшĕ-амăшĕ хăта тенĕ те, ачисем те ăна хăйсем патне савăнсах чĕнеççĕ. Унпа калаçса ларма кăмăллă. Вăл юрăсем нумай пĕлет, тахçан хăй салтакра çӳренисем çинчен юмахла каласа парать. Империализм вăрçипчченех вăл çар службине кайнă пулнă та таçта та çитсе курнă, вăрçă пуçлансан, тыткăна лекнĕ. Анчах тем пирки вырăсла вĕренеймен, хула ячĕсене патшалăх ячĕсемпе пăтраштарать. Ача-пăча çук унăн. Пилĕкĕм-ултăм çулсенчех Куртей хăтан карчăкĕ вилнĕ-мĕн те, çавăнтанпах вăл пĕччен пурăнать иккен. Хăйне тайăн выльăх та усрать, хуçалăх тытать.

— Килях, Куртей хăта,— ăш пиллĕн кĕтсе илчĕ ăна Маля.— Атя, шалти пӳрте кĕрсе лар. Хăнапа калаç.

— Илтрĕм-ха Элексантăр килнĕ тенине. Шупашкарсем мĕнле пурăнаççĕ унта?

— Чиперех-ха. Темме пырса курмастăн эс пĕрре?

— Çулĕсем инçе-çке, ачам,— терĕ те старик ытарлăн, ăнланать-ши ку мана, тенĕ евĕр, Александра куçран чăр пăхрĕ.— Çулĕсем инçе...

— Азербайджан сынни ав, çĕр аллăран иртсен, ашак çине утланса, Баку хулине курма тухса кайнă, тет. Эсĕ халь ун çуррине те çитеймен пуль-ха.

— Вĕсен мĕнле çимĕçсем çитĕнеççĕ-ха унта? Исĕм сырлипе çĕр мăйăрĕ-и? Эпĕ çĕрулми çисе ÿснĕ. Леш этемми, тен, хăй ĕмĕр тăршшĕпе те сăрт çинчен анса курман пуль, эпĕ тĕнче тавра виççĕ çаврăннă. Во! Хăшĕ ытларах пурăннă? — терĕ старик. Вара хăех ответлерĕ: — Эпĕ!

Уçăп сĕтел çине сăра сĕрсе кĕрсе лартрĕ.

— Сана мĕн ĕçтерес, Куртей хăта? Эсĕ хамăр сын, хăв суйласа ил.

— Санăн мĕн-мĕн пур?

— Сăра, кăрчама, ханша, эрех...

— Ханши хăшĕ-ха вăл? — илтĕнчĕ тулти пÿртрен. Алăк урлă хура костюмлă этем ярса пусрĕ те сĕтел çине шурă хут листи кăларса хучĕ.— Çырăпăр акт. Камкам пулать-ха çвитетлĕ? Эсир-и? Тен, эсир, Яковлев юлташ?

Ыттисем кулса янăран Александр сĕтел хушшинчи сын çине пăхрĕ те хăйĕн ача чухнехи тусне Терентий Сукмакова палласа илчĕ. Вĕсем, ырăссем пек, ыталанса чуптурĕç.

— Миçе çул курман эпир пĕрне-пĕри, Терен? — ыйтрĕ Александр.

— Пĕр ĕмĕр! — терĕ те Сукмаков сĕтел çинчи çур литр çут эрехе илсе икĕ черккене тултарчĕ.— Эсĕ мĕн суйласа илтĕн çав, Куртей хăта?

— Сынран юлма эпĕ салтак пулман-и-мĕн?

— Тĕрĕс, старик! Маля инкепе Уçăп пичче, эсир ан ятлăр пире, эпир, виçĕ тус, тĕл пулнине паллă турăмăр. Кайран эпир ун вырăнне хамăр черете пушăлла иртерсе ярăпăр.

— Пушăлла иртерес мар-ха, леш тĕнчере те эрех ĕçмесĕр пайтах выртмалла,— текелесе, старик алăк патĕнчи диван çине кайса ларчĕ. Черккине хăй тăррине çеç татрĕ.

Сукмаков инçетри Заводск хулинче ĕçлет-мĕн. Милици лейтенанчĕ вăл. Яла курортран таврăнуçăн кĕнĕ.

Татах хăнасем килеççĕ: колхоз председателĕ, хĕрĕхелле çитнĕ кĕре этем, пурин çине те пуçлăхларах пăхаканскер, Иван Осипович Босов; мотоциклист костюмĕ тăхăннă Иван Иванеев, колхоз бригадирĕ, çамрăк йĕкĕт; библиотека заведующийĕ Римма, вунсаккăр-вунтăххăрсенчи парка хĕр. Вăл, килсе кĕнĕ-кĕменех, Маляна пулăшма тытăнчĕ. Апат-çимĕçлĕ сĕтеле урай варрине куçарса лартрĕç, йĕри-тавра пукансем вырнаçтарса тухрĕç.

Юлашкинчен çенĕкре тата икĕ çын ури сасси (пĕри çăмăллăн, чăшт-чăшт, тепри — лап-лап) илтĕнсе кайрĕ. Никам та асăрхамарĕ пулас ăна, асăрхасан та, ним улшăнмасăр кĕтсе ларчĕç пуль. Пĕр Александршăн çеç сасартăк аça çапнă пек туйăнчĕ. Пуçне лăшт усрĕ те вăл çынсем курмасла аллине чĕри тĕлне хучĕ.

Пӳрте хĕрарăмпа арçын — арăмĕпе упăшки кĕрсе тăчĕç. Упăшки, çĕрелле пăхса тăракан хăюсăр çын, тӳрех алăк патне тĕршĕнчĕ. Вăл колхоз шоферĕ Урланов. Хăйĕн ĕçне кура, унăн ытларах чĕмсĕр çӳреме тивет. Ку уншăн тĕлнех вара, мĕншĕн тесен вăл ик-виçĕ кунра пĕр сăмах каламасан та пултарать. Кампа та пулин ирĕксĕрех калаçмалла пулсан, пĕтрĕ вара Урланов: вăтанса çĕр тĕпнех анса каять, мăк-мак перкелешет, хиркеленет, куçне çĕрелле тартать, йăл кулса илет, шăлаварне çĕкленçи тăвать, сăмсине туртать. Асапланать çын, никам тӳсмен хурлăха курать. Калаçиччен кайса виçĕ кун çĕр чавĕччĕ вăл. Кăштах сыпсан, Урлановпа калаçса вĕçне тухма çук. Ну тăкать вара, ну хăлаçланать... вĕрентме тытăнать. Чарса та чарăнмасть.

Ун арăмĕ, Нина, ялти фельдшер пункчĕн заведующийĕ. Вăл ĕнтĕ пĕр вăтăр пиллĕк-вăтăр улттăсене те çитнĕ пуль, çапах хĕр пек тулли ӳтлĕ, парка ураллă, çинçе. Тĕксĕм хĕрлĕ çӳçне çӳлелле хăлтăлатса пуçтарнă, кунта килсен туфли улăштарса тăхăннă та, лутраскерех яштакан курăнать. Кăвак куçĕ ун шухăшлă...

Ачасем çук вĕсен.

Пĕрер черкке ĕçсенех арçынсем хăна еннелле шакăр çаврăнчĕç.

— Ну, мĕнле унта сирĕн пурнăçсем?

— Лайăх,— терĕ Александр.

Босов ăна колхоза куçса килме ӳкĕтле пуçларĕ.

— Чăнах, Александр Яковлевич. Пӳрт туса парă-

пăр. Ĕçмелли-çимелли пулать. Эсĕ çырса кăна лар. Хутран-ситрен пире доклад туса пар, ытах. Стена хаçачĕ кăларма пулăшкала...

— Çук, юрамасть, Иван Осипович, ун пек вăл ытла вакăланса каять,— пӳлчĕ ăна çамрăк Иванеев.— Александр Яковлевича партбюро секретарьне суйлас. Вăра вăл пурне те курĕ те, илтĕ те.

— Пĕрер çултан мана вырăнтан кăлартăр-и? — терĕ Босов.— Чылай кĕнекере çавăн пек вĕт: колхоз председателĕ каялла туртăнать, парторганизаци секретарĕ ăна малалла сĕтĕрет. Ывăнать те вăра хăй ун вырăнне кĕрсе ларать.

Римма, Иванеев, Александр кулса ячĕç.

— Александр Яковлевича халăх пултарулăх кружокĕсене ертсе пыма хушас,— терĕ Римма.— Малтан вăл Шупашкартан пьесăсем ытларах ярса патăр.

Куртей хăта та сăмах хушмасăр юлмарĕ.

— Çурт лартса укçа тăккалама кирлĕ мар,— терĕ вăл татăклăн.— Элексантăр ман патра пурăнтăр. Эп ăна хам ача вырăннех шутлатăп. Мана йăпанчăк, ăна хӳтлĕх пулĕ. Кирек мĕн тесен те, салтак пулнă-çке эпĕ. Пăшал тыткалама пĕлетĕп.

— Камран хӳтĕлесшĕн вăра эс ăна? — ыйтрĕ Босов кулкаласа.

— Ара, паллă ĕнтĕ... Шалти тăшмансенчен... Тăлăх маткасенчен...

— Унăн хăйĕн арăмĕ те виçĕ салтак тĕшне тăрать,— терĕ Уçăп.— Хула майри яла килесшĕн пулĕ-и-ха вăл...

Хăй пирки сăмах пĕттĕр тесе, Александр пуринпе те килĕшрĕ: пьесăсем ярса пама пулчĕ, стена хаçачĕ кăларма та юрать, терĕ... Эрех çеç урăх пĕр çăвар та сыпмарĕ.

Кĕçех сĕтел хушшинче Урланов сасси кăна илтĕне пуçларĕ. Иккĕмĕш черкке хыççăн вăл пуçне çĕклерĕ. Виççĕмĕшĕ хыççăн аллине тăратрĕ. Куçĕсем машина фарисем пек хыпса илчĕç. Арăмĕ чарса тăнă çĕртех тăваттăмĕшпе пиллĕкмĕш черккесене те ӳпĕнтерчĕ. Вара сиксе тăчĕ те темĕн каласа кăтартма, ăнлантарма пикенчĕ. Анчах сăмахĕн пуçламăшĕ те, вĕçĕ те çук-мĕн. Чарма хăтланакансене Урланов сăмахпа тата-тата хурать, аллипе хăмсарать, çапкаланать. Арăмне вăл «ухмах», терĕ, Куртей хăтана: «Эпĕ санран çамрăк, эсĕ кĕçех вилетĕн», тесе хучĕ. «Мильтошă», «ача», «бюрократ»... Пурне те ят парса тухрĕ.

Ун пек чухне ăна ытларах ĕçтерсе кăна лăплантарма пулать-мĕн. Маля сăра ярса пачĕ — ĕçрĕ Урланов, ханша сĕнчĕ — ăна та янк çех тутарчĕ. Пыллă сăрана та, кăваса та тиркесе тăмарĕ вăл.

Тепĕр çур сехетрен Сукмаковпа Уçăп «стройран тухнă» шофера килне кайса леçсе килчĕç. Нина Маля ӳкĕтленипе çеç тата пăртак ларма пулчĕ.

Александр радиоприемникпа тем аппаланать.

...Вăхăт пек хаярри нимĕн те çук-мĕн çут тĕнчере. Пурăнса юлнă-и эсĕ е пурăнма та тытăнайман-и-ха, çулсем иртеççĕ те, эсĕ ватăлса ларатăн. Ĕмĕрлĕхе, каялла таврăнмасла. Малашне те хĕвел пăхĕ, анчах саншăн мар ĕнтĕ, урăххисемшĕн...

Аллă патнелле çывхарнă Маля çине пăхсан, халь кам ĕлĕкхи ытарайми хĕре аса илĕ?! Юрăра калашле, вунçич çулхи çамрăк ĕмĕр çеçке пулса тăкăннă. Тутине вĕри сывлăш типĕтнĕ, тăнлавĕнчи çӳç пĕрчисене шухăш шуратнă, питне пĕркелентернĕ. Хура сатин кĕпепе вăл, чĕрçиттийĕ те тĕксĕм. Хăмăр тутăрне хыçалалла çыхнă. Кунĕпе ĕçре ирттернĕскер, ваттисен йăлипе халĕ те ура çинче. Пĕрне какай татки, теприне кукăль хурса парать. Сăра ĕçтерет. Пуринпе те ăшă кăмăллă, тарават...

Хăйĕн шăпипе тахçанах килĕшнĕ Маля. Хĕр чухнехи тусĕ ун вăрçăра пуçне хунă. Ачисем çитĕнсе саланса пĕтнĕ. (Хĕрĕсем качча кайнă, ывăлĕсем — ФЗУра вĕренеççĕ.) Кашни япалан хăйĕн вăхăчĕ, хăйĕн мехелĕ çав. Халĕ вăл ачисем çине пăхса савăнать, упăшкипе те шăкăл-шăкăл...

Мĕншĕн пустуй хирĕçес? Хăй çинчен нумай шутлакан этем çеç ватлăхпа килĕшесшĕн мар. Анчах пурнăç хăйĕннех тăвать.

Куртей старик тулти пӳртре чĕлĕм тĕтĕмĕпе чыхăнача чыхăна Уçăпа темскер суять. Уçăпĕ йăл кулнă пек тунă та тăрăхласа итлесе ларать.

Босов тата тепĕр курка сăра ĕçрĕ те килне кайма хатĕрленчĕ.

— Хăвăрах пĕлетĕр, манăн ыран куракпа пĕрле тăмалла... Пырса çаврăн, Александр Яковлевич. Куçса килесси пирки те шухăшла.

— Пырăпăр,— терĕ Уçăп.

Сукмаков Риммăпа Нина тавра çаврăнкалать. Кăкăрне актерла каçăртнă, кĕлеткине тӳрлетсе тытнă. Чăнчăн автан ĕнтĕ! Анекдот хыççăн анекдот калать те хăех чи малтан ахăлтатса кулса ярать. Анекдочĕсем те кивĕ

ёнтĕ хăйĕн, кĕлетки те Терентий Алексеевичăн йывăрланма тытăннă, анчах хĕрсе кайнăскер ăна-кăна пĕлмест.

«Дон-Жуан пуль эс, тусăм»,— тесе шухăшлать Александр.

Хула çыннин калавĕнчен вăтанса, Римма пуçне чикнĕ. Тухса кайĕччĕ — хăнана кÿрентересрен хăрать. Иванеев та васкамасть темшĕн...

Нина Маляна итленĕ пек туса ларать. Пичĕ уссăр шухăшпа ывăннă тĕслĕ. Вăхăт-вăхăт çеç куçĕ патĕнчи пĕчĕк тымар чăлт-чăлт сиксе илет. Анчах çынсем курмаççĕ ăна.

Мĕн чухлĕ çынсем курман асап çут тĕнчере!

## III

...Вăл çулхине Александр тÿлевсĕр билетпа (орден кĕнекипе) кăнтăр енне кайса çÿренĕччĕ. Тинĕс шавĕпе вĕри хĕвел, хитре тумланнă çынсем, çĕнĕ хуласемпе çĕрсем Александрăн пĕтĕм юнне хускатнăччĕ. Çула май вăл хăйсен тăван ялне çĕнтерÿçĕ пек пырса кĕчĕ. Мĕн курнă пуль ял халăхĕ? Александр ак çитмен вырăн хăварман. Тата ахаль вагонра та мар, çемçинче çÿренĕ.

Ырă та шухăш пуç тулли, Хура тинĕс ум тулли, пирĕн тăванĕсем куç тулли, тесе ĕнĕрлесе пиччĕш патне пырса кĕчĕ те Александр пĕлĕт çинчен лап çĕре персе анчĕ. Уçăп та, Маляпа ачисем те çук. Çенĕкре темĕнле ют хĕр чăмăрла пĕçернĕ çĕрулми çисе ларать. Александр ăна апат тутлă пултăр теме те ăс çитерейменĕ.

— Пичче ăçта?

— Вербовкăпа кайнă.

— Инке тата?

— Больницăра. Ачисем чирлĕ. Варвитти ернĕ.

— Дезинтери мар-и? (Çынсенчен уйрăм пулас мар тесе, Александр йывăр сăмахсене юриех ыттисем пек пăсса калаçать. Винегрет мар, винигрет тет. Дизентери вырăнне дезинтери тет...)

Хĕр шарламарĕ. Александр пĕчĕкçĕ чăматанне çенĕкри ырçа çине хучĕ те хĕр еннелле кăлин пăхрĕ.

— Эсир кам пулатăр?

— Кил хуралçи ара. Мана Маля аппа хушса хăварчĕ. Эпĕ унăн хурăнташĕ. Кукамăшĕн йăмăкĕн хĕрĕн хĕрĕ пулатăп. Аслăъелсем.

Александр кулса ячĕ.

— Э, эппин çывăх хурăнташах. Эсĕ мана та çитермĕн-и мĕн те пулин?

Палламан хĕр кӳ хĕрелсе кайрĕ те яшт сиксе тăчĕ. Александр тытса ĕлкĕрмен пулсан, пĕчĕк сĕтел çĕрех персе анатчĕ пулас. Ун вырăнне çĕрулми чашăкки ӳпне-питне çавăрăнса ӳкрĕ. Тăвар суланчи те алăк патне çитиех кусса кайрĕ, пĕр пĕрчĕ тăвар та юлмарĕ.

— Çирĕмĕр апат,— терĕ Александр.— Паллашма ĕлкĕреймерĕмĕр — ятлаçма тытăнатпăр.

— Ма ятлаçмалла?

— Ара, тăвар тăкăнсан, ятлаçаççĕ, тет, вĕт...

— Эсир кирек мĕн хăтланăр та, манăн вăхăт çук, ятлаçасах килсен, пĕччен ятлаçăр,— тесе, хĕр пĕр самантра тăвар суланчине сĕтел çине илсе лартрĕ, çĕнĕ тăвар ячĕ, çĕрти çĕрулмине апат юлашкисен витрине силлерĕ, аллине çурĕ, çĕнĕ турилкке илсе, лаçран пиçнĕ çĕрулми антарса кĕчĕ. Александр куç хупса илме ĕлкĕреймерĕ темелле, сĕтел çинче каллех чашăк пăсланса ларать, хĕрĕ каччă çине кăвак куçĕпе ытарлăн пăхса кулкаласа тăрать...

— Çиййĕр тата.

Çав тери çăмăл кĕлеткеллĕ, пăрчăкан пекех çаврăнăçуллă-мĕн вăл, çак хĕрача. Анчах сĕтел çине вăл урăх нимĕн те хуманнине кура, Александр аптра юлчĕ. Тен, тăрăхлать, шӳт тăвать вăл? Е манса кайнă-и?

— Паллатăн-и эс мана, йăмăкăм?

— Ак шăмлăх, палламасăр ара. Эсир Уçăп йысна шăллĕ Элексантăр вĕт...

— Эппин хăвăн ятна та кала.

— Мана Нина теççĕ.

— Итле-ха, Нина, тен, эсĕ мана кăштах çăкăр та парăн? — Ку сăмахпа Александр хĕре вăтантарасшăнччĕ, анчах лешĕ Александршăн вăтанчĕ.

— Çăккăр çук,— терĕ вăл хуллен, кулма чарăнса.— Çăнăх кăштах пур та, яшка пĕçерме кирлĕ.

— Эппин турăх пар.

— Турăх та туман. Сĕте патшалăха паратпăр. Юлашкине паян ирхине Маля аппа ачисене кайса леçрĕм. Уйран пурччĕ те... çисе ятăм.

— Апла пулсан, кил, лар, сырпа улма çиййĕпĕр. Мускавра эпĕ кăштах сыр илнĕччĕ...

— Çук, эп тутă, эсир çиййăр,— терĕ те хĕр картишнелле вăшт тухса тарчĕ.

«Çийăр», «çăккăр»,— тесе юлчĕ Александр. Вăл хаш сывласа илчĕ те апата пикенчĕ. Мĕн тăвас тен эс: вăрçă хыççăнхи ял-çке. Тен, хĕрĕ те вăрçа пулах вĕренеймен пуль. (Вăл медучилищĕн виççĕмĕш курсне куçнине Александр каярахпа тин пĕлчĕ.) Апат пирки тесен, атя, вăл паян çук-тăк — ӳлĕмрен пулĕ. Юрать-ха, çĕрулмийĕ юлнă, тунсăха вăл та тем пекех.

Пăртакран Нина пӳртпе çенĕк урайĕсене сĕрсе тухрĕ, лаç умне шыв сапса уçăлтарчĕ.

Александр кĕнеке тытса пăхрĕ — пуçне нимĕн те кĕмерĕ, выртса çывăрма — ырă мар пек туйăнчĕ.

«А, тен, киле таврăнас?» — тесе шухăшларĕ те вăл Шупашкара кил тенĕшĕн хăех кулса ячĕ: мĕн тен эс — килех çав ĕнтĕ. Александрăн пĕтĕм пуласлăхĕ çав хулапа çыхăннă. Анчах Шупашкарта та кĕтсе тăраканах çук ăна. Хăть унта, хăть кунта. Инкĕшне курас тени кăна ĕнтĕ.

Вăл чӳречерен пăхрĕ. Нина лаç алăкĕ умне ярмуççи лартнă та хĕрсех çип çăмхаласа тăрать. Пуçĕ çине шăрăхран шурă тутăр уртса янă. Ури патĕнче ула сысна çури чупкаласа çӳрет. Аяккалла кайса тăн итлесе тăрать-тăрать те вăл сасартăк лаçа чупса кĕрсе кайма хăтланать. Нина ăна çиплĕ кăшкарĕпе хăмсарать, урипе тапать. Сысна çури çухăра-çухăра тăрăнать... Пăртакран каллех «атака» пуçланать. Вăл мĕнле те пулин лаçа кĕресшĕн.

Тарăхса çитнĕ Александр килкартине тухрĕ. Хулă илсе, шăрчаха урама хăваласа кăларасшăнччĕ вăл, лешĕ, пӳрнеске пек пĕчĕк те хĕç пек ырханскер, çинçе урисене çĕре тĕрелесе пусса çапăçма хатĕрленсе чалăшшăн пăхса тăнине курчĕ те — тивмерĕ.

— Пăх-ха, мĕнле хаяр вăл. Тигр! Пантера! Куçĕ вут та хĕм сирпĕтет. Такама таптаса кайĕ. Мĕн эс унта, лаççуна тăвар сапса хунă-и, Нина?

— Апатне сивĕнме лартнă, çавна кĕтет вăл.

— Мĕнпе тăрантаратăн вара эс ăна?

— Вĕлтренпе çĕрулми хуппи пĕçерсе паратăп. Паçăр çĕре тăкăннине те хушрăм...

Апачĕ сивĕннĕпе пĕрех-мĕн. Александр ăна пушă савăта, унтан каялла ик-виçĕ хут пушаткаларĕ те картари валашкана кайса силлерĕ. Сысна çури хăйĕн апатне пырса лекме пултарас тăшмансенчен пĕчĕк кĕлеткипе картласа илчĕ...

— Мана та пĕр-пĕр ĕç тупса пар-ха, Нина.

— Тен, шыв ăсса килетĕр? — ыйтрĕ хĕр, ярмуççине пуçтарса. Çиппине çăмхаласа пĕтерчĕ вăл.

— Кĕвентепех-и?

— Пултарсан, апла та юрать; хăрах витрепе те çитет.

Александр пусăран шыв кӳрсе килчĕ. Нина вăл хушăра урăх ĕç тытма ĕлкĕрнĕ-мĕн: лаç умĕнчи тенкел çинче сулхăнта çăм çиппи çăмхалать.

— Эсĕ мĕн, Нина, пĕтĕм ĕçе пĕр харăс туса пĕтерессшĕн-и?

— Йăлтах паян ĕçлесе пĕтеретĕп, ыран валли нимĕн те ан юлтăр. Эсир пулăшасшăн мар-и мана?

— Мĕн тума пултарăп эп кунта?

— Ав хутăрне тытăр. Капла сӳтме кансĕр.

Хĕвелпе пиçнĕ çара урине Нина аяккалла тăсса саркаланă та хутăрне ури пуçĕсенчен çаклатнă, аллисене тилхепе тытнă чухнехи пек тăсса, унталла-кунталла кăнтарса тăрмашса ларать.

Александр, вăтанса, çипне хĕр уринчен вĕçертсе илчĕ те хăйĕн ал тунийĕсем çине тирсе ячĕ. Хĕр ăна хирĕç пырса тăчĕ. Александр аллисене енчен енне суллать, Нина хăвăрттăн çăмха тăвать... Вĕтĕртеттерет кăна.

Александр хĕре çаплах тиркеме пăхать-ха. Лутра, тет вăл. Анчах хĕрĕ ытла лутрах та мар пек. Парка алураллă тăп-тăп хĕр. Вăл пĕр вунултта-вунçиччĕсенче çес пулсан та, пур енчен те çитĕнсе çитнĕ сăнлă.

«Ăçта васкаççĕ? — тĕлĕнет каччă.— Ӳсме ĕлкĕреймен — хĕр пулса та ларнă. Хресчен идеалĕ ĕнтĕ: хĕрлĕ, вăйлă... Ĕç валли папи çав».

Анчах кунта та тĕрĕс каламасть Александр. Хĕр пĕчĕк питлĕ-куçлă, ярт палăрса тăракан çинçе куç харшиллĕ, каçăртарах пĕчĕк сăмсаллă. Аялти тути çеç унăн кăшт тухарах тăрать. Вăл, пăсма мар, хĕре тата илемлĕрех кăтартать.

Чи тиркемелли çĕре çитсен çеç Александр шăп пулать. Нина пĕр хут çӳхе кĕпепе кăна-мĕн, кăшт-кашт хускалнипех ӳт мăкăль-шакăлĕсем хитрен, çемçен палăраççĕ.

«Çитĕннĕ ача,— тет юлашкинчен Александр, ял варринче вĕçекен кураксене сăнанă пек туса.— Çутçанталăк çимĕçĕ, вырăссем калашле. Мĕн начаррипе мĕн лайăххине те уйăраймасть пулас-ха. Пурне те хăйпе виçет ĕнтĕ. Мĕнле ĕненсе пăхать вăл».

Нина куçĕ чăн та тĕлĕнмелле. Кăвак. Тарăн. Çын

чĕринчи ырă туйăмсене курнă пек, уççăн, шанса пăхать. Çав вăхăтрах темĕн ăнланмалла марри те пур унта. Темĕнле задача. Ăша канăççăрлантаракан вăрттăнлăх. Пĕрре пăхса илсен, яланлăха аса юлакан хĕлхем. Тен, вăл хĕрарăм чунĕ çавăн пек?..

Тепĕр кун ирхине Александр вăранчĕ те хăй çамрăккишĕн, малаллахи телейлĕ кунсемпе çĕрсен шучĕ те çуккишĕн савăнчĕ. Тата вăл паян та Нинăна курать-çке, кунĕпех унпа иртерме пултарать! Эппин, ма çывăрса выртнă вăл халиччен? Часрах, часрах!

Александр вырăн çинчен сиксе анчĕ те алли-урине хуçлаткалама тытăнчĕ. Пĕр-ре, ик-кĕ. Пĕр-ре, ик-кĕ. Шел, хулари пек, турник çук. Ара, ун вырăнне лупас кашти пур-çке...

Вăл шалти пӳрт алăкне яри уçса ячĕ те шартах сикрĕ. Унăн куçĕ Нина куçĕпе тĕл пулчĕ. Хĕр тулти пӳрт сĕтелли хушшинче ун еннелле пăхса ларать-мĕн. Пуçне тутăр çыхнă, улма чăпар саппунпа. Кĕпине те çуса типĕтме ĕлкĕрнĕ пулас вăл, хулпуççи тăрринче якатнă йĕр палăрса тăрать. Умĕнче... пуçламан çăкăр!

Александр йăпăрт каялла чăмрĕ те тепĕр самантран алшăлли йăтса тухрĕ.

— Эс ăçта кайма хатĕрленетĕн, Нина?

— Ниçта кайма та хатĕрленмен-çке.

— Ара, çăкăр пĕçерсе кăларнă...— Вăтантарасран хăраса, Александр ытти улшăнусем пирки шарламарĕ.

— Ăна эп сире валли пĕçертĕм,— терĕ Нина хуллен.

— Мана валли?!

— Сире валли. Эсир хăна-çке... Çиме хатĕрлес-и?

— Миçе сехет вара халь?

— Вуннăмĕш.

— О, эп халех çăвăнса кĕретĕп.

Нина тăварланă ашпа салма яшки пĕçернĕ-мĕн. Уçă пултăр тесе, сĕтелне каллех çенĕке лартнă. Пӳрт алăкне уçнă, тултине тайнă та, çенĕкре çурма тĕттĕм. Çамрăксене иккĕшне çеç ырă та, кăштах хăрушă та. Сĕтел çинче пĕр кашăк, пĕр чашăк... Ăшă çăкăр касса хунă.

— Ма хăвна валли антармастăн, Нина?

— Эп çинĕ.

— Мĕн çирĕн?

— Кирек мĕн пултăр та — çинĕ.

— Акă мĕн, Нина. Халех хăвна валли те антармасан, эпĕ те сĕтел хушшине лармастăп.

Александр шӳт туманнине кура, Нина яшка антарса килчӗ. Ҫӑкӑрне те ҫавӑн пекех астивсе пӑхрӗ вӑл.

Унтан вӗсем, апат леҫмелле, юнашар ялти больницӑна кайрӗҫ. Маля сӗтне ҫеҫ илсе юлчӗ, ҫӑкӑрне каялла парса ячӗ. «Пире кунта ҫитерeҫҫӗ», терӗ.

Те ҫураҫуллӑ мӑшӑр тесе, каччӑпа хӗр урампа иртсе пынӑ чух ҫынсем хыҫалтан чарӑна-чарӑна пӑхаҫҫӗ. Александрӗ ҫӳллӗ, тӳрӗ. Нинӑра вара ҫамрӑклӑхӑн пӗтӗм лайӑх енӗ пӗрлешнӗ тейӗн: кӗлетки илемлӗ, утти ҫӑмӑл, кулли ытарма ҫук. Каччӑпа калаҫма хӑтланса каҫӑрӑлса пынипе вӑл пушшех илӗртӳллӗн курӑнать. «Пичевре ташласа пыракан вӗҫкӗн ут пек», тет Александр, ӑна куҫ хӳрипе сӑнаса. Пулать вӗт ҫавӑн пек телейлӗ ҫын: ниме тӑман кӗпепех вӑл такамран та чипер.

Хӑйне мӗншӗн ыррине ӑнланмасӑрах Александр Нинӑпа юнашар савӑнсах утса ҫӳрет. Пӗрле вӗсем колхоз правленине кайса хаклӑ хакпа пӗр пӑт ҫӑнӑх туянчӗҫ. Малян пур пек вуттине татса шаршанласа хучӗҫ. Шыв кӳрсе килчӗҫ. Сысна ҫури валли ҫамрӑк вӗлтӗрен шыраса мӗн чул вӑхӑт иртмерӗ пуль тата...

Килӗшет Александра хресчен ӗҫӗ. Яланах тенӗ пек сывлӑшра эс. Куҫу таҫтине курать, пуҫу вӗҫсӗр шухӑш ҫиппине кумать, аллу чарӑнмасӑр ӗҫлет, ӗҫлет. Шухӑшӗ те кӑвак тӳпе айӗнче ирӗкрех, ӗмӗтсем те аслӑрах. Вӑй та ытларах пек. Нимӗнле стена та пӳлсе тӑмасть сана, нимӗнле мачча хупламасть, пусмасть...

Час-часах Александр та, Нина та пӗр-пӗрне лексе, сӗртӗнсе е юриех тӗксе ирте-ирте каяҫҫӗ. Иккӗшӗ те ахӑлтатсах кулаҫҫӗ вара. Нина куҫӗ пытанмалла вылянӑ пек пӑхать: пач ҫухалать, анчах йӗр хӑварма манмасть, шыраса тупас шанчӑка ҫухаттармасть. Темӗн тӗнчере ҫук ырри ҫинчен систерет, илӗртет, кӑчӑк туртать, ҫав вӑхӑтрах тӗлли-палли те нимӗн ҫук. Чӗре ҫеҫ хӑвӑрттӑн тапать, юн вылять, пуҫ ҫаврӑнса килет...

Ҫавӑн пек самантсенчен пӗринче Александр Нинӑна сасартӑк чуптуса илме тӑчӗ. Хӗр ӑна кӗтменччӗ пулас е тӑруках ӑнланса илеймерӗ-и — пуҫне палт пӑрчӗ те, каччӑ унӑн пӗчӗк хӑлхине ҫеҫ тутипе сӗртӗнчӗ. Нина алӑк патнелле, унтан ҫенӗке ыткӑнчӗ. Пахча алӑк сасси шатӑртатрӗ. Александр хӗрӗн хыпса илнӗ пичӗпе ҫилӗллӗ ҫурӑмне ҫеҫ курса юлчӗ. Вӑтаннипе, хӑранипе вӑл вӑйран кайса пукан ҫине лак ларчӗ. Йӑлтах пӗтрӗ иккен. Пӑрахса тарчӗ хӗр...

Александр уй варринче тăна кĕчĕ. Утрĕ, утрĕ вăл. Çӳрерĕ, çӳрерĕ. Типĕ Çырмапуçне анчĕ, Кантăрварĕ урлă каçрĕ. Тĕме çинче ăна çил хирĕç ваштăр вĕрчĕ. Кăмăла хускатса, таçтан армутипе инçетри çĕрсен шăршине илсе килчĕ вăл. Йĕри-тавра пур çĕрте те тырă çитĕнет-мĕн. Ыраш шăркана ларнă ав, тулă пуç кăлара пуçланă. Тунисем кĕре, çулçи вăрăм, хылчăкĕ кушак сухалĕ пек. Сип-симĕс хĕвелçаврăнăш пуссинче те унта-кунта чечеке ларнă пуçсем курăнкалаççĕ.

Александр хăй нимĕн шухăшлама та пĕлменнине сисет. Суккăр çын хӳме çуммипе хыпашласа пынă евĕр, вăл куçа курăнакан япаласенчен хăпмасть. Тăри, тет те вăл унăн юррине итленĕ пек туса пырать. Чĕри çеç ултава парăнмасăр çунать, çунать.

Пиччĕш килне вăл çĕрле таврăнчĕ. Лаçа кĕрсе шыв ĕçсе тухрĕ. Çенĕк умĕнче ăна хирĕç сысна çури харт-латса çĕкленчĕ. Шĕвĕр сăмсипе вăл Александр урине тĕксе пăхрĕ те, мăн сысна пек ĕçлĕхлĕн нăрх! нăрх! туса, тĕттĕмелле мĕкĕлтетрĕ. Картари сурăхсем кĕпĕр! чупса кайрĕç.

Эппин, такам пур-ха килте. Анчах кам? Тен, инкĕшĕ ачисемпе таврăннă?

Çенĕке питĕрмен. Пӳрт алăкĕ те уçнипех. Кăмака çумне кĕрсе тăнă Александр шăрпăкне чăрт çутрĕ те çӳлелле çĕклерĕ. Вăл хăй курнине хăй ĕненмерĕ. Юнашар лартнă икĕ вăрăм тенкел çинче чӳрече патĕнче Нина выртать. Пилĕкне салтнă... Пĕр алли пуçĕ айĕнче, теприне минтер çине тăсса хунă. Витĕнмен. Çывăрман-нине систерсе, йăл кулчĕ те вăл çара урине хускатрĕ.

— Килтĕр-и? — терĕ вăл ним çилленмен сасăпа.

Александра нумай чухне кĕпер урлă каçсан тин ăс кĕрет. Унăн çав самантра, шӳт тукаласа, Нина çумне çеç пырса лармаллаччĕ. Сăмахĕ те тупăнатчĕ, ĕмĕр ӳкĕнсе çӳремелли те пулмастчĕ. Юратман пулсан, çапла тă-ватчĕ те вăл. Юратни хупларĕ. Александр кăшт çеç çĕр тĕпне анса каймарĕ. Аллине шăрпăк çатăр çунтарчĕ. Хĕрĕн вăрттăн шухăшне ăнланса илнипе пуçне вĕри юн пырса çапрĕ. Вăл темскер măк-мак тукаларĕ те шалти пӳрте чăмрĕ.

Кирлĕ самант иртсе кайрĕ.

Ăшра хăйне ятла-ятла, ухмах, хăравçă, тăмана тесе вăрçса, Александр шăлаварĕпе кĕпине хывса печĕ. Унтан шăлаварне тупса тăхăнчĕ те мĕн тăвасса пĕлмесĕ-рех тулти пӳрте тухрĕ. Калаçу тапратма халĕ те кая

юлманччӗ-ха. (Этем виличчен нимле ӗç те кая мар.) Нина çаплах маччаналла пӑхса выртатчӗ. Ури çине çеç шурӑ витӗ пӑрахса янӑччӗ. Александр алӑк çумне таянса хытса тӑчӗ те, хӑйӗнчен хӑй йӗрӗнсе, çаврӑнман чӗлхепе:

— Эп сах... салтан та (сахалтан та тес вырӑнне) пӗр ву...нӑ километр турӑм... пуль,— тесе хучӗ. Вӑл Нина хирӗç ыйту парасса кӗтнӗччӗ. Анчах хӗр ӑна ӳсӗр терӗ пулас, хуткупӑс пек вашт çеç хутланса пуçтарӑнса выртрӗ.

— Кантарӑр пуçӑра, çывӑрӑр кӗрсе,— терӗ вӑл пӑртакран тытӑнчӑклӑн.

Юлашки шанчӑк пӗтрӗ. Александр шалти пӳрте чӗрне вӗççӗн кӗрсе алӑкне хупрӗ те вырӑн çине йӑванчӗ. Çӗрӗпе куç хупмарӗ вӑл. Çаврӑна-çаврӑна, вырӑнне хӑй йӗри-тавра пир тӗрки пек пӗтӗрчӗ. Ир енне вара çапла шутласа хучӗ: ирхине тӑратӑп та хам унсӑр пурӑнма пултарайманни çинчен каласа паратӑп, терӗ.

Александр вӑраннӑ çӗре инкӗшӗпе ачисем больницӑран таврӑннӑччӗ. Нина пӗр сехет каялла килне тухса кайнӑ-мӗн. Хыçалтан каяс-ши е ӗç мӗнле те пулин хӑех майлашӑнӗ-ши тесе иккӗленсе çӳренӗ хушӑра кӑнтӑрла иртрӗ. Кун хуллен-хулленех сулхӑнлата пуçларӗ. Каç та пулчӗ.

Çӗрле ӑна письмоносец телеграмма илсе пачӗ. Александра халех ӗçе чӗнеççӗ-мӗн.

Тепӗр уйӑхран ӑна инкӗшӗ, хӑй ыйтмасӑрах, Нинӑн вӗреннӗ çӗрти адресне çырса пӗлтерчӗ. Александр тӗлӗнчӗ. Савӑнчӗ. Çыру çырма хатӗрленсе темиçе кун ирттерчӗ. Çырмах та тытӑннӑччӗ вӑл... пӗр ӗç чӑрмантарчӗ. Унччен хи айванлӑхне шута илсе, пӗррехинче хӑюллӑрах пулчӗ те вӑл — авлансах яма тиврӗ. Халӗ Александр ик ача ашшӗ. Паллах, арӑмӗ те пур ун.

Мӗн тери хӑрушӑ сӑмахсем: ним тума та çук! Пуçӗпех кая юлчӗ! Нина вӗренсе тухсан икӗ çултан качча кайнӑ. Ӗçлеме вӑл Александрсен ялне пынӑ. Александр хӑй те авланнӑ çын. Анчах çӗр çинчи пӗртен-пӗр çывӑх этем уншӑн — Нина. Нинӑн кашни хусканӑвӗ, сасси, сӑнӗ Александршӑн тӑванран та тӑван...

Тен, иртсе кайӗ-ха, лӑпланӑп, тенӗччӗ вӑл. Ак кӗçех çирӗм çул çитет ӗнтӗ, иртме мар, чӗре хытӑран хытӑ сурать. Сисет Александр: ӗмӗрхи хӗрес, ӗмӗрхи асап вӑл.

Çав вӑхӑтрах Нина та уншӑн çуннӑ пек туйӑнать ӑна. Ав мӗнле пӑхать вӑл, турӑçӑм! Мӗнле ларать...

## IV

Ҫăнасем салапа пуçларĕç. Нина ура çине тăнине курсан, пĕр тăруках Риммăпа Иванеев, Сукмаков, Куртей хăта çĕкленчĕç. Маля Нинăна ăсатма тухрĕ. Сукмаков пĕрре вĕсен хыççăн, тепре Риммăпа унăн каччи хыççăн темиçе утăм туса пăхрĕ те, каялла кĕрсе, пĕр черкке эрех янк тутарчĕ.

— Çук, çамрăксем йышăнмаççĕ. Хулара вăл енчен çăмăлтарах... Атя, Куртей хăта, киле...

— Мана çул курки лекеймерĕ-ха.

— Ытлашши пулмĕ-и?—терĕ черкке тĕпĕнчи эрехсене пушă савăта пуçтарма тытăннă Уçăп, кулнă пек туса.

— Мана-и? — тĕлĕнчĕ старик.— Ытлашши? Эпĕ салтак пулнă-çке?

— Ара, эп хăвна хĕрхенсе çеç. Салтаккинне те хырăмне тимĕртен туман.

— Тимĕртен туман пулсан та, вăл тимĕре çĕртнĕ, тет. Атьăр-ха урама, пĕр япала кăтартам. Атьăр, атьăр! — тесе, Куртей хăта çынсене çавăтсах тенĕ пек урама илсе тухрĕ.— Куртăр-и? — терĕ те вăл çĕре ларчĕ. Кустăрмачă пек пуç урлă палтăр, палтăр кусса кайса, тĕттĕмре пăч çухалчĕ. Кĕтсе тăтăмăр, тăтăмăр — килмерĕ старик.

— Ахалех кӳрентертĕн эс ăна, Уçăп пичче,— илтĕнчĕ тĕттĕмрен Сукмаков сасси.

— Э, темех мар-çке,— терĕ Уçăп.— Хамăр çын. Ыранах килет ак. Тепĕр черкке ĕçместĕн-и, Терен?

— Çук, çитет. Кайиччен курнăçатпăр-и, Элексантăр?

— Мĕнле пулĕ унта.

— Ну, сывă пулса тăрăр эппин.

— Чипер кайса çывăр.

Эпир кĕнĕ çĕре инке савăт-сапа пуçтарса тăратчĕ. Пирĕн çине вăл сăнаса пăхрĕ те Уçăпран ыйтрĕ:

— Эс никама та кӳрентермерĕн-и?

— Çу-ук,— терĕ пичче.

— Çук,— терĕм эпĕ те.

Сĕтелне инке тулти пӳрте йăтса тухма хушрĕ. Пăсăлмалли апат-çимĕç юлашкисене эпир çенĕкри нӳхрепе антартăмăр.

Александр тимĕре качăртаттарнă сасăпа вăранчĕ. Пиччĕшĕ тулти пӳртре пикенсех кĕреçе хăйраса ларать иккен. Александра курса, Маля упăшкине ятласа илчĕ.

— Ну, çак минесӗр çынпа. Каласа та итлеттерме çук. Çулла-çке, тулта хӑйраймарӑн пуль ӗнтӗ. Куртӑн-и, ывӑлсеме вӑратрӑн?

— Вӗсем хулара та нумай çывӑраççӗ,— тет Уçӑп, ирӗксӗр кулкаласа.

Вӑл яланах çавӑн пек: хӑйӗн шухӑшне нихçан та уç-çӑн каламасть. Ӑна çынсем ӑнланмасан, кӗвӗлсе çӳре-ме тытӑнать вара: вӑл апла мар, ку килӗшмест.

Александр çилленмерӗ. Ыйхи те тӑраннӑпа пӗрех унӑн. Вӑл алшӑлли илчӗ те çӑвӑнма килкартине тухрӗ. Тулта уçӑ ир. Кӗтӳ ялтан инçех те каяйман-мӗн-ха, качакасем, сухалӗсене чаплӑн каçӑртса, яла тарса таврӑнаççӗ. Вӗсем парадри генералсем пек чинлӑн утаççӗ, васкамаççӗ. Хӗвел вӑрманлӑ сӑрт тӑррине хӗртнӗ çатма пек тухса ларнӑ та чӑл-чӑл-чӑл çунать. Çырма-çатрасенче, айлӑмсенче çӑра тӗтре йӑсӑрланать.

Кун пек ир Александр юлашки вӑхӑтра сайра тӑрса курнӑ. Атӑл пек шывччӗ халь çакӑнта! Вӑл пилӗк таран хывӑнса çӑвӑнчӗ те пӳрте кӗчӗ.

— Ну-с, паян мӗн ӗçлӗпӗр, пичче?

Уçӑп чӳречерен урамалла пӑхса илчӗ.

— Пӳрт умне сад карти тытса пӑрахар мар-и,— терӗ вӑл.— Эс тахçантанпах йӑнкӑртататтӑн атту. Сачӗ пуласси темле те...

— Ма ан пултӑр?

— Ку енче ӑна питех хисеплемеççӗ вӗт. Тен, тӑпри те килӗшмест пуль. Хӗлле юр хуçса пӗтерет. Юр кӗрчӗсем çийӗпе сурӑхсем пыра-пыра çиеççӗ...

— Апла нимле карта та тытмастпӑр.

Уçӑп йӗкевпе хӑйранӑ икӗ кӗреçине шӑпӑр шӑтӑкне кайса тӑратрӗ.

— Ма — тытас мар? — ыйтрӗ вӑл кӑшт шухӑшласа тӑнӑ хыççӑн.

— Ара, ун пек кӑмӑлпа тытӑниччен тытӑнманни. Пурпӗрех нимӗн те пулмасть.

Халь ӗнтӗ Уçӑп хӑй харсӑрланса кайрӗ.

— Карта тытсан, ма пулмӗ? — терӗ вӑл, вӑйсӑр куçӗпе шӑллӗн шӑлаварне пахаласа. Унтан чӑтаймасӑр тытсах пӑхрӗ. («Э, çемçе-мӗн, аван... Хаклӑ йышши»).

— Юр хуçса пӗтерет, тетӗн-çке?

— Ӑна хӳтӗлеме пулать. Хӑма ларт та... Чугун çул çинчи пек.

— Выльӑх та кӑшлать.

— Выльӑх валли карта пур.

— Эппин, кайрамар-и ёҫлеме?

— Эп ҫавна калатăп та.

Вĕсем пĕрер стакан сĕт ĕҫрĕҫ те кĕреҫисене йăтса урама тухрĕҫ. Карта валли Уҫăп ҫур урама пӳлсе илесшĕн.

— Кун пекех юрамасть пуль, пичче. Ҫынсем тем калĕҫ.

— Нимĕн те каламаҫҫĕ,— тет Уҫăп ӳсĕркелесе.— Сад вăл пурне те усă паракан япала.

— Мĕнле пурне те усă патăр? Ҫимĕҫне эсĕ татса ҫиййĕн вĕт?

— Сывлăша усăлтарни мĕне те пулин тăрать-и? Тата илемĕ?

— Апла тесен ҫех. Ҫапах ытла нумай ку. Малтан эсĕ пĕр йывăҫ лартасшăн марччĕ. Халĕ ҫур урама тытса илесшĕн.

— Ним те мар. Курăн ак — никам та нимĕн каламасть. Ҫĕрулми пахчи манăн пысăкрах теҫҫĕ, тен, ăна та касса илеймĕҫ-ха.

Кун шăрăхлатиччен Уҫăппа Александр пахча юпи шăтăкĕсене чавса ҫитерчĕҫ. Юписем те янтă-мĕн, вăрмантан ҫеҫ турттарса килмелле.

Кăнтăрлахи апат хыҫҫăн Уҫăп кăрмана темле усăнчăк хырăмлă чуптар кĕсре кӳлсе килчĕ.

— Ăҫтан тупрăн эс куна? — тĕлĕнсе ыйтрĕ шăллĕ.

— Ма апла калатăн? — терĕ Уҫăп.

— Ара, ытла мĕнтерех пек... Ватă тĕслĕ.

— Ҫиле май тĕтĕм турттарма ҫех ҫав ĕнтĕ. Ҫамрăккисене кăлпасса тума парса пĕтерчĕҫ. Ыттисем ĕҫре... Атя, кил, лар. Пĕр лавах туртса ҫитерĕ.

Нумайранпа лашапа ҫӳресе курмансĕр, Александр савăнсах кăрман шакăлчисем хушшине кĕрсе ларчĕ. Уялла пăрăннăччĕ кăна, лав умĕнчен туй ҫĕленĕ сĕтĕрнĕ хура кушак каҫса кайрĕ.

— Пĕтрĕ пуҫ, ҫавăр каялла! — хăранă пек турĕ Александр.

— Ăна курсан, ман кирек хăҫан та ăнать,— терĕ Уҫăп ним кулмасăр.— Вăл туният мар, ĕҫчен кушак. Ав сунартан таврăнать.

Уҫăп пӳрчĕ ял хĕрринче. Ял ҫумĕнче вĕт армутиллĕ ҫерем лаптăкĕ сарăлса выртать. Пăртак леререх ҫӳллĕ тусем курăнаҫҫĕ. Кĕркунне вĕсен айккинче ватă кăлкан шурă ҫӳҫне вĕҫтерсе ларать. Кунта тахҫан ĕлĕк ҫапăҫусем пулса иртнĕ пулмалла: пĕр сăрчĕ Хуралту, тепри

Айпăлту ятлă. Ыттисем Çӳлту, Капанту, Кĕслету, Ишету... Калăпĕпе çӳллĕшне кура ĕнтĕ.

Хирте комбайнсем кĕрлеççĕ. Тырă турттаракан машинăсем çул хĕррипе пыракан пĕччен лав еннелле тусан пĕлĕчĕ тĕтĕре-тĕтĕре хăвараççĕ. Ватă кĕсре лĕк-лĕк юртать те, шăши капан айĕнчен тухнă пек, пуçне тусан пĕлĕчĕ айĕнчен кăларать. Александрăн кашнинчех сывлăшĕ питĕрĕне-питĕрĕне ларать. Пиччĕшĕ те кхм-кхм ӳсĕркелет...

Вĕсем аранах вăрмана çитсе кĕчĕç. Усăп кĕреш юмансем çине ăмсанса пăхать.

— Вот, пĕр аллă-утмăл тĕп касса, киле турттарса хурас пулсан,— тет вăл хапсăнса.

— Вара мĕн тăваттăн? — ыйтать Александр.— Пӳртӳ сан вĕр-çĕнĕ, карту-хуру Тăхтаманăнни пек...

— Ара, сых ятне. Çăкăр ыйтмасть вĕт вăл.

Вăт пыр та калаç эс унпа. Хăй чирлĕ ĕнтĕ, çулĕ те самай, çаплах пурлăх тума ĕмĕтленет, çĕрне-кунне пĕлмесĕр тăрмашать. Эрех юлашкисене пуçтарать. Пахча валли çур урама пӳлсе илчĕ. Хытлăх-ши вăл е ĕлĕкхилле хресченлĕх-ши?

«А, тен, пурнăç инстинкчĕ çавнашкал? — тесе шухăшласа пырать Александр.— Çын юлашки сывлăшĕ тухичченех малаллине ĕмĕтленет. Чирли эп вилмелле тесе, ватти пурăнса çитрĕ тесе ĕçлеме пăрахсан, е ĕçке ярăнсан, мĕн пулса тухĕ? Пурнăç чарăнса ларĕ.

Çав вăй-хăвата, пурнăç инстинктне харпăр хăй хуçалăхне мар, халăх ĕçне парас пулсан, тем туса хума пулĕччĕ. Ман пичченех кур-ха эсĕ. Колхозра ĕçлеме чирлĕ вăл, хăйшĕн çывăрмасăр ĕçлеме хатĕр. Хресчен чунĕ...»

Çак тĕлте Александр тĕлĕнмеллипе тĕлĕнчĕ, пиччĕшне кĕтмен енчен курса палларĕ. «Колхозра ĕçсене заводри пек йĕркелесе ярайманăр-ха эсир»,— тенипе хирĕç «хресчен чунĕ» çапла каласа хучĕ:

— Пире пĕр япала çех чăрмантарать,— пирĕн дисциплина çук,— терĕ.— Атту эпир хальччен... тăçта çитсе тухмалла.

— Камсен вăл — сирĕн? — йĕплерĕ Александр.

— Ну, пирĕн ара, колхозăн,— терĕ Усăп, вĕриленме тытăнса.— Ма ун пек ыйтатăн?

— Дисциплина... çук тетни? — Александра çав сăмаха илтни мар, ăна пиччĕшĕ калани тĕлĕнтерчĕ. Тата сăмахне те мĕнле тĕрĕс калать!

— Ну, эппин, çартипе е заводрипе танлаштарсан, йёрке сахал пирĕн,— ăнлантара пуçларĕ Уçăп.— Çирĕп алă çук тесен те йăнăш пулмасть. Ĕмĕрех вăхăтра вырт-са, вăхăтра тăма хăнăхнă рабочи çыннине, тен, ун пек хытлăх кирлĕ те мар пуль. Вăл йăхран йăхах ĕçе çӳре-ме вĕреннĕ. Ĕçлемесен, ун пурăнмалли те çук. Пирĕн пахчаçимĕç пур. Выльăх-чĕрлĕх усратпăр. Ĕçĕ те ун пе-кех хăваламасть. Паян туса ĕлкĕрейменнине ыран-те-пĕр кунсенче тума пулать. Çавăнпа-ши е урăх сăлтав-па-и — çук пирĕн дисциплина!

— Ак тата эсĕ. Босова пур çĕрте те ырă ятпа асăна-канччĕ-çке?

— Эпĕ сана пĕр колхоз пирки çех каламастăп вĕт,— терĕ Уçăп тарăхса.— Босов вăл ытлашши лайăх та мар, ытлашши начар та мар. Вăталăхпа вăтам хушшинче... (Вăйăсенче мăн саспа юрлама юратнăшăн çамрăк чух-не ăна Босов мар, Басов тесе тăрăхлатчĕç. Санран вă-танман пулсан, ĕнер те юрласа кăтартатчĕ-ха вăл...)

Ĕçе чĕнеççĕ — тухсан та, тухмасан та пултарать çын. Ăçта та пулин каймалла — итлесен те, итлемесен те ним те мар. Заводра ун пек халтурщика суда парĕччĕç е ĕç-рен кăларса сирпĕтĕччĕç. Пирĕн — нимех те тумаççĕ. Тархасшăн! Ӳлĕмрен те çавăн пекех çапкаланса çӳре. Çапла ĕç пулать-и вăл? Çу-ук, юрамасть ун пек. Пире çар дисциплини кирлĕ, унсăр колхозсем ураланса çитей-меççĕ пирĕн.

«Хăçантанпа колхозшăн çунма тытăннă-ши вăл?» — тесе шухăшларĕ Александр.

— Итле-ха, пичче. Эс çавсене пурне те пĕлетĕн ĕнтĕ. Ху çапах... мĕнле калас...

— Ĕçе тухмастăн, тесшĕн-и? Манăн сăлтавĕ пур — чирлĕ эпĕ. (Шырасан, такам та сăлтав тупма пулта-рать. Пĕрин пасара каймалла ав, теприн мухмăрпа пуçĕ ыратать...) Дисциплина пăркăчласан, е пирĕнпе чĕре патне пымалла калаçсан, эпир тем тума пултаратпăр. Капла халь — çу-ук. Пĕри хăйĕн пахчинче чакалантăр та, санăн колхоз ĕçне каймалла-и? Ман кӳршĕ калаш-ле — шалишь, шăллăм. Пурлăхпа хавхалантармалла теççĕ те, пурлăхне эп ăна хам килте те лайăх тăватăп.

— Çавăнпа сирĕн колхоз кая юлнă та,— терĕ Алек-сандр.

— Кая юлнă?! — тесе, Уçăп кĕсрине хулăпа çат! ту-тарчĕ. Лешĕ шурă хӳрине ластăрт силлерĕ те унччен мĕнле килнĕ — çаплах утрĕ. Уçăп мăйĕ сасартăк хĕрелсе

кайрĕ.— Каллех тĕрĕс каламастăн,— терĕ вăл, шăллĕ халиччен хăйпе тавлашса пынă пек.— Пĕр-пĕр пуян колхозпа танлаштарсан, пирĕн колхоз, тен, каярах юлнă пек те курăнма пултарĕ. Анчах, хăйне çеç илсен, çук, чухăн мар вăл. Эс пĕчĕккĕ чух, астăватни, тимĕр витнĕ çурт ялĕпе те виççĕ-тăваттă çеçчĕ? (Пирĕн касра Хĕлип пиччесен, Лешайккинче Вĕлтĕрен Ваççилийĕн, Тукас урамĕнче Неçтĕр хăтасен...) Икçĕр килĕрен виççĕ-тăваттă. Ыттисене шакăрах улăм витнĕччĕ. Халĕ улăм витнĕ пӳрт ялĕпе те пĕрре çук. Ку мĕн çинчен калать? Эп астăвасса мар, эс астăвасса та ялта никамăн радио çукчĕ. Халĕ кашни килтех тĕрлĕ тĕслĕ радиоприемниксем, темиçе çыннăн телевизор пур. Çуран урапасен, мотоциклсен шучĕ çук. Ик-виçĕ çын «Москвич» автомашина туянса ячĕç. Тырă кашниннех сахалтан та икĕ çул çимелĕх. Ак сана кая юлнă колхоз!

«Ак сана хресчен чунĕ,— терĕ хăй ăшĕнче Александр.— Эпир унăн кивĕ шухăшĕсене шыраса ларнă хушăра ман пичче ăçта çитсе тухнă. Маттур!»

— Колхоз, колхоз тетĕн эсĕ. Тӳррипе каласан, пичче, мĕне кирлĕ сана колхоз? Эсĕ тахçанах уйрăм хуçалăхпа кăна пурăнатăн. Колхоз пурри-çукки саншăн пурпĕрех пуль?

— Мĕнле пурĕпĕр? — тесе, Уçăп пĕчĕк куçĕпе шăллĕ еннелле çилленсе пăхрĕ.— Мана пенси кам тӳлесе тăрать? Эсĕ-и? Вуншилĕк-çирĕм пуç выльăха усрама кам пулăшать? Колхоз мар пулсан, арăм ĕçленипе çеç эпир тахçанах выçă лармалла...

Александр хăй айванлăхĕнчен хăй вăтанчĕ. Ытла та час ĕненет иккен вăл çынсене. Çавăнпа ун кĕнекисенче икĕ тĕс кăна ĕнтĕ: çап-çутти, сеп-сенкерри те хуп-хури. Пурнăçра, ав, темле кукăр-макăр та пур-мĕн. Пиччĕшĕ чул пиччĕшĕ ун, тĕттĕм мужик, Александра кашни самантрах çĕнĕрен çĕнĕ тупмалли юмахпа аптратать. Пыр та ăнлан ăна.

— Колхозсем часрах ураланса çитчĕр тетĕн. Хăв эс колхоза мĕн туса пулăшатăн, пичче?

— Эп чирлĕ,— терĕ те Уçăп шăп пулчĕ.

«Сăвăс эсĕ,— шутларĕ Александр.— Колхоз ӳчĕ çинчи сăвăс. Кулленех эс унне сĕткенне ĕметĕн, ху ăна çур пуслăх усă памастăн... Пăх-ха эсĕ — колхозшăн тăрăшакан тупăннă... Мар, вăл чăн та колхозшăн çунать, тĕрĕсех ĕнтĕ, мĕншĕн тесен, колхозсем мĕн чул пуянрах, тĕреклĕрех, ăна та çавăн чул лайăхрах. Ку вăл

юлашки çулсенче ӳссе ларнӑ шӑна кӑмпи. Коллектив вӑйӗпе усӑ куракан кулак. Колхоз уншӑн хӳтлӗх кӑна. Ширма... Вулакансене унӑн чунне кӑтартса параймасан — алла ручка та тытас мар».

— Манӑн лайӑх кӗнекем пулатӑн эсӗ, пичче,— саванса пӗлтерчӗ Александр.

Уçӑп кӑн-қан пӑхкаласа илчӗ те тутине кулнӑ евӗр саркаларӗ.

— Этем ӑçтан кӗнеке пултӑр вӑл! — терӗ.

Александр çав самантра пиччӗшне пур енчен те ӑнланса илтӗм тенӗччӗ, анчах, шел, каллех йӑнӑшрӗ вӑл. Мӗн тӑвӑн ёнтӗ, вырӑссем «век живи, век учись — дураком помрешь», тени пӗр順 уншӑн çеç мар тӳрре килнӗ. Сӑмахӗ те вӑл вӗренме кирлӗ марри çинчен мар, пурнӑç тупсӑмӗсем нумайӑйи çинчен кӑна калать.

Пӗр уçланкӑра вӗсем утӑ хучӗç. Каснӑ тиленкке çине тухсан, пиччӗшӗ утине çуррине çӗре антарчӗ, ыттине кӑрман тӗпне йӗри-тавра саркаларӗ. Икӗ метр тӑршшӗ татнӑ пӗр пек юман сыпӑсем вӗсене вунултӑ юпалӑх кирлӗччӗ. Вӗсем вунсаккӑр тиерӗç. Унтан Уçӑп тата иккӗ хучӗ. Çиелтен утӑ витрӗ. Вара кӑрман вутӑ лавӗ пек мар, утӑ лавӗ пек пулса тӑчӗ.

(Мӗншӗн ун пек хупламалла пулнине Александр тепӗр çур çултан тин ӑнланчӗ.)

Каялла вӗсем чиперех çитрӗç. Чуптар кӗсре тулли лавпа та пушӑлла кайнӑ чухнехи пекех çӑмӑллӑн утрӗ, пӗтӗмпе те пӗрре çеç чарӑнса тӑчӗ, унта та пулин вӑрмантан лава хирӗç пӗр çын сиксе тухнипе кӑна. Шӑрӑха пӑхмасӑрах салтак гимнастерки тӑхӑннӑ сайра мӑйӑхлӑ этем тарӑхса лав çинчи утта сиркелеме тытӑннӑччӗ — Александра курчӗ те саванса ун патне утса пычӗ.

— Э-э, Александр Яковлевич килнӗ! Эпӗ илтмен те. Сывлӑхсем мӗнле?

— Пырать,— терӗ Александр, палламан çын çапла хӑвӑрт улшӑннинчен тӗлӗнсе.

— Халь мӗн çыратӑр? Эпир сирӗн «Кӗре каççи» кӗнекӗре çемйипех вуласа тухрӑмӑр. Çав тери килӗшрӗ! Пӗрре, асӑнмалӑх, пырса кӗнекӗр çине алӑ пустарса юлатӑп-ха. Часах каймастӑр пулӗ вӗт?

— Пурнатӑп-ха.

— Ну, сыв пулӑр эппин. Ёçлеме телей пултӑр.

Вӑл вӑрманалла кӗрсе кайрӗ. Юлашкинчен çеç, те тӗл пулнӑ ятпа, те сывпуллашса, хӑй еннелле пӑхмасӑрах Уçӑпа алӑ пачӗ.

— Кам пулчĕ ку? — ыйтрĕ Александр, палламан çыннăн ури сасси илтĕнми пулсан.

— Вăрман пăхакан,— терĕ Уçăп, лашине хускатса.

Шăллĕне Уçăп кашни ирех тул çутăлнă-çутăлман вăратать те, мĕн касчченех вĕсем лăш курмасăр тенĕ пек ĕçлеççĕ. Юпалăхсене чутласа пĕр кун иртрĕ. Юписене лартма, шĕтĕрнек авма тепĕр икĕ кун кирлĕ пулчĕ. Пахча алăкĕ те хăй ăссĕн пулмарĕ.

Ĕç хыççăн ĕç тупăнсах пычĕ.

Маля чуль — Маля тĕлĕне пуçларĕ.

— Эсĕ мĕн, Уçăп, пит хастарланса кайнă? Нихçан та кун пек ир тăракан марччĕ-çке?

— Ара, ĕçлекен çын пур чухне...— теме тăчĕ те Уçăп урăхла вĕçлерĕ: — Элексантăр пирĕн ĕçе тунсăхланă. Манăн та унран юлас килмест.

Тĕрĕссипе каласан, кулленхи шухăшсăр ĕç Александра йăлăхтара пуçларĕ. Паян та улатакка пек шак! шак! Ыран та шак! шак! Хăвăн ĕçӳ вырăнтан та хускалман.

Ирĕксĕр ĕçлеттерсен, темле юратнă ĕç те йăлăхтарать иккен.

Тепĕр чухне Александр, касхине вырăн çине кĕрсе выртсан: ну, ĕнтĕ ыран валли нимле ĕç те юлмарĕ пуль, тет. Анчах ирхине тăраççĕ те — çĕнĕрен пуçланса каять: карта-хура, пахча, шыв кӳрсе килесси... пахча, карта-хура...

Кирек мĕнле пулсан та, пиччĕшĕ Александра ĕçлемесĕр пĕр кун та çитермест.

Çапла икĕ эрне иртсе кайрĕ. Вăл хушăра Александр Нинăна тăватă хут курчĕ. Малтан килнĕ кас. Тепрехинче, пӳрнине мăлатукпа çапса кăвакартсан, медпункта кĕрсе тухрĕ. Урамра тĕл пулчĕ. Аякран та курса юлнă...

Кашни курмассеренех Александр Нинăна тепре тĕл пуласси çинчен ĕмĕтленме тытăнать. Тĕл пулсан, халиччен никам каламан чи кирлĕ сăмахсене пĕлтересшĕн вăл. Анчах тĕл пулать те нимĕн те калаймасть. Чи каламалли, калаçса татăлмалли самантсенче Нинăна курма çук. Кивĕ суран çеç чĕрене туртса ыратать...

Мĕнле тĕрĕсмарлăх: тăванран та тăван çын çичĕ ют аллинче пурăнать!

Çур уйăхран Александр килне тухса кайрĕ.

Тепĕр çул çуркунне вăл пĕр вăхăталлах виçĕ çыру илчĕ. Пĕрне пиччĕшĕ çырнă.

«Элексантăр! Иван Осипович, пирĕн председатель, çаплах сана яла куçарасси пирки калаçать-ха. Итле, ан кил. Халĕ эсĕ вĕсемшĕн — пуçлăх. Капла сана та лайăх, мана та сан хÿттÿнте ăшă. Килес пулсан, пĕрер уйăхранах эсĕ пирĕнпе танлашатăн. Тата иксĕмĕр те каллех пăтранма тытăнăпăр. Сана ун пек мĕн пайти? Луччă пĕр-пĕрин патне хăнана çÿресе савăнар»,— тенĕ.

Тепĕр çырăвĕ колхоз председателĕнчен.

«Александр Яковлевич! Вăхăт çук та, кĕскен çеç çыратăп. Пурăнма куçса килĕр. Янтă пÿртсем пирĕн иккĕ те пур. Колхоз ĕçĕпе сире питех хуçмăпăр. Сирĕн хăвăр ĕç те патшалăх ĕçех. Апат-çимĕç енчен çителĕклĕ. Килĕр!

Сирĕн пиччĕрĕн, Осип Яковлевичăн, пахчи, сынсеннипе танлаштарсан, икĕ хута яхăн пысăкрах-мĕн те, пурпĕрех тивмерĕмĕр. Вăл ăна эсир хушнипе акса тăнă пек систерчĕ. Сире те пулăшсах тăрать иккен вăл.

Килйышĕпех салам. Босов».

Виççĕмĕш çырăвне леш палламан лесник çырнă.

«Хисеплĕ Александр Яковлевич!

Чăрмантарнăшăн каçарăр. Куна пĕлтĕр сире вăрманта тĕл пулнă лесник çырать. Сирĕн пиччĕр мана та, сире те улталаман пулсан, эпĕ çак çырăва та çырас çукчĕ. Юпалăх йывăççене вăл вăрласа таврăннă. Çынсем тем ан шутлаччăр тесе, вăрмана çĕрле мар, кăнтăрла кайнă. Тата кам та пулин курсан та тытма ан хăйччăр тесе, сире лартса пынă. Йывăçĕсене утă ăшне тунă. Эпĕ сире ăнсăртран тĕл пултăм та чăнах та тытма хăюлăх çитереймерĕм. (Ман вырăнта кирек кам та тытмастчĕ сире.) Тата юписем те сад пахчилĕх терĕç. Атя, пирĕн енче садсем сахал, ĕрчеттĕр, терĕм. Халь пăхатăп та — пахчине çĕрулми лартса тултарнă! «Ма сад лартмастăн?» — терĕм те: «Сана мĕн ĕç»,— тет. Хăйĕн пахчи ахаль те ытлашши» т. ыт. те.

Александрăн вăтаннипе çĕр тĕпне анса каяс килчĕ. Мĕнле намăс ăна! Çав кунах ларчĕ те вăл колхозри парти организацийĕн секретарĕпе Босов патне тата пиччĕшĕ патне çырусем ячĕ. Мĕн çырчĕ пуль вăл унта — вулакан хăех сисет.

# ЧӐВАШ ÇЫРАВÇИСЕМ

## «ТӐХӐРЪЯЛ» АВТОРНЕ АСӐНСА

## (ТАВ СӐМАХӖ)

«Тӑхӑръял» тесен, вӗреннӗ çынсем хушшинче пӗлменни те çук пирӗн. Этнографи тӗлӗшпе ӗçлекенсемшӗн вӑл аларан ямасӑр вуламалли алçыру, историксемшӗн пахаран та паха документ, халӑх пултарулӑхне тӗпчекенсемшӗн вӗренмелли тӗслӗх, писательсемшӗн вара шӑрӑх кун выртса ӗçмелли шӑнкӑр-шӑнкӑр çӑлкуçӗ пек. Композиторсене те, артистсене те — такама та кирлӗ вӑл. Ӑна вуласа тӑранмалла мар. Чӑвашсен революцичченхи пурнӑçӗ пур енчен те сӑнланса юлнӑ унта. Халӑхӑн ӗçӗ-хӗлӗ, вӑййи-кулли, ӗçки-çики, ӗмӗчӗ-шухӑшӗ, тарӑхӑвӗ, ӗненӗвӗ, тӗшмӗшӗ — темӗн те, темӗн те пур вӑл алçырӑвӗнче.

Халиччен чӑвашсем çинчен çырнӑ кӗнекесем хушшинче «Тӑхӑръял» чи паллӑраххи, тенӗ ун пирки пирӗн чаплӑ драматург, композитор Ф. П. Павлов.

«Тӑхӑръял» тӗнчере пӗртен-пӗр экземпляр иккенне, ӑна пуртех пӗлменнине, курма вара сахал çын çеç курнине шута илсе, каллех Федор Павлович каланине итлесе пӑхар.

«Чӗмпӗрти чӑваш музейӗнче пӗр паллӑ кӗнеке пур *. Çав кӗнекен тӑршшӗ виçӗ шит, урлӑшӗ пӗр шит, хулӑнӑшӗ виçӗ пӳрне хулӑнӑш. Кӗнеки ячӗ: «Тӑхӑръял. Сӗве тӑршшӗнчи чӑвашсем. Элшел ачисене вӗрентекен Григорий Тимофеев çырнӑ. Июнь уйӑхӗн 8-мӗш кунӗ, 1900 ç.» «Тӑхӑръял» кӗнеки 8 тетрадьлӗ, тӑхӑрвун пая уйӑлать... Вуласа тухас тесен те — пӗр эрне вулас пулать».

Мӗн çинчен каланӑ вӑл алçырӑвӗнче?

«Пӗрремӗш тетрадӗнче Атӑл хӗрӗнчен пуçласа Сӗве

* «Тӑхӑръял» алçырӑвӗ халь Чӑвашсен наукӑпа тӗпчев институтӗнче упранать. *Автор.*

хĕрне çитиччен пуранакан чăвашсем çинчен калать. Ку тетраде вулана чух Шупашкар патĕнчен пуçласа Чĕмпĕр патне çитиччен чăваша курса тухатпăр. Аван çырнă. Иккĕмĕш тетрадĕнчи «Тăхăръял» вăл Пăва уесĕнчи Пӳркел патĕнчи ялсем-мĕн... Виççĕмĕш тетрачĕ... ĕлĕкхи пурнăç улшăнни çинчен калать. Тăхăръялсен историне... пĕлтерет. Тăваттăмĕш тетрачĕ... чăвашсем ĕлĕкхи пăлхарсенчен пулни çинчен каласа ăнлантарать. Пиллĕкмĕш тетрадĕнче чăваш тĕнче çинчен мĕн шухăшласа пурăнни çинчен каласа пана. Чăваш ăсĕпе, тĕнче чунлă япала пекех... Улттăмĕш тетрачĕ... Чĕмпĕрпе Хусан кĕпĕрнинчи чăвашсем мĕн тĕлĕшĕнчен уйрăмрах,— çавăн çинчен калана.

Çапла вара «Тăхăръяла» çыракан питĕ пысăк, питĕ чаплă ыйтусене тапратать. Унта чăваша тӳрех палласа илмелле: мĕнле питлĕ-куçлă, мĕнле кил-çурчĕ, мĕнле çипуçĕ, килти пурăнăçĕ...»

Çак тĕлĕнмелле кĕнекен авторĕ Григорий Тимофеевич Тимофеев 1878 çулта Хусан кĕпĕрнине кĕрекен Çĕрпӳ уездĕнче Тĕрлемесре хресчен килĕнче çуралнă пулнă. (Ялĕ халь сад айĕнче ларнăран пĕр поэт ăна «улмуççиллĕ Тĕрлемес» тенĕ.) Ялти шкултан вĕренсе тухсан, Чĕмпĕр хулинчи чăваш шкулне кайса кĕнĕ. 1896 çулта Григорий Тимофеевич учитель ятне илнĕ. Ĕçлеме ăна Чĕмпĕр кĕпĕрнинех, Пăва уездĕнчи Элшел шкулне янăмĕн.

Элшел вăл çав тăрăхри Тăхăр ял текен ушкăна кĕнĕ. Ялĕсем çаксем: Таккавар, Раккасси, Киштек, Элшел, Пимĕрсел, Пӳркел, Хирти Кушкă, Мертлĕ, Чăваш Саркамăш (Пăрăнтăк).

Мĕн пĕрлештерсе тăнă вăл ялсене? Мĕншĕн вĕсене пĕтĕçтерсе «Тăхăръял» тенĕ? «Эсир ăçтисем?» — «Тăхăръялсем...»

Тен, çав ялсем Сĕве шывĕн ку енче пĕр кукăрта ларнăран çапла каланă? Вĕсем ĕлĕк пурте удел аллинче тăнă, пĕр евĕрлĕ пурнăçпа пурăннă. Таврара ытти халăхсем пулнă: вырăссем, тутарсем, мăкшăсем. Ку — пĕрре. Тепĕр енчен тата...

Г. Т. Тимофеев ăнлантарса парать:

Тахçан ĕлĕк çав ялсем «пĕрле пĕр хирте ĕç пуçласа, ĕç ĕçлесе, пĕрле ĕç пĕтеретчĕç, тет. Вĕсенĕн ана-çарансем пĕтĕмпе пĕрлеччĕ, тет: хальхи пек ял-ялпе уйăрса паманччĕ, тет. Вĕсем, ахăр, çав пиркерен пĕр-пĕринпе ытла аван та ытла çывăх тăнă пулмалла: пĕр-пĕринпе

ĕç пуçтарса, пĕр-пĕринпе ĕçкĕ-çикĕ ĕçсе çинĕ çĕрте вĕсенĕн калаçнă чĕлхи те, тумĕсем те, йăлисем те пĕр пекрех тăрса юлнă пулмалла. Пĕр-пĕринпе пĕр вăхăталла ĕç пуçласа, пĕр вăхăталла ĕç пĕтернипе вĕсенĕн ял чÿкĕсем, ял ĕçкисем-çикисем пĕр вăхăталла килмелле пулнă...»

Ютран пынă çынна çав уйрăмлăхсем тата та ытларах курăннă пулас. Çамрăк учитель малтан савăнса итлесе çÿренĕ, ват çынсемпе калаçнă, халăх пурнăçне сăнанă.

Пĕр те пĕр шухăшласан, тĕлĕнмелле вĕт. Хăвăн ĕçÿ хăçан та пулин пичетленсе тухассине пĕлмесĕрех çиччĕ-сакăр çул хушши пĕр пус укçасăр ĕçлесе пурăнма — çырса лармa — хăвăн халăхна мĕн тери юратмалла, унăн çутă пуласлăхне мĕн тери шанмалла пулнă! Г. Тимофеев юратнă та, шаннă та. Çĕр те пĕр çынтан ыйта-ыйта пĕлсе, çав хушăрах кирлĕ кĕнекесене тупса вуласа, вĕренсе, хăйĕн тĕп ĕçне — ачасене вĕрентессине те манмасăр, вăл Тăхăр ял çинчен этнографилле очерк çырать.

Малтан тĕрлĕ вырăнти чăвашсем мĕнле пурăннине пăхса тухать вăл. Ана çырма Г. Тимофеевăн хăйĕн таçта та çитсе курмалла пулнă. Вăл утнă, çÿренĕ. «Эпĕ... 1899 çулхи ноябрь уйăхĕнче Елчĕкрен пĕр çĕр çухрăм хушши Çĕрпÿ хулине çитиччен, унтан — хĕрĕх-аллă çухрăм пур-тăр — Шупашкара çитиччен, Шупашкартан çитмĕл-сакăрвунă çухрăм аслă çулпа хамăр Тĕрлемесе, Тĕрлемесрен пĕр сакăрвун-тăхăрвун çухрăм Пăвана çавăнса килнĕччĕ: вăл енчи чăвашсене çавăн чухне аранçă куркаларăм», тесе çырать вăл сăпайăн.

Тата Элшел таврашĕнчи ялсене миçе хутламан пуль вăл! Юрă-сăвă ăстисемпе, юмахçăсемпе, ĕлĕкхи йăла-йĕркесене астăвакансемпе миçешер хут калаçман пуль. Çынсем хушшинче темли те пур, кашниннех пĕр чĕлхе тупма пултарнă вĕт-ха вăл. Унсăр ăçтан çавăн чул материал пухăн.

Çакна май пĕр мыскараллă ĕç аса килчĕ. Пĕр вăхăтра пирĕн пурте фольклорпа интересленме тытăннăччĕ. Халапсем, юрăсем пуçтаратчĕç. Çине-çинех юмах кĕнекисем пичетленсе тухатчĕç.

Ырă ĕмĕтпе хавхаланнă пĕр ватă сăвăç çавăн чух арăмĕпе çыруçине ертрĕ те Куйбышев облаçĕнчи чăвашсем патне çитсе килес терĕ. Эпĕ те вĕсемпе ермешсе кайрăм. Похвиçнĕ çывăхĕнчи Кĕçĕн Ÿпреелне çитрĕмĕр хайхи. Ял Советне кĕтĕмĕр. Халăх — тулли! Ватă сăвăç

пирĕн сăмах-юмах ăстисем ялта пуррипе çуккине ыйтса пĕлчĕ. Пур, терĕç. Пĕри вара, куçсăр этем, темĕн те пĕлет иккен...

Сăвăç пирĕн çав çынна ял Советне чĕнтерме хушрĕ. Чĕнсе пычĕç. Çын алăкран кĕме ĕлкĕрчĕ-и, ĕлкĕреймерĕ-и тенĕ пек, ватă сăвăç ăна пуç тăрăх шыв янă пекех турĕ: «Сана халап нумай пĕлет, теççĕ, пĕр-иккĕшне ярса кăтарт-ха»,— терĕ. Лешĕ те аптраса ӳкмерĕ. Ларма кăна тытăннăскер, яшт сиксе тăчĕ те пирĕн çулташа çапла татса хучĕ: «Правление-сельсовета чĕнтерсе çӳреме эс милиционер мар, эпĕ те сан умăнта айăпа кĕмен. Тăптăр кăнтăр кунĕнче халап ярса ларма эп шĕвилкке мар. Сан эрехне ĕçсе те ӳсĕрĕлмен-ха». Çапла каларĕ те алăка шалт çеç хупса хăварчĕ...

Çук, кирек мĕн калăр та, «Тăхăръял» алçырăвне паттăр çын çеç хатĕрлеме пултарнă. Талант та пур ун. Мĕнле çыпăçтарса пырать вăл, пĕр вулама тытăнсан пăрахаймастăн. Темĕнле ача чĕриллĕ этем юмах каланă пек шăкăлтатса пырать. Унтан кĕçех юрласа ярать вăл. Манăçа тухнă йăласене тĕплĕн çырса кăтартса тĕлĕнтерет.

Хама тĕрĕслесе, эпĕ вăл алçырăвне темиçе çĕртен те вулама тытăнса пăхнă. Тӳрех туртса кĕрсе каять. Акă пĕр сыпăкне çеç илер-ха. Вăл вăхăтри пурнăç темпĕ пекех, хуллен шăвать калав:

«Элшел хирĕпе аслă çул хĕрринчен пуçланса... Тарăнварпа Хурăнвар çырмисем анаççĕ. Çуркунне вăл çырмасенче шыв шаркаса юхать. Хиртен юр шывĕ анать... Хурăнварта сăрт хĕрринче шăтăксенче сăвăрсем пурăнаççĕ. Унта сăвăр шăтăкĕн хисепĕ çук. Вăл шăтăксем тарăн: умĕсенче шалтан сăвăр чавса кăларнă тăпра темĕн чухлĕ пулать. Мăшăрлăн-мăшăрлăн пурăнаççĕ вĕсем. Кăнтăрла шăтăксенчен тухаççĕ те уçăмра *-мĕнре, тырă ăшĕнче е çеремре кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе тăранса çӳреççĕ. Вĕсем çӳрени таçтан курăнать: пĕри сăрт çамкине улăхса кайри урисем çине ларать те, йĕри-тавра çын-мĕн килмест-и тесе, унталла-кунталла пăхса ларать. Хăйсем патнелле пыракан çынна таçтан аякран курать вăл. Çын хăйсем патнелле пыра пуçласанах, ыттисене шик! шăхăрать. Лешсем вара çӳренĕ çĕртен пĕр сиккелемесĕр хăйсем патне çын пынине пăхса лараççĕ. Пĕчĕкçĕрех хĕрлĕ йытă евĕрлĕрех вĕсем, хăшĕ-хăшĕ хураллă ула та

* Калча çинче.

пулать. Çывăхĕсенерех çын пыриччен нимĕн чĕнмесĕр лараççĕ те, çывăхарах пырсанах харт-харт-харт! туса шăтăксене кĕрсе каяççĕ. Пĕр шăтăкĕсене кĕрсе кайсан, час тухмаççĕ вара вĕсем. Вăл сăвăрсене чăвашсем «этемрен пулнă, тет», теççĕ. Ĕлĕк пĕр пуп пуряннă, тет. Унпа пĕрлех тата çав ялта пĕр чăваш пулнă, тет; çав чăвашпа пуп иккĕш юнашар тулă акнă, тет. Ку чăвашăн тулли аван пулнă, тет, пупăн начар пулнă, тет. Пуп кунăн анине йышăнать, тет: лайăх пулнă тулла «манăн» тесе калать, тет. Хайхисем тавлашсан-тавлашсан, пуп калать, тет: «атя сута парар, эппин, сутсем килсе хăш ана камăн иккенне татса паччăр», тесе калать, тет. Сута каяççĕ, тет, хайхисем. Сутсем калаççĕ, тет: «ана çине пырса, анасенчен хăйсенчен хăшĕ камăн иккенне ыйтас», тесе калаççĕ, тет. Ку пупăн пулать, тет, пĕр хĕр те пĕр ывăл. Пуп ачисене калать, тет: «ана çине сутсем пырса ыйтас пулсан, эсир çĕр айне кĕрсе ларăр та, «ку кам ани»? тесе ыйтсан, тулă лайăх пулнине «пупăн тесе калăр», тесе калать, тет. «Леш тулă начар пулнине мушикĕн тесе калăр», тесе калать, тет. Пуп ачисене илсе каять, тет те, икĕ ана хутлăхне çĕр алтса хăвăл туса парать, тет, çиелтен, курăнмалла мар туса, тăпра витет, тет. Хай сутсем çитеççĕ, тет те, тулă лайăх ана çине пырса: «ку кам ани?» тесе ыйтаççĕ, тет. Ана çинче: «пупăн, пупăн» тесе калать, тет. Унтан тулă начар пулнă ана çине пырса, «кам ани?» тесе ыйтаççĕ, тет. «Мушикĕн, мушикĕн», тесе калать, тет. Пуп çапла, улталаса, хресченĕн лайăх пулнă туллине йышăнать, тет. Ку пупăн ачисем çавăншăн сăвăр пулса тăраççĕ, тет: çапла ĕмĕр çĕр айĕнче пурăнмалла пулаççĕ, тет. Халь сăвăр шăтăкне кĕрсе кайнă чухне хартлатнине чăвашсем: «пупăн, пупăн» тесе калать вăл, теççĕ. Çапла каланă евĕрлех хартлатать вăл».

«Тăхăръял» алçырăвĕпе паллашсан, пуçа темиçе тĕрлĕ шухăш та пырса кĕрет. Пĕрре — савăнатăн. Пирĕн Н. И. Ашмарин профессор хатĕрленĕ 17 кĕнекеллĕ чăваш сăмахĕсен словарĕпе «Тăхăръял» пек хаклă япаласем пурришĕн савăнатăн. Çук, чухăн халăх мар эпир.

Тепĕр енчен — тĕлĕнетĕн. Мĕнле хăвăрт малалла кайса пырать пурнăç! «Тăхăръял» çырнăранпа утмăл-çитмĕл çул та иртеймен пуль, пурнăç йĕрки улшăннă май, миçе сăмах кивелсе ларнă. Акă, курăр-ха:

«Элшелийĕн ята виçĕ хирĕнче те виçĕ тўтрешкешер çĕр тивет, теççĕ; ялта 548 ят теççĕ пулас. Анара икĕ çур-

пилӗк хисеплеҫҫӗ, ҫурпилӗкре икӗ тӳтрешке... Тӳтрешкере пилӗк хӑлаҫ...»

Пыр та ӑнлан ӑна хальхи ҫамрӑк. «Тӳтрешки» те, «ани» те, «ҫурпилӗкӗпе» «хӑлаҫ» та уншӑн «иртнӗ самана юлашкийӗсем». Ун вырӑнне вӑл нумай ҫӗр ҫӗнӗ сӑмахпа пуянланнӑ.

Юлашкинчен каллех Ф. П. Павлов калани аса килет. «Тӑхӑръял» пирки ҫырнӑ кӗске статйине вӑл ҫапла вӗҫлет:

«Халиччен чӑваш ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесем хушшинче «Тӑхӑръял» — паллӑ кӗнеке. Наука тӗлӗшӗнчен вӗреннӗ ҫынсемшӗн пит аван, вӗренмен чӑвашсемшӗн ахаль те пит аван. Ҫавах хамӑр халӑха кӑштах та пулин тимлеме шухӑш парать. Ан тив, вуласа пӑхтӑрччӗ: мӗн калӗҫ-ши чӑвашсем? Ҫавӑнпа «Тӑхӑръял» кӗнекине станпа ҫапсан пит аван пулӗччӗ» *.

Хӑшпӗр кӗнекесем тухма ӗлкӗрейменҫҫӗ — кивелсе те лараҫҫӗ. Ун пек кӗнекесене, тен, ҫырмасан та юранӑ? Теприсем, хаклӑ йышши йывӑҫ ӳснӗ пек, майӗпен кӑна вӑй илсе пыраҫҫӗ. Тӑм та тивет вӗсене, пӑр та ҫапать, вӗсем ҫаплах ҫӳлелле тапаҫланаҫҫӗ, ҫӳлелле кармашаҫҫӗ. Кайран пӑхӑсан — чип-чипер йывӑҫ пулса ҫитнӗ вӗсем. Ҫимӗҫӗ тутлӑ, шӑрӑхран пытанма сулхӑнӗ те пур, юнашар ларакан йывӑҫсене те хӳтлӗх. Нумай вӑхӑт пурӑнмалли япала майӗпен ҫитӗнет, тенӗ вырӑссем.

«Тӑхӑръял» алҫырӑвӗн пӗлтерӗшӗ те ҫавах. Вӑхӑт иртнӗҫем вӑл ӳссех пырать. Ун пирки писательсемпе журналистсем ҫыраҫҫӗ, унти юмахсене илемлете-илемлете кӑлараҫҫӗ...

Усӑллӑ ӗҫ тӑвакансене халӑх нихҫан та манмасть.

*1968.*

## ШЕЛЕПИ ПУРНӐҪӖНЧИ ВИҪӖ САМАНТ

Хӑй тӗллӗн вӗреннӗ сӑвӑҫӑ вӑл, Николай Иванович Полоруссов-Шелепи. Эп астӑваса, утмӑлалла капашатчӗ вӑл. Мӑн сухаллӑччӗ. Тӗреклӗччӗ-ха. Хресчен сӑнлӑччӗ. Пӗр улт-ҫичӗ ҫул ӗлӗкрех операци ӑнӑҫсӑр пулни-

* «Тӑхӑръял» алҫырӑвӗ 1972 ҫулта кӗнеке пулса тухнӑ. Ӑна Чӑваш кӗнеке издательствипе Чӑвашсен наукӑпа тӗпчев институчӗ кӑларнӑ.

пе куçсăрланса ларнăскере, урамра ăна карчăкĕ çавăтса çӳретчĕ.

Литературăри ĕçĕсене шута илсе, Совет правительстви Шелепие «Хисеп Палли» орден парса чысланăччĕ. (Орден ун чухне пĕтĕм Чăваш çĕрĕпе те тăват-пилĕк çынтан ытла илменччĕ-ха.) Сăвăçа пулăшма секретарь панăччĕ.

Ĕçле кăна пултарнă таран.

Унтан вăл Чăваш халăх поэчĕ пулса тăчĕ. Хаçатжурналсем нумай çырчĕç ун пирки. Пысăк çынсенчен саламсем килнĕччĕ. Кĕнеке хыççăн кĕнеке тухатчĕ Шелепин.

...Çав çулхине вĕсем, çак икĕ писатель, сăвăçпа проза çыракан, сахал вĕреннĕ пуççăнах çыру ĕçне пикеннĕ хресченпе хут ашшĕ, Николай Иванович Шелепипе Иван Николаевич Юркин, Плеханов урамĕнчи юнашар çуртсенче пурăнчĕç. (Каярахпа вăл çуртсене, Чăваш Академи театрне лартма вырăн кирлĕ тесе, пăсса пăсса кайрĕç.) Шелеписем Ленинград урамĕпе Плеханов урамĕн кĕтессинче икĕ хутлă хĕрлĕ чул çуртраччĕ. Иван Николаевич Юркин вĕсен çумĕнчи пĕчĕк йывăç пӳртре хăйĕн темĕнле тăванĕ патĕнче çу каçрĕ. (Пурăнасса вăл Ульяновск хулинче пурăнатчĕ пулас.) Шупашкара «Ульки» ятлă повеçне станпа пустарса кăларма * май çук-ши тесе килнĕ пулнă-мĕн.

Эпĕ, Чăваш радиокомитечĕн литература пайĕнче ĕçленĕ пирки, иккĕшин патĕнче те пулаттăм. Тепĕр чух иккĕшне тĕл пултарас тесе те хăтланса пăхнă. Те пĕри аслă та тепри кĕçĕнрен (Иван Николаевич Николай Иванчăран çирĕм çула яхăн аслăччĕ), те кăмăлĕсем тĕрлĕ пулнăран, пĕр-пĕринпе килĕштерсех каймастчĕç вĕсем. Урамра пĕрне-пĕри курсан, чарăнса калаçас вырăнне, Иван Николаевич таплаттарсах аяккалла утатчĕ вара. Шелепи калаçма та хавасчĕ пулас та, Юркинран кăштах именетчĕ. Тӳлек çынччĕ вăл Шелепи. Сăпай çынччĕ. Вăрçма пĕлместчĕ. «Эх, кайăк!» тенинчен хаяр сăмах çукчĕ ун чĕлхинче.

1930 çулсенче ĕçленĕ Золотов Микули критик Шелепин ун чухнехи пултарулăхне çапла хакланă:

«Вăл хресчен сăвăçĕ, хăйĕн произведенийĕсенче ял шухăшне палăртса тăрать. Хресчен пурнăçĕ — ун сăвисен çăлкуçĕ»,— тенĕ.

---

* Кĕнеке туса кăларнине Иван Николаевич çапла калатчĕ.

«Шелепи поэт фотографи еверлӗ. Хăйӗн сăввисене, калавӗсене, драмисене куçа курăннă япаласене йӗркипе çырса пынă пек çеç ӳкерсе, çырса пырать».

«Шелепи вут-кăварлă поэт мар. Ун сăввисем чӗрене кăтăклантармаççӗ».

Куççăрскер, радио итлеме юрататчӗ вăл. Сăвăсене эпӗ пуçра янтăласа купалатăп, тетчӗ. Сăввисем якалса çитнӗ пек туйăнсан, е карчăкне, е секретарьне каласа çыртарнă вăл.

Пӗррехинче ăна Куйбышев облаçӗнчи Похвиçнӗ районне кӗрекен Кӗçӗн Упреел чăвашӗсем чӗнсе янăччӗ. «Пирӗн «Канаш» колхоз библиотекинче чăваш писателӗсен кӗнекисем нумай, вӗсене эпир юратса вулатпăр. Авторӗсене çеç курманпа пӗр. Ӗçре те пирӗн колхоз малти ретре. Пирӗн чăваш литературин ветеранӗпе Шелепи сăвăçпа курса калаçас килет»,— тенӗччӗ вӗсем писательсен Союзне янă çырăвӗнче.

Халăх чӗнсен, ма каймалла мар? Николай Иванович хатӗрленме тытăнчӗ.

Эпир тăваттăн çула тухрăмăр: Шелепипе ун арăмӗ, Шелепи çыруçи Илюхина Урине, журналистка, тата эпӗ, унти çӗршыва пӗлекенскер. Пăрахутпа Куйбышев хулине çитрӗмӗр, унтан поездпа — Похвиçнӗне. Ӳпреелӗ хуларан икӗ çухрăмра кăна-мӗн, пӗр тӗме урлă çеç каçмалла.

Çул çинче эпӗ «Шелепи çырнисен пуххи» ятлă кӗнекене тепӗр хут вуласа тухрăм. Ăна 1928 çулта пичетлесе кăларнă пулнă. Сăвăсемпе проза. Хампа пӗрле çӳрекен çынна пӗлмелле-çке-ха.

Шупашкарти çамрăк çыравçăсем хушшинче эпӗ Шелепие тиркесе калаçнине те илткеленӗ. Э, мӗн вăл ун пек çырни, силлабикăн вăхăчӗ иртнӗ ӗнтӗ, халь урăх виçе кирлӗ, тетчӗç.

Вӗсем Шелепи куççăррине манса каятчӗç. Старик пурпӗр пурнăçран юлмастчӗ-ха. Нимӗнле кампание, республикăра хускатнă пӗр пысăк ӗçе асăрхамасăр хăвармастчӗ вăл. Ялан сăвăпа саламлатчӗ. Вулакансемпе тӗл пулса калаçатчӗ. Ялсене тухса çӳретчӗ.

Силлабика тесен, вилӗмсӗр «Нарспие» те К. В. Иванов силлабикăпа çырнă та, пирӗншӗн вăл пурпӗр ӗмӗрне те кивелес çук. Ӗç сăвă форминче-виçинче мар, шухăшӗнче пуль çав.

Ку кĕнекене, «Шелепи çырнисен пуххине», поэт куç-лă чухнех кăларнă пулнă-ха. Хуплашки çинче чĕп-чĕрĕ куçлă сăвăç чалхăртса пăхса ларать.

Мана унăн прози ытларах килĕшет. Сахал сăмах-пах, ним тăрăшмасăрах тенĕ пек, аса юлмалли сăнар-сем ӳкерме пĕлет вăл. Ĕç хăçан пулса иртнине те курă-тăн.

...Акă ыраш вырма тухрĕç,— тесе васкамасăр кăна каласа парать писатель.— Ăçта пăхнă унта çын мăкăлт-мăкăлт туни, ывăçĕсене вĕлт те вĕлт çавăрса хуни курă-нать. Кăчăрт та кăчăрт çурла сасси илтĕнет. Çынсем хыçне, сурăх кĕтĕвĕ пек, кĕлтесем шакăртатса выртса юлаççĕ. Çав тери тирпейлĕ, таса, тĕпĕнчен вырса, кĕл-тисене вĕтĕ, хитре, тăпăл-тăпăл çыхаççĕ. Çĕмел е капан тунă чух ун пек кĕлтесене тыткалама ансат, капанĕ те хитре пулать. Çапма та çăмăл, кĕлте каррине пĕрчĕ юл-масть.

Хире пуринчен ытла хĕрарăм сырса илнĕ. Арçынни-сем граждан вăрçинче чылай пĕтнĕ пуль çав. Чугун çул тавраш е хуласене ĕçлеме кайнисем те нумай. Хăш ана çинче виç-тăватă хĕрарăма та пĕр арçын курăн-масть.

Çул хĕрринче выракан карчăкăн çурлине илсе, пĕр кĕлте туса патăм.

— Ха, эсĕ чиперех выратăн-çке, эпĕ сирĕн пек çын-сем тырă вырма пĕлмеççĕ пуль тесе,— терĕ карчăк.

Çул çинче Шелепи пире тĕлĕнтерсех пĕтерчĕ. Пĕр çын хăйне темиçе çын пек кăтартрĕ. Вăхăт-вăхăт вăл сив турă пек мăнкăмăллă. Мăнкăмăллă та мар пуль-ха, шухăшлă. Çур кун хушшинче те çур сăмах каламасть. Старик ĕçлет пуль тесе, ун пек чухне эпир пăрахут тă-рăх курса çӳретпĕр. Унтан вăл пире хăй шырама ярать. Пирĕн енчи йăласене ыйта-ыйта пĕлет. Ĕçкĕ-çикĕ юрри-сене аса илсе ларать. Шăкăл-шăкăл калаçать. Чĕлхи çепĕç ун. Кăмăлĕ ырă.

Ялта эпир канма салантăмăр. Пĕр-ик сехетрен Ни-колай Иванчă колхоз правленине кăштăртатса пырса кĕчĕ. Шурă кĕпепе вăл, çĕнĕ костюмпа.

Шавласа ларакан колхозниксем шăп пулчĕç те хăна еннелле çаврăнчĕç.

Çынсем çавăтнипе Шелеписем, сăвăçпа арăмĕ, тĕпе-лелле иртсе, сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕç.

Пӳртре лăк-тулли халăх пулсан та, Шелепи колхоз председателĕпе çеç калаçать.

— Халап-юмах ăсти пур-и сирĕн ялта? (Ун чухне пур çĕрте те фольклор пуçтаратчĕç.)

— Пур, ма ан пултăр,— терĕ колхоз председателĕ.— Итлеме çеç ан ÿркен...

— Чĕнтерсе килĕр-ха кунта.

Темиçе çын яла тухса чупрĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ, правление пĕр çирĕм пиллĕк-вăтăрсене çитнĕ куççăр этем кĕрсе тăчĕ.

— Санпа Шелепи поэт калаçасшăн,— пĕлтерчĕ колхоз председателĕ килнĕ çынна. Унтан Шелепи еннелле çаврăнчĕ.— Ун пек юмахçă таврара çук...

Тем пулчĕ-çке çав самантра Николай Иванча. Те вăл, хăй пекех куççăр çын (çуралассах çапла çуралнăскер), хăйне, паллă çынна, пуçлăх вырăнне картмасран хăрарĕ, те ăна пĕр-пĕр айван терĕ, те кÿренчĕ (куççăр çын патне куççăр çынна чĕнтернĕ, тен, тăрăхласа çапла хăтланнă тенĕ), паллашмарĕ унпа, ăна иртсе ларма та сĕнмерĕ, тÿрех çапла хушрĕ:

— Пĕр халап ярса пар-ха,— терĕ.

Этем кÿ! хĕрелсе кайрĕ. Тухса кайма тытăннăскер, каялла çаврăнчĕ те пире питрен çупнă пек каласа хучĕ:

— Правление чĕнтерсе халап яртарма эс милиционер мар, тăп-тăр кăнтăр кунĕнче халап ярса ларма эп те шĕвилкке мар, сан эрехне ĕçсе те ÿсĕрĕлмен...

Вара алăк патнелле тап-тап-тап утса кайрĕ те алăка шалт тутарса хупса хăварчĕ. Эп ăна çынсем шăппăн çул панине, вĕсем пĕр-пĕрин çине кăн-кан пăхса илнине çеç астуса юлтăм. Никам ним калама пĕлмерĕ. Николай Иванчă та пĕр сăмах кăна пăшăлтатрĕ: «Қайăк»,— терĕ.

Қаçхине тата тепĕр мыскара пулса иртрĕ. Чиркÿрен пăсса тунă йывăç клуба çапса хĕснĕ пек халăх тулса ларнă. Ватти, вĕтти — пурте пĕрле. Шелепи калаçнине илтесшĕн вĕсем, хăйне çывăхран курасшăн.

Президиум сĕтелĕ, утрав пек, халăх варрине юлнă. Сăвăçăн кашни сăмахне çав самантрах пĕтĕм клуба пĕлтереççĕ. Шелепи пĕр ачаран Г. Р. Державин лицейра вĕренекен А. Пушкинран ыйтнă сăмаха ыйтсан, пĕтĕм клуб хускалса илет...

Шелепипе арăмĕ таврăниччен эпир доклад тума хатĕрленнĕ çынпа паллашатпăр. Мана вăл ытла та хăюллă пек курăнать: кулать, калаçать, куçĕ-пуçĕ çиçет кăна. Паян шăматкун-мĕн те, мунча хыççăн вăл çуттине сыпнă мар-и-ха...

Вечера уҫрӗҫ.

— Витушкин юлташ Шелепи ҫинчен каласа парать,— пӗлтерчӗ колхоз председателӗ.

Тухса тăчӗ те Витушкин — тытăнчӗ суйма. Ҫунтарать кăна. Апла та капла, тет. Шелепи партизан пулнă. Чапаев дивизийӗнче паттăр ҫапăҫнă. (Лешӗ пӗр кун вăрҫăра пулса курман.) Чаплă ҫынна кирек мӗнле мухтасан та юрать терӗ пулас ыр кăмăллă Витушкин. Шелепин унсăр та мухтава тивӗҫлӗ ӗҫӗсем нумайччӗ.

Эпӗ хăраса вилсех кайрăм. Ҫакăнта Николай Иванчă сиксе тăрса докладчика пӳлсен, хисеплӗ юлташăм, эсӗ ытлашширех кӗрсе кайрăн, Чапаева эпӗ тӗлӗкре те курман тесен, скандал пулать-ҫке.

Пăхатăп та — каҫса кайса итлесе ларать Шелепи. Клубри ҫынсем тесен, вӗсем Витушкинăн кашни сăмахне ӗненеҫҫӗ, юмах итленӗ пек итлеҫҫӗ, алă ҫупаҫҫӗ.

Вечер вӗҫӗнче Николай Иванчă сăвăсем каласа пачӗ. Ҫӗкленсе, артистла «вуларӗ».

Хваттере таврăннă чухне Шелепи Витушкин сăмахне ҫапла хакларӗ:

— Лайăх калаҫакансене куркаланă эпӗ, анчах кун пек оратора — пуҫласа илтрӗм. Ну, пултара-ать,— терӗ.

Те шӳт туса каларӗ вăл, те тӗрӗссипе — ăнланмарăм.

*1977. Апрель.*

## ТĂХТИПЕ ПАЛЛАШНИ

Куккук пӗр вӗҫӗмсӗр кунҫул пиллерӗ...
*П. Хусанкай*

### I

Тăхти писательпе эпӗ ҫапла паллашнăччӗ...

Ҫук-ха, капла ытла сасартăк пуҫланса каять. Мӗнле паллашнине шута илсен, кăшт аяккарахран тапранмалла мар-и. Сăмахӗ те вăл ытла чаплăн илтӗнет. Эпӗ унпа паллашас тесе паллашман-ҫке, ӗҫпе калаҫма тивнӗччӗ манăн унпа.

Вуласса эпӗ Тăхти калавӗсене каҫса кайсах вулаттăм-ха. Тăхти произведенийӗсене вуланипе ҫынна тӗлӗнтерме ҫук, мӗншӗн тесен унăн пӗр кӗнеки те магазинта тусанланса выртман. Тепӗр енчен илсен, кӗнеке сутăн-

ни те кашнинчех вӑл кӗнеке лайӑххине пӗлтермест те-ха. Тӑхти пирки калас пулсан, юрататчӗҫ ӑна вулакансем. Халӗ вӑл ҫырнисем курӑнсах кайманнипе ҫеҫ халӑх ун ятне мана пуҫларӗ.

Килӗшетчӗ мана Тӑхти. Ҫав тери хисеплеттӗм эп ӑна. А. М. Горький калана пек, ун кӗнекине кутӑн-пуҫӑн ҫавӑркаласа е ҫутта тытса пӑхманни ҫеҫчӗ. «Мӗнре ун вӑйӗ?» — теттӗм. Темиҫе сӑмах вуланипех куҫ умне чӑваш пурнӑҫӗ тухса тӑратчӗ, чӑваш писателӗ ҫырни те паллӑччӗ. (Хальхи ӑспа эпӗ Тӑхти хушаматне кӑтартмасан та, вӑл ҫырнине часах уйӑрса илетӗп.) Тарӑхаттӑм вара тепӗр чух. Чӑваш ятне асӑнса, ялне каласа ҫырсан та, чӑваш произведенийӗ пулмастчӗ ман. Чунӗ ҫукчӗ. Тӑхтин кашни сӑмахӗнче халӑх пурнӑҫӗн сӗткенӗ пурри сисӗнетчӗ. Курӑр-ха акӑ:

«Ҫимӗк сӑри ӗҫме кӑҫал эпӗ кукки патне карӑм хам арӑмпа. Кукки хамӑр ялтан вӑрман урлӑ, ултӑ ҫухрӑмра, аслӑ ялта пурӑнать.

Ҫӗнӗ ҫӑпата, шур пир тӑла сыртӑм, арӑм та тумланчӗ, пушмак тӑхӑнчӗ.

Килтен тухрӑмӑр. Уй урлӑ каҫрӑмӑр. Вӑрмана кӗтӗмӗр.

— Кӑҫал вӑрман пӗтӗ пулӗ-ши, мӑйӑр-икел пулӗши? — тесе арӑмпа ҫавтӑнса, пуплесе пыратпӑр вӑрманпа».

(*«Ҫиҫӗм ҫӑмахӗ»* калавран.)

Тӑхти ӑсталӑхӗнчен мӗн тӗлӗнӳ эп. Ним мар сыпӑкпах вӑл чӗрӗ сӑнарсем ӳкере-ӳкере парать. Сӑмахсем те эп пӗлекен, эп куллен илтекен сӑмахсемех ӗнтӗ, вӗсене ытлашши йӗркелесе те ҫитермен пек, йӑлтӑр-ялтӑр сӑрсем те ҫук авторӗн. Ҫапах вулама тытӑнан та — йӑлтах чӗрӗлсе тӑрать куҫ умӗнче. Унпа ҫеҫ те сахал. Ҫав сыпӑка вуланипех унти этемсен паянхи кунне ҫеҫ те мар, вӗсен иртнӗ кунҫулне те, пулассине те куратӑн. Кӗнеке ҫырса кӑтартма пулать Тӑхти виҫ-тӑватӑ предложенипе ӳкерсе панӑ ҫынсем пирки! Акӑ мӗнле ӑрӑмҫӑ вӑл Илья Ефимович Тӑхти!

Вулакан та килентӗр тесе, тепӗр сыпӑк илсе парам:

«Питӗр тенине илтнӗ, пирӗн асатте те Питӗрте гвардире служить тунӑ, тетчӗ. Питӗр вӑл Яппун патнелле пулмалла,— терӗм эпӗ.

— Питӗр унталла пулать-и, ан аташ. Ют ҫын умӗнче йӗркесӗр калаҫни килӗшмест. Ухмах вӗсем, хурӑн-

ташӗпех анра, тейӗҫ апла,— тет мана Ҫитмӗшри йысна.

— Таҫта Мускав, таҫта Питӗр, ҫитсе курман эпир, пӗлместпӗр. Энтри пасар леш енчех Яппун ҫӗрӗ пуҫланса каять-и, тен? — теҫҫӗ пирӗн арӑмсем, сӑмаха ман майлӑ ҫаварнӑ пек пулса.

Куккипе инки сӑра ӗҫтереҫҫӗ. Калаҫатпӑр. Арӑмсем итлеҫҫӗ.

— ...Питӗре краскӑ илме каяс ҫукчӗ те, хамӑр аппа ывӑлӗ илсе карӗ. Вӑл унта хут вӗренет, студенцӑра пурӑнать,— тет краскӑ сутакан.

— Студенцӑсем пурте вульвӗрпе ҫӳреҫҫӗ пуль вӗсем? — тет Шмалахри аппа».

*(«Ҫиҫӗм сӑмахӗ».)*

Чӑваш пурнӑҫӗ пек, тӑршшӗпех ҫапла шӑкӑл-шӑкӑл пырать, ҫынна хытарса ярас тесе ҫырнисем, кӗрӗс-мерӗссем пӗрре те ҫук.

Эпӗ хамӑр ҫыравҫӑсен произведенийӗсене илетӗп те, хӑшпӗрисен кӗнекисем пире пӗчӗккӗ чух вӗлерсех пӑрахатчӗҫ. Ҫавна астуса, халь тытса пӑхатӑн та ҫав произведенисене — ҫук, вулас килмест. Ӗненмелле мар. Ҫыннисем пуканесем пек. Вӗсен ӗҫӗсем суя. Чӗлхи вырӑсларан куҫарнӑ евӗр. Шухӑшӗ кивӗ. Авторӗ мӗнле халӑх пурнӑҫне кӑтартасшӑн пулни паллӑ мар...

Тӑхтин урӑхла. Вӑл ҫурма юптарса, тӑрӑхласа, ҫав вӑхӑтрах ҫыннисене юратса та шеллесе ҫырнисене пӗчӗккӗ чух ытлашши ӑнланса та ҫитейместӗн-ха. Темӗн сиксе тухасса кӗтсе вуласа ларан-ларан та — калав пӗтет каять, сан куҫна курӑнмалла нимех те улшӑнса ӗлкӗреймест пек.

Ӳсерехпе ҫав калавсемех ытларах илӗртме тытӑнаҫҫӗ. Анчах Тӑхти калавӗсен пӗтӗм техӗмне мӑн ҫын пулса ҫитсен, пурнӑҫ куркаласан тин лайӑххӑн ӑнланса илетӗн. Сана авторӑн ытарма ҫук чӗлхи, унӑн ача евӗр тӳр кӑмӑллӑ «геройӗсем», чӑваш халӑхӗн пурнӑҫне ҫыравҫӑ пур енчен те витӗр пӗлни тӗлӗнтерет. Пӗлни ҫеҫ те мар вӑл: Тӑхти хӑйӗн кашни йӗркинче халӑх сывлӑшӗпе сывлать.

Ҫакна асӑрханӑ эп. Хӑшпӗр писателӗн кӗнекине вулан та, автор хӑйӗн чи ҫӳлти «тӳпипе» пынине сиссе тӑратӑн. Унтан ҫӳлерех, унтан тарӑнрах нимӗн те юлман писателӗн. Вӑл ку кӗнекене хӑйӗн пӗтӗм пултарулӑхне панӑ. Паллах ӗнтӗ, пур енчен те мар пуль, пӗр енчен ҫеҫ пуль. Ҫав кӗнекене кирлӗ енчен. Тата пӑртак ҫӳле-

рех хăпармалла пулас пулсан, авторăн сывлăшĕ пӳлĕнĕччĕ, аяларах анма та пĕвĕ çитмĕччĕ.

Тăхти çырнисене эпĕ вуншар хут та вуланă. Кашнинчех е савăнса, е хурланса, е киленсе ларнă. Писатель сан кăмăлна мĕнле улăштарас тет — çавăн пек улăштарать. Эсĕ ун аллинче. Çав вăхăтрах вăл ку калавсенче, айсберг пек, хăй мĕн пултарнин сакăр-тăхăр пайĕнчен пĕр пайне çеç вулакана кăтартнине те чухлатăн.

Капла каланипе вулакан акă мĕн шухăшлĕ. Пĕри хăйĕн произведенийĕсене пĕтĕм чунне парать иккен, Тăхти, ав, чĕрĕк вăйĕпе çеç ĕçлесе пурăннă, тейĕ. Çук, капла шухăшлани тĕрĕс мар вăл. Пĕрин «тур панийĕ», «багажĕ» çавнашкал, тепри çав тери ăслă, нумай пĕлет; сăнанисем ун темиçе кĕнекелĕх.

Хамăн юлташсене, çыравçăсене, илес пулсан, вĕсем мĕн çырасса, мĕнле çырасса эпĕ тахçанах пĕлсе тăратăп. Вĕсем те ман пирки çаплах шухăшлаççĕ пуль. Нумай çул хушши пĕрле ĕçлесе, пĕрне-пĕри аванах пĕлсе çитнĕ эпир. Кĕтмен япаласем, кĕтмен сăнавсем, сăмахсем çырса, пĕрне-пĕри пит те сайра тĕлĕнтеретпĕр.

Тăхти — урăхла. Унăн кашни страницинчех хăнăхманни, çĕнни сике-сике тухать. Пурте калакан сăмахсенех вăл тепĕр майлă çавăрттарса хума пĕлет. «Çунса кайнă» тес вырăнне халăх чĕлхипе «ăшша кайнă», тет. («Çĕнĕ Пуянкассинче, йывăç нумай пулнă пулсан, хĕрĕх килех ăшша каяс çукчĕ».— «Мĕн ку? Япала ку» калав.)

«Пӳрте-çурта таса тытать. Кĕпе таврашне çăвать, кĕпесене лайăх шуратать»,— тесе мухтанать хăйĕн карчăкĕпе «Иптеш» калаври кунĕ старик.

«Кăвак конвертлă çыру» тес вырăнне Тăхти, ĕç 1930-мĕш çулсенчи ялта пулнине аса илтерсе, «кăвак хупăллă çыру», тет.

Хама килĕшнĕ вырăнсене çырса илес пулсан, писателĕн пĕтĕм кĕнекине çырса илме тивĕччĕ. Çавăнпа тата темиçе тĕл çеç кăтартам.

«Карчăкпа иксĕмĕрех... тĕпкĕче юлтăмăр».

«...Килте хусах юпа та лартман эпĕ».

«Ара, пуçа пырсан, шăмшак çăмăлланать çав».

«...Ташлассине те эпĕ темиçе тĕслĕ: чăвашла — хыçа силлентерсе, вырăсла — ура пуçне авкаласа, тутарла — пĕççе тăсса, ярăнса ташла-ташла кăтартрăм...»

Тăхти калавĕнчи ĕçсем хăçан пулса иртнине кăшт вуласанах чухласа илетĕн. Карчăкне хурама пушăт çăпати хуçса паракан тӳлек старик, паллах ĕнтĕ, çирĕм-

мĕш çулсенчи «çимĕç». Сысни яштака пулнипе мухтанакан этем те колхозсемччен пуранна...

Вуласан-вуласан, эп çине-çинех тĕл пулакан пĕр пек сăмахсем хушшинче такăнма тытăнатăп.

«...пĕр-пĕринчен уйрăлса каяс мар,— терĕ атте хапхаран тухас чух.

Хамăр хапхаран тухрăмăр. Уй хапхинчен те тухрăмăр...», тенĕ хыççăн «пырать», «пыратăп», «пыратпăр»-сем пуçланса каяççĕ. «Хам», «хамăр» тенисем те нумайрах пек. Мăтăк пуплевсем пур.

Тăхтие юратакансккер, писатель ăна ахальтен ун пек хăварман пуль, тетĕп эпĕ. Вăл çивĕч куçлă пулнă, «шăйрăксене» асăрхамалла. Произведение вăйлăлатма юри çапла çырман-ши вăл? Қашни калавне тенĕ пек Тăхтин персонаж каласа парать вĕт. «Иптешре» «эпĕ» текенни, сăмахран,— тĕттĕм хресчен. «Витаминсем» калавра — ача. Çак тĕслĕхсене илнĕ «Пĕр кĕтӳ кашкăр» калавра та ача. Хресчен ачи. «Шерхуллари» калавçă — кĕтӳç...

Çут тĕнче çине те автор вĕсен куçĕпе пăхать. (Шăп çавăншăн ятланă Тăхтие «критиксем»: калавçă «тирĕпе» витĕнсе, пурнăçа пăсса кăтартать, тенĕ.) Пурнăç муритленĕ хресчен çынни мĕнле калаçнине пĕлнĕ ĕнтĕ Илья Ефимович.

«Çӳп-çапă» хăварнин сăлтавĕ урăх та пулма пултарнă. Писателĕн чылай сăвви-калавĕ пичетленмесĕр юлнă. Тен, çавна астуса, ку калав та те тухĕ, те тухаймĕ тесе, ăна автор якатса çитереймен пуль?

Пĕлместĕп. Пирĕн телее, ун пек вырăнсем нумай мар Тăхтин.

Чăн сăмах кивелмест. Эпир Тăхти çырса кăтартнă пурнăçран аяккарах кайнăçем ун кĕнекисен хакĕ ӳссе пырать. Цифрăсемпе эпĕ вăл япалана çапла кăтартса панă пулăттăм. Прозăпа çырнă чи вуланакан чăвашла кĕнекесем халь пирĕн вунă-вунпилĕк пинлĕ тиражпа пичетленсе саланаççĕ. Вулакансем пуринчен ытла — ял халăхĕ, стройкăра ĕçлекенсем — вăтам çулхи çынсемпе вĕренекенсем. Манар мар: ку кĕнекесен тиражĕ вунă-вунпилĕк пин, терĕмĕр. Ку ĕç манран килес пулсан, Тăхти кĕнекине эпĕ пилĕк-ултă пинлĕ тиражпа кăларăттăм. Ăна ытларах ватăраххисем, вĕреннĕ çынсем, хулара пурăнакансем вулассăн туйăнать. Кĕнекене эрехпе танлаштарма юрас пулсан, пĕрремĕшне эпĕ ахаль эрехпе, Тăхтине коньякпа танлаштарăттăм. Çиелтен çимелли апатпа (десертпа) танлаштарма та юрать ăна.

Тепӗр вунӑ ҫул иртсе кайнӑ тейӗпӗр. Лайӑх произведенисен йышӗ ӳссе пынӑ май, малтанхи кӗнекесен тиражӗ ёнтӗ — вунӑ пин. Тӑхтин — ҫавах: пилӗк-ултӑ пин. Е кӑшт ытларах та-и.

Тата темиҫе ҫул иртсе кайтӑр. Малтан вунӑ-вунпилӗк пинлӗ тиражпа тухни халь ёнтӗ пилӗк-ултӑ пин. Тӑхтин улттӑ-ҫиччӗ те пулма пултарать.

Ылтӑн хакӗ яланах пӗрпекрех тӑрать.

Тӑхти калавӗсем мана тахҫан ҫывӑх пӗлнӗ те халь манӑҫа туха пуҫланӑ яла аса илтереҫҫӗ. Кӗнекине вуланӑҫем эпӗ унти ыр кӑмӑллӑ ӗҫченсене, тӗтӗм ан сӳнтӗрччӗ тесе тӑрӑшакан тӑлӑх-туратсене, чееленме хӑтланакан, анчах чеелӗхӗ тухсах пыракан ача кӑмӑллӗ старикселе, ҫилленнӗ чухне урисене тӑрӑслаттарса утса ҫӳрекен оптимист-кӗтӳҫсене ҫӗнӗрен палласа илетӗп. Автор ӑсталӑхӗ те тӗллӗн-тӗллӗн ачалларах пек. Усал ҫыннисем ун Куштан Микул, Юс Митюкӗ, Кашкӑр Мӗтри, Шампа Ҫитӑр ятлӑ, ыррисем — Чӗмсӗр Ехвим, Йӑнӑш Антун...

Нумайранпа ёнтӗ пирӗн Тӑхти произведенийӗсене, халиччен тухни-тухманнине пӗрле пуҫтарса, кӗнеке туса кӑларасси пирки калаҫаҫҫӗ. Пичетре те асӑнкалаҫҫӗ.

«Унӑн пӗтӗм литература еткерне пухса кӑларасси — тӗпчевҫӗсен ҫине тӑрса тумалли пархатарлӑ ӗҫӗ»,— тенӗччӗ П. Хусанкай Илья Ефимович Тӑхтин 1955 ҫулта тухнӑ пӗчӗкҫеҫҫӗ кӗнекин умсӑмахӗнче *.

«...унӑн алҫырӑвӗсен фондӗнче халиччен пичетленмен калавсемпе сӑвӑсем чылай. Ҫав шутрах пӗр пысӑк поэма та пур. Малашне вӗсене те пухса кӑларма тӑрӑшасчӗ», тенӗ А. Кузьмин Тӑхтин 1960 ҫулта тухнӑ тепӗр ҫӳхе кӗнекин умсӑмахӗнче.

«Ялав» журналӑн 1969 ҫулхи 4-мӗш номерӗнче пичетленнӗ интереслӗ статья авторӗ Валериан Прокопьев та ҫав шухӑшах хускатать.

Эппин, кӑларасахчӗ-ҫке Тӑхти ҫырнисен пуххине. Хумма Ҫеменӗ ҫырнисене академилле изданипе кӑларма вӑхӑт мар-ши тата? Чӑваш халӑхӗн культура пуянлӑхне хӑҫанччен архивра тусан айӗнче выртттармалла? Вӑл

* Илле Тӑхти ҫырнисем «Поэзи, проза, публицистика» ятпа 1979 ҫулта пичетленсе тухрӗ. Кӗнекене Чӑваш АССР Министрсен Совечӗ ҫумӗнчи чӗлхе, литература, истори тата экономика наукисен тӗпчев институчӗ хатӗрленӗ.

ĕçсене тумалăх укçа-тенкĕ те, çынсем те пур пирĕн. И. Е. Тăхти, Хумма Çеменĕ хăйсен произведенийĕсене кăларасшăн тăрăшса çӳреймĕç — вилнĕ вĕсем. Вăл ĕçе пирĕн, чĕррисен, тумалла пулать.

## II

Эпĕ Шупашкарта радиора ĕçленĕ çулсенче Илья Ефимович чирлĕччĕ ĕнтĕ. Ӳпке чирĕпе аптрать, тетчĕç. Театр таврашнелле е Атăл хĕррине пырса лекнĕ самантсенче хулана маларах килнисем пире качака кĕтсе çӳрекен çӳллех мар этем еннелле кăтартатчĕç. «Тăхти», тетчĕç пăшăлтатса. Качакине вăл, паллах, сĕтшĕн усранă. Чăваш хушшинче ĕçсĕр сулланса çӳрес йăла пулман. Тен, çавăнпа Тăхти качака çитерсе çӳренĕ пек тунă. Темшĕн эп ăна хĕрлĕ пăру тир çĕлĕкĕпе астăватăп. Пысăк питлĕччĕ вăл, шăтарасла пăхакан çивĕч куçлăччĕ, курпунтарах хитре сăмсаллăччĕ. Кăмăлĕ пăсăк чух тĕл пулнă-ши ăна эп, сăнĕ ун малтанах сивĕ çеç те мар, хаяр пек курăннăччĕ мана. Е вăл хӳтленмелли маска çеç пулнă-ши?

Вăл çулсенчи Шупашкар пек пĕчĕк хулара пурин çинчен те пурте пĕлеççĕ. Тепĕр чухне çуккине те пур тăваççĕ. Тăхти пирки те темĕн те илтнĕ эп. Ыррине те, усаллине те. Вăл çунатсăр вĕçекенсене юратмасть, тетчĕç. Пĕр хĕрсе кайсан, пухура-мĕнте тепĕр артистран ирттерет, чăн-чăн импровизатор, çырса пырас пулсан, статья е калав хатĕр, тетчĕç. Паллă писатель хулара качака кĕтсе çӳрени пирки те темĕн шухăшласа кăларнăччĕ пулмалла та, халĕ ăна манса пĕтнĕ ĕнтĕ.

Ун чухне, 1936—1937 çулсенче, радиопа тухса калаçакансене пленка çине çырса илместчĕç-ха, техника унта çитейменччĕ пулас. Тӳрех микрофон умне тухса, юрласа паракании юрласа паратчĕ, вулакании вулатчĕ. Такăнсан-мĕн тусан е йăнăш сăмах персе ярсан, пурте илтетчĕç вара. Çавăнпа микрофон умне тухмалли çынсене малтан хăраса ӳкиченех хăйсене мĕнле тытмаллине ăнлантараттăмăр: çырса панинче çуккине каламалла мар; унта тăракан дикторта́н саспа мĕн те пулин ыйтма, ӳсĕрме, шавлама, мăшăлтатма е чарăнса тăма юрамасть т. ыт. те.

Çулла, артистсем ялсем тăрăх гастроле е отпускамĕне саланса пĕтсен, радиопа вулакансемсĕр аптраттă-

мăр чисти. Пĕрре çавăн пек чухне эпĕ — литература передачисен редакторĕ — Тăхти çинчен аса илех кайрăм. Ара, халăх умĕнче калаçма ăста пулсан, çавна радиопа пĕрер калав вулаттарса пăхас мар-и? Хăйне те кĕтмен укçа пулĕ, радио итлекенсем те савăнĕç. (Мана та ырă сăмах тесе шухăшларăм эпĕ хам ăшра.) Аслисемпе калаçса пăхрăм — ытлашши савăнмарĕç те, юрать пуль, терĕç. Тăхти хваттерĕ ăçтине ыйтса пĕлтĕм те (вĕсем хальхи Вырăс театрĕ çумĕнчи картишĕнче шалта пĕр хутлă йывăç çуртра пурăнатчĕç) кайрăм вĕсем патне. Арăмĕ, çавракa питлĕ лутра вырăс хĕрарăмĕ, килĕнче ачипе çеçчĕ. Илья Ефимович уçăлма тухнă-ха, вăл Шупашкар çырми хĕрринче мар-и, терĕ. Кайрăм та — Тăхти чăн та çавăнта-мĕн, çырма хĕрринчи çерем çинче кĕпертен анатарах кĕнеке-и, хулăн тетрадь-и тытса тăрать. Хăйĕнчен темиçе утăмра ула качака курăк çисе çӳрет.

Килĕшрĕ Тăхти. Кăмăллă пулчĕ. Манран пусахласах атте ятне те ыйтса пĕлчĕ. Хăй кăкăрсăр, кăххăм-кăххăм ӳсĕркелет. Эп ăна калавне тепĕр хут вуласа хатĕрленсе тăма хушрăм, микрофон умне хăçан тухмаллине килсе систерĕп, терĕм. (Радио итлекенсене ытларах савăнтарас тесе, Илья Ефимовича эп хăйĕн чи вăрăм калавне «Шерхуллине» вулама сĕннĕччĕ.)

Паян радиопередача пулмалла тенĕ кун, пĕр виç-тăватă сехетсем маларах, Тăхтисем патне тухса утрăм хайхискер. Илья Ефимович килтех, шăп кăна чей ĕçме ларнă пулнă. Мана та ӳкĕтле-ӳкĕтлех сĕтел хушшине лартрĕç.

— Сана аçу ячĕпе мĕнле чĕнетчĕç-ха, манса кайрăм? — тет Илья Ефимович хуллен.

Эпĕ, ют çĕрте хама ахаль те ырă мар туяканскер, аптрасах ӳкрĕм.

— Çамрăка мĕн унта ашшĕ ячĕсемпе...

— Çук, кала-ха ĕнтĕ.

— Афанасьев юлташ тейĕр.

— Федор Афанасьевич марччĕ пулас?

— Ун пек мар та — кирлĕ мар, Илья Ефимович.

Тăхти мана хирĕç пырса тăчĕ те аллине кăкăрĕ çине хĕреслесе тытрĕ.

— Тархасшăн, калăр ĕнтĕ. Эпĕ учитель пулнă вĕт, çынна ашшĕ ячĕпе чĕнме хăнăхнă.

Ятăм-шывăма çапла ирĕксĕрех тепĕр хут калама тив-

рё. Чей ёçсе тăрасси те пулмарё хамăн, вăтаннипе хăпăл-хапăл çеç тухса сирпĕнтĕм.

Передача пуçланас умĕн Тăхти кивĕ почта çурчĕн çӳлти хутне студие кăштăртатса хăпарчĕ.

Аллинче кĕнеке.

Студире хăйне мĕнле тытмаллине аса илтертĕм. Хыттăн кăшкăрса вулама юрамасть, терĕм эп. Микрофон патне те ытла çывăха пымалла мар: сасă хупланать. Микрофонтан аякка кайма та юрамасть: илтĕнмест. Мăшăлтатса сывлама, ӳсĕрме, калаçма — юрамасть: ырă мар, т. ыт. те, т. ур. те.

Те çӳлти хута хăпарса ывăннипе, те эп каласа тултарнăран, Тăхти шурса кайнă пек курăнчĕ мана.

Радио материалĕсене вăл çулсенче Семен Васильевич Элкер вуласа тăратчĕ. Тăхти радиопа тухса вулама килĕшсен, эпир, çамрăксем, савăннăччĕ. Актер пек вулакан çынна илтетпĕр-çке. Радиопа калаçакансен активне тепĕр пысăк ят хутшăнать. Тухман çын тухать...

Семен Васильевич Элкер çеç темшĕн питех хĕпĕртеменччĕ.

Эпĕ хамăн «юрамасть»-сене шутласа та пĕтерейменччĕ — студирен диктор чупса тухрĕ. Часрах, часрах, тет. Сасартăк шăпланса ларнă Илья Ефимовича эпĕ студие танкăлтаттарса кĕртрĕм. Аппаратнăйран техниксем кантăк витĕр темскер кăтарткалаççĕ, куçĕсене пысăклатса юнаççĕ. Диктор микрофон тавра кускалать...

Юлашкинчен пире, ытлашши çынсене, студирен хӳтерсе кăларчĕç те алăка нăх хупса лартрĕç. Илья Ефимович, космонавтсен кабинине питĕрĕннĕ пек, дикторсен аллине тăрса юлчĕ. Микрофон умне вăл темле хирĕнсе тăнăччĕ те, майлашăнĕ-ха, терĕм. Эпир васкаса дежурнăй пӳлĕмĕнче радиоприемник патне ыткăнтăмăр. Диктор халь кам мĕн вулассине пĕлтерчĕ. Тăхти сасси илтĕнчĕ. Вăл кĕххĕм тесе ӳсĕрсе пырне тасатма хăтланнăччĕ пулас та — чарăнчĕ. Вара...

Эсир хăлхасăрсем калаçнине илтнĕ ĕнтĕ, паллах. Мăкăртатнине пĕр енчисем пирĕн вулать, теççĕ. Çавăн пек «вулаççĕ» хăлхасăрсем. Сăмахĕсем вĕсен темле лапсăрка, вăйсăр, тĕссĕр; пĕр-пĕрипе сыхланса ӳкеççĕ, чăлханаççĕ, пăтранаççĕ. Хăшпĕр сăмахне «вулакан» ăшĕнче çеç калать пулас, çавăнпа ун калаçăвне ăнланма та йывăр.

Тăхти — тĕлĕнмелле хитре калаçать текен Тăхти — вуланине эпĕ хăлхасăр çын калаçнипе танлаштарса лар-

тăм. Мĕн пулчĕ ăна сасартăк? Тен, Тăхтие мухтакансем улталанă мана? Тĕссĕр сасăпа пĕр тикĕссĕн мăкăр-мăкăр, мăкăр-мăкăр тăвать. Кун пек вуланипе çывăрма лайăх ĕнтĕ. Анчах манăн çывăрма мар, çӳçпуç вирелле тăрса кайрĕ: мĕн калĕç ĕнтĕ пуçлăхсем? Илья Ефимовича ырласа, эпĕ вĕсен умĕнче каламан сăмах хăвар-манччĕ. Ахальтен мар Элкер питех хĕпĕртеменччĕ çав.

Час пĕтерет-ши тесе, стена çумĕнчи сехет çине пăх-рăм та — çичĕ минут кăна иртнĕ-ха! Улт-çичĕ пайĕнчен пĕрне çеç вуланă.

Тăхти çаплах мăкăр-мăкăр тăвать, эпир вĕри çатма çинче ларнă пек ăшаланатпăр.

Пĕр вунă минутсем иртсен, Илья Ефимович сасси тата пăртак хулленленчĕ, сăмахĕсем тата ытларах çăм-ламасланчĕç. Тĕллĕн-тĕллĕн му-му-му туни çеç илтĕнсе тăрать.

— Телефон патне! — терĕç мана сасартăк. Радиокомитет председателĕ иккен.

— Мĕн ку?! — тет. Калас терĕм те пĕрре Тăхти калавĕн ячĕпе: «Мĕн ку? Япала ку», тесе — шарламарăм. Тӳрре тухма хăтланса, Илья Ефимович пек çеç темĕн мăкăртатса илтĕм.

Унтан Элкер шăнкăртаттарчĕ.

— Цицерон пек хăватлă калаçакан çынна эсир мĕн туса хутăр? — тет.

— Ара, мĕн тунă эпир ăна, нимĕн те туман,— тетĕп.

— Ытла та тиечук пек çеç мумле пуçларĕ, малаллине ыран итлĕр тесе, чармалла мар-ши? — тет.

Аслисемпе сăмах татмасăр передачăна чарма çук. Тата передачăсем хушшинчи пушă вăхăта та темпе йышăнмалла-çке. Çын умĕнче те ырă мар: тиркенĕ пек пулать.

Эпир çапла иккĕленсе чупкаласа çӳренĕ хушăра передача та пирĕн вĕçнелле пычĕ. Микрофона шăкăрт тутарса хупса лартрĕç. Илья Ефимович хĕрĕх ултă минут вуларĕ-мĕн. Дикторсем студирен сывлăша сике-сике тухрĕç, Тăхти çаплах çук та çук. Алăкне уçса пăхрăм— паçăр мĕнле хирĕнсе тăнă — çаплипех тăрать, микрофона хупнă пулсан та, сăмах чĕнмест, аллипе çеç темĕнле паллăсем тăвать. Мана кунтан илсе тухăр, тенĕ пек ăнлантăм эп ăна. Пырса тытрăм та — тӳрех ман çине тӳнчĕ. Коридора çавăтса тухрăм кăна, Тăхти пĕр сăмах чĕнмесĕр диван çине йăванса кайрĕ. «Мĕн пулчĕ?» —

теттпĕр. Каласаймасть. Сывлăшне çавăрсан тин сăмах хушрĕ:

— Тепрер... минут... тăнă... пулсан, çавăнтах урайне персе анаттăм,— тет.

Мĕн пирки аптраса ӳкнĕ çын, ма тӳсме çук начар вуларĕ вăл — ăнланмастпăр эпир. Передачи нумая пычĕха пырасса, çынни те сывах мар, анчах пирĕн сехетшер вулакансем те пулнă — нимех те шарламан.

Тухса каяс умĕн Илья Ефимович пире çапла каласа хăварчĕ:

— Кун пек ĕçе çыхланасси кунтан юлтăр,— терĕ. Эпир кăн-кан пăхкаланине кура, çапла ăнлантарса пачĕ: — Сирĕн кунта ытла ним тума юрамасть. Çыхса лартнă пек...

Ана эпĕ хăратса пĕтертĕм пуль-çке.

Ун хыççăн та темиçе хут курнă эпĕ чирлĕ сăваçа. Пĕрре типографи клубĕнче писательсен пухăвĕнче каласнине те илтрĕм: вут та хĕм сирпĕтрĕ! Тĕллĕ каланă сăмах чул пек йывăррине, тĕк пек çăмăллине, вĕри те, сивĕ те пулма пултарнине çынсем çине пăхса туйса илме пулатчĕ ун чухне.

«Папине-нянине» ятлă поэма сыпăкĕсем «Канаш» хаçатра пичетленсен, таса хыранна Тăхти çав хаçат номерне урам тăрăх паллакан çынсене валеçсе çӳренине те курнă. Савăнтарма юрататчĕ вăл çынсене.

*1969.*

## ИВАН МУЧИ КĂМĂЛНЕ

Пурнăç малаллах васкать. Пĕр вăтăр пилĕк-хĕрĕх çул каялла çеç-ха, Иван Мучи килнĕ тесен, ялсенче тĕркешӳ тапранса каятчĕ: шкулта сасартăк уроксене чарса лартатчĕç, пĕтĕм ватти-вĕтти урама персе тухатчĕ...

Иван Мучи килнĕ!

Хулара тата. Пысăк питлĕ-куçлă, мăн сăмсаллă, кулмасăр пăхакан çӳллĕ Иван Мучи ĕç хыççăн театра кайма хатĕрленсен, çула май чи малтан ун патне Борис Алексеев артист тухатчĕ. Унтан Ульяна Тимофеева хутшăнатчĕ. И-и, хайхи! Иван Мучи тавра вунă-вунпилĕк çын пуçтаранна та, ахăлтатса кулса, Карл Маркс урамĕпе анаталла кĕпĕрленсе утаççĕ. Унта Илле Тукташ та, Кузьма Пайраш та тата ыттисем те пур. Кашниех

«Капкăн» хуçи» çывăхнерех пулма тăрăшать. Мăн сасăллă Иван Мучи сайра çеç калаçкалать, анчах кашни сăмахĕ вырăнлă пулас, пурте е кулса яраççĕ, е тĕлĕнсе пыраççĕ. Паллах, пуринчен ытла кулаççĕ. Иван Мучи — кулăш ăсти-çке.

Унăн ячĕ çынсене хăй патнелле магнит пек туртатчĕ. Хăнасем нумай пырса çӳретчĕç вĕсем патне. Хваттерсĕр писательсем те Иван Мучисем патĕнче пайтах пурăннă. Те «хуçи» ыр кăмăллине кура (вăл кирек кама та савăнсах йышăнатчĕ те, ара), хăшпĕрисем вара хăйсенчен ыйтмасăрах хваттере кĕрсе вырнаçатчĕç. Иван Мучи патĕнче хăй вăхăтĕнче И. Тукташ та, А. Петтоки те т. ыт. те пурăнса курнă, Иван Мучи çăкрине çинĕ. Мана илес пулсан, эпĕ ун пулăшăвне шутласа та кăлараяс çук. Вăл мана Шупашкара чĕнсе илнĕ, хăйсен хваттерĕнче усранă, ĕçе кĕме пулăшнă, пĕрремĕш калав пеккине «Капкăнра» пичетлесе кăларнă. Атя, ун йывăр тăпри çăмăл пултăр та, хам пурăнма пĕлменнипе эпĕ Иван Мучие темле ĕçпе те чăрмантарнă. Паллах, вăл шаннине те тӳрре кăларайман эпĕ.

Çав çӳллĕ те вăтанчăкрах çын куç умĕнче халĕ те чĕрĕ пекех тăрать. Вăхăтсăр вилмен пулсан, тен, Иван Мучи паян кун та пирĕн хушăра çӳрĕччĕ...

Пысăк питлĕ, пысăк сăмсаллă тенĕрен, ăна курман çынсем: эппин, вăл хитре мар этем пулнă, тейĕç. Темĕн, камшăн мĕнле те, Иван Мучие çывăх пĕлекенсемшĕн вăл çав тери хитре çын пулнă, мĕншĕн тесен ун кăмăлĕ тĕлĕнмелле лайăхчĕ. Пионерпа та, колхозникпа та вăл хăйне вĕсемпе тан шутласа калаçатчĕ.

Ĕлĕк «Капкăн» журнала кăларнине илĕр-ха тата. Халĕ урăх вăхăт, урăх темпсем. «Капкăн» журналăн редакцийĕнче те темиçе пай. Кашни пайра штатлă единицăсем лараççĕ. Çырнă кашни йĕркешĕн авторсене гонорар тӳлеççĕ...

1920—1930 çулсенче ун пек ĕçсене пуринчен ытла обществăллă пуçарупа туса пынă. Ф. Павлов тĕрлĕ ĕçре ĕçлесе кăшт-кашт укçа тунă та 1922 çулта хăй шучĕпе «Ялта» пьесине çаптарса кăларнă, сутасса та хăех сутнă. Иван Мучи те 1924 çулта хăйĕн «Комсомольская заутреня» ятлă пародилле кĕнекине хăй укçипе пичетлеттерсе кăларнă... «Капкăнра» вăл тăр-пĕччен ĕçлетчĕ. («Капкăн» ун чухне «Канаш» хаçатăн пайĕ пек шутланса тăнă, унăн редакторĕ хаçатăн пĕр-пĕр сотрудникĕ пулнă.) Сахалтан та улт-çичĕ çын тумалли ĕçе Иван

Мучи — журналăн ответлă секретарĕ тата пичетлесе кăларакан редакторĕ — пĕччен ĕлкĕрсе пынă. Ытти редакцисемпе танлаштарсан, «Капкăн» чи нумай çыру илсе тăракансенчен пĕри пулнă. Иван Мучи çав çырусене хирĕç хурав панă. Унти «ылтăн пĕрчисене» шыраса тупса, «Капкăн» валли кĕске кулăшсем хатĕрленĕ. Ӳкерчĕк тумалли темăсемпе калаçусем те сасартăках аса килмеççĕ. («Капкăнра» ун чухне янтă темăсемпе В. Филиппова Н. Сверчков художниксем ĕçлетчĕç.) Тата фельетонсемпе калавсем çырмалла, вулакансем йăлăхасран çĕнĕрен çĕнĕ пайсем, çĕнĕ формăсем шухăшласа кăлармалла, авторсене пуçтарса калаçмалла, типографине ана-ана хăпармалла, пурнăçран та юлма юрамасть: кашни кунах хаçатсене пăхса тухмалла. Вĕçĕ те çук!

Тепĕр чухне Иван Мучи çĕрле тăрса ларатчĕ те вара, хулăн тутине мăкăл-мăкăл тутарса, темскер çыра-çыра хуратчĕ.

Мĕнле ĕлкĕрсе пынă вăл тăр-пĕччен çав ĕçре,— тĕлĕнетĕн халь. Ахăртнех, ăна литературăна юратни, çамрăк авторсене хăй тавра явăçтарма пĕлни, пысăк ăспа пысăк чĕре пулăшнă пуль. Вăл калама çук тӳрĕ сынччĕ, сăпайччĕ, ĕçченччĕ. Кĕнекисене кăларасчĕ тесе, нихçан та издательствăсем тăрăх çӳремен вăл. Тухнă пек кĕнекисене те ытти çынсем çине тăнипе çеç кăларкаланă...

Чăваш юмахĕнчи вилĕмсĕр Кукша Иван çинчен роман çырма ĕмĕтленсе пурăнакан Иван Мучи «Капкăнра» ĕçле-ĕçлех юлашкинчен вакăланса кая пуçланăччĕ. Вилес умĕн çырнă фельетонĕсем унăн малтанхисене çитейместчĕç. Вăхăчĕ те йывăр вăхăтчĕ те ĕнтĕ: 1937 çул... вăрçăсем... Унтан пурăнас çĕртенех хăй те вилсе кайрĕ. Пурнăçри йăх-яхсемпе салтак пек кĕрешрĕ вăл, салтак пекех пуçне хучĕ.

Иван Мучие эпĕ чылай вăхăт хушши палласа пурăннă, унпа пĕр сĕтел хушшинче те ĕçлесе ларнă. Ун çинчен тĕплĕ çырса кăтартасси ӳлĕмрен пулĕ. Халлĕхе акă пĕр пĕчĕк сыпăк...

«Капкăн» журналта ик-виçĕ калав пекки пичетлесе кăларнă хыççăн, 1931 çулхи çулла, эпĕ «писателе кĕме» Шупашкара килтĕм. Писателе кĕресси те, тухасси те пулмарĕ манăн, унта кĕме хăтланса та пĕр утăм тумарăм, Шупашкарти Садвинтрест совхозне ут пăхма кĕтĕм.

Манпа пĕр çулхи Михал та, манăн ĕçри юлташ, хаçат-журнал вулама ухутаччĕ. Те эпĕ «Капкăна» çыркаланăран, ăна кăларакан Иван Мучирен çыру илсе курнăран,— пуринчен ытла эпир «Капкăн» журнала юратса вулаттăмăр. Кăшт пушă вăхăт тупăнсанах, симĕс курăк çине тăсăлса выртаттăмăр та тытăнаттăмăр вара вулама. Журналне уçнă-уçманах Иван Мучи ячĕ курăнса каятчĕ...

— Мĕнле этем-ши вăл — Иван Мучи? — терĕ пĕррехинче Михал, шухăша кайса.— Ватă пуль ĕнтĕ... Мучи вĕт. Тăхта-ха, эсĕ унтан çыру илнĕ-çке, хăйне те курнă пулĕ?

Курман тес — ырă мар пек туйăнчĕ. «Капкăна» çыракан çын мĕнле вара «Капкăн» хуçине курман пултăр? Тата юлташ шаннине те тӳрре кăларас килчĕ.

— Курнă,— тесе суйрăм эпĕ.

Ман юлташ курăк çине яшт тăрса ларчĕ, тĕлĕнсе ман çине чăр пăхрĕ. Утсене кайса çавăрса килме мана черет çитнĕччĕ, Михал тăчĕ те чупа пачĕ.

— Эсĕ лар,— терĕ. Ун вырăнне, таврăнсан, Иван Мучи çинчен каласа пама ыйтрĕ.

— Мĕнле çын вăл?

— Мĕнле çын пултăр,— терĕм эпĕ.— Старик. Мучи тесе çырать вĕт. Çын хăйне старик тет пулсан, вăл сахалтан та утмăл-çитмĕлте. Иван Мучи утмăл тăххăр çурăра. Сухаллă. Типшĕм. Лутра. Хĕсĕк куçлă.

— Сухалĕ мĕнле? — тĕпчет йăлăхтармăш Михал.

— Ара, чăваш сухалĕ ĕнтĕ. Виçĕ пĕрчĕ.

— Чăвашăн та теприн тем сарлакăш пулать.

— Иван Мучин шĕвĕр сухал кăна. Çур сехет хушшинче миçе пĕрчĕ сухалне пĕлме пулать.

— Эппин, тĕп чăваш вăл?

— Паллах, тĕппи. Çавăнпа çырать те.

Манăн чапăм совхоз картишне хамран та малтан çитнĕ-мĕн. Каçалапа вите патне таврăнтăм кăна, мана рабочисем хупăрласа илчĕç.

— Эсĕ Иван Мучипе çывăх, тет, каласа пар-ха пире ун çинчен. Калавĕсене те итлес килет,— теççĕ.

Вăтана-вăтанах каллех суйма тиврĕ. Инкеке, эпĕ малтан мĕнле суйнине манса кайнă та халĕ темиçе тĕрлĕ те пăтранса пĕтрĕм. Пĕрисене Иван Мучи ырхан тетĕп, теприсене — хулăн. Пĕрре вăл сакăрвуннăра пулса тухать, унтан — тăхăрвуннăра. Сухалĕ кăна улшăнми юлчĕ — виçĕ пĕрчĕ.

Юлашкинчен, эпĕ шикленмех тытăнтăм. Юрать, халиччен Иван Мучие курнă çын тĕл пулмарĕ-ха. Кам та пулин ăна курсан, суя тухать-çке манăн. Мучи мучи те, тен, вăл хура сухаллă мар, хĕрлĕ сухаллă? Тен, çулĕпе те ун пекех ватă мар?.. Кирек мĕнле пулсан та, манăн ăна кайса курмалла.

Анчах мĕнле? Çырнине леçме каяс тес — çĕнĕрен çырни çук. Пуш алăпа пырса кĕме — ырă мар. Каймасан та майĕ çук. Мĕн пулать те мĕн килет терĕм те Михал патне пытăм.

— Яр-ха мана хăнана...

— Хăнана?! Ĕç вăхăтĕнче-и? — тĕлĕнчĕ Михал.

— Иван Мучи патне кайса килмелле.

— О! Унта пулсан, тархасшăн.

Ыттисем те илтрĕç ку хыпара. Мана часрах çăвăнма пулăшрĕç, таса кĕпе тупса пачĕç...

Канаш урамĕнчи 15-мĕш номерлĕ çурт патне хăрахăра çитрĕм, иккĕмĕш хута хăпартăм. Алăкĕ уçах. Пӳлĕмре никам та çук. Тăрсан-тăрсан, пуклак сăмсаллă лутра çын тухрĕ.

— Сана мĕн кирлĕ, ачам?

— Эпĕ Иван Мучине курасшăнччĕ...

— Иван Мучи! — тесе кăшкăрчĕ те çын каялла кĕрсе кайрĕ.

Пӳлĕм варрине... çӳллĕ этем хуллен утса тухса тăчĕ. Хăй пĕр вăтăр-вăтăр пиллĕксенче пулĕ, пысăк питлĕ, пысăк сăмсаллă, йăваш сăнлă. Шăлаварĕ çинчен кăларса янă тӳрĕ çухаллă шурă кĕпепе, сăрă шăлаварпа. Аллинче хут тĕрки (вăл темĕн çырса ларнă пулас).

— Эпĕ кама кирлĕччĕ? — терĕ те вăл пӳлĕмре урăх никам çуккипе ман еннелле кăмăллăн пăхса илчĕ.

Эпĕ тарласа кайрăм. Иван Мучи çакă-и? Янаххинче виçĕ пĕрчĕ мар, пĕр пĕрчĕ сухал та çук. Мучи мар вăл, çап-çамрăк çын. Тата мĕнле çӳллĕ! Çав самантра эпĕ хама Гулливер çумĕнче тăракан лилипут пек туйрăм. (Çав туйăм манăн яланлăхах юлчĕ. Иван Мучи маншăн кирек хăçан та пысăк çынччĕ.)

Эпĕ писателе хирĕç нимĕн те чĕнеймерĕм, каялла чакса, коридора тухрăм та пусма тăрăх чупса антăм...

Хам çапах та савăнтăм.

Куртăм эпĕ Иван Мучине!

*1965.*

## Асаилӳ сыпăкĕ

Пĕрремĕш хут эпĕ хулана,— тата тӳрех пысăк кĕпӗрне хулине Самара,— 1927 çулта пырса кĕтĕм. Хальччен лăпкă ялта пурăннă ачасене (ун чухне ялта авăн çапмалли машинăсăр пуçне урăх нимĕнле машина таврашĕ те çукчĕ, нимĕнли те!) пире хула шавĕ анăратсах пăрахнăччĕ. Хăлхара кунĕн-çĕрĕн трамвай чанкăртатни, чăмăр чул сарнă урам тăрăх ут таканĕсемпе тимĕрленĕ урапасем чанклатни-шанкăртатни, хапрăк-савăт мăрйисем çĕр çĕмĕрсе кăшкăртни илтĕнсе тăратчĕ. Вут тухсан сӳнтерме каякан йăмăх хĕрлĕ машинăсем сăнсăр саспа çухăрта пуçласан вара çӳçпуç чăшăл вирелле тăрса каятчĕ, сехре хăпса тухатчĕ. Ну, мĕнле пурăнаççĕ ку хула çыннисем, мĕнле ухмаха ерсе пĕтмеççĕ, тесе шухăшлаттăмăр. Курăсăн хайхи, пĕр-ик уйăхран хамăр та хăнăхрăмăр та нимĕн илтми пулса лартăмăр...

Ун чухне Октябрь революцийĕ пулнăранпа вунă çул çитнине палăртма хатĕрленме тытăннăччĕ. Калама кăна ансат вĕт: хĕрĕх çул ытла ĕлĕк пулнă вăл! Мĕнлеваскать пурăнăç... Çуркунне хĕвел ăшшипе симĕс курăк тапса тухнă пек, пĕтĕм халăх çутталла туртăна пуçланăччĕ. (Шкулта вĕренмелли кĕнекесем те ун чухне пурнăç таппине палăртса тăратчĕç: «Çутталла», «Малалла», «Вĕренер» т. ыт. çавнашкал ятлăччĕ.) Вĕренессе вара чăнах та пурте вĕренетчĕç: ваттисем — ликпунктсенче, çамрăксем — шкулта, комсомол организацийĕнче, тĕрлĕ кружоксенче... Кружоксем тенĕрен, мĕн кăна çукчĕ ун чухне: вăрçăллă турăсăрсен кружокĕ, хорпа драмкружок, МОПР, осоавиахим, хут пĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлекенсен обществи... темĕн те, темĕн те! Тата пурте çав тери хавхаланса, хĕрсе ĕçлетчĕç. Патша саманинче пӳлĕнсе тăнă халăх вăй-хăвачĕ пĕве татса кайнă пек тухнăччĕ ирĕке. Çĕнĕрен çĕнĕ шкулсем уçăлатчĕç. Вĕренме кĕме çăмăлччĕ,— кăмăлу çеç пултăр.

Çавăн пек шкулсенчен пĕри — Самар хулинчи икĕ сыпăклă текен Чăваш шкулĕ чăваш ялĕсем валли учительсем хатĕрлетчĕ. Советпа парти шкулĕнче те чăвашсем нумайăн вĕренетчĕç. Самарта «Хĕрлĕ ялав» (каярахпа ятне «Колхозник» тесе улăштарнă) чăвашла хаçат, «Пăр тапранчĕ» (каярахпа «Вăтам Атăл») ятлă альманах, илемлĕ литература кĕнекисем, чăваш шкулĕ-

сенче вĕренмелли пособисем... Вак халăхсен клубĕ пурччĕ. Унта чăвашсем те пуçтарăна-пуçтарăна калаçатчĕç, спектакльсем лартатчĕç. (1930 çулта, хăй вилес çул, çав клубра Мĕтри Исаев литература вечерĕ ирттернине лайăх астăватăп. «Люпук çырăвĕ» калавне вуласа пачĕ. Сасси çĕтнĕччĕ ĕнтĕ хăйĕн.) Пăртак каярахпа Самар хулинче Нестĕр Янкас, Илле Тукташ, Сенĕк писательсем ĕçленĕ. (Сенĕк, кулăшла калавсем çыраканскер, «Йĕплĕ хулă» кĕнеке авторĕ, çӳллех мар хура чăвашчĕ. Вăл Г. Кели поэт-критик ашшĕ пулнă.)

Самар хулинчех Владимир Бараевпа Стихван Шавлы сăвăçсем çунат сарма тытăннă. Александр Кăлкан ĕçлесе пăхнă.

Чăваш шкулĕнче эп астăвасса икĕ литератор ĕçлетчĕ. Пĕри аллăсенчен иртнĕ çӳллĕ те кĕрнеклĕ Николай Михайлович Кедров, 1905—1906 çулсенче чăвашла кĕнеке кăларнă этем. Вăл хулăнланас енне кайнăччĕ ĕнтĕ. Тӳлек çынччĕ. Пире вăл чăваш чĕлхипе литературине вĕрентетчĕ. Пĕр мыскараллă йăла пурччĕ вара унăн. Николай Михалчă аллинче эпĕ нихăçан та пӳрнескерен вăрăм кăранташ курман.

Тепри обществоведени учителĕ Влас Захарович Иванов. Ку вара кăмăлĕпе те, сăнĕ-пуçĕпе те йăлтах урăхлаччĕ: лутрарахчĕ, чĕрĕччĕ, çамрăкчĕ. Çирĕмри йĕкĕт! Унăн ӳт-пĕвĕнче иксĕлми вăй-хăват выляса тăратчĕ пулас, çĕр тăрăх вăл хăйне чупса кайма чарса пынă пек утса çӳретчĕ. Вĕренекенсем ун пирки пĕрне-пĕри халап янă пек каласа паратчĕç. Влас Захарович хальхи Оренбург облаçне кĕрекен Грачевски районĕнчи Çирĕклĕре чухăн чăваш çемйинче çуралнă-мĕн. Ашшĕ, ялта Совет влаçне çирĕплетме пулăшакансенчен пĕри, 1917 çулта большевиксен партине кĕнĕ, аллă патнелле çывхарнине пăхмасăрах хăй ирĕкĕпе граждан вăрçине кайса, шуррисемпе çапăçнă. Власăн вунçиччĕри пиччĕшĕ те Хĕрлĕ Çара хăй ирĕкĕпе кайнă пулнă, Лбищенск хулинче тăшмансемпе çапăçса пуçне хунă. Юлашкинчен пĕчĕк Власа черет çитнĕ. Килне вăл салтакран 1922 çулта таврăннăмĕн. Ун чухне Влас... вунпиллĕк тултарса вунултта пуснă пулнă. Тепри вăл çулта çăпата тума вĕренеймест, ку аллине пăшал тытса, икĕ çула яхăн фронтра ирттерет.

Эпир, вуниккĕри-вунвиççĕри ачасем, мухтанаттăмăрччĕ вара. Пирĕн учитель салтак пулнă, теттĕмĕр. Революциччен вĕренсе тухнă ватă учительсем хушшинче вăл

пур енчен те хамăр çын пек курăнатчĕ. Вĕренекенсене çывăхчĕ.

Хăюлăхĕпе, иксĕлми вăй-хăвачĕпе, пурнăçа юратнипе Влас Захарович чăн-чăн халăх ывăлĕччĕ. Темиçе ĕмĕр хушши çыхса пăрахнă пек пурăнса ирттернĕ аслашшĕсен, аслашшĕн ашшĕсен ăнтăлăвĕ пĕтĕмпех вĕсен тăхăмне куçнăччĕ тейĕн. Пурăнма васкани, пур ĕçе те тума тăрăшни кайран Влас Захарович Паймен писателĕн пултарулăхĕнче те сисĕнетчĕ. Вăл чăвашла тата вырăсла сăвăсем, калавсем, критикăллă тата публицистикăллă статьясем çыратчĕ, куçаратчĕ.

Çав çулсенчех эпир хамăрăн учителĕмĕр писатель иккенне пĕлтĕмĕр. «Сунтал» журналта час-часах «В. Паймен» тесе алă пуснă сăвăсемпе калавсем туха пуçларĕç. «В. Паймен вăл пире вĕрентекен Влас Захарович Иванов» тетчĕç аслă классенче вĕренекенсем. Унтан Шупашкарта тухакан хаçатра-и, журналта-и Октябрь революцийĕ 10 çул тултарнă ятпа ирттернĕ литература конкурсĕнче В. Паймена «Çĕпре» ятлă повеçшĕн преми пани çинчен вуларăмăр.

Çапла пирĕн куç умĕнчех тенĕ пек литературăна пурнăç курнă тивĕçлĕрен те тивĕçлĕ çын В. Захарович Иванов пырса кĕчĕ, В. Паймен писатель çуралчĕ. Анчах пусăрăнса çырса ларма ун чухне вăхăчĕ ытла та хĕрӳччĕ. Пур çĕрте те ĕçлекенсем — агитатор-пропагандистсем, комсомол организаторĕсем, уполномоченнăйсем кирлĕ пулнă. Совпартшкултан, Самарти пединститутран вĕренсе тухнă хыççăн Паймен аспирантурăна кĕрет. Вĕреннĕ хушăрах вăл ăçта кăна ĕçлемест. Комсомол райкомĕн секретарĕ, вăтам шкул учителĕ, Хĕрлĕ Çар командирĕсен комвузĕн преподавателĕ...

Пире вăл икĕ çул вĕрентрĕ. 1929—1930 çулсенче Паймен коммунист парти крайкомĕ хушнипе районсем тăрăх колхозсем организацилес ĕçпе çӳрет. Граждан вăрçи вăхăтĕнчи пек уççăн, куçа-куçăн мар пулсан та, каллех хаяр кĕрешӳ пырать. Кулаксем тĕттĕм кĕтессенче тапăнаççĕ, колхоз пурлăхĕсене вут тĕртсе çунтараççĕ... Ĕç хресченĕшĕн тепĕр чухне хресчен çыннийĕпе хăйĕнпе те кĕрешме тивет.

1930 çулта эпир, Самарти Чăваш шкулĕнче вĕрене кенсем, кам ăçта пĕлет, унта сапаланса пĕтрĕмĕр. В. Паймена эпĕ çав çулсенчен кайран та темиçе хут курнă, кĕнекисене иле-иле вуланă. Кашни тĕл пулмассерен вăл служба пусми тăрăх çӳлтен çӳле хăпарса пыратчĕ.

Крайра чăвашла тухса тăнă «Колхозник» хаçатăн редакторĕ. Вырăсла тухакан «Волжская новь» журналăн редколлеги членĕ, унтан — унăн редакторĕ. 1934—1938 çулсенче вара — Вăтам Атăл крайĕнчи писательсен союзĕн правлени председателĕ. Кăмăлĕ улшăнманччĕ Пайменăн. Пире, ăна çывăх пĕлнĕ çынсене, пĕр япала çеç хурлантаратчĕ. Ĕçлеме вăхăчĕ сахал юлнипе, унăн ĕç вырăнĕсем пысăкланнăçемĕн Паймен писатель çырнă кĕнекесем пĕчĕккĕленсе, çӳхелсе пыра пуçланăччĕ *.

Унтан ăна уйăрса кайрĕç те, 17 çул хушши ун çинчен пĕр сас-хура та илтĕнмерĕ. Анчах пурнăç тымарĕ Влас Захаровичăн çирĕп пулнă-мĕн, 1955 çулта вăл каллех пирĕн йыша килсе хутшăнчĕ, чавсисене тавăрсах ĕçлеме тытăнчĕ. Кĕçех «Калавсем» (чăвашла та вырăсла) тухрĕç. Чаплă «Кĕперне» хыврĕ...

В. Паймен маншăн яланах хаклă çын — учитель пулнă. Малтан вăл пире, ачасене, шкулта вĕрентрĕ. Çынсене, халăхсене, обществăна ăнланса илме пулăшрĕ. Унтан мĕнле пурăнмаллине хăй пурнăçĕпе кăтартса пачĕ. (Мĕнле йывăр килсен те хуçăлман вăл, хаярланман,

* Ку шухăшпа килĕшмесĕр, ман пата янă çырăвĕнче Влас Захарович çапла ӳпкелешсе çырать:

«Худ. обобщени» ку. Тĕрĕс мар. 1929—1931 çулсенче эп роман çырма тытăннăччĕ. Унăн хăшпĕр сыпăкĕсем («Анук айăпĕ» ятпа) пичетленсе тухнă, ыттисем çухалнă. Çав хушăрах пуçламăш шкулта вуламалли кĕнекесем (4 кĕнеке) çырнă. Вĕсенчен виççĕшĕ пичетленнĕ, тăваттăмăшĕ, Тĕпиздат хупăннипе, пичетленсе ĕлкĕреймерĕ. Алçыру çухалнă...

1935—1938 çулсенче (асăрха!):

1. «Колхозник» валли 7—8 калав, сăвăсем, очерксемпе статьясем нумай çырнă.

2. «Вăтам Атăл» альманах валли те çавах — калавсем, сăвăсем, статьясем çырнă.

3. «Нарспи» поэмăна пуçласа куçарнă. Кăшт пĕтерейменччĕ. Алçыру çухалнă.

4. «Трактор» альманахра пичетленнĕ.

5. Вырăсла калавсемпе статьясем çырнă.

6. Мускавра «Советский писатель» издательствăра вырăсла икĕ кĕнеке кăларнă: «А. М. Горький в Самаре» тата «Чапай».

7. Куйбышевра «Волжские песни» сборник тухрĕ. Вырăс, чăваш, мордва, тутар халăх юррисем. Вырăслисене пухса хатĕрленĕ çеç, ыттисене — куçарнă.

8. Чăвашла роман çырнă. Пĕтерес енне кайнăччĕ,— çухалчĕ.

Куратăн ĕнтĕ: «ĕç вырăнĕсем пысăкланнăçем» кĕнекисем çӳхелсе мар, хулăмланса пынă», тесе çырать Влас Захарович.

Килĕшетĕп. Ан тив, ку çыру манăн шухăшламасăр персе янă сăмахсене тӳрлетни вырăнне пултăр. Астумасăр тунă йăнăшшăн авторĕнчен каçару ыйтатăп. *Хв. Уяр.*

тата нумайрах пĕлекен пулса, çирĕпленсе тухнă. Çынсене тарăнраххăн куракан пулнă. Культурăллă этеме культурăсăрринчен уйăрса тăраканни — тӳсĕмлĕх те çителĕклĕ-мĕн унăн. Çирĕм çула яхăн аякра пурăнса та, амăш чĕлхине манман.) Халĕ ак мĕнле çырмаллине вĕрентет. Пайменăн икĕ кĕнекеллĕ «Кĕпер» романĕ никам романĕ пек те мар. Вăл хăй пĕр тĕнче, пĕр материк. Художник уçнă материк! Унта çутçанталăкран пуçласа çыннисем таранчченех йăлтах хăйне евĕр. Мăрсапай пек, Тайман Сахарĕпе Рамаш пек, Самарин пек этемсене пурнăç çулĕ çинче эпĕ те тĕл пулнă-тăр, анчах курма пĕлмен. Курсан та, ăнланса çитеймен. Тен, предубеждени тени те чăрмантарнă пуль. Паймен вĕсене курнă та асран каймасла ӳкерсе панă. Тепĕр кĕнекене вуланă чух вăл кĕнеке иккенне манаймастăн. «Кĕпер» пире, вулакансене, пурнăç хăвачĕпе çавăрса илет, хамăр тавралăха сăнаса пăхма вĕрентет, шухăша ярать...

*1967.*

## ШАВЛЫНЕ АСĂНСА

Пăх-халĕ, мĕн чухлĕ пурăнатăп иккен эп çут тĕнчере: Стихван Шавлы литературăра епле ĕçленине çеç мар, вăл унта мĕнле пырса кĕнине астăватăп. Ĕçне чарса лартса, юлташĕсенчен уйрăлса кайни те куç умĕнчех. Тен, икĕ ĕçĕ те çынсеннинчен урăхла пулнăран аса юлнă вĕсем? Ытти çынсем литературăра «сăмсаланма» тытăннине пӳрт алăкне уçса кĕнипе танлаштарсан, Шавлы палăрнине алăка ватса кĕни темелле пуль. Вăл хăйĕн малтанхи утăмĕсенех кĕрĕс-мерĕс пуснă. Пурне те курăнмалла та илтĕнмелле, пĕр хăйне пĕлнĕ пек. Ун пирки çырнă статьясемпе фельетонсенчен ытла вăл хăй шавланă. Самарта тухса тăракан чăвашла хаçат редакцийĕнче ĕç пӳлĕмĕн алăкĕ çинче ун сăнĕ çакăнса тăратчĕ.

1929—1932 çулсенче Шавлы Самар (халĕ Куйбышев) хулинче рабфакра, 1933—1936 çулсенче çавăнтах пединститутра вĕреннĕ. Пушă вăхăтсенче чăвашла «Колхозник» хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ. Сăвăсене кашниннчех сăнпа кăларма тăрăшатчĕ. Пичетленмелĕх вырăнĕ те пурччĕ ĕнтĕ. Хаçатсăр пуçне «Вăтам Атăл» ятлă альманах, тĕрлĕ сборниксем тухса тăратчĕç Самарта. Ра-

дио та пулăшнă поэтсене. Совет урамĕнчи Вак халăхсен клубĕнче литература каçĕсем ирттеретчĕç.

Çук, хăй çинчен чап сарма тăрăшнă тени тĕрĕс мар вăл. Хăюллă çын пулнă Шавлы, çавă кăна унта. Хăйĕн вăйне шаннă вăл. Хăйне, ыранхине, курса тăнă.

Тепри пур — ĕмĕр тăршшĕпе иккĕленсе пурăнать. Кашни кĕнекине, крепоçе çĕнсе илнĕ евĕр, çĕнсе илет. Мĕнчул çĕр сывăрмасăр ирттерет, мĕнчул вăй хурать уншăн.

Ĕçне пĕтерсен, савăнмалла пек ĕнтĕ. Анчах писатель каллех иккĕленет. Каллех крепость ун умĕнче. Пĕр кĕнекине çырса пăрахрăм, тепри çырăнмасан, мĕн тăвас тет.

Виличченех çавăн пек. Пĕрмай кĕрешӳ. Çĕнтерӳ çеç ялан пулмасть. Салма та кашни кашăках кĕмест-çке. Сана малалла утнă пек туйăнать, эс пĕр вырăнта тапăртатса тăратăн. Тепĕр чухне каялла ярса пусни те, вăхăтлăха путланса ларни те пулать...

Пуçна каçăртса çӳрейĕн-и ун пек чухне?

Кам мĕнле пулĕ те, Шавлы — çӳретчĕ. Вăл нихçан та хăйĕн вăйне ĕненме пăрахмастчĕ пулмалла. Е, иккĕленсен те, ăна пытарма пĕлетчĕ пуль. Каярахпа вырăс писателĕсем умĕнче куркаланă та эп ăна, вăл, çӳллĕ те кĕрнеклĕскер, салтаксем умĕнчи командир пек пулмасан та, командирсем хушшинчи командир пек ирĕккĕн тăратчĕ. Хăй татах ӳсессине пĕлекен офицер майлă. Мăн кăмăллă. Хăюллă.

Лешсем вара хăйсем сисмесĕрех пирĕн Шавлы çине çӳлелле пăхса калаçма тытăнатчĕç. Унпа туслашнине хăйсемшĕн чыс тесе шутлатчĕç. Кĕнекисене çыра-çыра паратчĕç. Шавлыне эп Илья Сельвинскипе, Сергей Островойпа, Василий Федоровпа çыру çӳретнине пĕлетĕп.

Çав мăнкăмăллăхах, кашни тĕмескене асăрхасшăн пулманниех Шавлыне тăшмансем тупма та пулăшатчĕ.

Çапла, сăввисен формипе чĕлхи те çынсенни пек марччĕ ун. Хăлтă та тăрмаланчăк пек туйăнатчĕç. Кĕреплепе тураман утă çуни евĕрлĕ.

Сăвă форми кăна-и унта! Псевдонимне те грамматика законне пăхăнмасăр çыратчĕ вăл. Шавли тес вырăнне — Шавлы.

Халь ĕнтĕ вăл мĕнле вилнине илер. Пĕр уйăх маларах çеç эп ăна кĕнеке издательствин пусми çинче куртăм. Канма чарăннăскер, пĕр редакторпа Спиридон Ми-

хайлов пирки хĕрсех калаçса тăратчĕ. (Вăл вăхăтра Шавлын «Тăван Атăл» журналта çĕнĕ сăвăсен ярăмĕпе критикăллă статйи пичетленнĕччĕ.)

Эпир унпа пĕр енче пурăнаттăмăр та, тепĕр кун эп ăна Гузовский урамĕнче тĕл пултăм. Степан Антонович манран статйипе сăвисем пирки ыйтрĕ, вуласа ĕлкĕреймерĕн-и-ха, терĕ.

Пĕлтĕр-виçĕмçулхипе танлаштарсан, кăштах хулăнланнăччĕ ĕнтĕ вăл, васкамасăр, сулăмлăн çӳреме хăнăхнăччĕ, хăй çаплах яштакаччĕ-ха. Кăрнатир, тетчĕ ун пеккисене Шавлы.

Çынсемпе тăрăхласа калаçаканскерĕн темшĕн пичĕ тĕксĕмленчĕ.

— Кăçал тата ăçта çитсе курмалли юлнă-ха сан? — терĕ вăл кулма хăтланса. Ăшĕнче хăйĕн кулас шухăш марри сисĕнетчĕ. Ыйтма та вăл, пĕрне шухăшласа, теприне ыйтрĕ пулас.

«Кăмăлĕ пăсăк», терĕм эп. Е ĕçлесе ывăннă-и? Вăл, хресченле, ир-ирех тăрса ĕçлекеннисенчен пĕриччĕ вĕт. Çирĕп дисциплинăччĕ ун. Çул çӳреме те юрататчĕ Шавлы. Хăй, анатри чăваш, кашнинчех тенĕ пек республика тулашĕнчи чăвашсем патне çул тытатчĕ. Ыттисем çӳренине те сăнасах тăратчĕ.

«Эсир Самар таврашĕнче çĕр çĕмĕрсе çӳрени çинчен хаçатра вуларăм. Паймене кĕрсе куртăр-и?» — тет вăл пĕр çырăвĕнче 1970 çулта.

— Кăçал ниçтах та каяймастăп пулĕ,— терĕм эп.— Ĕç пуçтарăнса ларчĕ...

— Çул та ĕçех.

— Парăм нумай. Малтан çавсемпе татăлмалла.

— Ма пырса лармастăн пĕрре? Кӳршĕсем вĕт эпир,— терĕ Шавлы, сăмах çукран сăмах тунă евĕр. Анчах сисрĕм: темиçе хут та шухăшланине каларĕ вăл.

— Пырăп,— терĕм эпĕ шантарса. Чăнах та кайса ларасшăнччĕ хам. Калаçмалли те пурччĕ. Анчах пĕр кун иртрĕ те иккĕ иртрĕ... Ĕмĕр пурăнас çынсем пек, паян тумалли ĕçе эпир çапла ырана хăварса пыратпăр. Кайран пăхăсăн — ним туса та тӳрлетме çук кая пулать...

Шавлы килнелле утрĕ. Эп ăна хыçалтан ăмсанса пăхса юлтăм. Пурнăçра чылай енчен ман идеалччĕ вăл...

Çавăн хыççăн нумай та иртмерĕ — выртнă та вилсе кайнă Шавлы. Салтак пек пурăнчĕ вăл, мир салтакĕ, салтак пек ӳксе вилчĕ. Тухтăрсем каланă тăрăх, Стихван Шавлы пурнăç тăршшĕпех чирлĕ пулнă-мĕн. Анчах

çынсен умĕнче нихçан та палăртман ăна. Пухусенче-мĕнсенче уçă чӳрече çывăхне ларма хăранинчен е ӳсĕр-келенинчен çеç эпир Шавлы тахçан ӳпке чирĕпе аптранине аса илеттĕмĕр те... ун çинчен манаттăмăр. Мĕншĕн тесен ытла та сывăччĕ вăл пур енчен те. Оптимистчĕ.

Тата темиçе уйрăмлăх пирки. Ун таврашĕнче çивĕч япаласем нумайччĕ. Пĕчĕк куç харшийĕ чанк тăрса çӳретчĕ. «Алли» (почеркĕ) чăр-чарччĕ. Саспаллийĕсем чĕрĕп пек йĕплĕччĕ. Сăмахне тӳррипе кастарма юрататчĕ вăл. Йăпăлтатма пĕлместчĕ. Çавăнпа юлташсем сахалччĕ ун. Çывăх тусĕсем, тен, пулман та пуль. Эп пĕлеккеннисем çукчĕ. Çынсемпе ытла çывăхланас мар тенĕ пекех, пуринпе те тăрăхласа калаçатчĕ вăл. Эрех те ĕçменпе пĕрех.

Пăшăлтатса калаçнине пĕрре те курман эп ăна. Юрланине те илтмен.

Ун пек япаласенчен «çӳлтеччĕ» пулмалла вăл.

Çулла Атăл леш енче Кувшинкăра чух Шавлы И. С. Максимов-Кошкинскипе е С. М. Лашманпа сехечĕ-сехечĕпе калаçса çӳретчĕ вара. Тĕрĕссипе лешсем тем кала-кала паратчĕç, Степан Антонович итлетчĕ.

Хăй килĕштерекен çынсемпе кăмăлĕ лайăхчĕ ун. Хуйхи-суйхине вăл пĕччен тӳссе ирттеретчĕ. Çын инкекне вара аякранах сисетчĕ. Тепри ун пек чухне санран аяккалла тарма тăрăшать, курсан та курмăш пулать. Шавлы хăй юнашарринe пĕлтерме васкатчĕ.

Акă унăн пĕр çырăвĕ-саламĕ:

«Хĕветĕр! Г...ăн тăвакă сăввине ярса паратăп. Хам валли çаптарнă чух сан валли те хуртартăм-ха. Унашкал япаласене эс хăв та ахаль çĕртсе ан вырттар...

Çак çын сăввисене пĕтĕм вырăс поэчĕ пăхмасăр калама пĕлет. Вăл шутра çак чăваш та. С. А. Шавлы. 13.8.-1970».

Те иксĕмĕр икĕ тĕрлĕ çырнипе, эпир çывăхах пулман унпа. Анчах ют та марччĕ. Пĕрне-пĕри кĕнекесем парса илеттĕмĕр. Пĕр-пĕрин ĕçне туйса тăнă ĕнтĕ. Пĕр-пĕринпе урлă пуласран сыхланнă.

Эпĕ ун пирки ырă шухăшланисĕр пуçне ăна ним енчен те усă кӳреймен пуль. Шавлы мана темиçе те пулăшнă. Инкеке лексен хӳтĕлеме тăрăшнă. Ĕçлеме хавхалантарнă.

*1977.*

# ВЫРĂС ÇЫРАВÇИСЕМ

## ЧĂВАШ ÇЕРШЫВĔНЧЕН ТУХНĂ ПОЭТ-РАДИЩЕВЕЦ

«Питĕрпуртан Мускава кайни» кĕнекене çырнăшăн Иккĕмĕш Кĕтерне патша А. Н. Радищева çакса вĕлермелле тунă пулнă. Хăйне çĕр кăвапи тесе шутлакан патша тĕлĕнсе кайнă: теменле çыруçă Радищев ăна вырăнтан кăларса пăрахма хушать, халăха улпутсене хирĕç тăма вĕрентет, Российăри йĕркесĕрлĕхсем çинчен çырать! Кам вăл — ун пек хăюллă çын? Çыруçă? Писатель? Е вăл власть кам аллинчине манса кайнă-и? Çакса вĕлерес ăна! Асаплантарас! Курччăр патша мĕн тума пултарнине! Ыттисем чĕтресе тăччăр. Анчах... вăл, патша ĕнтĕ, «гуманист-çке-ха»? Вăл çын тивĕçлĕхĕ çинчен калаçать. Францири просветительсемпе çыру çӳретет. Вăл — «нумай вĕреннĕ çын», «ăслă çын», «аслă патша». Тен, апла ăна, Радищева, чĕрĕ хăварсан та пырĕ? Мĕншĕн çынна вĕлерекен патша ятне илтес? Иккĕмĕш Кĕтерне приговорне çырсан уйăх çурăран ăна улăштарнă та Радищева вунă çуллăха Çĕпĕре каторгăна ăсатмалла тунă. Халиччен Çĕпĕртен кам чĕррĕн таврăнни пур? Никам та таврăнман! Патша Радищева чĕррĕн хăварать, çав вăхăтрах ăна... Çĕпĕре ярса вĕлерет.

Çук, Радищев хăраса ӳкмен: вăл парăнман. Çирĕп писатель-революционер Россия ирĕке тухасса шанса тăнă, ун çинчен ĕмĕтленнĕ, уншăн кĕрешнĕ. Гражданин-патриот, хăюллă çын, Радищев хăйне вĕлермелле тусан та, каторгăна кайнă чухне те — ĕлĕк мĕнле пулнă — çаплипех юлнă.

Тобольск хули урлă иртсе кайнă чухне пĕр çын унран вăл мĕнле çын иккенне ыйтсан, Радищев ăна хирĕç сăвăпа çапла хуравланă:

Ты хочешь знать: кто я? что я? куда я еду? —
Я тот же, что и был и буду весь мой век:

Не скот, не дерево, не раб, но человек!
Дорогу проложить, где не бывало следу,
Для борзых смельчаков и в прозе и в стихах,
Чувствительным сердцам и истине я в страх
В острог Илимский еду.

Çула тухсан ик уйӑхран, 1790-мӗш çулхи хура кӗркунне, ӗлӗкхилле — чӳк уйӑхӗн малтанхи кунӗсенче, Радищев Атӑлпа Шупашкара килсе çитнӗ. Йӗри-тавра армутиллӗ хура уйсем сарӑлса выртнӑ, кӗрхи хура Атӑл шавланӑ. Çӑра вӑрмансем, шӑн çӗр, касса вӗрекен сивӗ çил те çӑпата сутакан çӗтӗк-çатӑк чӑвашсем... Умра — вӗççӗр Çӗпӗр çулӗ пулнӑ, юнашарах — хӗçпӑшаллӑ жандармсем... Қашни ярса пусмассеренех шӑйрӑлнӑ урисем ыратнӑ Радищевӑн.

Çыхса лартнӑ Прометей ассӑн сывланӑ та чӑваш пӳрчӗсене кӗре-кӗре тухнӑ, çынсемпе тӗл пулса калаçнӑ.

«...Чӑвашсем ытларах варсемпе лупашкасенче пурӑнаççӗ», тесе çырса хурать вӑл шӑнса кӳтнӗ аллипе çыру кӗнеки çине.

Куславкка тӗлӗнче çӗнӗ сӑнавсем хутшӑнаççӗ.

«...çӳллӗ çыран тӑрринче — ял, унтах улпут çурчӗ курӑнать, аялта çырма юхса выртать; ун çийӗпе пӗр çухрӑмра тырӑ кӗлечӗсем курӑнаççӗ».

Радищев N B * лартать те çапла çырса хурать:

«Вӗсене (кӗлетсене.— *Хв. У.*) сывӑхри чӑвашсемпе çармӑссем тӑваççӗ».

Унтан каллех N B лартать те çапла çырать:

«Ку простяксене (çав чӑвашсемпе çармӑссене — ахаль çынсене.— *Хв. У.*) улталаççӗ».

Тӗнчи çапла пулнӑ: улталанӑ чӑвашсене, çакса вӗлернӗ чӑвашсене, тӗрмесемпе касаматсене хупа-хупа лартнӑ чӑвашсене.

Пӗр чӑвашсене çеç те мар, вырӑссене те, мӑкшӑсемпе пушкӑртсене те тата ытти халӑхсене те пӗр пекех асаплантарнӑ, тӗрмесене хупнӑ, ун чухне тӗнче хӗрри пекех инçе туйӑннӑ Çӗпӗре сӑнчӑрласа ӑсатнӑ. Тытса хупнӑ е çакса вӗлернӗ чухне кам мӗнле халӑхран тухнине пӑхса тӑман, хупнӑ, çакнӑ, вӗлернӗ, ӑсатнӑ,— ӗç те пӗтнӗ. Вӗсен пурин те пӗр евӗрлӗ «айӑп» пулнӑ: вӗсем, çав тӗрмере ларнӑ, пуçиле кайнӑ, вӑхӑтсӑр вилнӗ çын-

---

* Nota bene — латин сӑмахӗсем — асра тытма, асӑрхама, астуса тӑма, тени пулать.

сем, яланах ыттисенчен хăюллăрах, ыттисенчен ăслăрах, ыттисенчен харсăртарах пулнă. Улпут-хуçасен пусмăрне тӳсеймен чăвашпа вырăс пĕр такан çинче çакăнса тăнине А. С. Пушкин «Капитан хĕрĕ» повеçĕнче кăтартса парать...

Кĕтерне патша Радищева чĕрĕллех шăтăка чиксе, унăн ĕçне кăна мар, ятне те манăçа кăларасшăн пулнă. Анчах ку ĕç патша ирĕкĕнчен килмен. Радищев хăй кĕнекинче хускатнă ыйтусем — патша тиранине сирсе пăрахасси, крепостла йĕркене пĕтересси, этем тивĕçне кирлĕ вырăна лартасси — вăл вăхăтри малта пыракан çынсене пурне те интереслентернĕ, шухăшлаттарнă. Вăл çынсенчен вара пĕр Радищев кăна хăйĕн сăмахне уççăн та хăюллăн каласа панă.

Радищев çапла çырнă: «Малейшая искра, падшая на горячее вещество, произведет пожар велий... Таково же есть свойство разума человеческого. Едва один возмог, осмелился, дерзнул изъятися из толпы, как вся окрестность согревается его огнем и, яко железные пылинки, летят прилепитися к мощному магниту».

Пушар хыптаракан хĕлхем те, патша пусмăрне хирĕç кĕрешес текенсене хăй еннелле туртса тăракан «хăватлă магнит» та Радищев хăй пулнă.

XIX-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнчи пур малта пыракан çамрăксемшĕн унăн сасси хавхалантарса тăракан вăй, çул кăтартса тăракан çутă пулнă.

Радищев шухăшне ырлакан, унăн ĕçне малалла туса пырас текен çамрăксем — писательсем, художниксем, ученăйсем — 1801-мĕш çулта словесноçа, наукăсене, художествăсене юратакансен Ирĕк обществи текен вăрттăн ушкăна пĕрлешнĕ. (Тепĕр икĕ çултан вĕсем уççăнах ĕçлеме тытăннă.) Обществăн хăйĕн уставĕ пулнă, Унта тăнă писательсем, паллах, пурте пĕр шухăшлă пулман. Вĕсенчен пĕрисем (сăмахран, В. Попугаев) халăх çилли патша тронне сирпĕтсе антарасси çинчен çырма та хăраман, теприсем (Д. Языков) «вăйлисемпе» мирлĕн пурăнма тăрăшнă.

Ирĕк обществăн паллăрах членĕсенчен В. Попугаева, И. Борна, И. Пнина, А. Измайлова, А. Мерзлякова, Н. Арцыбашева, К. Батюшкова, С. Москотильникова, Г. Каменева, А. Востокова асăнма тивĕç. А. Н. Радищевăн икĕ ывăлĕ — Николайпа Василий Радищевсем те Ирĕк обществăра тăнă, сăвăçсем пулнă.

Обществăн тăватă членĕ: С. Москотильников, Г. Каменев, Н. Арцыбашев, И. Чернявский ĕлĕкхи Хусан кĕпĕрнинче пурăннă. Вĕсенчен пĕри — историк тата сăвăç Николай Сергеевич Арцыбашев хальхи Чăваш республикине кĕнĕ ялта çуралса ӳснĕ, унтах ĕçлесе пурăннă. Вăл 1773 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнче хальхи Çĕрпӳ районĕнчи Мамино ялĕнче çуралнă. Вунпĕр çула çитсен, тăлăха юлнă. Хăйĕн тетĕшĕ П. Я. Чернявский пулăшнипе Питĕрти пансиона вĕренме кĕнĕ. Ăна пĕтерсе тухсан, 1-мĕш Павел патшана ларичченех, çав хуларах çар службинче тăнă. Çĕнĕ патша темĕнле айăпшăн Арцыбашева Хусана куçарттарнă. Арцыбашев вара кĕçех отставкăна тухнă та Çĕрпӳ хулине таврăннă. Вăл пуçĕпех литература ĕçне пикенет. Вăхăтран вăхăта Хусана кайса килет, сайра пĕрре Питĕре çиткелет. Арцыбашев мĕн хăй виличченех (1841 ç.) Етĕрне уездĕнчи училищăн хисеплĕ смотрителĕ пулса пурăнать. Вăл чухăнтарах çĕр улпучĕн çемйинчен тухнă пулĕ. 1823-мĕш çулта ун чухне Ирĕк обществăн президенчĕ пулнă А. Е. Измайлов писатель патне вăл çапла çырать:

«...имея весьма умеренное состояние и многочисленное семейство, лишен я средств предпринимать ежегодные путешествия из Цывильска в Санктпетербург, для присутствования в почтеннейшем Обществе словесности, наук и художеств...»

Арцыбашев пуринчен ытла историллĕ ĕçĕсемпе паллă. Вăл 1802 çултах летопиçсемпе авалхи ытти документсем тăрăх Российăри пур паллă ĕçсен пĕтĕмĕшле сводне çырма ĕмĕтленет. Вăтăр çул хушши ĕçлесе, Арцыбашев ăна 16-мĕш ĕмĕр вĕçне çитерет. 1836—1843 çулсенче çав ĕçĕн виçĕ томĕ Мускавра пичетленсе тухать. («Россия çинчен каласа панин» çырса пĕтереймен 4-мĕш томĕ алçыру халлĕнех юлнă.) 1809 çулта Арцыбашев «О первобытной России и ее жителях» тата 1811 çулта «Приступ к повести о русских» ятлă икĕ пысăк кĕнеке кăларнă.

1822—1832 çулсенче вăл тĕрлĕ хаçатсемпе журналсенче Карамзин историке хирĕçлесе çырнă статьясем нумай пичетленĕ.

Карамзина Арцыбашев вырăс историне поэтла «хитрелетсе», патшасене килĕшӳллĕ улăштарса кăтартнăшăн айăплать.

«Резкая и принципиальная критика Арцыбашева много способствовала дискредитации... реакционной

исторической концепции Карамзина», тет В. Орлов профессор.

Çамрăк чухне Арцыбашев философиллĕ одăсем те, проза та çырнă. Прозăпа çырнă произведенийĕсенчен унăн «Лепа» тата «Рогнеда» ятлă повеçĕсене асăнма пулать.

Глас правды, разума священной,
Твердись всегда в душе моей! —

тет вăл «Случай» ятлă одинче.

Виновен ли создатель света,
Что гордость здесь, корысть, обман;
Что чтут пророком Магомета,
На троне царствует тиран? —

тет поэт тепĕр çĕрте, Российăри ĕçсене аса илсе.

Арцыбашев революционер пулман, таланчĕпе те хăй сума сăвакан Радищевпа танлашма пултарайман. Çапах та историре те, литературăра та, пуринчен ытла — истори наукинче вăл самаях палăрмалла йĕр хăварнă. А. Н. Радищева аса илсен, эпир Радищев çулĕпе утма тăрăшнă хамăр янташа та ырă кăмăлпа аса илетпĕр.

*1950.*

## Н. Г. ГАРИН-МИХАЙЛОВСКИЙ ÇИНЧЕН

Николай Георгиевич Михайловский (Гарин — унăн литературăри псевдонимĕ) 1852 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнче Питĕрте çар çынни çемйинче çуралнă. Ача чухнехи кунçулне кăнтăрта, шавлă Одесса хулинче пурăнса ирттернĕ. Вунтăххăра кайсан, 1871 çулта, Питĕрти университета вĕренме кĕрет. Мĕн пĕчĕкренех математикăна юратаканскер, кĕçех вара çул-йĕр инженерĕсен институтне куçать.

Н. Г. Гарин-Михайловский хăй ĕмĕрĕ тăршшĕнче нумай çĕре çитсе курнă, тĕрлĕ кĕпĕрнесенчи, тĕрлĕ çĕршывсенчи халăхсемпе паллашса, вĕсен пурнăçне, йăлисене сăнанă. Этнограф пек, аллине хутпа кăранташ тытса мар, хăçан та пулин писатель пулма ĕмĕтленнипе те мар, тĕрлĕ çĕршывсене кайма тивнĕрен, çыннисем куçа

кураннаран сăнанă. Кĕнекесем çырма тытăнасси те вара чапшăн çуннинчен килмен, çук! «Материалсем», сăнавсем, курни-илтнисем ытла нумайланса кайсан, Гарин ирĕксĕрех çырма тытăннă, мĕншĕн тесен ĕнтĕ вăл текех çырмасăр тăма та пултарайман. Канăçсăр та талантлă. вĕри кăмăллă çын, кункаçа темиçе тĕрлĕ ĕç тума пултараканскер, Гарин-Михайловский пурнăçа аякран пăхса тăракан сăнавçă мар, яланах пикенсе ĕçлекен çын пулнă. Çул-йĕр институтне те вăл пĕр математикăна юратнипе кăна куçнă тени пачах йăнăш пулнă пулĕччĕ.

Институтра вĕреннĕ çулсенче Гарин Бендер хулине каять, çĕнĕрен хывмалли чугун çул планне тĕрĕсленĕ çĕрте рабочире ĕçлет. Институт пĕтерсен, Турципе Россия вăрçнă çул (1877 ç.), чугун çул инженерĕ пулса, тӳрех çапăçури çара Болгарие тухса каять.

1853 çулти пекех, 2-мĕш Александр патша Хура тинĕсе Вăтаçĕр тинĕсĕпе çыхăнтаракан проливсене ку хутра та туртса илеймест. Турципе тунă мирлĕ договор тăрăх, Хура тинĕсри пысăк порт — Батум — Российăн пулать. Çак вăрçăра вырăс халăхĕ Балкан çурутравĕнче пурăнакан славян халăхĕсене (болгарсене, сербсене т. ыт. те), çавнашкалах Румыние те нумай ĕмĕре пынă Турци пусмăрĕнчен хăтарать.

Вăрçă пĕтсен, çамрăк инженера Бессарабие Бендерпа Галац хушшине чугун çул хывма яраççĕ. 1880 çулта вăл — Батумра. Гарин подрядчиксемпе участок начальникĕсем патшалăх укçине пинĕ-пинĕпе çаратнине, взяткăсем илнине курать. Кашкăрпа пурăнакан хăйĕн те кашкăрла уламалла, тет вырăс халăх сăмахĕ. Гарин унпа килĕшмест, вăл кĕрешме хăтланса пăхать. Анчах кĕрешӳре хăй тĕллĕн çеç çĕнтерес çуккине курса, тӳрĕ кăмăллă инженер ĕçрен тухса каять.

«Çавнашкал хăтланакан çынсемпе пĕрле ĕçлесе пурăнма манăн халăм çитмерĕ»,— тесе çырать вăл хăйĕн пĕр произведенийĕнче.

Малтанхи вăхăтсенче народниксен идейипе интересленнĕ Гарин Самар кĕпĕрнинче Гундуровка ятлă имени туянать. (Вăл ял хальхи Куйбышев облаçĕн Сергиевск районне кĕрет.) Инженер хĕрсех çĕр ĕçне тытăнать: уйне нумай пусса куçарать, хаклă йышши пахчаçимĕçсем: тырпул, мăкăнь, ясмăк, тапак, хĕвелçаврăнăшĕ актарать.

«Ялта эпир икĕ ĕмĕтпе пурăнтăмăр: хамăр пурнăçа

юсасси тата хамăр тавра пурăнакан хресченсен пурнăç условийĕсене лайăхлатасси çинчен шухăшларăмăр», тесе çырать Н. Г. Гарин «Темиçе çул ял хушшинче» калавра. Вăл хресчен ачисене вĕрентме шкул уçать, килĕнчех фельдшер пункчĕ тăвать, пур ĕçре те чухăнсен интересĕсене хӳтĕлет. Ĕлĕк кашни ĕçшĕнех кулаксене пуççапакан чухăнсемпе вăтамсем хирти пур ĕçсене те пĕрлешсе тума тытăнаççĕ: пĕрле тырă акаççĕ, пĕрле вырса авăн çапаççĕ те пухнă тырра килĕрен валеçеççĕ. Çак ĕçе хирĕç пыракан кулаксене Гарин ялтан хăваласа ярать. Тарăхса çитнĕ куштансем ăна хăйне тавăраççĕ: унăн именине тăвата хут вут тĕртсе çунтараççĕ. Хресченсен пурнăçĕ те лайăхланмасть, кулаксем çĕкленнĕçем çĕкленеççĕ, чухăнĕсем ытларах çараланаççĕ.

Пĕр пус укçасăр, кил-çуртсăр тăрса юлнă инженер каллех службăна кĕрет. Ăна Уфапа Златоуст хушшинче чугун çул хывма хушаççĕ. Тепĕр çул Гарин Хусанпа Малмыж тăрăхĕнче, унтан — аслă Çĕпĕр çулĕ çинче. Вăл Иртыш тăрăх тухать; Вятка, Кострома, Волынь кĕпĕрнисенче ĕçлет.

1896 çулта, Кротовка — Сергиевские Серные воды чугун çул линине туса пĕтерсен, Николай Георгиевич тĕнче тавра çул çӳреме тухса каять. Çĕпĕр, Маньчжури, Корея урлă каçса, Порт-Артура çитет. Шанхай, Япони, Гавай утравĕсем, Америка урлă каçса, Европăна таврăнать.

1904 çулта, Японипе вăрçă пуçлансан, 52 çулхи Гарин, çар инженерĕ пулса, Инçет Хĕвелтухăçне çапăçури çара тухса каять. Фронтран хаçатсене çырса тăнă очеркĕсемпе корреспонденцийĕсем кайран икĕ томлă кĕнеке пулса тухаççĕ.

1906 çулта Гарин-Михайловский большевиксем кăларакан «Вестник жизни» журналта ĕçлеме тытăнать, ăна укçа-тенкĕ парса пулăшать. Кивĕ стильпе ноябрĕн 27-мĕшĕнче, редакцире канашлура ларнă чух, аллă тăваттăри Николай Георгиевич сасартăк вилсе каять.

Н. Г. Гарин-Михайловский пысăк талантлă та çав тери нумай пĕлекен çын пулнă. Чаплă инженер-ученăй, инженер-практик, ăста агроном, мелиоратор, çулçӳревçĕ, публицист, писатель... Вăл Российăри пур хуласене те чугун çулсемпе çыхăнтарма ĕмĕтленнĕ. Ялхуçалăхĕнче çĕнĕ йышши культурăсем ĕрчетме тăрăшнă, усă паракан ялхуçалăхĕшĕн кĕрешнĕ. Хаçатсенче вăл Атăл таврашĕнчи çĕршыва кăнтăртан вĕрекен вĕри çилсенчен

хӳтӗлемелли вӑрман йӑрӑмӗсем лартма сӗннӗ; Атӑла тарӑнлатасси ҫинчен шухӑшланӑ.

«Ӗҫре вӑл поэт пулнӑ, практика еннелле, ӗҫ еннелле туртӑнакан ҫын пулнӑ»,— тет Гарин-Михайловский ҫинчен А. М. Горький.

Писателе пӗлекен ҫынсем вӑл нумай ӗҫлеме пултарнинчен тӗлӗнеҫҫӗ. Ӗҫ тесен Гарин чунне панӑ. Талӑкне виҫӗ-тӑватӑ сехетрен ытла вӑл нихҫан та ҫывӑрман, ытти ҫирӗм сехечӗ вара яланах ӗҫре иртнӗ. Ӗҫ унӑн пурнӑҫри ӗмӗчӗ, чи пысӑк савӑнӑҫӗ, телейӗ пулнӑ.

Вӑл хӑйӗн произведенийӗсенче те ӗҫре телей тупнӑ ҫынсене ӑшшӑн кӑтартса парать. («Ицкӑпа Давыдка», «Гений», «Вариант» т. ыт. те.)

Хӗрӗхе кайсан, 1892 ҫулта Гаринӑн пирвайхи произведенийӗ — «Тӗмӑн ача чухнехи пурнӑҫӗ» ятлӑ автобиографиллӗ повесть пичетленсе тухать. Вулакансем ку повеҫе питӗ те хаваслӑн кӗтсе илеҫҫӗ. Критика вырӑс литературине «ҫӗнӗ те ҫав тери вӑйлӑ талант» хутшӑннине палӑртать.

1892—1895 ҫулсенче Гаринӑн умлӑ-хыҫлах «Гимназистсем», «Студентсем» ятлӑ автобиографиллӗ повеҫсем («Детство Тӗмы» кӗнекен малалли пайӗсем), «Ицкӑпа Давыдка», «Қаҫ пулас умӗн», «Ҫул ҫинче», «Станцӑра», «Бурлаксем», «Кӗске пурнӑҫ», «Ялти ӳкерчӗксем», «Темиҫе ҫул ял хушшинче» повеҫӗсемпе калавӗсем пичетленсе тухаҫҫӗ. Хаҫатсенче вӑл Российӑри чугун ҫулсем хывас ӗҫе йӳнетесси ҫинчен ҫырать, ҫӗнӗ ҫул проекчӗсем туса хатӗрлет, вӗсене вырӑнсене кая-кая тӗрӗслет.

1896 ҫулхи кӗркунне Гарин марксистсен хаҫатне «Самарский Вестника» ӗҫлеме куҫать те унӑн литература пайне ертсе пырать, ӑна кӑларма укҫа парса пулӑшса тӑрать.

Корейӑра чухне, служба ӗҫӗсене туса пынипе пӗрлех, Гарин Корея халӑхӗн юмахӗсене 100 юмах ҫырса илет, дневник ҫырса пырать. Гарин дневникӗсем вырӑспа Корея халӑхӗсем хушшинчи туслӑх ҫирӗпленсе пынине кӑтартса параҫҫӗ.

«Вырӑс ячӗ Корейӑра чи таса та хисеплӗ ят,— тет Гарина Ыйчжу ҫынни.— Раҫҫей пире пит нумай пулӑшнӑ... Вырӑс пирӗншӗн чи хаклӑ хӑна».

Литературӑра Гарин 10 ҫул ытларах ҫеҫ ӗҫленӗ. Яланах таҫта васкаканскер, хӑйӗн произведенийӗсене вӑл ҫул ҫинче, вагонта, хресчен пӳртӗнче е сивӗ ҫӗртех, тулта, ҫырнӑ. Унӑн почеркне сайра ҫын кӑна вулама

пултарнӑ. Ҫырасса та вара нумай чухне кӑранташпа тӗрлӗ хут татӑкӗсем ҫине, афишӑн тепӗр енне, телеграф бланкисем ҫине ҫырнӑ. Калавӑн пуҫламӑшне вӑл редакцине пӗр станцӑран, вӗҫне тепринчен ярса панӑ. Кӗҫех редакцине телеграммӑсем пыма тытӑннӑ: иккӗмӗш абзаца улӑштармалла, ҫӗнӗ сыпӑк кӗртсе лартмалла, вӗҫне кӗскетмелле...

Гарин ҫынсемпе хӑвӑрт туслашма пултарнӑ, калаҫма ӑста пӗлнӗ («тепӗр чухне вӑл хӑй ҫырнисенчен те хитререх каласа паратчӗ»,— тет ун ҫинчен А. М. Горький), уҫӑ кӑмӑллӑ та япшар вырӑс ҫынни пулнӑ. Паллакан ҫынсене хаклӑ парнесем пама юратнӑ. Кам та пулин унтан укҫа ыйтсан, вӑл хӑйне пӗр пус хӑвармиччен парса пӗтернӗ.

«Эп шав хӗрхенетӗп сире, улпутӑмӑр,— тет ӑна «В сутолоке провинциальной жизни» калаври «пурӑнма пӗлекен» Владимир лавҫӑ,— чӑнах, ара: пӗтӗм пурлӑхӑра валеҫсе, салатса пӗтерсен, ачӑрсем валли мӗн хӑварӑр? Мӗнпе асӑнӗҫ вӗсем сире?»

Горькипе Короленкӑн, Мамин-Сибирякпа Купринӑн ҫывӑх тусӗ пулнӑ Н. Г. Гарин-Михайловский пурнӑҫра яланах чӑнлӑха шыракансем еннелле туртӑннӑ, рабочи класӑн революцилле ӳсӗмне кӑмӑлласа сӑнанӑ, вилес умӗнхи ҫулсенче вара тӳрремӗнех марксистсен органӗнче ӗҫлеме пуҫланӑ.

«Ӑна Маркс вӗрентӗвӗн активлӑхӗ илӗртнӗ»,— тет Гарин ҫинчен Алексей Максимович Горький.

Николай Георгиевич пуласси ҫинчен ӗмӗтленме юратнӑ, уншӑн тӑрӑшнӑ: «Телейлӗ ҫӗршыв — Россия! Мӗн чухлӗ унта интереслӗ ӗҫ, юмахри пек чаплӑ ӗҫсем тумалли майсем, кӑткӑс задачӑсем! Нихҫан никама ӑмсанман, анчах пуласлӑх ҫыннисене — пирӗн хыҫҫӑн пӗр вӑтӑр, хӗрӗх ҫултан пурӑнас ҫынсене — ӑмсанатӑп»,— тенӗ Гарин.

«Тӗнчене ҫӗнетсе улӑштармалли Маркс планӗ ӑна хӑйӗн анлӑшӗпе савӑнтарнӑ, пулас пурнӑҫра ӑна класлӑ патшалӑх пусмӑрӗнчен ирӗке тухнӑ мӗнпур этемлӗх пӗрлешсе ӗҫлесси туйӑннӑ» *.

Н. Г. Гарин-Михайловскин «Тӗмӑн ача чухнехи пурнӑҫӗ», «Гимназистсем», «Студентсем», «Инженерсем» ятлӑ повеҫӗсене, тӗнче тавра ҫӳренӗ чух ҫырнӑ дневникӗсемпе хаклӑ йышши чулсенчен эрешлесе гунӑ пек

---

* А. М. Горький. Н. Г. Гарин-Михайловские аса илни.

йӑлкӑшакан «Корея юмахӗсене», калаҫӗсемпе очеркӗсене Совет Союзӗнче те, ют ҫӗршывсенче те нумай-нумай миллион ҫын савӑнса вулать. Вӑл яланах хӑй ҫывӑх пӗлекен пурнӑҫа, курса ҫӳренӗ вырӑнсене, хӑй тӳссе ирттернӗ ӑпаласене сӑнласа парать. Гарин ҫырнине вуланӑ чух куҫ умне чӗп-чӗрӗ сӑнсем тухса тӑраҫҫӗ. Унӑн ҫырулӑх меслечӗсем те вара хӑйне евӗр: предложенийӗсем нумай чухне — кӗске те вирлӗ, телеграфпа пӗлтерекен хыпар пек янӑраҫҫӗ.

Гарин Российӑри вак халӑхсем патша саманинче мӗнле йывӑр пусмӑр тӳссе пурӑннине курнӑ. Вӑл хӑйӗн чылай произведенийӗсенче украинецсен, белоруссен, чӑвашсен асаплӑ шӑпине кӑтартса парать. Уйрӑммӑнах вӑл чӑвашсем ҫинчен нумай ҫырнӑ. Унӑн Гундуровкӑри именийӗнчен инҫе мар Хурамал Этелек, Кив Якаль, Ҫӗнӗ Якаль, Сухари-Матак, Ӳштел, Микӳшкел, Шӗнтӗ, Сепперел, Йӗкӗр Ҫӑл ятлӑ чӑваш ялӗсем пулнӑ (ҫав ялсем халӗ Куйбышев облаҫӗнчи Сергиевск тата Исаклӑ районӗсене кӗреҫҫӗ). Кротовка — Серные воды чугун ҫулне хывнӑ чухне те, именийӗнче пурӑннӑ вӑхӑтра та пулнӑ вӑл ялсенче Гарин. Чухӑн чӑвашсем ҫул тунӑ ҫӗрте пайтахӑн ӗҫленӗ.

«Провинцири пурнӑҫ тӗркешӗвӗнче» калавӑн пӗр сыпӑкӗнче писатель ӗлӗкхи Самар кӗпӗрнинче пулнӑ выҫлӑха кӑтартса парать. Чирпе аптӑраса ҫитнӗ, выҫӑ виле пуҫланӑ чӑвашсене никам та пулӑшмасть. Пулӑшма мар, тепӗр чухне вӑл ялсене полицейскисемпе салтаксем хупӑрласа илнӗ те ни унтан никама кӑларман, ни яла никама кӗртмен. Хӑрушӑ вилӗмрен тарса хӑтӑлма хӑтланаканнисене каялла ҫавӑрнӑ. Ку вӑл «карантин» тени пулнӑ. Пӗрер-икшер уйӑхран вара шакӑрах вилсе пӗтнӗ ял халӑхне пытарма команда илсе пынӑ.

Параш чӑвашӗсем «телейлӗрех» пулнӑ-мӗн: пуртех вилеймен вӗсем.

Выҫлӑх иртнӗ хыҫҫӑн Гарин-Михайловский Параш ялӗнчи чӑвашсем патне тепӗр хут лекет, ҫамрӑксен ҫурхи уявне курса савӑнать, пӗр старикпе калаҫса ларать.

Чылай ҫулсем иртсен, писатель Параш улӑхӗнчи чӑваш хӗрӗсен вӑййине, ватӑ тӑлмачӑн сӑмахӗсене аса илсе, «Сарпи» («Зора») ятлӑ драма ҫырса хӑварать. Драмӑна авторӑн пичетленмен алҫырӑвӗсем хушшинче тупнӑ.

«Сарпи» чӑвашсем ҫинчен революциччен ҫырнӑ драмӑллӑ произведенисенчен чи илемли, чи тарӑнрах шу-

хăшли; драмăри ӗçсем 19 ӗмӗрте чăвашсем хушшинче пулса иртеççӗ.

Сахал та пулин, пьесăра Российăри капитализм аталанăвӗн пӗр кӗтессине уçса панă. Пьесăн содержанийӗ, виç сăмахпа каласан, çакăн пек.

Акăлчан капиталисчӗ Гарри, чăвашсем хушшине килсе, çуртсем, заводсем тума тытăнать. Вăл хăй патӗнче ӗçлекенсене штрафсемпе хӗсӗрлет, ӗç укçи тӳленӗ чухне улталать. Гаррипе унăн тусӗсем чăваш хӗрӗсемпе арăмӗсене пусмăрлаççӗ, хӗрӗсене вăрлаççӗ. Тарăхса çитнӗ халăх пăлхава çӗкленет те Гарри çуртне вут тӗртсе çунтарса ярать, хăйне вӗлерет.

Автор чăвашсен ӗлӗкхи ӗненӗвӗсене, йăлисене, вăййисене ăста пӗлет, çавсемпе туллин усă курса, пьесăна çурма-юмах формипе çырать. Юрăри сăмахсем пек шăранса янракан произведенири çынсем: Сарпи, Сарачай, чӳкпуçӗ—вулакансен асӗнче тăрса юлаççӗ. Чăваш хӗрӗ Сарпи хăйӗн уçă кăмăлӗпе, чунӗ те, сăн-сăпачӗ те илемлӗ пулнипе М. Ю. Лермонтов повеçӗнчи Кавказ хӗрне Бэлăна аса илтерет.

Тата тепӗр «йӗкӗреш» те пур Сарпин: «Мадам Баттерфляй» оперăри Чио-Чио-сан...

Н. Г. Гарин-Михайловский чăваш халăхӗ ӗçчен те тӳрӗ кăмăллă иккенне асăрхать.

Радищевпа Пушкин, Лев Толстойпа Максим Горький тата аслă вырăс халăхӗн ытти пысăк писателӗсем пирӗн халăхăн паттăрлăхӗпе ӗçченлӗхне, вăл ирӗк пурнăç патне туртăннине кăтартнă. Çак енчен Гарин-Михайловский çырса хăварнисем пирӗншӗн питех те хаклă. Халӗ телейлӗ те çутă пурнăçпа пурăнакан чăваш çамрăкӗсем ӗлӗк хăйӗн халăхӗн хутне кӗрсе çырнă вырăс писателӗсене уйрăммăнах ăшшăн сума суса хисеплеççӗ.

*1956.*

## Н. Д. ТЕЛЕШОВ

### I

Николай Дмитриевич Телешов писателӗн ятне пирӗн çамрăк вулакансем пӗлсех те каймаççӗ пулӗ. Анчах кăшт ватăраххисем ăна лайăх астăваççӗ. Унăн «Нуша» калавӗ малтанхи революци çулӗсенчех чăвашла уйрăм

кĕнекен пичетленсе тухнă пулнă. Çав калавах кайран чăвашла тата икĕ хут пичетленнĕччĕ: 1928 çулта — шкулта вĕренмелли хрестоматире, Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн — «Ялав» журналта, Н. Д. Телешовăн чăваш çамрăкĕ çинчен çырнă «Типшар» ятлă повеçĕ 1946 çулта Шупашкарта пĕр тăруках ик кĕнекере пичетленсе тухрĕ: вырăсла — «Русские писатели о чувашах» сборникре, чăвашла — уйрăм кĕнекен (П. П. Хусанкай куçарнăччĕ).

Н. Д. Телешов произведенийĕсене юлашки вăхăтра Мускавра та нумай хут кăларнă. 1956 çулта вăл çырнисен пуххи 3 томпа тухнăччĕ.

Николай Дмитриевич 1957 çулхи мартăн 14-мĕшĕнче, хăй тăхăрвунна пуссан, вилсе кайрĕ. Вăл шутран çитмĕл çул ытла Николай Дмитриевич литературăра ĕçленĕ.

Тăхăрвунă çул! Иртнĕ ĕмĕрĕн варринче, тенĕ пек, çуралнă та çирĕммĕш ĕмĕрĕн варрине çитнĕ. Мĕн кăна пулса иртмен вăл хушăра çут тĕнчере! Виçĕ революци, пилĕк-ултă вăрçă... Çынсем çуралнă, ӳсе çитĕннĕ, ватăлса вилнĕ. Хуллен çеç шăвакан пурнăç утти васканăçем васкама тытăннă, юлашкинчен пире реактивлă самолетсен хăвăртлăхĕ те çырлахтарайми пулчĕ. Çӳлтен çӳле, инçетрен инçете, хăвăртран хăвăрт каятпăр эпир.

Н. Д. Телешов тĕнче литературин улăпĕ Ф. М. Достоевский калаçнине итленĕ. Писемскипе Островские курнă. Л. Н. Толстойпа калаçнă. Чеховпа, Бунинпа, Рахманинов композиторпа, Шаляпин юрăçăпа туслă пулнă. Çав вăхăтрах вăл пирĕн саманари чи паллă писательсемпе М. Шолоховпа, А. Толстойпа, В. Маяковскипе, А. Фадеевпа пĕр вăхăтра ĕçленĕ.

Н. Д. Телешовăн пурнăçĕпе ĕçĕ вырăссен классикăлла литературине совет литературипе пĕрлештерет. Вăл 1867 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕнче Мускавра çуралнă. Унăн пĕрремĕш произведенийĕ 1884 çулта, авторĕ вунçичче кайсан, пичетленсе тухнă, чи юлашки çĕнĕ произведенийĕ — «Записки писателя» — 1944 çулта тухнă.

Телешов ĕçлеме тытăннă вăхăтра вырăс çырулăхĕнче А. М. Горький те пулман-ха. Вăл ун чухне çаплах Атăл тăрăхĕнчи хуласенче, Украина çеçенхирĕнче, Хура тинĕс хĕрринче тĕрлĕ «хура» ĕçсенче çӳресе, пурнăç «университетĕнче» вĕреннĕ.

Николай Дмитриевичăн пурнăçĕпе творчестви вырăс литературин 1880—1917 çулсем хушшинчи ӳсĕмĕпе та-

чăран та тачă çыхăннă. Çав хушăри кирек мĕнле паха ĕçе ан илĕр эсир, унта Телешовăн хисеплĕ ячĕ те тĕл пулать. 1898 çулта Телешов организациленĕ «Юнкун» («Среда») текен чаплă кружок вăл вăхăтри чи паллă писательсене пĕрлештерсе тăнă. Каярахпа А. М. Горький кăларса тăнă «Знание» сборниксем те, «Книгоиздательство писателей в Москве» издательство та Телешовăн «Юнкунĕнче» чăмăртаннă.

«...Сирĕн «Юнкунăрсем» пирĕншĕн, вăл вăхăтра пурăннă литераторсемшĕн пуриншĕн те, питĕ те пысăк вырăн йышăнса тăнă»,— тенĕ А. М. Горький Телешов патне янă пĕр çырăвĕнче.

Николай Дмитриевич яланах халăх ĕçне активлă хутшăнса ĕçлеме юратнă, вăл писатель-гражданин, писатель-общественник пулнă. Тӳрĕ те уçă кăмăллă çын, Телешов пуçарнипе литераторсемпе ăслăлăх çыннисене пулăшмалли касса организациленĕ, вăлах ун чухнехи писательсен чыслăх сучĕн членĕ пулнă. А. П. Чеховпа унăн вăхăтне тĕпчесе вĕренмелли обществăна, МХАТ çумĕнчи литература музейне организациленĕ т. ыт. те. Н. Д. Телешовăн нумай енлĕ ĕçĕсене хака хурса, пирĕн правительство ăна 1938 çулта искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕн ятне панă, икĕ хутчен Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

Литературăра 70 çул ытла ĕçлесе, Телешов халăх валли калавсем, повеçсем, легендăсем, очерксем, асаилӳсем нумай çырса хăварнă. Вĕсенчен пĕр произведенине — «Типшар» ятлă повеçе — чăваш халăхĕ уйрăммăнах пархатарлăн аса илет.

«Типшар» повеçе автор 1897 çулта çырнă пулнă, тепĕр çул ăна «Мир Божий» журналăн 7-мĕш номерĕнче (1898 ç., июль, 19—54 страницăсем) пичетлесе кăларнă. «Мир Божий» тенĕрен, хăшпĕр вулакансем ăна тĕн сĕрĕмне саракан журнал пулнă, тейĕç. Çук, вăл ун пек журнал пулман. Унăн ятне «Турă тĕнчи» тесе мар, «Çут тĕнче» тесе ăнланмалла. (Журнал ячĕ вулакансене ан пăтраштартăр тесе, каярахпа «турă» сăмаха кăларса пăрахнă та «Мир Божий» вырăнне «Современный мир» туса хунă.)

«Мир Божий» мĕнле журнал пулнине çак икĕ факт та лайăх кăтартса параççĕ. «Типшар» повесть 1898 çулхи июль уйăхĕнче тухнă, терĕмĕр. Шăп çав çулхи январь — июнь уйăхĕсенче вăл журналта Англи писательници Э. Л. Войнич çырнă «Овод» романа пĕрремĕш хут

вырăсла куçарса пичетлесе кăларнă пулнă. «Мир Божий» журналта В. И. Ленин статйисем те пичетленнĕ. 1898 çулхи апрель уйăхĕнчи номерте унăн Богданов кĕнеки пирки çырнă рецензийĕ пур.

«Типшара» çырнă чухне Телешов вăтăр çулхи паллă писатель пулнă. Виçĕ çул маларах çеç вăл, А. П. Чехов канашĕпе Урал леш енне кайса, çĕн çĕре куçакансен хĕн-хурлă пурнăçĕпе паллашса çӳренĕ, ун çинчен вулакансене шалтах тĕлĕнтерсе пăрахнă калавсем («Ытлашши çăвар», «Нуша», «Митрич ёлки» т. ыт. те) çырса кăларнă.

«Типшарти» ĕçсем «пĕчĕкçеççĕ уезд хулинче, инçетри Çурçĕр енче, Урал тăвĕ хыçĕнче, чугун çултан та, ытти паллăрах çулсенчен те аякра» пулса иртеççĕ. «Çав хулан шăпи-тӳпи çапла тухнă ĕнтĕ: ун витĕр те, ун çумĕн те ниçталла та иртмелли-çӳремелли пулман».

Макçăм ятлă чăваш çамрăкĕ хăйĕн тăван ялĕнче телей-ăраскал тупайман пирки ирĕке ĕç шырама тухса каять. Вăл шăпăр калама ăста пĕлнĕ-мĕн те инçетри ярмаркăсенче музыкăпа тăранкалама ĕмĕтленнĕ. Анчах «макăрнă пек нăй-нăй-нăй тăвакан кулянăçлă шăпăр кĕвви, унăн хурлăхлă юррисем никама та кирлĕ пулман, шăпăрçа пур çĕртен те хăваланă...» Макçăмран кулнă, мăшкăлланă, çав чăваш çынни хăйне хĕненĕ чухне çеç сисме-туйма пултарать пулĕ, тенĕ.

Хаяр майра-хуçа патĕнче тарçăра пурăнакан Феня ятлă вырăс хĕрĕпе Макçăма пĕр пек хурлăхлă пурнăç туслаштарнă. Макçăма хĕрхенекенни, йăпатаканни пĕр Феня çеç пулнă.

Ярмаркăна пынă Курганов хушаматлă купца, ӳсĕрпе укçа енчĕкне çухатсан, Феньăна айăплама пăхать. Ырă кăмăллă чипер хĕре полици участокне илсе кайса хупни Макçăма уртарсах ярать. Курганова вăл тем тума хатĕр, Микул турă умĕнче «тĕкĕнместĕп», тесе хĕр тупа тутарни çеç ăна чарса тăрать. Ним тăвайман енне Макçăм типшар çинчен аса илет. Хăйне хăй вĕлернипе вăл тăшманне (Курганова) ĕмĕр-ĕмĕр ӳкĕнсе-çунса пурăнмалла тăвасшăн.

«Мана мĕн! — тенĕ Макçăм. Хăйне пĕтересси, уншăн пулсан, нимех те тăман ансат ĕç пекех туйăннă. Ун вырăнне тăшманăн вăраххăн тертленсе вилмелле пулатьçке. Ку çĕнтерни мар-и вара? — Ăнманă куштанпа урăхла ниепле те май килмест-çке: вăл шав ĕçкĕ ĕçĕ те ахăлтатĕ, а капла...»

Макçăм каçхине Курганов пӳлĕмне кĕрет те çакăнса вилет. «Тĕп пултăр тăшман!»

Повеçе 60 çул каялла мар, хальхи кунсенче çырнă пулсан, е унăн авторĕ те вырăс писателĕ мар, хамăр юлташах, чăваш çынниех пулнă пулсан, эпир повеçĕн тĕп геройне мĕнле сăнласа панă пирки, тен, унăн авторне ӳпкелемелли сăмахсем те тупăттăмăр. Халь эпир В. И. Ленин ĕлĕкрех пурăннă çынсен ĕçĕсене мĕнле хакламалли çинчен каланине аса илетпĕр те* Николай Дмитриевич Телешова тав тăватпăр кăна. Çапла, вăл хăйĕн повеçĕнчи чăваша ăшă куçпа пăхса сăнласа панă. Чăвашсен йăлисене, ĕçченлĕхне, Макçăмăн шухăш-кăмăлĕ мĕнле улшăнса пынисене лайăх пĕлсе, кирлĕ вырăнсенче чăвашла сăмахсемпе усă курса çырнă.

Хăйне хăй вĕлернипе тăшмана тавăрасси, типшар кăтартасси авал чăвашсем хушшинче пулни çинчен В. И. Даль те, сăвăç-этнограф Александра Фукс та, П. И. Мельников-Печерский те («Поярков» калавра) т. ыт. те асăнаççĕ. Анчах Н. Д. Телешов ку йăла çине вĕсенчен тарăнрах, çивĕчрех куракан куçпа пăхнă. Хăйĕн пĕр çырăвĕнче Николай Дмитриевич ăна çапла ăнлантарса панăччĕ:

«Давно все это было, когда я писал эту повесть, но помню, как я пытался понять самую сущность, психологию этого явления, чтобы стать на точку зрения моего героя, чтобы хоть чем-нибудь объяснить смысл этой страшной жертвы. Не знаю, удалось ли мне такое объяснение, но лично я как будто понял, в чем дело. И, помню, пришел невольно к заключению, что большинство самоубийств, в то время довольно нередких в русской жизни, в среде интеллигентной, есть в сущности та же «сухая беда» с желанием «наказать виновника горя». Особенно это чувствовалось в несчастной любви».

## II

Н. Д. Телешовпа çыру çӳретме пуçласси, унтан паллашса каясси çапла пулчĕ.

---

* Исторические заслуги судятся не по тому, чего *не дали* исторические деятели сравнительно с современными требованиями, а по тому, что они *дали нового* сравнительно с своими предшественниками. («К характеристике экономического романтизма» ятлă статьяран.)

1944 çулхи çулла эпир Иван Мучипе иксĕмĕр «Русские писатели о чувашах» («Вырăс писателĕсем чăвашсем çинчен») ятлă вырăсла кĕнеке валли материалсем хатĕрлеме тытăнтăмăр. Чи малтанхи произведенисенчен пĕри пире, паллах, «Типшар» аса килчĕ *. Ăна унччен вуласа курман пулсан та, чăваш этемми çинчен калакан çавăн пек калав пуррине эпĕ тахçанах пĕлеттĕмччĕ. Анчах унăн авторĕ пирки вара нимĕн те пĕлменччĕ те, илтменччĕ те. Те чĕрĕ вăл, те тахçанах çĕре кĕнĕ. Тӳррипе каласан, авторĕн ячĕ-шывĕ питех илтĕнсе кайман-тан, эпĕ ăна темшĕн вилнĕ мар-и, теттĕмччĕ. Иван Мучирен ыйтрăм, вăл та сасартăках нимех те татса калаймарĕ. Кайрăмăр вара чăваш писателĕсен Союзĕн правленине. Унтан пире Мускава, СССРти писательсен Союзĕн правленине çырса яма сĕнчĕç. Мускавран пире тинех: Николай Дмитриевич Телешов А. М. Горький ячĕпе хисепленсе тăракан Академи театрĕн Литература музейĕнче ĕçлет, вăл — унăн директорĕ, адресĕ унăн çапла, тесе çырса пĕлтерчĕç.

Пĕр-икĕ кун хатĕрленкеленĕ, темиçе тĕрлĕ çыру çырса пăхнă хыççăн эпир,— мĕн пулать те мĕн килет тесе,— хамăрăн кĕске кăна çырăва Николай Дмитриевич патне ятăмăр. Пăхатпăр — ответ персе çитрĕ! Мускаври Художество Академи театрĕн пурте пĕлекен паллине, тинĕс хумĕсем çийĕн вĕçекен чайкăна, ӳкерсе хунă бланк—музейăн ĕç хучĕ. Çырури сăмахсем те ĕçлĕ сăмахсем кăна. («Хисеплĕ юлташ. Сирĕн кăçалхи ноябрĕн 14-мĕшĕнче çырнă çырăвăра хирĕç çакна пĕлтеретĕп: çитес çывăх вăхăтсенчех «Советский писатель» издательствăра манăн кĕнекем тухать. Унти калавсем хушшинче «Типшар» та пичетленет. Корректурине эпĕ алă пусса патăм ĕнтĕ. Кĕнекем, «Суйласа илнĕ произведенисем» ятпа, Çĕнĕ çул тĕлне тухасса шанатăп.

---

* «Типшар» пирки аслă писатель-революционер Н. Г. Чернышевский те Владимир Даль калавĕсене ятлакă май асăнса иртсе кайнă: «Типшар». Пĕр чăваш теприне хĕненĕ, лешĕ жалоба панă, кӳрентерекеннине полицие илсе кайнă та айăпланă, анчах пĕрре вырăнне — виççĕ пулса тухнă. Вăл хăйне айăплаттарнă çын çине çав тери тарăхса çитнĕ те, ăна чăвашсен йăлипе тавăрас тесе, унăн хапхинчен çакăнса вилнĕ. «Çавăн пек çакăнса вилекен çынна пирĕн халăхра типшар, теççĕ, халĕ те-ха чăвашсем çилĕ капланса килнĕ вăхăтра пĕрне-пĕри типшар тăвассипе, урăхла каласан, пĕри теприн картишĕнче çакăнса вилессипе хăраткалаççĕ, тет».

(«Картины из русского быта Владимира Даля» статьяран. VIII т., 142 стр., 1906 ç.) Е. Владимиров литературовед асăрхаттарчĕ. *Автор.*

Мана манманшăн Сире тем пекех тав. Қалава тахçан ĕлĕкех, хам çамрăк чухнех, çырнăччĕ.

Манран салам тата эпĕ чĕререн сума сунине йышăнма ыйтатăп.

*Н. Телешов».*

Çыру умĕнче ăна хăçан çырнине паллă тунă: 1944 çулхи ноябрĕн 25. Ватă çын алли сисĕнет пулин те, самаях васкаса çырнă шултра саспаллисем...

1945 çулхи март уйăхĕнче манăн чăваш Кĕнеке палати ĕçĕпе Мускава каймалла пулчĕ. Тĕп хуламăра поезд каçалапа пырса çитнĕччĕ-ши, ыйăннипе-и, астăваймастăп, анчах вăл кун ниçтах та тухса çӳреймерĕм. Тепĕр кун ирхине пирĕн Пĕтĕм союзри Кĕнеке палатинче темĕнле канашлу пулмаллаччĕ. Эпĕ пĕр улт-çичĕ сехетсенчех тăрса тухрăм та хула урамĕсем тăрăх уткаласа çӳреме тытăнтăм. Ĕçе васкакан е ĕçрен таврăнакан çынсем савăнăçлă калаçнинче те, хулара çутăсем нумайланнинче те вăрçă кĕçех чарăнасси сисĕнсе тăратчĕ. Тĕллипаллисĕрех тенĕ пек, пĕр сехете яхăн уткаласа çӳресен, эпĕ хам Николай Дмитриевич Телешов хваттерне çитсе курас ĕмĕтпе тухнине аса илтĕм. Вара: хваттернех кĕрсе курса пулĕ-и, пулмĕ-и, ку вăхăтрах, тен, тăрайман та пулĕ-ха, çуртне çывăхран пырса пăхни те теме тăрать, текелесе, Курски вокзалтан метропа Арбата, унтан çуран Никитски хапха текен темиçе урамăн тĕввине, юлашкинчен троллейбуспа Кировски хапха патне çитрĕм. Покровски бульвара кунтан çуран та инçе мар ĕнтĕ, терĕç мана.

Шавлă урамсемпе площадьсем хыççăн Покровски бульвар мана самаях лăпкă урам пек туйăнчĕ. Сылтăм енĕпе ĕлĕкхи салтак казарми евĕрлĕ çав тери пысăк та вăрăм çурт тăсăлса пырать. (Революциччен ăна чăн та Покровски казармăсем, тенĕ-мĕн.) Сулахай енче — лутра çуртсем. Урамăн варрине вара йывăçсем ларткаласа тухнă, трамвай çулĕ хывнă. Çулĕ пулсан та, трамвайсене эпĕ унта темшĕн сайра пĕрре çех куркаланă.

Эп шыракан 18-мĕш номерлĕ çурт бульварăн лутра енче пулчĕ. Вăл урама урлă ларать-мĕн.

Хапхаран картишне кĕтĕм. Тул çутăлсах çитменччĕ те, хваттер номерĕсем аран çеç палăратчĕç.

Ĕнтĕ кайма та юрать, тесе тăраттăмччĕ, алăк уçăлчĕ кайрĕ.

— Сире кам кирлĕччĕ? — ыйтрĕ хĕрарăм сасси.

— Николай Дмитриевич патнеччĕ те, иртерех пулчĕ-мĕн,— терĕм эпĕ, аяккалла утма хатĕрленсе.

— Эсир камччĕ-ха çав?

Эпĕ хам ăçтан килнине каласа патăм. Хĕрарăм (Николай Дмитриевичăн кинĕ): — Эсир çав çын мар пулĕ?— терĕ те эп хирĕç каласса кĕтмесĕрех алăкне уçса ячĕ.— Кĕрĕр, кĕрĕр... Николай Дмитриевич паçăрах тăнăччĕ. Вăл ир тăма юрататъ.

Çенĕк пекки. Коридор. Алăка шăк-шăк шаккарăм та, шалтан: «Кĕрĕр!» тени илтĕнчĕ. Малтанах эпĕ темĕнле склада лекрĕм пулĕ тенĕччĕ. Речĕ-речĕпе лартса тухнă стеллажсемпе кĕнеке çӳлĕкĕсем, журнал куписем, унта та кунта çакăнса тăракан рамăллă портретсем... Каялла тухма хатĕрленнĕччĕ кăна, пĕр çынна асăрхарăм. Пӳлĕмĕн кĕтессинче читлĕхре темĕнле кайăк пулнă-мĕн те, ăшă халат тăхăннă этем ăна пĕрчĕ сапса парса тăрать.

— Мана Николай Дмитриевич кирлĕччĕ те,— терĕм эпĕ.

Пӳлĕм хуçи хул урлă уртса янă алшăллипе шăлăнчĕ, мана хирĕç утса тухрĕ.

— Эпĕ-ха вăл. Эсир хăвăр кам пултăр-ха?

Эпĕ каларăм. Николай Дмитриевич мана тĕпелелле иртме хушрĕ те сĕтел патне лартрĕ, хăй те сĕтел умне пырса ларчĕ. Вăл çӳллĕ, сакăрвуннă патнелле çывхарнă пулсан та, тӳрĕ кĕлеткеллĕ, ни ытлашши хытанка, ни хулăм мар. Пичĕ вăрăм, мăйăхĕсем украинецсенни пек лăнк усăнса тăраççĕ, кĕскерех кастарса хыçалалла туранă шап-шурă çӳçĕ ачасенни пекех çемçе пулассăн туйăнать, сăмси — курпун. Куçĕсем вара, пĕтĕм сăнĕ, кăмăлĕ... Çук, ун пек куççене, ун пек сăна, ун пек кăмăла эпĕ урăх тĕл пулман, тесен те йăнăш пулмасть-тĕр.

Пĕр-пĕр çын пирки малтан шухăшлани çав çынна хăйне курсан нумай чухне улшăнать. Çынна куриччен эсĕ ун çинчен лайăххине çеç шухăшлатăн, унăн çитменнине çитеретĕн, ытлашшине касаратăн. Яланах çапла пулать, тесе каламастăп эпĕ, çапах тахçан курма ĕмĕтленнĕ çынпа курса калаçнă хыççăн малтанхи шухăш хăш еннелле те пулин улшăнать-улшăнатех: е вăл сана килĕшмест, е эсĕ ăна килĕшместĕн, е вăл сана тиркет, е эсĕ ăна тиркетĕн. Пĕр писатель ĕлĕк шӳтлесе: «...человек, которого больше всего любят, должен меньше всего подвергнуть испытанию любовь своих близких:

это значило бы искушать бога», тенинче тӗрӗсси те пулӗ ҫав.

Курса калаҫнӑ, паллашнӑ хыҫҫӑн Н. Д. Телешова тата ытларах хисеплеме, сума сума тытӑнатӑн. Вӑл сана хирӗҫ пырса ларать те, атте пек интересленсе пӑхса, пӗр самантрах санӑн чунна тыткӑна илет. Калаҫура вӑл сана хӑйӗн чапӗпе путармасть, пӗлӳлӗхӗпе те тӗлӗнтерме тӑрӑшмасть, вӑл пӗр тан ҫын пек кӑна ларать: ыйтса пӗлет, мӗн те пулин каласа хурать. Анчах пурте темле ҫав тери ҫӑмӑллӑн, простӑ, хӑй ӑссӗн пулса пынӑ пек. Вӑл хӑйне мӗскӗне пени мар, ҫук, ҫав вӑхӑтрах ялтан килнӗ ҫын умӗнче юри-мари хӑтланса: мӗнле эпӗ хама санпа пӗр тан тытатӑп, мухта мана уншӑн, тени те мар. Вӑл хӑй ҫавӑн пек ҫын: шутсӑр нумай вӗреннӗ, нумай пӗлекен ӗҫчен, сарлака чунлӑ писатель.

Писатель тенӗрен... Вӑл ҫыравҫӑ иккенне калаҫу пуҫламӑшӗнчех туйса илетӗн. Ватӑ ҫын куҫӗ пек мар чӗррӗн йӑлкӑшакан кӑвак куҫсем сан ҫине тӑванла интересленсе те шанса пӑхаҫҫӗ. Сакӑрвунна ҫывхарса пӗлменнине, мӗн пӗлӗп-ши паян эпӗ? — тенӗнех туйӑнать.

Николай Дмитриевича куриччен эпӗ пӗр япалана ӑнлансах ҫитейместӗм. Унӑн «Юнкунне» кӗнӗ, унта ҫӳренӗ ҫынсем хушшинче вышкайсӑр ӑслӑ ҫынсем — генисем те (Горький, Шаляпин), пысӑк талантсем те: писательсем те, артистсем те, художниксем те, музыкҫӑсем те — пулнӑ. Мӗнпе пӗрлештерсе тӑнӑ-ши вӗсене Н. Д. Телешов? — теттӗмччӗ. Хӑйне куртӑм та ҫавӑн пек ҫиҫсе тӑракан кӑмӑллӑ этем ҫеҫ, художникпе художник, артистпа артист пулма пӗлекен ҫын кӑна «Юнкун» пуҫӗнче тӑма пултарнине ӗнентӗм.

Николай Дмитриевичӑн ӗҫ кабинечӗ музее аса илтерет. Кунта аслӑ писательсем алӑ пусса панӑ кӗнекесемпе фотоӳкерчӗксем, паллӑ ҫынсен ҫырӑвӗсем, ҫӗр ҫул ытла ӗлӗкрех тухнӑ журнал комплекчӗ... Ҫыру сӗтелне ватӑ писатель садалла тухакан пысӑк чӳречене хирӗҫ лартнӑ. Сылтӑм енче, сӗтел ҫывӑхӗнчех, каланккӑ. Ӑна ытла нумаях хутмаҫҫӗ пулас, пӳлӗмре самаях сивӗ.

— Чӑваш ҫӗршывне халӗ паллама та ҫук пулӗ ӗнтӗ,— тет Николай Дмитриевич, шухӑша кайса.

Аллӑ ҫул ӗлӗкрех Н. Д. Телешов чӑвашсен ҫӗрӗ урлӑ иртсе кайнӑ-мӗн, шӗкӗр Шупашкарӑмӑрта та пулса курнӑ.

Эпӗ тӑван республикӑн ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен, чӑваш ҫыннисем ҫинчен каласа паратӑп, халь ӗнтӗ пирӗн те лите-

ратура, искусство пур, тетӗп, Николай Дмитриевича Шупашкара пырса курма чӗнетӗп.

— Тем пекех курса çӳрӗттӗм те, ватăларах кайрăм çав, чирсем хупларӗç,— тет вăл лăпкăн. Ватăлни ăна пӗртте хурлантармасть тейӗн, сассинче вăл кӳренни сисӗнмест, сăнӗ те улшăнмасть. Чирӗсем те унăн ватăлăх чирӗсем кăна пулас.

Николай Дмитриевич эпир ун патне «Типшар» пирки çырнине аса илет те таçтан хăйӗн халӗ кăна пичетленсе тухнă кӗнекине туртса кăларать.

— Уяр тени, хушамат, падежсем тăрăх улшăнать-и? — тет вăл, ача пек уççăн пăхса. «Улшăнать» тесен, кӗнекин титулӗ çине шултра саспаллисемпе: «Уважаемому Федору Ермиловичу Афанасьеву-Уяру на добрую память. 8/III-45 г. Н. Телешов»,— тесе çырса парать.

Те хăнăхса ытлашши ашкăнса кайрăм эпӗ пăртакран, те манăн ватă кӗнекеçе кăштах хăналас килчӗ,— пӗр ӳкӗнмелле ӗç туса хутăм. Ун чухне вăрçă вăхăчӗччӗ те, апат-çимӗç таврашӗсене карточкăпа çеç паратчӗç. Столовăйсене кӗрес пулсан та, рейсовăй текен карточка кирлӗччӗ. Ун пек япаласемпе чăрманас мар тесе, çимеллисене эпӗ, хутпа чӗркесе, кӗсъене чиксе тухнăччӗ. Н. Д. Телешов патӗнче ларнă чух эпӗ çав тӗркӗме туртса кăлартăм та, тен, ватă çыннăн та хырăмӗ выçнă пулӗ, ку чухне никамăн та апат ытлашши мар — вăрçă вăхăчӗ, хамăн та çиес вăхăт çитнӗ, текелесе хаçатне сӳтрӗм. Николай Дмитриевичăн пурне те ăнланакан куçӗсенчен пăхрăм та вăтанса ним тума пӗлмерӗм. Мана çын хамăн пуçри шухăшсене каламасăрах «вулани» аптратса ӳкерчӗ. Эпӗ ăна кучченеç сӗнсе пăхасшăнччӗ, кучченеçӗ кучченеç пек туйăнмарӗ, тата иккӗленсе ларса «кирлӗ» вăхăтне те ирттерсе ятăм. Вара, намăсланнипе пит-куçăм çунса тăнине туйсах, пӗр çăвар хам татса хыпрăм — анмасть!

Çак ухмахла историрен мана Николай Дмитриевич хăтарчӗ.

— Ку сирӗн чăваш çӗршывӗнчен илсе килнӗ апатах-и? — ыйтрӗ вăл пӗр кулмасăр.

— Çавăнтан,— терӗм эпӗ.

— Чăваш çăкăрех, эппин? Астивсе пăхма юрать-и?

— Тархасшăн,— терӗм эпӗ савăнса.— Ăна сире валлиех илсе килнӗччӗ те, сӗнме хăймарăм.

Николай Дмитриевич пӗчӗ-ӗк татăк касса илчӗ те

ăна манпа пĕрлех васкамасăр чăмласа çăтса ячĕ.

— О, чĕре патне пыракан апат,— мухтарĕ вăл.— Аван. Тавтапуç.

Çук, кунта хăвна пĕлсе тыткаламалла, кун пек юрамасть. Пысăк культурăллă çын ăшшăн калаçнипе ăна хамăрăн пĕрле ўснĕ çывăх тус вырăнне хурса, ытлашши сăмах персе ярасран шиклĕ, ху ăçта ларнине манса каймa пулать. Ку пўлĕме пуçтарăнса калаçнă çынсем вырăс литературин чапне пĕтĕм тĕнчипе сарнă. Кунта кашни япали музейре сыхланма тивĕç. Акă пĕчĕккĕ кăна сĕтел ларать. Вăл сĕтел хушшинче А. П. Чехов кофе ĕçме юратнă, А. М. Горький чей ĕçнĕ. Ав леш кресло çинче Ф. И. Шаляпин ларма кăмăлланă-мĕн. Рахманинов каланă фортепьяно, Л. Н. Толстой хăй алă пусса панă сăн, И. А. Бунин парнеленĕ кĕнекесем...

Çаксем çинчен аса илетĕн те пўлĕме урăх куçпа пăхса çаврăнатăн.

### III

Ун хыççăн эпĕ Николай Дмитриевич Телешовпа тата темиçе хут тĕл пулса калаçнăччĕ, унран çырусем те илнĕччĕ.

1945 çулхи кĕркунне Петр Петрович Хусанкай «Типшара» чăвашла куçарса пама килĕшрĕ. Эпир Иван Мучипе иксĕмĕр умсăмах пекки çыртăмăр. Г. Харлампьев художник кĕнеке валли хуплашка туса пачĕ. Çапла вара «Типшар» 1946 çулта, хăйне çырнăранпа 50 çул çитеспе, чăвашла пичетленсе тухрĕ.

Çемçе кăна хуплашкаллă пулсан та, кĕнеки Николай Дмитриевича питĕ те килĕшнĕччĕ. Тĕрĕссипе ăна хуплашки-мĕнĕ е хут пахалăхĕ мар, кĕнекине пирĕн вулакансем кăмăлласа йышăнни савăнтарнăччĕ. «Тахçан ĕлĕкех çырнă повеçĕм чăваш халăхне юравлă пулнăшăн чĕреренех хĕпĕртетĕп»,— тесе çырса янăччĕ вăл, кĕнекине илсен.

Тепĕр ик-виçĕ çултан Николай Дмитриевичăн хăлхи илтми пулса ларнăччĕ те, унпа калаçма та кансĕрччĕ. Çав вăхăтсенчех вăл МХАТ музейĕнче ĕçлеме пăрахнăччĕ. Анчах хăй çаплах çыру сĕтелĕ хушшинче тăрмашатчĕ-ха — «Записки писателя» кĕнекине çĕнĕрен кăларма хатĕрленетчĕ, калавсене улăштаратчĕ, тўрлететчĕ. Çырусене те пĕрне те хурав памасăр хăварман вăл. Унчченхи йăлисем те улшăнман: кинĕ каланă тăрăх, вăл çав-çавах ир тăратчĕ тет те, сухаç сухана кўлĕннĕ пек, сĕтел хуш-

шине ĕçлеме кĕрсе ларатчĕ, тет. Вилес умĕнхи çулсенче çеç вăл алли чĕтренипе машинкăпа çырма хăнăхнăччĕ.

Çын ватăлсан та унăн чунĕ çап-çамрăках юлать-мĕн.

Пĕррехинче сакăрвун виçĕ çулхи Николай Дмитриевич мана «Типшарти» хăшпĕр улăштарнă вырăнсене хут таткисем çине çыра-çыра пачĕ.

— Повеçе хăçан та пулин чăвашла тепре кăларас тесен, çак тĕлсене хушса çыраймăр-ши? — терĕ вăл.

Пĕр-ик çĕрте Максăм ячĕ курăнса кайрĕ. Унтан Степанида ячĕ тухрĕ. Эпĕ вулама тытăнтăм та шалтах тĕлĕнсе кайрăм. Аскăн Степанида, «эх, жги, жги, жги» тесе, урса кайса ташланине, вăл арçынсем умĕнче ясарланса авкаланнисене ватăлми чунлă писатель çеç ӳкерсе пама пултарнă.

Николай Дмитриевич хăйĕн çырнисенче чăваш халăхне кӳрентерес марччĕ, тесе тăрăшатчĕ. Эпир вăл Шупашкара килсе куриччен çынсен сăмахĕсем тăрăх çырнă «На тройках» очерк сыпăкне пичетлеме тытăнсан, Н. Д. Телешов ик-виçĕ çыру ӳпкелесе çырса ячĕ. «Вăл сире унта ытларах курăнать те-ха, эпĕ çав сыпăка çапах та пичетлеме сĕнмĕттĕмччĕ»,— тесе çырнăччĕ вăл ман пата.

Яков Иванович Сотников вулакан: «Типшарти» чăваш сăмахĕсене тĕрĕсех çырман, тӳрлетсе çыраймăр-и, тесе пĕлтерсен, Николай Дмитриевич вăл çырăвăн копине мана ярса пачĕ. «Пулăшăр тӳрлетме», тенĕччĕ.

Н. Д. Телешовра пирĕн аслă классиксен тĕрĕслĕхĕ, тӳрĕлĕхĕ, сăмаха вылятмасăр калама хăнăхни, кирек хăш вăхăтра та çын хутне кĕме хатĕр пулни сисĕнсе тăратчĕ. Унпа курнăçса калаçни, унăн çырăвĕсем, пăчă çанталăкра шыва кĕнĕ пекех, кăмăла уçăлтарса яратчĕç. Татсах калама пултаратăп: пăсăлма ĕлкĕреймен ача пекех, Николай Дмитриевич суя суйма пĕлмен, пурнăçра кама та пулин улталама мар, çынна çын улталанă, тенине илтме те йывăр пулнă уншăн. Вăл ĕмĕрне те мухтанман, кăкăрне çапса кăшкăрашман, вулакансем чип-чиперех маннă произведенийĕсене туртса кăларса, издательствăсем тăрăх вĕтеленсе-чупса çӳремен, кĕнеке кăларма часрах договор çырăр, укçине ытларах парăр, атту халех жалоба çыратăп тесе, çынсене хăратман. Çук, литература уншăн чăнкă ту евĕрлĕ пулнă. Ту пуçламăшĕнче те, çӳлерех те, унăн чи тăрринче те çынсем курăннă. Н. Д. Телешов çитмĕл çул хушши çав тӳпенелле утнă. Хăш тĕле çитсе чарăннă вăл — ăна вулакансем калĕç.

## ПИРЁН АСЛĂ ТУСĂМĂР ГОРЬКИЙ

Кам вăл, мĕн вăл — Максим Горький? Унăн 1924 çулта чăвашла куçарса кăларнă пĕрремĕш кĕнекин хуплашки çинчи пек каласан,— Йӳçĕ Макçăм — кам вăл? Писатель-и? Сахал-çке вăл, ун пек çеç калани. Тен, эппин, пысăк писатель темелле ăна? Аслă писатель? Пурте тĕрĕс вĕсем, çак сăмахсем, анчах çителĕксĕр. Максим Горький тенĕ ăнлану калама çук сарлака, çав тери тарăн. Нумай пĕлтерĕшлĕ. Агитатор-пропагандист та вăл, çын чунне тĕпчекен те, философ та, вĕрентекен те, кĕрешӳçĕ те т. ыт. те. Çавсем пурте пĕр çынра пĕрлешнĕ те, вара эпир пĕлекен Максим Горький пулса тăнă. Вунтăххăрмĕш ĕмĕрĕн юлашки пилĕк çулĕпе çирĕммĕш ĕмĕрĕн малтанхи вăтăр пилĕк çулĕсем хушшинче ĕçлесе пурăннă Астаçă. Пурнăçа пур енчен те пĕлсе, кĕнекесем çырнă вăл. Унăн калавĕсене, «Ача чухне», «Амăшĕ», «Фома Гордеев», «Клим Самгин пурнăçĕ» романĕсемпе повеçĕсене пĕтĕм культурăллă тĕнче вулать.

Издательствăсем йĕркеленĕ Горький. Çĕнĕрен çĕнĕ журнал уçнă, вĕсене редакцилеме пулăшнă. Чарăнми юхăм пек, вĕçĕмсĕр пырса тăракан алçырусене вуласа, унти ылтăн пĕрчисене ывăнмасăр шыранă. Тата пĕр корреспондента ответ памасăр хăварман вăл. Кашнинчех хĕрсе кайса, çыру авторне ăнланса, тĕплĕ çырнă, мĕн те пулин ыйтса пĕлме тăрăшнă.

Темиçе пин çыру хушшинче икĕ çыру пĕр евĕрли çук Горькин. Пурте пĕртен-пĕр, хăйне майлă.

Борис Ласкин писатель çапла аса илсе каласа парать.

Улттăмĕш класра вĕреннĕ чух, çынсем çырнă тинĕс сăввисемпе хастарланса кайса, тинĕс çинчен сăвă çырса пăрахрăм, тет. Кама вуласа кăтартмалла çĕнĕ «произведение»? Тытнă та вăл, çамрăк ача, Италире эмелленекен М. Горькие ярса панă. Пĕр уйăхран ответ килчĕ, тет.

«Борис шăллăм!

Мĕн те пулин çырассу килет пулсан, эсĕ çынсен кĕнекинчен вуласа пĕлнĕ тăрăх мар, ху курнине, тӳссе ирттернине, хăвăн кăмăлна хускатнине çеç çыр. Ытти вăл йăлтах пуш çеçке. Сых ятне сана «Литературная учеба» журнала çырăнса паратăп. Вĕренӳре кирлĕ пулĕ.

Салампа М. Горький.

Сорренто. Итали».

Çакăн евĕрлĕ çыру.

Ф. Сотников ятлă çамрăк автортан Алексей Максимович ăна мĕнле кĕнекесем кирлине, вăл халиччен мĕнмĕн вуланине, миçерине, мĕн ĕçпе пурăннине ыйтса пĕлет. Кĕнекесем ярса парать.

Запорожьери литература кружокĕн членĕсене аслă писатель «çынсем пек» çырма тăрăшнăшăн ÿпкелет. Хăйĕн чĕрери шухăшне калакантан çеç мĕн те пулин тухма пултарать, тет вăл.

Сухаç суха тунă пек, куллен-кун, çултан-çул шурă хута хуратса ларать Горький. Романсем, повеçсем, калавсем, юмахсем, пьесăсем, очерксем, сценарисем, асаилÿсем, рецензисем, кирлĕ пулсан,— публицистикăллă статьясем, вĕçĕмсĕрех тата çырусем, çырусем çырать. Вăйран кайнисене хавхалантарать вăл; ÿкĕтлет, ĕнентерет, тимлет, шантарать, сĕнет; вĕрентет, хăй вĕренет. Вăйсене пухма хушать. Пурте интереслентерет писателе. Пурте çывăх. Вырăс литератури кăна мар, Совет Союзĕнчи пур халăхсен литературисем çеç те мар, пĕтĕм тĕнче литератури. Ун тусĕсемпе паллаканĕсем хушшинче — В. И. Ленин, Лев Толстой, А. П. Чехов, Ромэн Роллан, Герберт Уэллс, Бернард Шоу, Рабиндранат Тагор...

Эпир кашниех харпăр хăй халăхĕн иртнĕ пурнăçне пĕлнипе пуян, тет Горький. «Белорус çынни грузин, тюрк тата ыттисем мĕн иккенне пĕлтĕр, ыттисем пурте украинец, белорус, узбек, тутар т. ыт. мĕнне пĕлчĕр», тесе çырать вăл Украина писателĕ Кулик патне.

Владивостокри литкружок членĕсене Алексей Максимович хăйсем çинчен çырма кирлине аса илтерет. «Хăвăр хушăра çĕнни мĕнле аталанса пынине кăтартса парасчĕ сирĕн», тет.

Тĕлĕнетĕн вара. Нивушлĕ çак пин тĕрлĕ ĕçе пĕр-пĕр кантур мар, писательсен ушкăнĕ те мар, пĕр çын, Максим Горький, туса тултарнă? — тетĕн. Чăннипех те улăп иккен вăл. Данко. Çĕртен пĕлĕте çити çĕкленнĕ кăйкăр.

Тата тепĕр мыскара-и вăл, тĕлĕнтермĕш-и. Кашни республикăрах чылай вулакан Алексей Максимович Горькие хăйĕн писателĕ тесе шутлать. Маншăн та çавăн пек туйăнать вăл. Пирĕн писатель вăл. Горький литературăра хăварнă пуянлăх (словарьсенче ăна ăнлансах каймалла мар сăмахпа еткер тесе куçараççĕ), çав пуянлăх тахçанах чăваш халăхĕн культурин уйрăлми пайĕ пулса тăнă.

...Хăçан асăннă-ши вăл чăвашсене пĕрремĕш хут? Иван Мучи писательпе иксĕмĕр эпир «Русские писатели о чувашах» сборнике хатĕрленĕ чух М. Горький чăвашсене 1900 çулсемччен маларах асăннине тупаймарăмăр. (Чăваш ячĕ 1900-1901 çулсенче çырнă «Виççĕн» повĕçре вĕлт курăнса иртсе каять.)

Пирĕн халăх çыннисемпе мĕнле паллашма тивнине А. М. Горький çапла каласа парать:

«...Çамрăк чухне, çĕршыв тăрăх çапкаланса çӳренĕ вăхăтра, чăвашсене эпĕ сахал мар тĕл пулнă, Шупашкар уесне те çитсе çаврăннă; манăн ун чухне пĕр чăваш тусăм та пурччĕ, вăл Чулхула пристанĕсенче Сумароков артелĕнче грузчикра ĕçлетчĕ. Питĕ ăшă кăмăллă çынччĕ, вăйлăччĕ, юрлама ăстаччĕ; тем ятлăччĕ-çке вăл, халь манса кайнă, Петĕр е Павăлччĕ пулмалла».

Ку çырăва А. М. Горький 1928 çулта чăваш писателĕ М. Юман патне Италирен янă. Тăван çĕршыва таврăнсанах Атăл тăрăх тухса кайма ĕмĕтленсе пурăнакanскер, çырăвне вăл çапла вĕçлет: «Çулла мĕне çитсен те Шупашкара кĕрсе тухатăпах», тет.

Кĕреймен вăл пирĕн шĕкĕр хуламăра. Май килмен.

Аслă писатель Шупашкара кĕрсе тухмалла тенĕ кун — 1928 çулхи августăн 5-мĕшĕнче, вырсарникун — «Канаш» хаçатра 3-мĕш страницăра çӳлте шултăра саспаллисемпе çакăн пек пĕлтерӳ çырса кăларнă пулнă:

«Паян ир Шупашкара Максим Горький кĕрсе тухса карĕ», — тенĕ. Ун айĕнче писателĕн пысăк сăнӳкерчĕкĕ— линогравюра. (Вăл В. Филиппов художникăн ĕçĕ пулас, Ф. Быков гравер ун чухне Мускавра пулнă-ха.) Тата аяларах «Максим Горькине» ятлă статья çапăннă. Анчах унта Алексей Максимович Шупашкарта хăш тĕлте пулнине те, вăл камсемпе курса калаçнине те асăнман. Унран та ытларах — Шупашкара килнине те каламан. Йăлтах — пĕтĕмĕшле сăмахсем. Статьян вĕçĕ çеç килĕшрĕ мана. «Темиçе çул иртсен, çĕнĕ пурнăçра тĕл пулса, чăваш ĕçхалăхĕ Максим Горькие тепĕр хут ал парать», тенĕ унта.

«Канаш» хаçатăн ытларикунхи номерĕнче те, тата тепĕр кун та Горький Шупашкарта чарăннă пирки пĕр сăмах та çук. Августăн 11-мĕшĕнче çеç «путвал» çапăнса тухнă. «Максим Горький Хусанта пулчĕ» ятлă вăл. Авторĕ — Вантер (нумай кĕнеке çырса кăларнă Гурий Иванович Комиссаров). Ку тĕрленчĕк Шупашкарти ĕç-пуçсене те çутатса панă пирки, тата çырасса та ăна чăн

писатĕлле çырнипе, эпĕ ытараймасăр унăн пĕр-ик сыпăкне вулакансене илсе кăтартам, терĕм. Вĕсем çаксем:

«Вырăссен чаплă писателĕ Максим Горький Итали çĕрĕнчен, Капри утравĕнчен Совет çĕршывне килсе, пĕр уйăх ытла ĕнтĕ — кунта çĕнĕ пурнăç мĕнле çитĕнсе пынине курса, сăнаса çӳрет. Çавăн çинчен чăвашсем те илтменни çук пулĕ.

Августăн 3—4-мĕш кунĕсенче çак хаклă çын Хусанта та пулчĕ. Хусан Горькишĕн унăн иккĕмĕш тăван хули*... мĕншĕн тесен Хусанта вăл çамрăк чухне пилĕк çул хушши (1884—1889) пурăнса ирттернĕ...

Хайшĕн асран кайми çак хулана килмесĕр чăтаймарĕ Горький. Нумай та пулмасть-ха хаçатсем вăл Каппасра çӳрени çинчен çыратчĕç. Августăн 1—2-мĕшĕсенче Горький Атăлпа тăвалла хăпарать, тенĕ хыпар сарăлчĕ. Хусанта ĕçре тăракан çынсем Саратовпа Самара телеграм парса ыйтрĕç. Хирĕç çаптарнă телеграмсенчен Горький «Урицкий» ятлă пăрахутпа килни тата вăл Атăл çинчи хуласенче нихăшĕнче те чарăнса тăманни палăрчĕ.

Горький хăй «Хусана кĕретĕп», тесе хыпарламарĕ. Çапах та Хусантан правительство янă çынсем чаплă хăнана хирĕç тухса илме Кама Вăрри (Богородск) пристанне карĕç...

«Урицкий» пăрахута вĕсем вара, Кама Вăрринче** кĕтсе илсе, Горькие Хусана илсе килчĕç. Хусана вăл 3-мĕш числара, кăнтăрла иртсен 3-мĕш сехетре çитрĕ.

...Горький чылай çӳллĕ, сарлака хулпуççиллĕ, кăшт курпунтарах, çурма кăвакарнă, çурма хĕрлĕрех сарă, аялалла усăнса тăракан мăйăхлă, сарлака питлĕ, чармак хăлхаллă, пысăк кăвак куçлă, мăн пуçлă çын. Çӳçне шакла кастарнă. Тумтирри — çӳхе, шупкарах хура пуставран çĕлетнĕ «тройка». Мăйĕнче шурă çуха, умĕнче пиншакĕ тĕслĕ галстук.

...Сăмахне вăл калаçса ларнă чухнехилле калать. Сылтăм аллипе хăлаçланкаласа, ăна вылятса илет, хăшпĕр чухне тытăнарах, сăмах шыранă евĕр чарăнса тăрать, пӳрнисемпе шаклаттарса илет. Сасси хулăм, уçă, итлеме лайăх. Сăмаххисене вăл ăнланмалла, уçăмлă çавăрса калать...»

---

* Ут-пĕвĕмпе эп Чулхулара çуралнă, ăстăн енчен — Хусанта, тенĕ М. Горький. *(Хв. У.)*

** Камское Устье тенĕ пристань ятне автор çапла куçарать. *(Хв. У.)*

Т. ыт. те, т. ур. те. Пĕтĕмпех çакăн пек кăсăк, вулама кăмăллă. Темĕн те асăрханă корреспондент. Çынсем Алексей Максимович пурăнакан хăна килĕ тавра пуçтарăнса тăрса, ăна балкон çине чĕнсе кăларса калаçтарнине те. Халăхпа тĕл пулнă чух писатель мĕн каланине те. Çынсем ăна тĕлпулу хыççăн ал вĕççĕн йатса тухса машинине (ун чухне автомобильне тенĕ) лартнине те. Тепрехинче Горький, çынсене чăрмантарас мар тесе, пуху-тĕлпулу пĕтичченех вăрттăн тухса кайнине те, хыçалтан чупса тухнă халăх Горький ларнă машинăн тĕтĕмне çеç курса юлнине те...

Кунта нихăшне те айăплама çук: çынсем хăйсен юратнă писательне курасшăн, май килсен, унпа сăмах хушасшăн; ĕмĕрте пĕрре килсе лекнĕ те вăл кунта, мĕнле курса юлмăн ăна?

А. М. Горький — ывăнса çитнĕ. Пĕр уйăх ытла çынна иртен пуçласа каçчен турткала-ха эс — пухусем, тĕлпулусем ирттер, вырăнтан вырăна ертсе çӳре, сăрапех сĕн. (Пурте хăна тăвасшăн сана. Ĕçмесен — кӳренеççĕ.) Тата пĕр саманта та пĕччен юлма çук. Тăршшĕпех халăх сан йĕри-тавра. Пур çĕрте те саламлă сăмахсем каламалла. Президиумра лармалла.

Пĕр кун чăтма пулĕ ун пеккине, иккĕ. Анчах эрнесене, уйăха тăсăлсан, кама йăлăхтармĕ вăл тĕркĕшӳ, шăв-шав, вĕççĕр уяв? Ĕлĕксенче чапшăн çунакансем туя çавăтса пырса лартнă ват супнă генерал мар-çке эс куллен фотообъектив умĕнче саркаланса тăма.

Çавăнпа Алексей Максимович юлашкинчен ниçта чарăнса тăмасăр тӳрех хăй çуралнă Чулхуланалла васкама тытăннинчен ним тĕлĕнмелли те çук. Тен, Тутар правительстви хирĕç тухса кĕтсе илмен пулсан, Хусана та кĕмĕччĕ вăл? Шупашкара кĕме пулнă çĕртенех кĕменнине те ăнланмалла.

Урăх хуласемпе ун чух телефонпа çăмăллăнах калаçайман пуль çав.

Шупашкарсем Атăл хĕрринче тăркаласа пăхнă пулас та — кĕтсе илеймен чаплă хăнана. (Кĕтме аннă çынсем хушшинче чăваш çыравçисем А. И. Золотов-Арис, Н. В. Шупуççынни, Иван Мучи,— виççĕшĕ те çӳллĕ те яштакаскерсем,— Н. Т. Ваçанкка т. ыттисем пулнине асăнатчĕç. Шур кĕпеллĕ Иван Мучие, чăн чăваш сăнлă тесе, алшăлли çине хурса, пуçламан çăкăр йăттарнăччĕ, тет.) Пĕрисем калаççĕ — «Урицкий» пăрахут Шупашкар тĕлĕнчен çынсем сывăрнă вăхăтра çур çĕр иртсен икĕ

сехетре иртсе кайрĕ, теççĕ. (Хаçатра: «Паян ир Шупашкара Максим Горький кĕрсе тухса карĕ», тени çавна пĕлтерет пуль ĕнтĕ.) Теприсем — пăрахучĕ каç пулас умĕн иртрĕ, анчах, ыванна Алексей Максимович кăтăш пулнă вăхăт тесе, пăрахутне Шупашкарта чарман, теççĕ. Горький Шупашкара кĕрсе тухни çинчен калакансем çех пĕр çын çук.

Чăвашсене А. М. Горький нумай çĕрте асăннă, кăтартса панă вĕсене, çырнă вĕсем пирки. (Эпир шутласа кăларнă тăрăх, ун пек вырăнсем писатель «хуçалăхĕнче» ку вăхăта вăтăра яхăн. Шырасан татах та тупма пулать пуль.) Чăваш çыннине произведенин тĕп персонажĕ тумалăхах пĕлеймен пуль, тен, Горькин ун пек тĕллев те пулман, çырнă пеккишĕн те çĕр хут тав ăна. Тата ахаль çырнипе çеç те сахал-ха, çав тери пĕлсе те хисеплесе çырнă вăл.

Хăйне кирлĕ япалана Алексей Максимович ăçтан çав таранчченех тĕплĕ пĕлме пултарни пирки каласмăпăр, ăна вăл хăех ăнлантарса парать.

1933 çулта «Мордовский труженик» (Мăкшă ĕçченĕ) ялхуçалăх артелĕн членĕсем патне янă çырăвĕнче А. М. Горькин çакăн пек сăмахсем пур: «Эпĕ çынсем çине, вĕсем мĕнле пурăнни, вĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле хутшăнса кун-кунлани, çул-çуллани çине ăнланса пăхма тытăннăранпа çур ĕмĕр иртсе кайрĕ. Пурнăç каторгăри пекчĕ, суккăрччĕ, вараланчăкчĕ, айванччĕ, ӳсĕрччĕ, çынсем пĕр-пĕрин çине çав тери тискеррĕн пăхатчĕç. Эпĕ, Чулхула крайĕнче çуралнăскер, хресченсем: вырăссем, ирçе-мăкшăсем, чăвашсем, çармăссем — мĕн тери пысăк асап тӳссе пурăннине аван пĕлетĕп темелле».

Вулакан астăвать пулĕ, вырăс литературин арăсланĕн (Лев Толстойăн) «Çĕнĕрен чĕрĕлсе тăни» («Воскресение») романĕнчи чăваш салтакĕ Катерина Маслова кулачăпа пирус сутăн илсе килсе пама ыйтсан, турткаланса тăмасть, итлет, юлашки темиçе пус укçине те тĕптĕрĕс тавăрса парать. Чĕлхи те унăн вырăсла начар калаçакан чăваш этеммин чĕлхи. «Ладно, купим», тес вырăнне «Ладно, купаем», тет.

Мĕнле тĕлĕнмĕн аслă художниксен ĕçĕнчен. Чăваша Л. Н. Толстой асăннă кăна темелле, çапах ăна чĕртсе тăратма ĕлкĕрнĕ. Ним тăрăшни те çук ĕнтĕ. Унтан туртнă, кунтан сĕрнĕ кăна — художник-çке — çын чĕрĕлсе тăнă! Чăвашăн чи паллă енĕсене кăтартса панă писа-

тель. Оптимист та иккен вăл (çынпа калаçнă чухне йăл та йăл кулса илет), тӳрĕ те, каланине те итлет.

А. М. Горькин 1904 çулта çырнă «Тĕрме» калавĕнчи чăваш — хуралçă-мĕн. Тĕрме хуралçи. Те килĕнче ачисем выçă ĕнтĕ ун, те куланай тӳлес вăхăт çывхарса киле пуçланă (тип тикĕнтенех,— чипер çĕртенех,— кил-çуртне пăрахса тухас çук чăваш), мĕнле те пулин укçа тупса пулмĕ-ши тесе, таçта ют çынсем хушшине хулана килнĕ те çĕрле хуралта ĕнтĕркесе тăрать. Пусăрăнчăк вăл, вырăсла пĕлмест, çавăнпа темрен те хăрать. Еçрен кăларса ярсан, ăçта пĕр пус укçа тупĕ вăл? Чи усал сăмахсемпе вăрçаççĕ ăна, çăт та çат çапаççĕ («ал лаппипе чустана çапнă евĕр илтĕнчĕ», тет автор), чăваш — чĕнмест.

Писатель ик-виçĕ хут та асăрхаттарать: хуралçă хăраса хурлăхлăн калаçать, тет. Вăл вырăсла пĕлменнине те астутарсах тăрать.

Тӳссен-тӳссен, тимĕр те татăлать-çке. «Степан Разин» сценарипе (1921 ç.) «Пĕчĕк хула» калавĕнче (1923 ç.) А. М. Горький чăваш халăхĕ Разинпа Пугачев ертсе пынă хресчен вăрçисене хутшăннине лайăх кăтартса панă.

«— Эпир иккĕшин вăхăтĕнче те пăлханнă!» — тет калаври пĕр ыйткалакан мухтанса.

Вăл пăлхавсем мĕнпе вĕçленни те паллă-ха. Писатель çапла çырать:

«Хула тулашĕнче, унта-кунта çеç кăшт-кашт çеремпе витĕнкеленĕ шакла тĕме тăрринче ларатăп; таврара выльăх таптаса пĕтернĕ, çилпе тусăннă вилтăприсем палăраççĕ. Кирпĕчрен купаласа тунă, тăррине тимĕрпе витнĕ пĕчĕкçĕ ещĕк патĕнче ларап-ха — аякран ăна часовня теме пулать, анчах çывăхран вăл йытă пӳрчĕ майлă. Унăн тимĕрленĕ алăкне уçсан, сăнчăрсем, саламатсем, чăпăрккасем тата çынсене асаплантармалли ытти тĕрлĕ хатĕрсем курăнса каяççĕ. Вĕсемпе çак тĕме çĕрĕ айне пытарнă çынсене асаплантарса вĕлернĕ. Çав хатĕрсене хула çыннисем асра тытса пурăнччăр тесе хăварнă ĕнтĕ: ан пăлханăр! — тесшĕн пулнă.

Кунта камсене ватса-çĕмĕрсе пĕтернине хула çыннисем маннă халь. Пĕрисем калаççĕ: Степан Разин казаксене, теççĕ; теприсем: унта Емельян Пугач çарĕнчи мăкшăсемпе чăвашсене пытарнă, теççĕ».

Çынсене ытларах хăратас тесе, Пугачев çарне хутшăннă пĕр чăвашпа икĕ вырăса, сулă çинчи таканран çакса вĕлерсе, сулли-мĕнĕпех Атăл тăрăх юхтарса яни

çинчен те вуланă эпир. (А. С. Пушкинăн «Капитан хĕрĕ» романри «сиктерсе хăварнă сыпăк»).

А. М. Горькие ахальтен ĕçе мухтакан темен-çке: «Пăрахут çинче» калаврa (1913 ç.) вăл чăвашсем вутă йăтнине хитре çырса кăтартнă.

Чулхула крайĕнчи Мурашкино ялĕ пирки сăмах хускалсан, Алексей Максимович çакна пĕлтерет: вăл енче çӳренĕ эпĕ, унти халăх чухăн пулман, кĕрĕксем-тăлăпсем çĕлесе сутса услам тăватчĕç, эрехпе ашкăнатчĕç: тарçăра вĕсем панче пуринчен ытла чăвашсемпе мăкшăсемччĕ, тет. («Калаçса ларни», 1934 ç.)

А. М. Горькин тепĕр документне илсе кăтартма нимле комментари те кирлĕ мар пуль. Вăл ăпала Аслă Отечественнăй вăрçăччен тухса тăнă «Наши достижения» журнал редакцин заведующийĕ В. Т. Бобрышев патне 1935 çулта çырнă çыру сыпăкĕ. Акă вăл сăмахсем:

«Эсир «Н. Д.» («Наши достижения» — *Хв. У.*) журнала çырса тăма вак халăхсен писателĕсене явăçтарас тенине — пĕтĕмĕшпех ырлатăп, çапах та çакна калас килет. Журналăн Чăваш çĕршывне халалласа кăларнă кĕнеки малтанлăха пырĕ те пуль. Ăна «историллĕрех» тунă пулсан, урăхла каласан, ĕненӳсем, пурнăç условийĕсем, йăласем т. ыт. çинчен çырнă пулсан, вăл лайăхрах, интереслĕрех пулма пултарнă. Чăваш çĕршывĕн хăйне евĕрлĕхĕ трахом чирĕнче мар, вăл акă мĕнре: чăваш хресченĕсем 90-мĕш çулсенчех ырă çанталăкшăн Мирликийский Микулай турăш тутине хăйма сĕрсе тав тунă; начар çанталăкшăн — ăна килкартине илсе тухса, çĕтĕк çăпата çине хунă. Чăвашсем хăйсене çĕр çул ытла Христос тĕнне вĕрентнĕ хыççăн та çапла хăтланнă. Язычество аваллăхне çапла пăхăнса пурăннине ырламалла, çакă вăл — халăх хăйĕн тивĕçлĕхне упранине кăтартакан паллă».

А. М. Горький чăвашсен пурнăçĕпе кĕнекесем вуласа та паллашнă пулас, киреметсем таранччен пĕлет. («Юмăç карчăк» калав.)

Иваниха Христус турра вăрçать: «Путсĕр турă эс, кĕвĕç, çиллес, çын турри мар, çук! Çынсене йывăр санпа», тет.

Горький яланах интернационалист пулнă, халăхсен туслăхне мухтанă, ăна хăйĕн произведенийĕсенче кăтартма тăрăшнă. «Туслăх вăл пирĕн çунат», тенĕччĕ-çке пĕр ăслă çын. Патша самани пусмăрланипе кая юлнă халăхсен литературисене, вăл шутрах чăваш çыравçи-

семпе кĕнекеçисене те пур майсемпе пулăшса пынă А. М. Горький. Вăл тунă пархатарлă ĕçсене никам шутласа кăлараймĕ. Инкеке лекнĕ писательсене хăтарнă вăл. Кĕнекисене умсăмахсем çыра-çыра панă. Пирĕн темиçе литератора Мускаври вырăсла журналсене çырма ўкĕтленĕ. Пĕр писатель хăйĕн кĕнекинче чăваш халăхне кўрентермелли сăмахсем çапса кăларсан, чăваш çыравçисем хирĕçленине пăхмасăрах ăна çаплипех иккĕмĕшвиççĕмĕш хут та пичетлеттерсен, пирĕн «Канаш» союзĕ ирĕксĕрех А. М. Горькине çырса пĕлтернĕ пулнă. Çавăнтан вара кĕнекене чиперех юсаса кăларнăччĕ. Эпĕ те вуланă ăна. Ытти енчен тиркемелле мар вăл романа.

Тĕрлĕ халăх писателĕсем хушшинче Горький хăйне диспетчер пек туйнă пулмалла. Вĕсене пĕр-пĕринпе паллаштарнă вăл, çыхăну тытма пулăшнă. Пĕр-пĕр халăх çыннинчен çĕннине мĕн те пулин пĕлсен, Алексей Максимович ăна çийĕнчех ыттисене пĕлтерме васканă.

1928 çул пуçламăшĕнче М. Юман Чăваш республикин хуçалăхпа культура çитĕнĕвĕсем çинчен Италире пурăнакан А. М. Горькине çырса пĕлтернĕ пулнă. Аслă писатель Юмана çапла хуравланă:

«Хисеплĕ юлташăм!

Сирĕн çав тери интереслĕ çырăвăршăн, Эсир мана революцин тата тепĕр культурăллă пысăк çĕнтерĕвĕсенчен пĕринпе паллаштарнăшăн эпĕ Сире чĕреренех тав тăватăп.

Паллах ĕнтĕ, кĕçех эпĕ Сирĕн халăхăр хушшинче культура сарăлса пыни çинчен çырăп, вырăс хаçачĕжурналĕсенче те, тата ытти çĕршывсеннинче те çырса кăларатăп пулĕ».

Чăнах та, нумай та вăхăт иртмест, А. М. Горький «Ансăрлăхпа пессимизма хирĕç» ятлă статйинче чăвашсене аса илет:

«...акă факт: 1905 çулта чăваш халăхĕ * хаçат кăларма хăтланса пăхнă пулнă, вăл хаçат пĕр çул хушши тухса тăнă; ăна пĕр миллион чăвашран пин çын çырăнса илсе вуланă. Юлашки 10 çул хушшинче чăвашсем 5 хаçат кăларса тăраççĕ, пĕр хаçачĕн тиражĕ халех 10 пинрен иртнĕ; корреспондентсен йышĕ пине çывхарать; чăвашсен кĕнеке издательстви пур; Шупашкарта наци музейĕ, библиотека, оркестр, хор туса хунă. Аслă

* А. М. Горькин — «чăвашсен ăрăвĕ». (*Хв. У.*)

шкултан вӗренсе тухнисем революциччен 30 чӑваш пулнӑ, халӗ вӗсем — 600».

Ку статьяна эпӗ чи малтан 1928 ҫулта хаҫатра мар — ун чух пирӗн, ачасен, хаҫат туянмалӑх укҫа ҫукчӗ — «Огонек» журнал ҫумне хушса кӑларакан пӗчӗк кӗнекере те мар (ку сыпӑка ҫавӑнтан ҫаптарса илнӗ), Самар хулинче урам кӗтессинчи тумба ҫумне ҫыпӑҫтарса хунӑ ҫӗрте вуласа курнӑччӗ. Ӑна хутӑн пӗр енне ҫапнӑччӗ пулмалла.

М. Юмана ырӑ хыпарсемшӗн тав туса ответ панӑ хыҫҫӑн шӑп пӗр уйӑхран, 1928 ҫулхи мартӑн 23-мӗшӗнче, Алексей Максимович Швейцарине Ромэн Роллан патне ҫырать:

«...Атӑл тӑрӑхӗнчи йӑхсен — чӑвашсен, ирҫе-мӑкшӑсен, ҫармӑссен,— Кавказпа Ҫӗпӗрти йӑхсенни пекех, хӑйсен хаҫат-журнал пур, вӗсем музыка шкулӗсем, музейсем, кӗнеке издательствисем уҫҫӗ, хӑйсем хушшинчен проза ҫыракансемпе поэтсене ҫитӗнтереҫҫӗ. Пӗр миллионлӑ чӑваш халӑхӗ хӑйсен тӗп хулинче Шупашкарта, Атӑл ҫинче, вунӑ хаҫат кӑларса тӑрать, вӗсенчен пӗрин тиражӗ 10 пинтен те ытла...»

Тӑван ҫӗршыв тӑрӑх курса ҫӳреме тухсанхи тӗлпулура Тбилиси хулинче те 1928 ҫулхи июльте Алексей Максимович Чӑваш республикин культури мӗн тери хӑвӑрт аталанса пыни ҫинчен савӑнса каласа парать. («А. М. Горький архивӗнчен». «Дружба народов» журнал. 1968 ҫ., 3-мӗш №).

«Эпир пурте лайӑх пӗлсе тӑракан Окуров хули пек хуласем халӗ социализмла культурӑсен центрӗсем пулса тӑраҫҫӗ,— тесе ҫырать Горький хӑйӗн «Чӑн пурнӑҫ ҫинчен» («О действительности») ятлӑ тепӗр статйинче.— Ҫакӑ вӑл юмахри майлӑ, анчах — факт. Пушкӑрт ҫӗршывӗпе Узбекистан, чӑтлӑх вӑрманлӑ Ҫӗпӗрпе Карели, Молдавипе Чӑваш ҫӗршывӗ — пурте пӗр сасӑпа савӑнӑҫлӑн та мӑнаҫлӑн калаҫҫӗ: чӗрӗлсе ҫӗнӗ пурнӑҫпа пурӑнма тытӑнтӑмӑр, ура ҫине тӑтӑмӑр, ӗҫлетпӗр, хамӑр ӗҫӗн аслӑ пӗлтерӗшне ӑнланатпӑр, сывӑ пултӑр парти, пирӗн ҫулпуҫ, теҫҫӗ».

Ҫак ҫӳлте асӑннисем пурте: писатель канашӗсем, ҫынна инкекрен хӑтарни, ӑна ӗҫлеме хавхалантарни, Чӑваш ҫӗршывӗн ҫитӗнӗвӗсем ҫинчен ытти республикӑсемпе крайсене пӗлтерни т. ыт. те — пире, чӑвашсене, тӳрремӗнех пулӑшни пулсан, Горький кӗнекисен уссине мӗнле компьютер шутласа кӑларма пултарӗ?!. Тата

миçе ăру вуласа савăнĕ вĕсене, хăйсене те пурнăçа ăнланма, илеме туйма, киревсĕрлĕхе палласа илме вĕрене̌!

Аслă писатель произведенийĕсене чăвашла нумай куçарса кăларнă. Хăшпĕрине, «Тăвăл йыхравçи», «Кăйкăр çинчен хывнă юрă», «Хĕрпе Вилĕм» пек пĕчĕкрех калăплисене, ик-виçшер хут та куçарса пăхнă. Çапах та Горький кĕнекисем чăвашла та вырăсли пекех вуланаççĕ теесси инçе-ха пирĕн. Чи лайăх куçарнă «Фома Гордеев» романа та глаголсен курмасăр иртнĕ вăхăчĕ («çаппа пулнă», «килнĕ», «кайнă» тенĕ евĕрлĕ сăмах çаврăнăшĕсем) йывăрлатать. Чаплă «Амăшĕ» романа темиçе çын куçарнипе унăн стиль пĕрлĕхне тытса пырайман. «Ача чухне», «Çынсем патĕнче», «Манăн университетсем» трилогие йăлтах çĕнĕрен куçарсан та пăсмĕччĕ, мĕншĕн тесен вĕсем ку халлĕн подстрочникрен те нумай уйрăм мар. Анчах халь тин çĕнĕрен куçарасси пулмасть те мар-и. Горькие ăнланма пултаракансем халь ытларах та ытларах ăна вырăсла вулаççĕ.

Иккĕшĕнчен пĕри пултăрччĕ вăл: е, куçарас-тăк, лайăх куçарас, вăл произведени яланлăхах чăваш литературин активне кĕтĕр, чăвашла çырнă произведени пек вулантăр; е — куçарас та мар. Япăх куçарни вулакана кĕнекерен пистерни кăна.

А. М. Горькипе чăвашсем. Аслă писатель пултарулăхне çĕр айĕпе те, çĕр çийĕпе те элес-мелес сарăлса кайнă кĕреш юманпа танлаштарас пулсан, эпир хускатнă тема çав йывăçăн пĕр пĕчĕк туратти. Анчах йĕрлеме тытăнсан, кун пирки те кĕнеке çырма пулать. Эп ун картине çеç палăртса тухрăм. Тата материалне пуçтарнă ĕнтĕ. Ăна тĕплесе çырасси литературоведсемпе публицистсен ĕçĕ пулĕ.

*1978.*

## ХАЛĂХ ПОЭЧĔ

Эпĕ пĕчĕккĕ чухне совет саманинче çырса пуйăннă вырăс писателĕсенчен виçĕ ята тăтăшах илтеттĕмĕр: Максим Горький, Демьян Бедный, Владимир Маяковский. Пирĕн ялти Якрав Пракахвийĕ (Прокофий Евграфович Филиппов), тарçăра та, вăрçăра та çӳресе курнă çын, вырăсла перкелешме çеç мар, вулама-çырма та вĕреннĕскер, Горький произведенийĕсене пире халап янă пек каласа паратчĕ. Çуркуннесенче, юр маларах кайса

пĕтнĕ çерем çине сурăхсем хăваласа тухсан, е утсемпе выртмана-мĕне кайсан, эпир тӳрех çав юмахçа хупăрласа илеттĕмĕр:

— Малалла кала, Пракахви пичче!

Пуçланса каятчĕ вара шăкăл-шăкăл калаçу. Вуласа пĕлни çумне нумай чухне урăх çынсенчен илтни те, юмахçă хăй шухăшласа кăларни те хушăнатчĕ пулмалла, пĕр калавах вăл пире темиçе тĕрлĕ те каласа паратчĕ. Хăшпĕр чухне Данко таçта çичĕ тинĕс уттинче çуралнă, тетчĕ, тепĕр чухне вăл сасартăках чăвашсене темĕнле шурлăхран ертсе тухнă улăп пулса тăратчĕ.

Хамăр та кăшт-кашт вырăсла ăнкара пуçласан, хăлхана пырса кĕнĕ кашни сăмахах чăвашла куçаркалама хăтланнă май, эпир, пĕчĕк ачасем, çав виçĕ хушамат чăвашла мĕне пĕлтернине те ăнланма тăрăшаттăмăр. Максим Горький — Йӳçĕ Макçăм (пĕр журналта ăна ун чухне чăнах та çапла куçарса çырнăччĕ), Демьян Бедный — Чухăн Тимьян, Маяковский — маяк пек çул кăтартса пыракан çын...

Мĕн хăй астăвассах юрлă пурнăçпа пурăннă Пракахви пичче вĕсем çинчен çамрăксене çапла ăнлантаратчĕ:

— Вăл каçет-кĕнеке кăларакансем виççĕшĕ те çук çынсем хушшинчен тухнă, хвамилийĕсенченех курăнать. Çавăнпа вĕсем хамăр майлă çапăçаççĕ те,— тетчĕ. (Салтак пулса курнă çын, Пракахви пичче çав виçĕ писателе те салтаксем пулĕ тесе шутлатчĕ.)

Сăмахĕсене йĕркеллĕ ăнланаймасан та, эпир ун чухне Демьян Беднийăн «Проводы» (Асату) ятлă юррине шăрантарма юрататтăмăр. Темиçе ача пĕрле пулсанах, выртмара-и, ăçта та пулин утнă чухне-и — яланах «Асату» янăратчĕ.

Çырăва сахал вĕреннĕ Пракахви пичче ăнлантарнинче, тĕрĕс маррипе пĕрлех, тĕрĕсси те нумай пулнă-мĕн, эпĕ ăна ӳсерехпе лайăх чухласа илтĕм.

«Вĕсем хамăр майлă çапăçаççĕ!»

Унтанпа эпĕ çав виçĕ писателĕн творчестви çинчен çĕр те пĕр доклад та лекци итленĕ пулĕ, çапах Пракахви пичче сăмахĕ, паян каланă пекех, чĕре варринче тăрать. Пит те тĕрĕс каланă — çав аслă вырăс халăхĕн пысăк писателĕсем мĕн хăйсен пурнăçĕ тăршшĕпех ĕççыннисен ырлăхĕшĕн кĕрешнĕ. Çавăнпа вĕсене пĕтĕм халăх, вăл шутрах чăваш халăхĕ те, яланах ырă сунса, тав туса асăнать.

Кĕнекисене те юратса вулать.

Демьян Бедныйăн ятне асăнсанах, совет поэзийĕн пĕтĕм пысăк «хуçалăхĕ», унăн пур тĕрлĕ форми аса килет. Мĕн кăна çырман вăл хăй ĕмĕрĕнче! (Демьян Бедный 1883 çулта çуралнă, 1945 çулта вилнĕ.) Сăвă-юрă, поэмăсем, юмахсем, юптару, фельетон, памфлет, пĕрерикшер йĕркеллĕ лозунгсем... Публицистика, лирика. Хăшпĕр чухне ун сасси шăпчăк юрри пек çепĕç, тепĕр чухне хĕçрен çивĕч. Унтан сасартăк тимĕр кĕрлени янăраса каять, хĕллехи хаяр çил пек, з, ж, г, д саспаллисем касса çунтарма тытăнаççĕ:

Движутся, движутся, движутся, движутся,
В цепи железными звеньями нижутся,
Поступью гулкою грозно идут,
Грозно идут,
Идут,
Идут
На последний, на главный редут.

Çĕр чăмăрĕ тăрăх çĕнĕ хуçа — пролетариат утать! (1922 ç. çырнă «Главная улица» поэма.)

Вăй-хăват тĕлĕшпе Демьян Бедныйăн уйрăммăн сăвви-юррисем кăна е поэмисем, е юптарăвĕсем çеç те темиçе ята историе хăвармалăх пур. Чылай енчен вăл ытти поэтсем валли çул уçса пынă. Тата унăн сăввисем, юррисем, калавĕсем «вообще» сăвăсем, «вообще» юрăсем мар, шăп кăна кирлĕ вăхăтра, халăх ыйтнă вăхăтра çырса кăларнă произведенисем. Çавăнпа вĕсем пичетленсе тухсан тепĕр куннех пĕтĕм çĕршывĕпе саралнă, юррисене те пĕтĕм халăх юрла пуçланă. Демьян Бедныйăн «Асату» ятлă юррине пирĕн çĕршывра пур халăхсем те хăйсен тăван чĕлхипе юрлатчĕç, халĕ те юрлаççĕ. Ăна поэт 1918 çулта чăвашсемпе юнашар Сĕве хулинче çырнă пулнă. Ăна чи малтан вуланă, итленĕ, юрланă çынсем шутĕнче чăваш салтакĕсем те нумай пулнă.

Демьян Бедный — поэт-агитатор. Унăн творчестви «Правда» хаçатăн историйĕпе уйрăлми çыхăнса тăрать. 1912 çулхи майăн 5-мĕшĕнче пичетленсе тухнă пĕрремĕш номертен пуçласа, мĕн хăй виличченех Демьян Бедный «Правда» хаçатăн сотрудникĕ пулнă.

Граждан вăрçи çулĕсенче поэт, агитатор пулса, çар агитвагонĕнче ĕçленĕ, фронтран фронта куçса çӳренĕ. Унăн кĕнекисем, çапăçу хатĕрĕсемпе пĕрлех, кашни сал-

так аллинче пулнӑ. Вӗсене тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫма хавхалантарнӑ.

Ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ произведенисем ҫырма, хӗрсе ӗҫлеме поэта йӗри-тавра пӑшал-тупӑ сасси кӗрлесе тӑни те, сӗтел вырӑнне тенкел ҫеҫ пулни те, вагон пӗр чарӑнмасӑр малалла чупни те — нимӗн те чӑрмантарайман. Вуҫех урӑхла: ҫӗршывшӑн хӑрушӑ вӑхӑтсенче Демьян Бедный яланах ытти вӑхӑтринчен ытларах, хӗрӳрех, тухӑҫлӑрах ӗҫленӗ.

Совет влаҫӗн малтанхи ҫулӗсем.

Совет строительстви пуҫланни...

Демьян Бедный ҫӗнӗ хуласем, заводсем, шкулсем туни ҫинчен ҫырать, пурнӑҫ ҫӗнелсе улшӑннӑ май, совет ҫыннисем те улшӑннине мухтаса юрлать. Унӑн ӗмӗчӗ-шухӑшӗ — халӑх ӗмӗт-шухӑшӗ.

Демьян Бедный ҫырса кӑларнӑ 200 ытла кӗнекере, энциклопедири пек, пирӗн вӑхӑтри саманан пур енӗсене те курма пулать.

Ҫӗршыв интересӗсемпе пурӑннӑ писатель патша саманинче вилсе пӗтес патне ҫитнӗ вак халӑхсем халӗ, аслӑ вырӑс халӑхӗ куллен пулӑшса пынипе ура ҫине тӑнине, вӗсен пурнӑҫӗ тӗпренех ҫӗнелсе улшӑннине те курмасӑр тӑма пултарайман. 1935 ҫулӑн пуҫламӑшӗнче колхозник-ударниксен Пӗтӗм Союзри иккӗмӗш съездӗнче тухса каланӑ сӑмахра Демьян Бедный чӑвашсене те асӑнать:

«...Чӑваш республикинчен килнӗ пӗр ҫын кунта пӗр хресчен хӑйӗн халькхи ялне 5 ҫул иртсен таврӑннӑ та палласа илеймесӗр малалла шыраса кайни ҫинчен чуна пырса тивмелле каласа пачӗ. Ҫапла, пирӗн пурнӑҫ паллашмалла мар улшӑнчӗ, пирӗн ялсемпе пирӗн хуласем те палласа илмелле мар пулса тӑчӗҫ» *.

---

* «Чӑваш республикинчен килнӗ пӗр ҫын» — Вӑрнар районӗнчи Кольцовкӑри колхоз председателӗ С. К. Коротков делегат пулнӑ. Колхозник-ударниксен Пӗтӗм Союзри иккӗмӗш съездӗнче тухса каланӑ сӑмахӗнче унӑн ҫакӑн пек вырӑнсем пур:

«...пирӗн Чӑваш республики, ӗлӗк чи кая юлнӑ ҫӗршыв, сахал мар ҫитӗнӳсем турӗ... Чӑваш республикинчи колхозсем пуян та культурӑллӑ пулса пыраҫҫӗ.

Тӗслӗхшӗн пирӗн колхоза илсен, мӗн куратпӑр-ха эпир? Пирӗн ял революциччен чи кая юлнӑ, чи тӗттӗм те пусӑрӑнчӑк ял пулнӑ. Ял ҫыннисенчен 75 процентӗ трахомӑпа асапланнӑ. Пӗтӗмпе те икӗ ҫын ҫеҫ хут пӗлнӗ, вӗсем те пулин урӑх ҫӗртен пынисем пулнӑ... Пӑхӑр-ха ӗнтӗ, юлашки 5 ҫул хушшинче мӗн пулса тӑчӗ... Пирӗн яла палласа илме ҫук. Куна ҫирӗплетме пӗр факт ҫеҫ илмелле. Пирӗн ял ҫынни — красноармеец, халӗ летчик Храмов Гаврил ялта

1935 çулхи августăн 25-мĕшĕнче «Правда» хаçатра пĕр кĕске хыпар тухнăччĕ. Унта ăшăкланса юлнă Сиваш тĕпĕнче 1920 çулта вилнĕ пĕр красноармеецăн çĕрмесĕр выртнă виллине тупни çинчен, ун çумĕнче сыхланса юлнă документсем тăрăх, вăл салтак Хусан кĕпĕрнинче çуралса ӳснĕ Прохор Иванов ятлă çын пулни çинчен пĕлтернĕччĕ. Прохор Иванов совет çĕршывне хӳтĕлесе пуçне хунă. 1920 çулта Перекопа шуррисенчен туртса илнĕ чухне вăл, хаяр çапăçура «Интернационал» юрласа, паттăр вилĕмĕпе вилнĕ пулнă.

Поэт куçĕ умĕнчен çак пĕчĕк заметка та асăрханмасăр юлма пултарайман. Вăл тухнă хыççăн нумай та иртмерĕ, «Правда» хаçатра Демьян Бедныйăн «Красноармеец Иванов» ятлă пысăк поэми пичетленсе тухрĕ. Ăна çырнă вăхăтра поэт Прохор Иванов Элĕк вулăсĕнчи Йăлкăш чăвашĕ пулнине пĕлмен-мĕн. (Ун çинчен каярахпа çеç йĕрлесе тупса çырнăччĕ.) Шывпа исленсе çĕтĕлсе пĕтнĕ документра вулăс ячĕн пуçламăшпе вĕçĕнчи саспаллисене тата ял ячĕн темиçе саспаллине кăна уйăрса илме май пулнă.

Поэмăра Демьян Бедный çапла çырать:

Ты — неизвестный — стал известным,
Убитый — снова стал живым,
Живым примером повсеместным,
Несокрушимо стойким, честным
Героем нашим боевым.
Живой твой образ — он повсюду.
Нет, не убито, не мертво:
В строенья жизни, равной чуду,
Передалось родному люду
Биенье сердца твоего.

Паттăр çын ячĕ вилсен те çухалмасть. Унăн мухтавне эпир пур çĕрте те куратпăр:

Ты — соучастник в общей доле.
В сталеупорной нашей воле
Мы видим волю и твою,—
В потоке силы — в цехе, в поле,
В подземной шахте, в новой школе —

---

5 çул хушши çеç пулманччĕ. Нумаях пулмасть вăл отпуска килчĕ. Хамăр станцăра аннă та вăл каçхине ял патне пырса çитнĕ, пăхнă та хăй 22 çул пурăннă яла палласа илеймен, кӳршĕ яла иртсе кайнă. Лерен тин ăна каялла таврăнма хушнă».

Мы видим силу и твою,—
В советском творческом обличьи
Обличье видим и твое,—
В гигантском партии величьи
Величье видим и твое.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче утмăлалла çывхарнă поэт çĕнĕрен хастарланса çырма тытăнать. Фашистсене питлесе, «Правда» хаçатра юптарусем, фельетонсем, памфлетсем çырнипе пĕрлех вăл журналта «Степан Завгородный» ятлă пысăк поэма пичетлесе кăларать. Совет çыннисен фронтрипе тылри паттăрлăхне мухтаса нумай сăвă çырать. Акă вĕсенчен пĕри:

ПОБЕДА
*(Чувашская сказка)*

Жил на свете петушок —
Золотой гребешок.
Перья красные на нем
Цветом спорили с огнем.
Рос и креп он с каждым днем.
Его росту и красе
Удивлялись люди все.
— Ух ты! — Ух! —
— Вот петух,
Так петух! —
Удивлялись люди вслух.
Вдруг петух явился черный,—
Голос дикий, нрав задорный.
Стал он с красным воевать,
Стал он красного клевать.
Красный бьется в свой черед
Замечательно.
Только черный верх берет:
— Заклюю тебя! — орет,—
Окончательно!
Жить на свете, знай ты, хам,
Только черным петухам,
Всем же прочим карачун! —
Черный так орал драчун.
Глядь, а красный в эту пору
Наступил ему на шпору
Да на спину вмиг —
Прыг

И по черепу меж глаз,
Долбанул злодея — раз!
Тот упал и не вздохнул,
Сразу ноги протянул.
Вот как дело вышло чисто;
Победитель голосисто
На своем родном току
Прокричал: — ку-ка-ре-ку.

* * *

Сказка вся. Я точку ставлю,
В заключенье все ж прибавлю,
Коль подсказ необходим,—
В сказке скрыта мысль подспудно.
Как бороться нам ни трудно,
Мы фашистов победим!

Ку сăвă 1941 çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнче «Пионерская правда» хаçатра пичетленсе тухнăччĕ.

1945 çулăн пуçламăшĕнче эпир, Иван Мучипе пĕрле, «Русские писатели о чувашах» сборник валли материалсем пуçтарнă май, Демьян Бедный патне çыру ятăмăр. Унта эпир поэтăн «Красноармеец Иванов» ятлă поэмине кĕртесси пирки пĕлтернĕччĕ тата поэт каярахри изданисенче ăна улăштарнипе улăштарманнине ыйтнăччĕ.

Часах хурав та килчĕ. Акă вăл çыру:

ДЕМЬЯН БЕДНЫЙ
МОСКВА
ул. Горького, 8, 80
29 ЯНВАРЯ 1945 г.

*В чувашскую центральную книжную палату*

Уважаемые товарищи, свою повесть «Красноармеец Иванов» я не подвергал изменениям, да она в них и не нуждается, как я убедился, просмотрев ее в связи с Вашим желанием переиздать ее. Я не знал, что мой герой— чуваш. Очень рад был узнать от Вас об этом. Наслышан о Чувашии много: хорошо живете и работаете. Желаю вам всем дальнейшего успеха.

Сердечный привет!

*Демьян Бедный».*

Пирĕн çырăва илсе вуланă хыççăн поэт чăвашсем çинчен асăннă хăшпĕр материалсене тепĕр хут пăхса

тухнӑ пулас, кӗҫех «Правда» хаҫатра унӑн ҫӗнӗ сӑвви пичетленсе тухрӗ.

### ЛЮБУЮ РАЗРЕШИМ ЗАДАЧУ!

Пусть знают, что колхозы наши крепки и непобедимы, что в любую минуту они готовы разрешить любую задачу, которую поставит перед нами наша партия!

(Из речи председателя колхоза им. Сталина Вурнарского района Чувашской АССР С. К. Короткова на Втором съезде колхозников-ударников.)

Цитату точную даю.
Товарищ Коротков, такой простой наружно,
Пророчеством таким закончил речь свою.
Мы все его слова приветствовали дружно.
Товарищ Коротков — где он сейчас? В строю?
В колхозе ль на посту все делает, что нужно,
Чтоб фронту и стране помочь?
Его пророчество — оно сбылось точь-в-точь!
Вот что теперь сказать хотим мы,
Свои геройские приветствуя полки:
Колхозы наши все, как и они, крепки
И, как они, непобедимы!
С отвагой боевой колхозная страда,
Совместно окрылив взаимную удачу,
Мир убедили весь, что воля их тверда
И что они в любых условиях всегда
Любую разрешат задачу!

Ҫак сӑвва ҫырнӑ хыҫҫӑн Демьян Бедный нумай та пурӑнаймарӗ. Тен, вӑл ӑна ҫырнӑ чухнех чирлӗ пулнӑ пулӗ. Ӑна 1945 ҫулхи май уйӑхӗн вӗҫӗнче, аслӑ Ҫӗнтерӳ Кунне уявланӑ хыҫҫӑн, пытарнӑ. Унӑн чи юлашки сӑвви те «Правда» хаҫатра Ҫӗнтерӳ Кунӗнче, 1945 ҫулхи майӑн 9-мӗшӗнче, пичетленсе тухнӑччӗ. Ҫапла вара поэт совет халӑхне хаяр тӑшмана ҫӗнтерме хӑй те пулӑшнине курса вилнӗ.

Демьян Бедный ӗмӗрӗ тӑршшӗпех ӗҫхалӑхне пулӑшнӑ.

*1953.*

## А. А. ФАДЕЕВА АСА ИЛНИ

В. Долговăн «А. А. Фадеев тата чăваш литератури» ятлă интереслĕ фактсемлĕ статйи çумне («Тăван Атăл» журналăн 1976 çулхи 12-мĕш №) манăн тепĕр икĕ япала хушас килчĕ. Пĕри — документ, иккĕмĕшĕ — асаилӳ.

В. Долгов çапла çырать:

«...А. Фадеевăн 1939 çулхи апрелĕн 16-мĕшĕнче «Правда» хаçатра тухнă... статйи çинче кăштах чарăнса тăрас килет. Автор унта, иртнĕ саманасенчен юлнă культура пуянлăхĕпе мĕнле усă курасси çинчен каланă май, çав ĕçри çитменлĕхсемпе йăнăшсене кăтартса парать, пур çĕрте те «национализм» тата ытти тĕрлĕ «-измсем» шыракан этемсене, вульгарлă социологсене, нигилистсене большевикла критиклет», тенĕ.

Малалла В. Долгов А. Фадеев сăмахĕсене илнĕ. Вĕсем çаксем:

«Совет Союзĕнчи республикăсенче пирĕнпе идея тĕлĕшĕпе килĕшмен этемсем хăйсен халăхĕсен иртнĕ саманари культуринче классикла пуянлăх тунă паллă представительсене варалама тăрăшни ăнсăртран пулман. Ĕлĕк пусмăрта пурăннă халăхсен классикĕсен произведенийĕсенче национализмăн пысăк е пĕчĕк паллисене тупма тăрăшса, çав этемсем классиксен ун чухнехи прогрессивлă ĕçне-хĕлне тиркенĕ, вĕсене хăйсене «националистсем» туса хунă, кĕнекисене пичетлесе кăларма чарнă. Халĕ сиен кӳрекен çав ĕçсене нумайăшне тӳрлетнĕ. Анчах классикла пуянлăхăн халăха культура енĕпе воспитани парас тĕлĕшри пысăкран та пысăк пĕлтерĕшне, уйрăмах искусство работникĕсен кадрĕсене воспитани парас тĕлĕшри пĕлтерĕшне, нацилле республикăсемпе облаçсен руководителĕсенчен хăшпĕрисем пĕтĕмĕшпех ăнланса илеймен-ха».

«А. А. Фадеев статйинче кăтартса панă йăнăшсемпе çитменлĕхсем,— тет В. Долгов,— революцичченхи культура çыннисене тĕрлĕ «-измсемпе» тĕне кĕртесси чăваш литературинче те пулнă».

Унтан совет писателĕсен союзне нумай вăхăт хушши ертсе пынă Фадеев 1940 çулта пирĕн К. В. Ивановпа И. Я. Яковлева хӳтĕлесе парти Чăваш обкомне çырнă икĕ çырăва илсе кăтартнă. Шел, Фадеевăн тепĕр çырăвĕ пирки асăнман критик. Унта та Александр Александрович çав ыйтăвах хускатать.

Пирĕн патра Мускаври Чăвашсен Академи театрне

пуçласа яраканĕ, унăн авторĕ тата артисчĕ, чăваш писателĕ, сценарист та драматург Максимов-Кошкинский юлташ пурăнать.

Хальхи вăхăтра вăл çав тери хĕрсе ĕçлет, пьесăсем, сценарисем çырать, Мускаври кино-фабрикăсенчен пĕрин ĕçне хутшăнать, тенĕ çав çырура.

А. Фадеев, чăваш писательне айăплама пăрахса, ĕçлеме услови туса пама ыйтнă.

Халь ĕнтĕ асаилӳ пирки.

1934 çулхи сентябрь вĕçнеллеччĕ-ши вăл, Хабаровск хулинчи интеллигенци пухăвĕнче А. А. Фадеев писательсен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш съезчĕн итогĕсем çинчен каласа пачĕ. Совет литератури хăйĕн пĕтĕм ăшчиккипе интернацилле литература пулнине, çав вăхăтрах нацилле пуян формăсемпе аталанса пынине палăртса, вăл çапла каланă-мĕн.

«Совет Союзĕнчи мĕнпур национальноçсем çирĕп пĕрлĕхпе пурăннине пула, съездра совет илемлĕ литературин интернацилле характерĕ уйрăмах хытă палăрчĕ. Съездра пирĕн Союзри аллă икĕ национальность литературин представителĕсем пулчĕç. Съезд... вырăссен, украинецсен, белоруссен, грузинсен представителĕсене, çавăнпа пĕрлех тата ĕлĕкрех çырулăхсăр пурăннă халăхсен, сăмахран, пушкăртсен, чăвашсен, мордвасен представителĕсене, çурçĕрти тата Дагестанри сахал йышлă халăхсен представителĕсене пĕрлештерчĕ...»

Мухтаннă пек ан пултăр та, Хабаровскри çав пухура эпĕ те пултăм, Фадеевăн çав сăмахĕсене илтрĕм. Чатах çав сăмахсене мар ĕнтĕ. Çав шухăша палăртакан сăмахсене. Александр Александрович хăйĕн докладне хут тăрăх вуламарĕ, каласа пачĕ.

Фадеевпа курса калаçасси çапла пулса тухрĕ.

1932 çулта вербовкăпа Хабаровск хулине пынăскер, эпĕ 1934 çулта педтехникумра вĕренеттĕм. Техникум çурчĕ те, общежити те пирĕн хула варринче пĕр çуртраччĕ — Запарин урамĕнче, 45. Хабаровск хулин аслă урамĕнчен пĕр кварталта çеç вăл.

Вăл вăхăтра ĕнтĕ эпĕ хама чăн-чăн писателех тесе шутлаттăм. Пичетленме çăмăлччĕ ун чухне. Журналсем нумайччĕ. Вулаттăм-вулаттăм та нивушлĕ кун евĕрлĕ эпĕ çыраймăп? — теттĕм. Ларнă — хăртаса хунă. Пĕрремĕш калавласкерех 1930 çулта «Капкăна» ярса пăхрăм çапла — пичетлерĕç. Татах çыр, терĕç. Тата темиçе юмореска ятăм — вĕсем те çапăнса тухрĕç.

Унтан хулăнрах кĕнекесем вулама тытăнтăм. Арçын ача ытларах мĕн çинчен вулама юрататъ? Вăрçă çинчен. «Железный поток» унта. «Разгром». «Колчаковщина». «Бронепоезд 14-65». «Партизаны».

Ман калав та çапла ятлăччĕ — «Партизансем». «Сунтал» журналта та тухрĕ вăл, кĕнекере те. Критиксем асăрхарĕç ăна.

Ытти вăрçă калавĕсем те çавах: редакцине ярса пама ĕлкĕрейместĕп — пичетленсе тухаççĕ. Унăн сăлтавне эп каярахпа ăнланса илтĕм. Редакцисенче ĕçлекенсем мана пурнăç курнă çын тенĕ-мĕн. Самарта вăл çулсенче чăваш писателĕсем чылайăн пуçтараннăччĕ. Вăл шутрах Г. Кели критик ашшĕ И. Кузнецов-Сенĕк те пурччĕ. 1933 çулта Самарта вăл фельетонсемпе калавсен пуххи кăларнăччĕ. Хăй йăмăх хураччĕ вăл, çак Сенĕк тенĕскер. Çиллес сăнлăччĕ. Пĕр çынпа та килĕштерме пĕлмест, тетчĕç ун пирки. Эпĕ калавшăн укçа илме пынă тенине илтсен, çак Сенĕк мана касса патĕнче курчĕ те ыйтать:

— Эсĕ Уяр ачи-и? — тет.

— Уярĕ хăех,— тетĕп эп.

— Эсĕ ват çын мар-им вара? — тет.

Хабаровск хулинче эпĕ, Инçетри Хĕвелтухăç крайĕн центрĕнче, унта тухса тăракан пур литература материалĕсене те вуласа тăраттăм темелле. Хăшне-пĕрне вуласа ĕлкĕреймесен те, кураттăм вĕсене. Студент укçипех «На рубеже» журналăн кашни номерне туянаттăм. Петр Комаров, Вячеслав Афанасьев, Семен Бытовой, Анатолий Гай сăвăçсен, Е. Титов критикăн, Петр Кулыгинпа Иван Шабанов прозаиксен ячĕсем пичетре тăтăшах курăнатчĕç. Каярахпа «Сердце Бонивура» роман çырса чапа тухнă Дмитрий Нагишкин эп вĕреннĕ çулсенче ытларах художникчĕ-ха. Биробиджан хулинче пурăнакан Эммануил Казакевич тин çеç пичетленме тытăннăччĕ. «На рубеже» журналта эп унне еврейларан куçарнă сăввисене пĕр-ик хутчен те вуланă. Халĕ Э. Казакевичăн «Звезда», «Двое в степи», «Весна на Одере» т. ыт. произведенийĕсене çирĕм-вăтăр чĕлхене куçарнă.

Эпĕ Хабаровскри писательсен пухăвĕсене çӳреттĕм. Çыравçăсенчен чылайăшне сăнран паллаттăмччĕ. Анчах хам никампа та паллашман. Каласма хăйман. Тепĕр чух писательсем, урамра-мĕн тĕл пулсан, ман çине чăрр пăхса илетчĕç. Кам-ши ку, пирĕн хушăра чĕмсĕр çӳрекенскер, тетчĕç пулмалла. А. Фадеева та хулан аслă урамĕнче тĕл пулкаланă эп. Пурăнасса вăл ун чухне

Мускавра пуранна. Малтан совет писателĕсен союзĕн Оргкомитечĕн ответлă секретарĕ пулнă. Писательсен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш съезчĕ хыççăн — правлени членĕ.

Пур енчен те Инçет Хĕвелтухăçĕпе çыханнă пулнă Александр Александрович пурнăçĕ. Кунта ÿснĕ вăл. Вĕреннĕ. Партие кĕнĕ. Партизансен ретĕнче шуррисене хирĕç çапăçнă. Хăйĕн «Разлив», «Против течения», «Разгром», «Последний из удэге» кĕнекисенче те вăл революцин Инçет Хĕвелтухăçĕнчи малтанхи çулĕсене кăтартса панă.

Ун чухне вăл кунта «Последний из удэге» романĕн 3-мĕшпе 4-мĕш томĕсене çырма «материал» çывăхне килнĕ пулнă-мĕн. 1935 çулта ăна «На рубеже» журналăн ответлă редакторне лартнăччĕ.

Эпĕ пĕрремĕш хут курнă чухне Александр Александрович арăмĕпе—Валерия Герасимова писательницăпа—Амур хĕрринчен парти крайкомĕ еннелле утатчĕ. Сентябрь уйăхĕ пулсан та, çанталăк çуллахилле ăшăччĕ пулас, А. А. Фадеев çар гимнастеркипе çеçчĕ пек астăватăп. Хăй çÿллĕ, яштака, хитреччĕ, спортсменла çăмăллăн утса иртсе кайрĕ. Урамри çынсем вĕсене мансăр та паллакансем пулнă-мĕн, чарăна-чарăна, хыçалтан пăхса юлчĕç.

Эпĕ çыркалакан çын иккенне ĕнтĕ хам вĕренекен педтехникумра та сисе пуçланăччĕ. Е пĕр-пĕр редакцирен штампла çыру пыратчĕ, е гонорар пекки ярса паратчĕç. Укçа илме каймалли пĕлтерĕве пĕррехинче пирĕн общежитие вырăс чĕлхипе литература преподавателĕ Ольга Владимировна Бондарева, хулăн та çав тери вăрвар çын, хăй йăтса анчĕ.

— Ку сирĕн мĕнле укçа, Афанасьев юлташ? — тет.

— Гонорар,— терĕм эп, хам çыравçă иккенне пĕр тăрук пĕтĕм общежити пĕлнипе хĕпĕртесе.

— Сире ăна мĕн те пулин çырнишĕн ярса параççĕ-и?

— Çапла. Калавшăн.

— Ăçта тухнă вăл сирĕн?

— Журналта.

— Мар, эпĕ хăш хулара тетĕп?

— Шупашкарта. Чăвашра.

— Чăвашла-и?

— Чăвашла.

Çакăн хыççăн ыр кăмăллă Ольга Владимировна ман класри сочиненисенче «турă панă хĕлхемсем» курма ты-

тăнчĕ. Ыттисем пек çырнисенех «лайăх» тетчĕ. Эпĕ хама шаннă евĕр, вăл та эпĕ пултарасса ĕненетчĕ пулас.

— Сирĕн вырăсла çырмалла,— терĕ мана Ольга Владимировна пĕрре те, иккĕ те, виççĕ те.— Вара ăна эпир те вулăттăмăр...

Тăван чĕлхепе йĕркеллĕ çырсан та тем пекехчĕ-ха, тесе шухăшлаттăм эпĕ. Ваттисем: алăк патĕнче вырăн пур çинче тĕпеле иртмеççĕ, тенине те манманччĕ-ха. Тĕрĕссипе вырăсла эпĕ чăвашла чухлĕ пĕлместĕмччĕ.

— Эсир кунти писательсемпе паллашман-и? — ыйтрĕ манран Ольга Владимировна.

— Паллашман, анчах чылайăшне пĕлетĕп,— терĕм эп. Вара васкаса ăнлантарса кайрăм.— Писательсен пухăвĕсенче е вĕсем мĕн те пулин сӳтсе явнă чух курнă. Ак ыран та Хабаровскра пысăк пуху пулать. Александр Фадеев совет писателĕсен союзĕн пĕрремĕш съезчĕ пирки каласа парать.— Çав кунхи «Тихоокеанская звезда» хаçатра чăнах та пулас пуху пирки пĕлтерӳ-йыхрав пурччĕ.

— Фадеевне те паллатăр пуль апла? — ĕненмесĕр ыйтрĕ Ольга Владимировна.

— Ăна та паллатăп,— терĕм эп.

— Каятăр-и ыран пухăва?

— Каймасăр, ара!

— Итлĕр-ха, Афанасьев юлташ. Систерĕр-ха, эппин, мана та, пырса курам пĕрре чĕрĕ писательсене.

— Тархасшăн,— терĕм çеç эп, тепĕр кун мĕн виксе тухассине чухламасăр.

Хабаровскри писательсен пухăвĕсем-тĕлпулусем вăл çулхине парти крайкомне хирĕç ларакан лутра çуртра Карл Маркс урамĕнче пулса иртетчĕç. Те политвĕренӳ çурчĕччĕ вăл, те учительсен çурчĕ — маннă халь. Ыранхи пуху та çавăнта пуçтарăнмаллаччĕ.

Эпир Ольга Владимировнăпа пĕр çирĕм минутсем маларах пырса çитрĕмĕр. Халăх самайччĕ ĕнтĕ. Пирĕнпе пĕрле те темиçен кĕчĕç. Александр Александрович президиум сĕтелĕ хушшинче хутсем пăхкаласа ларатчĕ.

— Фадеев килсенех кăтартăр эсир мана,— асăрхаттарчĕ учительница хыттăн, зала кĕнĕ-кĕмен.

— Вăл кунтах,— терĕм эпĕ.— Ав, сĕтел хушшинче...

— Атьăр-ха, кайса паллашар,— тесе Ольга Владимировна мана алăран çатăрласа тытрĕ те сĕтел патнелле ута пачĕ.

Эп пымастăп, ырă мар, кунта пĕтĕм халăх пăхать,

текелесе эпӗ алӑк патне вӗҫерӗнсе юлтӑм. Ольга Владимировна, ватӑ салтак пек, шалалла утрӗ. Президиум сӗтелӗ умне пырса, Фадеев еннелле аллине тӑсрӗ. Александр Александрович ури ҫине сиксе тӑчӗ. Алӑ тытрӗ. Пӗри ҫӳллӗ вӗсенчен, эп курнӑ ҫар тумӗпех; тепри лутрарах, хулӑн, хӑюллӑ, «шултра». Ҫалаҫҫӗ. Мӗн калаҫни илтӗнмест — зал шавлать. Инҫи те инҫерех.

Пӗр-ик минут пек иртрӗ-ши е ҫук-ши, писательпе учительница сасартӑк алӑк еннелле ҫаврӑнчӗҫ, куҫӗсемпе такама шыраҫҫӗ. Эпӗ, вӗсем кама шыранине сиссе, ҫынсен хыҫне вӑтанса пӗшкӗнтӗм. Халӑх, Фадеев хыҫҫӑн сӑнаса, шӑплана пуҫларӗ.

— Афанасьев юлташ! — илтӗнсе кайрӗ ҫав самантра залра Александр Александрович сасси.

Эпӗ тӳрленсе лартӑм. Пирӗн учительница писателе ман еннелле кӑтартрӗ.

— Афанасьев юлташ, килӗр-ха кунта,— чӗнчӗ Александр Александрович, хальхинче тӳрех ман еннелле пӑхса.

Эпӗ, такӑнса е тӑнсӑр пулса ӳкес марччӗ тесе, шӑпланса ларнӑ зал урлӑ президиум сӗтелӗ патнелле танккарӑм. Ҫитрӗм. Хам тарласа чӑм шыва ӳкнӗ, нимӗн те курмастӑп. Фадеев манпа мӗн пулса иртнине ӑнланчӗ курӑнать, ӑшшӑн кулкаласа, хӑех мана сывлӑх сунчӗ, алӑ тытрӗ.

— Ольга Владимировна каласа пачӗ мана сирӗн ҫинчен,— терӗ вӑл кӑмӑллӑн, пӗрре Ольга Владимировна ҫине, тепре ман ҫине хакласа пӑхса.— Сире вӑл ырӑсла ҫыртарасшӑн. Хӑй енчен вӑл тӗрӗс те калать пуль. Хӑй вӗрентекен...— «ача» е «йӗкӗт» тесшӗнччӗ пулас та, Александр Александрович кӑшт такӑннӑ пек пулчӗ те «ҫын» тесе ячӗ.— Хӑй вӗрентекен ҫын мӗн ҫырнине пӗлес килет ӗнтӗ ун. Законлӑ япала вӑл. Анчах, пысӑк хисеппе пӑхсан, сире эп чӑвашлах ҫыртарӑттӑм. Ҫашни хут пӗлекен ҫын хӑйӗн халӑхне пӑрахса кайсан, мӗн пулса тухӗ? Сирӗн ҫыракансем те ытла нумаях мар пулас-ха. Ырӑссен, ав, кунтах мӗн чухлӗ...

Эпӗ лӑпланнине кура, Александр Александрович манран чӑвашсем ҫинчен ыйтса пӗлме тытӑнчӗ. Чӗлхе сирӗн мӗнле, аслӑ шкулсем миҫе, писательсем камсем, мӗнле паллӑ кӗнекесем пур сирӗн халӑхӑн? — тет. Эп хӗрнӗҫем А. А. Фадеев Ольга Владимировна ҫине тӑрӑхласарах пӑхса илчӗ. Куратӑр-и, кам тӗрӗс каларӗ, ҫыннӑн чунӗ Чӑвашрах,— терӗ-ши?

Эпĕ ăна пирĕн халăха пĕлмен тесе. Пĕлнĕ-мĕн вăл чăвашсене. Ну, эппин, тен, ытла халăхах мар пулсан та, пирĕн интеллигенцие чухланă Фадеев, культурăллă пурнăçа пĕлнĕ, хăшпĕр писателе палланă.

Кун пирки В. Долгов статйинче çакăн пек калани пур.

«СССР писателĕсен Пĕрремĕш съездĕнче * Чăваш писателĕсен организацийĕнчен пилĕк делегат пулнă: Н. В. Васильев-Шупуççынни, М. Н. Данилов-Чалтун, А. И. Золотов, И. С. Максимов-Кошкинский, М. Д. Трубина. Сасăламалли правасăр П. П. Хусанкай хутшăннă. Вĕсемсĕр пуçне писательсен Вăтам Атăл организацийĕ (Самар хули) ... В. З. Иванов-Паймена съезд делегатне суйланă пулнă.

Съездăн тăххăрмĕш ларăвĕнче, августăн 23-мĕшĕнче, лару председателĕ А. А. Фадеев чăваш писателĕсен союзĕн правлени председательне А. И. Золотова сăмах панă.

«Пирĕн съезд,— тенĕ чăвашсен делегачĕ,— совет литературин тĕрлĕ чĕлхеллĕ отрячĕсен пĕрлĕхне демонстрацилени пулса тăрать. Совет литературин çак нумай нациллĕ çарĕ кунта, хăйĕн историлле çĕнтерĕвĕсене итогласа, малаллахи класс кĕрешĕвĕсем валли пысăкран та пысăк творчествăллă хăват илет». («Сунтал» журнал, 1934 ç., 8-мĕш №).

Чăваш республикин культуринчи ӳсĕмсем çинчен каланă чух А. Золотов ... «илемлĕ литература пролетарилле диктатурăн 17 çулĕ хушшинче тунă çитĕнĕвĕсем чăннипех пысăк...» пулни çинчен каласа панă, халăх уйрăмах юратакан писательсен ячĕсене асăннă. Вĕсен шутĕнче: Иван Мучи, С. Шăпчăк, И. Максимов-Кошкинский, П. Осипов, Д. Исаев, М. Данилов-Чалтун прозаиксене, С. Элкер, Н. Шупуççынни, В. Митта поэтсене палăртнă. Çавăн пекех вăл съезда вырăс совет литературин чылай произведенине чăвашла куçарса кăларни çинчен пĕлтернĕ. Вăл вăхăтра М. Горькин, А. Серафимовичăн, А. Фадеевăн, Ф. Гладковăн романĕсемпе повеçĕсене... эпир хамăр чĕлхепе вуланă ĕнтĕ.

Пурне те мар, паллах, пĕрер-икшер произведени. М. Горькинне ак ытларах та куçарнă пулнă.

Манпа калаçни А. А. Фадеева чăваш халăхĕн совет

---

* 1934 ç. *Хв. У.*

çулĕсенчи çитĕнĕвĕсем çинчен тепĕр хут аса илтернĕ пулĕ. Халĕ çапла шутлатăп эп.

Пуху пуçланмалла тесе, эпир Ольга Владимировнăпа хамăр вырăна хыçалти рете кайса лартăмăр. Çынсен куçĕ умĕнчен аяккарах ларма эпĕ тархасларăм. Манăн лăпланса çитес килнĕччĕ. Анчах, телейне пĕл те Мускава кай тенешкел, тĕлĕнсе хытмалли мана унта та шыраса тупрĕ...

Икĕ сехет калаçрĕ Александр Александрович, пĕрре хут çине пăхса илмерĕ. Халăх кăшт тунсăхланă пек курăнсан, пĕр-пĕр анекдот каласа хурать те, зал кĕр! кулса ярать. Вара каллех ĕç çине куçать.

Пĕр кулăшне астăватăп. Ăна мĕн пирки каланине çеç маннă.

Америкăри пĕр сар пике Бернард Шоу патне телеграмма çаптарнă, тет. Эпĕ тĕнчере чи хитри, эсир — чи ăсли. Атьăр пĕрлешер. Вара пирĕн ачасем тĕнчере чи хитре те ăслă çынсем пулĕç, тенĕ, тет.

Чаплă драматург пикене çапла ответленĕ:

Пирĕн ачасем сăнран мана, ăспуç тĕлĕшпе сире хывасран хăратăп, пĕрлешесси пулмасть пуль, тенĕ, тет.

А. А. Фадеев писательсен съезчĕн ĕçĕсем, унти тĕлпулусем, паллашусем çинчен каласа пачĕ. Ятарласа доклад тума килнĕ те кĕçех пăрахса каяс çынла ютшăнмасть вăл, хăйне юри хĕртсе ярса та вылямасть, курма тӳр килнисене çеç ыттисене юлташла пĕлтерет; партин литература тĕлĕшпе тытса пыракан политикине çынсене тепĕр хут аса илтерет. Калаçать вăл. Çынсемпе канашлать. Сӳтсе явать...

Те шухăша кайнă пулнă эп, ман хăлхана кĕтмен сăмахсем çурса ячĕç: «Чăвашсем» тени илтĕнчĕ сасартăк. «Шупашкар» терĕç таçта юнашарах. Эп пуçа çĕклерĕм те хытса кайрăм. Фадеев чăвашсем çинчен калать! Революциччен кĕнеке тĕсне курман халăхра çак кĕске 17 çул хушшинче ăста кĕнекеçĕсем, учительсем, артистсем тухнă. Чăвашсен халь хăйсен издательство, институтсем, хаçат-журнал, театр пур. Кам панă çак ырлăхсене? Йăлтах совет влаçĕ панă, тет.

Пирĕн пирки Александр Александрович сахалтан та пĕр çич-сакăр минут каларĕ пуль. Çав хушăра манпа мĕн пулса иртнине пĕлесчĕ сирĕн! Пĕрре эп мухтанса илтĕм. А. А. Фадеев ман информаципе калаçать, терĕм. Тепре вăтаннипе çĕр тĕпне анса каяс килчĕ. Ма Александр Александровичпа йĕркеллĕ калаçмалла марччĕ

ёнтӗ? (Унпа калаҫнӑ чух эп писателӗн хаклӑ вӑхӑтне сая янӑшӑн ӳкӗнсе тӑтӑм. Хам именнинчен именсе тӑтӑм. Ҫук проблемӑна пур туса ҫӳренӗшӗн хӗрелтӗм. Ытла та пуҫтах-мӗн эпир, таҫта кӗрсе кайса, такама та чӑрмантаратпӑр...)

Чӑвашсене Фадеев мӗн революциччченех ҫырулӑхсӑр пурӑннӑ халӑхсен шутне кӗртет. Нивушлӗ ман сӑмахран ҫапла ӑнланнӑ вӑл? Е хӑех ҫапла пулӗ тенӗ-ши?

Ҫак тӗлпулу хыҫҫӑн нумай ҫул иртсен, Иван Мучипе пӗрле «Вырӑс писателӗсем чӑвашсем ҫинчен» ятлӑ сборнике хатӗрленӗ май, шыраттартӑм эп А. А. Фадеев сӑмахне, чӑвашсем пирки калanӑ ҫав вырӑна, анчах тупса параймарӗҫ ӑна. Докладне Александр Александрович малтанах ҫырса хунӑ пулнӑ ёнтӗ, пирӗншӗн хаклӑ сӑмахсене вырӑс писателӗ экспромтла ҫеҫ кларӗ пуль. Стенографистка пулман-тӑр. Ҫавӑнпа ҫак асилӗве те пулин ҫырса хӑварам терӗм эп.

*1978.*

## С. В. ДИКОВСКИЙ

Сергей Владимирович Диковский писателӗн биографийӗ кӗскен ҫакӑн пек. 1907 ҫулта Мускав хулинче ҫуралнӑ. Ашшӗ учитель-художник пулнӑ. Ҫамрӑклӑх кунӗсене Украинӑра ирттернӗ. Тӑххӑрмӗш класран вӗренсе тухсан, хӑй ӗҫӗпе тӑранса пурӑнма тытӑннӑ, 1925 ҫултан пуҫласа пичет ӗҫне хутшӑннӑ. 1928 ҫулта — ҫар службинче. Тепӗр ҫул Хӗрлӗ Ҫарӑн Политуправленийӗ ӑна Владивостока, Инҫет Хӗвелтухӑҫ университечӗн японоведени факультетне вӗренме ярать. 1931 ҫулта Сергей Владимирович Диковский каялла пичет ӗҫне куҫать. 1934 ҫулччен вӑл «Комсомольская правда» хаҫатӑн тухса ҫӳрекен корреспонденчӗ, 1934—1938 ҫулсем хушшинче — «Правда» сотрудникӗ. Хаҫатри очерксемпе пӗрлех, унӑн калавӗсемпе повеҫӗсем «Новый мир», «Октябрь», «Молодая гвардия», «Наши достижения», «30 дней» тата ытти журналсенче пичетленеҫҫӗ.

Диковскин пӗрремӗш кӗнеки 1932 ҫулта пичетленсе тухнӑ. Вӑл сборнике писателӗн «Наша Занда», «Петр Аянка едет в гости», «Товарищ начальник» калавсемпе темиҫе очерк кӗнӗ.

1933 ҫулта вӑл «Преступление и воспитание», «Исто-

рия одной кражи», «Жалоба», «Капелдудка» т. ыт. калавсене çырать.

1935 çулхи произведенийĕсем: «Рыбья карта», «Васса», «Труба», «Госпожа Слива». 1936 çулхисем — «Волнение», «Погоня», «Железная утка».

1937 çулта Диковский хăйĕн чи пысăк произведенине — «Патриоты» ятлă повеçне—пичетлесе кăларать. Тепĕр çул унăн «Егор Цыганков» повеçĕпе «На маяке», «Главное — выдержка», «На острове Анна», «Осечка», «Комендант Птичьего острова», «Сказка о партизане Савушке», «Конец Саго-Мару» калавĕсем уйрăм-уйрăм кĕнекепе пичетленсе тухаççĕ.

1939 çулта Диковский, «Правда» корреспонденчĕ пулса, Финлянди фронтне тухса каять. Декабрь уйăхĕнче, хаяр çапăçу умĕн, партие кĕрет. 1940 çулхи январĕн 6-мĕшĕнче вăл Суоми-Сальми çывăхĕнчи çапăçура пуçне хурать.

Диковский пурнăçĕпе творчествинче совет саманинче ÿссе çитĕннĕ вĕри чĕреллĕ çыннăн чи паха енĕсем палăрса тăраççĕ. Вăл пурнăçа юратнă, анчах хăй пурнăçĕшĕн нихçан та хăраса чĕтресе тăман. Вăл хăюллă пулнă, ĕçлеме юратнă, кирек ăçта та, кирек хăçан та çĕннине, кирлине шыранă, ăна тупса, çынсене кăтартса пама тăрăшнă: ĕçлĕр, вĕренĕр, паттăр пулăр! Вăл таса чĕреллĕ этем, уçă кăмăллă та нумай вĕреннĕ çын пулнă.

Диковские çывăх пĕлнĕ çынсем писатель çитĕнÿсемпе лăпланса ларма юратманнине, вăл çав тери сăпай пулнине кăтартса параççĕ.

Вунçиччĕ-вунсаккăрта чухне Диковский, пĕр писательпе пĕрлешсе, пысăк роман çырнă пулнă. Роман темиçе уйăх хушши хаçатра пичетленсе пынă. Критиксем ун çинчен мухтаса статьясем çыра-çыра кăларнă. Издательство романа уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларма килĕшнĕ. Тата мĕн кирлĕ? Савăнса ÿкнĕ çамрăк автор кимĕ çине ларнă та «тĕнче курма» Атăл тăрăх аналалла тухса кайнă. Самар хули тĕлĕнче Диковский хăйĕн хаçатра пичетленнĕ романне вуланă пĕр бакенщикпа паллашнă. Бакенщик, хăй сахал вĕреннисем-мĕнсем çинчен калаçкаланă хыççăн, романа сыпăкăн-сыпăкăн тишкерме тытăннă, вăл ăнăççăр пулса тухнине кăтартса панă.

— Инкек ку çыравçăсемпе,— тенĕ вăл.— Ним çук çĕртех нимĕр юраççĕ.

Çамрăк автор унпа килĕшнĕ, васкаса каялла таврăн-

нă та тĕлĕнсе кайнă редакторсенчен хăй романĕн алçырăвне туртса илнĕ, ун çинчен яланлăхах манма тăрăшнă.

Очеркĕсен, калавĕсен, повеçĕсен темисене Диковский яланах пурнăçран илнĕ. Курса çӳреме, çул çӳреме юратакансқер, вăл тĕрлĕ вырăнсенче тĕрлĕ çынпа курса калаçнă. Пĕри вĕсенчен пулăçă пулнă, тепри иçĕм çырли йывăççи ӳстерекен, виççĕмĕшĕ — тайга вăрманĕнчи сунарçă... Диковский пурне те сăнанă, çырса пынă, астуса юлнă.

Аслă та пуян пирĕн çĕршыв! Хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăçнелле вунпĕр пин çухрăм, çурçĕртен кăнтăралла — тăватă пин çухрăм ытла сарăлса выртать вăл: Инçет Хĕвелтухăçĕнче пирĕн çурçĕрти чăрăшпа юнашарах шăрăх кăнтăрти йывăççем хунама тытăнаççĕ. Ылтăнĕпе кĕмĕлĕ, тимĕрĕпе çĕр кăмрăкĕ... Çĕр çинчи пур тĕрлĕ пуянлăх та пур пирĕн çĕршывра. Вăл пуянлăхĕнчен те хакли вара пирĕн çынсем, совет çыннисем, çĕршыва улăштарнă, çĕнетнĕ, хитрелетсе пынă май хăйсем те ӳссе, çĕнелсе пыракан çынсем.

Пирĕн çĕршыв çав тери аслине, унта мĕнле-мĕнле халăхсем пурăннине пире ялти шкулта чухнех учительсем каласа панă. Анчах ăспа пĕлни вăл — хăйне уйрăм япала, вăл çапах та хăйне евĕр «географилле ăнлану» кăна-ха, ху куçупа курни, çывăххăн паллашни вара — йăлтах урăхла.

Çул çӳресе курнă çын ăнланать пулĕ. Эсĕ лапсăркка йывăççемпе витĕннĕ шыв тăрăх анатăн, вăрманти вут умĕнче сунарçăсен юмахне итлесе ларатăн, пăшал çакса, çеçенхир варринелле утатăн. Кăвак тавракурăм хĕрринче ăрша вылять, хăмăшлăхра кайăк кăвакал нартлатать, таçта карăш авăтать... Çурăм хыçне пĕчĕк кутамкка çакнă та эсĕ ывăна пĕлмесĕр çĕршыв тăрăх çӳретĕн.

Çакăн пек çӳревçĕ пулнă та ĕнтĕ вăхăтсăр çĕре кĕнĕ С. Диковский писатель. Вăл Камчаткăра, Сахалинта, Инçет Хĕвелтухăçĕнче пулнă, Çĕпĕре, Вăтам Азие, Украинăпа Белоруссие çитсе çаврăннă. Швеци, Дани, Финлянди çĕрĕсене кайса курнă. Çуран утнă, лашапа кайнă, поездпа та автомашинăпа çӳренĕ, самолетпа вĕçнĕ. Тата унăн профессийĕсене пăхăр-ха эсир! Кам кăна пулса курман вăл хăй писатель иккенне сиссе иличчен! Курьер, оперăри хорта юрлакан, афиша çыпăçтарса çӳрекен, грузчик, çĕр чавакан, библиотекарь, матрос, комсомол работникĕ...

Диковский курса ҫӳренипе кӑна ҫырлахман. Вӑл хӑй мӗн курни-илтни ҫинчен питӗ те ӑста каласа пама пултарнӑ, ҫырса кӑтартма пӗлнӗ. Ҫӳрессе эпӗ те, тепри те курса ҫӳреме юрататпӑр. Анчах ун ҫинчен ҫынсен кӑмӑлне каймалла каласа пама... ҫук, пурте пултараймасҫӗ. Калӑпӑр, эпир Атӑл тӑрӑх пыратпӑр. Мӗн курӑнатьха пирӗн куҫа? Ҫынсем, ну... тӑмлӑ ҫыран, шыв. Эпир кайнӑ ҫулпах тепӗр эрнерен Диковский каять те, эсир, унӑн калавне итлесе, шалтах тӗлӗнсе каятӑр. Вӑл та эсир курнинех курнӑ темелле ӗнтӗ, анчах, темле майпа, «ӑстарах», «хитререх» курма пӗлнӗ. Тӗрӗс калать поэт:

> «Помни, хоть на первый взгляд обыден,
> А иному и совсем незрим,
> Мир, когда он мастером увиден,
> Необычен и неповторим».

Шӑп та шай ҫакӑн пек ӑстаҫӑ, ҫавӑн пек ӑрӑмҫӑ пулнӑ Диковский писатель. Вӑл пур япала ҫине те хӑй куҫӗпе пӑхнӑ, вӑл япалана кирлӗ пек ҫавӑрса лартма, ӑна вулакансене кӗтмен енчен уҫса пама пӗлнӗ.

Пӗр ӑсталӑх кӑна-ши вӑл? Ҫук, ӑсталӑх ҫеҫ мар кунта. Хӑйсен ӗҫӗнче, халӑха улталас ӗҫре, «таса искусство» тенӗ сӗрӗм чатӑрӗ ӑшӗнче тӗрлӗ Андре Жидсемпе сутӑнчӑк Говард Фастсем те «ӑста». Диковский ӑсталӑхӗ вӑл — коммунист ӑсталӑхӗ, ҫӗнӗ тӗнче тӑвакан ҫӗнӗ ҫыннӑн ҫӗнӗ куҫӗпе ҫӗнӗ кӑмӑлӗ, ҫӗнӗ принципӗ.

Ҫӗршыв тӑрӑх ҫӳренӗ май писатель-журналист темиҫе хут пирӗн республикӑна та килсе кайнӑ.

1933 ҫулта пичетленнӗ «Дорога — скатерть» очеркӗнче Диковский чӑваш ҫулӗсене «пуласлӑха илсе каякан ҫулсем», тет. Вӑл ӗлӗк упа варӗсемпе кашкӑр ҫырмисенче пытанса ларнӑ Вӑрманкассем, тӗттӗм Ҫырмапуҫ ялӗсем — ҫутта, социализм ҫулӗ ҫине тухса, ҫӗнелсе пынине ӗненмелле кӑтартса парать.

«Ӗҫченсен республики» тесе ят парать вӑл хӑйӗн 1936 ҫулта Чӑваш республикине килсе кайсан ҫырнӑ тепӗр очеркне.

1938 ҫулта Диковский чӑваш платникӗ Федор Павлович ҫинчен «Вӗри ҫӑл» ятлӑ калав пичетлесе кӑларать. Вӑл калава ҫырма тытӑнни ҫинчен автор ҫапла каласа панӑ:

«...Камчатка тӑрӑх курса ҫӳренӗ чухне эпӗ пӗр фотографпа пӗрле ҫӳрерӗм, вӑл питӗ лайӑх юлташчӗ. Кам-

чаткăна эпир урлă та пирлĕ, лашапа та, çуран та тухрăмăр. Мана кунта пурăнма куçса килнĕ çын кирлĕччĕ. Эпĕ пĕр тема шухăшласа хунăччĕ те, кунта калана пек, Российăн пĕр-пĕр варринчи çĕрĕсенчен килнĕ çынна тупасшăнччĕ. Эпĕ нумай çынпа калаçрăм, вăхăтлăха килнисене те, ударниксене те, тĕрлĕ авантюристсене те куртăм,— кĕскен каласан, тĕрлĕ çынпа паллашрăм, анчах хама кирлĕ çынна тупаймарăм. Пĕррехинче эпир «Вĕри çăл» текен вырăна чарăнтăмăр та пĕр утмăлсене çитнĕ старикпе калаçса кайрăмăр. Вăл кунта чăваш çĕрĕнчен куçса килнĕскер-мĕн, виçĕ çула яхăн Камчаткăра пурăнать. Малтанах пирĕн сăмах çаврăнмарĕ. Вырăнĕ унта хитре ĕнтĕ — вĕри çăлсем тапса тăраççĕ, гейзерсем пĕрхĕнсе тухаççĕ те каялла çĕре сăрхăнса кĕреççĕ — пĕр сăмахпа каласан, краеведенилле очерк çырас тесен, тем чухлех çырма пулать. Старик нихçан та чей вĕретместмĕн, ĕçес килсен — чейник йăтса гейзер патне чупать те вĕри шыв тултарса килет. Сивĕ пулсан — урай хăмине уçса хурать, мĕншĕн тесен урайне вĕри чул çине сарнă. Çывăрма выртнă чух та пирĕн сăмах çыхăнмарĕ-ха. Старик хăй сĕтелсем мĕнле туни, алăксене мĕнле çакмалли тата ыттисем çинчен каласа пачĕ. Эпĕ тимлĕн итлесе выртрăм, «хм» текелерĕм те урăх нимех те калаймарăм. Çывăрса каяс чухне старик сасартăк улмуççи çинчен тапратрĕ. Камчаткăра панулми çук, тет. Унтан хурт-хăмăр çинчен калаçса кайрĕ. Унăн ĕмĕчĕ çакнашкал иккен: кунта та чăваш çĕршывĕнчи евĕрлĕ хуçалăх пултăр тесен, хурт-хăмăрпа улмуççи илсе килмелле-мĕн. Вара эпĕ тинех ăнлана пуçларăм çак çынна. Вăл çав тери интереслĕ иккен. Рабочисемпе хресченсем валли курорт тăвас, тет. Гейзер тĕлне çӳле хăпарса лармалли тăвас, кĕлетке тулта пултăр, пуç пăс çинче хĕртĕнсе тăтăр, тет. Эпĕ унпа пĕрле пĕр тăватă кас ирттертĕм. Кăнтăрла эпир курса çӳреттĕмĕр, сунара каяттăмăр. Çапла вара манăн «Вĕри çăлпа» çак этем çинчен «Правда» валли очерк çуралчĕ. Чылай вăхăт хушши ширанă хыççăн хама кирлĕ темăна шыраса тупрăм-тупрăмах, тесшĕн эпĕ» *.

1937 çулта çырнă «Патриоты» повеçĕнче те писатель пĕр чăваш çамрăкне кăтартса парать. (Ĕçсем граждан вăрçи çулĕсенче пулса иртеççĕ.)

---

* С. В. Диковский. Избранные произведения. Москва, 1956 г. Стр. 445—446.

Акă вăл сыпăк:

«— Аптрамалла вăл японецсемпе,— терĕ хĕрĕнкĕ Гарбуз мучи.— Ачасене те юратаççĕ ĕнтĕ хăйсем, ĕçлеме те пултараççĕ темелле, кăмăлĕсем вара — каснă-лартнă хурт-кăпшанкăнни пек, калама çук хаяр. Харакири, харакири, теççĕ... Мĕскерле япала вăл харакири? Хăйсен вăйне кăтартни-и е мĕскер те пулин урăххи?

— Ухмахланни вăл!

— Çук, апла мар.

— Дисциплина!

— Тăнпуç арканса кайни!

— Самурайла каппайчăк!

Итлесе ларакансенчен кашниех хăйĕн шухăшне каласа пама васкать.

...Ватă сунарçă Чирсен-Шу кулса ячĕ.

— Иртнĕ хĕлле,— терĕ вăл хуллен,— эпĕ капкăнпа тилĕ тытма çӳреттĕмччĕ. Пĕри çакланнă та çĕрĕпе шухăшласа ларнă, вара... юрать, сывă пул, ура, тенĕ те урине кăшласа татса тара панă... вăл самурай-и?

Пурте кулса ячĕç.

— Ну, ун пек харакири тенине эпир те пĕррехинче тутанса пăхнăччĕ,— терĕ колхоз председателĕ, ĕлĕк партизансен отрядне ертсе пынă Баковецкий.— Эпир тăваттăнччĕ: Антонов Федя, эпĕ, Седых-кĕçĕнни тата тепĕр чăваш, Энтри ятлăскер. Эпир Сметанин отрядĕнче тупă пичкипе çӳреттĕмĕр.

— Пичкипе?

— Ара çав. Федя патент илчĕ. Икĕ тĕпĕнче пĕрер шăтăк. Пĕр шăтăкĕнчен карабинран пушă патронпа перен те, тепринчен — газ хаплатса тухса каять. Сасси вара, тупата, чăн-чăн гаубицăнни пек! Пирĕн пичкене Семенов хăйĕн сводкинче батарея тесе шутлатчĕ... Пĕррехинче Черниговка ялĕнче çĕнĕ кăшăлсем лартма тытăнтăмăр, сасартăк га-га-га! Шуррисем ял тăрăх тăвата «люкспа» вĕтелентереççĕ. Эпир пахчана — унта та çавах. Пӳрте чупса кĕтĕмĕр те пăшалсенчен пеме тытăнтăмăр. Эпир малтанах çапла калаçса татăлнăччĕ: пĕрер патрон хамăра валли, ыттисене йăлтах — семеновецсене. Вĕсен аллине лексен, пурпĕрех пыршă-пакартасене телефон пралукĕ çине кумса хураççĕ... Кĕçех уйăрса хунă патронсене персе пĕтертĕмĕр, пĕр-пĕринпе сывпуллашма тытăнтăмăр... Да... Сасартăк пирĕн чăваш кăвакарса кайрĕ: «Тăвансем, мĕн тăвас, эпĕ патрона кăларса ӳкернĕ!» — тет. Алăка тул енчен кĕмсĕртеттерме тытăн-

чӗҫ. Юрать, Федя ӑс ҫитерчӗ. «Мӗнех вара,— тет,— сӗтел хушшине ларӑпӑр та кӑнтӑрлахи апат тӑвӑпӑр». Гранатине туртса кӑларчӗ, ункине вӗҫертрӗ те хамӑр хушша хучӗ...

Калавҫӑ чӗлӗмне чӗртме кӑмака умне пычӗ. Пурте вӑл каласа пӗтерессе кӗтсе лараҫҫӗ. Анчах Баковецкий чӗлӗмне тивертрӗ те урӑх сӑмах та шарламарӗ.

— Вара мӗн пулчӗ? Граната пӑсӑлчӗ-и?

— Мӗн калас сире,— терӗ калавҫӑ хуллен.— Ун ҫинчен тӑватсӑмӑртан пӗр манран ҫеҫ ыйтса пӗлме пулать...»

Тӑшман аллине чӗр пуҫҫӑн лекес мар тесе, вӗсем хӑйсене хӑйсем вӗлереҫҫӗ. Партизансемпе пӗрле тӑшман салтакӗсем те пӗтеҫҫӗ темиҫен. Баковецкий чӗрӗ юлать.

С. В. Диковский «Приключение катера «Смелый» ятлӑ калавсен кӗнекине ҫырнӑ. Унта ҫак произведенисем кӗреҫҫӗ: «Конец Саго-Мару», «Комендант Птичьего острова», «Осечка», «Главное — выдержка» т. ыт. те. Вӑл калавсенче писатель Совет Союзӗн тинӗсри чиккисене хуралланакансене кӑтартса парать. «Комендант Птичьего острова» калавра Косицын — тӗп герой. Вӑл — чӑваш ҫынни. Ялти ним мар каччӑ Косицын ҫар морякӗсем хушшинче часах тинӗсе хӑнӑхать, хӑюллӑ моряк пулса тӑрать.

Чӑваш ҫыннисене писатель яланах ҫав тери юратса сӑнлать. Вӗсем тӳрӗ кӑмӑллӑ, сӑпай, ӗҫчен, йывӑрлӑхсенчен хӑрамаҫҫӗ. Тӑван ҫӗршыв чысӗшӗн вара вӗсем пурнӑҫӗсене те шеллемеҫҫӗ.

* * *

Диковский калавӗсенчен тинӗспе тайга, анлӑ ҫеҫенхирпе ҫурхи йывӑҫ-курӑк шӑрши кӗрет. Вӗсем ҫав тери хитре, таса, янкӑр уҫӑ ирхи ҫанталӑк пек витӗр курӑнса тӑраҫҫӗ. Кирек хӑш калавне — повеҫне тытсан та, эсӗ унти геройсен пурнӑҫӗсенче, вӗсен харсӑр ӗҫӗсемпе юратӑвӗнче писатель-патриотӑн вӗри кӑмӑлне сиссе тӑратӑн. Ҫын пичӗ ҫын чунне палӑртать пулсан, писателӗн произведенийӗсем те вӗсене ҫыраканӗн чӗрине уҫса параҫҫӗ.

Диковский хӑй ӗмӗтленнисенчен нумайӑшне туса ӗлкӗреймен. Ҫапах та унран вӗренмеллисем сахал мар. Писателӗн пурнӑҫӗпе ӗҫӗ кӑна мар, унӑн вилӗмӗ те пирӗншӗн тӗслӗх пулса тӑрать. Ҫӗршыв умне хӑрушлӑх

килсе тухсан вăл, ăна хӳтĕлесе, пĕр шухăшласа тăмасăрах, чи пахине — хăйĕн пурнăçне панă.

Апла пулсан, хамăр Тăван çĕршывăн чысĕпе çĕнтерĕвĕшĕн çапăçса вилнĕ паттăра — ĕмĕр-ĕмĕрех мухтав!

Вăтăр икĕ-вăтăр виçĕ çул каялла Диковский ывăнма пĕлмесĕр пирĕн çĕршыв тăрăх çӳренĕ. Халĕ вăл хăй çук, анчах унăн кĕнекисем, унта каланă ăшă сăмахсем пĕтĕм халăх хушшине саланнă. Вĕсене писатель уйрăмах юратнă Инçет Хĕвелтухăçĕнче те, чăваш çĕршывĕпе Украинăра та — пур çĕрте те вулаççĕ, мĕншĕн тесен тĕрĕс сăмах нихçан та вилмест, тĕксĕмленмест.

*1960*

# ЮЛТАШСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ

## «ЕШĔЛ ХУНАВ»

Семен Васильевич Элкерĕн ачасем валли çырнă пĕр кĕнеки «Ешĕл хунав» ятлă. Ешĕл хунав вăл — Чăваш республикин пуянлăхĕ, пирĕн «симĕс ылтăн» — вăрман. Кĕнекен сюжечĕ çукпа пĕрех.

Вĕренÿ çулĕ пĕтес умĕн Тарăнвар шкулĕнчи ачасем хăйсен учителĕпе Сăр тăрăхĕнчи вăрмана экскурсине тухса каяççĕ. Колхоз правленийĕ вĕсене машина парать. Вăрмана çитсен, лесничи патне кĕреççĕ. Лесничи, Илья Ефимович Рунгш, ачасене вăрман кăтартса çÿрет, йывăççемпе паллаштарать. Çаçалапа ачасем яла таврăнаççĕ.

Çавă кăна. Кайнă, курнă, килнĕ. Ни ăстайласа тунă композици, ни приключенисем çук. Анчах кĕнекене вулама тытăнатăн та вĕçне çитиччен те пăрахаймастăн.

Мĕнтен килнĕ-ши вăл?

Лесничи тĕрĕс калать:

«— Ачасем, эпир пысăк вăрман çывăхĕнче пурăнатпăр,— тет вăл.— Пĕчĕкренпех ăна курса ÿснĕрен, çав вăрман пире пур енчен те паллă пек, унта эпир пĕлменни нимĕн те çук пек туйăнать. Анчах, тĕрĕссипе каласан, сирĕн пек ачасем мар, пирĕн ваттисем те ăна нумайăшĕ тĕплĕн пĕлмеççĕ-ха... Эпĕ сире паян çак вăрман пурнăçĕпе тата унăн пуянлăхĕпе паллаштарма тăрăшăп».

Пуçланса каять вара калав.

Ачасем, вăрмана кĕрсе лесхоз çурчĕ патне çитсенех, хăйсем халиччен пĕлмен япаласемпе паллашма тытăнаççĕ. Пĕр ватă хыр çинче ула-чăпар çунатлă кайăксем пыр татăлас пек чарлатса çуйхашаççĕ. Кусем — кĕпшĕлсем (вырăсла — сойка). Йăлкăшса тăракан çутă сывлăшра шăнкăрчă евĕрлĕ кайăксем вĕçкелеççĕ. Вĕсем, чăма-чăма вĕçсе, пĕрисем уçланкăран çерем çине анаç-

çĕ, теприсем, çерем çинчен çĕкленсе, хыттăн чăхлата-чăхлата, хурăнлăха каяççĕ. Кусем—сульхасем (дрозды).

Акă вăрман хушшинче пушă бутылка ăшне вĕрнĕ чухнехи пек: «Ăӳ-тӳт! тӳ-тӳт!» — тенĕ сасă илтĕнсе каять. Куна — хыркук (удод) авăтать-мĕн.

Ачасем хура рункăш кайăка, сăнчаса (поползень), шăкăлчисене (щеглы) т. ыт. те кураççĕ, сăнаççĕ, вĕсен йăлисемпе паллашаççĕ.

Халиччен пĕр пĕтĕм япала пек курăнакан вăрман хуллен-хулленех хăйĕн вăрттăнлăхĕсене уçма тытăнать. Миçе тĕрлĕ йывăç çук пулĕ кунта! Хыр, чăрăш, уртăш, яхтă (лăсăллă йывăçсем); юман, каврăç, вĕрене, йĕлме, хурама, хурăн, çăка, ăвăс, çирĕк, пилеш, çĕмĕрт, тирек, çӳçе, йăмра, шĕшкĕ, палан, кăпчанкă, ăвăш, йытçĕмĕрчĕ, пир пушăчĕ, хĕрлĕ çӳçе, шăлан, катăркас...

Ытти çĕртен кӳрсе килнĕ йывăçсем: Çĕпĕр кедрĕ, лиçван, хĕрлĕ вĕрене, тутар вĕрени, тӳя, сирень, акаци...

Садсенче пирĕн улмуççи, слива, виноград, торн, чие; хура, хĕрлĕ, шурă хурлăхансем, крыжовник çитĕнет...

Капитализм саманинче вăрмансене ним йĕркесĕр касса пĕтернĕ. Мул хуçи пулас ăрусемшĕн мар, хăйĕн кĕсйишĕн хыпса çуннă. Уншăн услам пултăр. Хир çаралса юлни, тырă пулма пăрахни, халăх чухăнланни капиталистсене пуйтарнă. Çапла çаратнипе ĕлĕк вăрман ашкăрса ларнă вырăнсенче пушă хир тăрса юлнă, тырă пулакан уйсем, карчăк пичĕ пек, типсе, çуркаланса пĕтнĕ.

Капитализм тĕнчи çĕр тăрăх саранча кĕтĕвĕ пек пынă.

Совет çынни кăна, чăн-чăн пурнăç хуçи, этем-строитель, çутçанталăка хăйне кирлĕ пек çĕнетсе улăштарма тытăнчĕ. Çеçенхирсенче халĕ ешĕл вăрман хунавĕ çитĕнет. Шыв çук çĕрте çын алли тунă тинĕссем сарăлса выртаççĕ.

Тата акă мĕн паха: эпир тăвакан хăшпĕр ĕçсен результачĕ паян-ыран мар, ик-виçĕ çултан та мар, вуншар-çирĕмшер çултан тин усă памалла, palăрмалла. Эпир çапах та вăл ĕçсене савăнсах тăватпăр: вĕсем — пирĕн пулас ăрусем валли!

«— ...Эпир халь ватă вăрмансене касса социализм строительствине паратпăр. Касни вырăнне çĕнĕ вăрман ӳстеретпĕр... 1946-мĕшпе 50-мĕш çулсем хушшинче кăна чăваш вăрманĕсенче пурĕ 18.961 га йывăç лартнă. Пĕр 1951 çулхине çех 6.470 га таран хыр, юман тата ытти йывăççене те лартса хăварнă. Вăрман лартас ĕç пирĕн

кашни çулсерен ӳссе пырать. Тепӗр çӗр е çӗр аллӑ çултан çак хунав та каллех касма юрӑхлӑ ватӑ вӑрман пулать. Ун чух ку вӑрманпа пирӗн килес ӑру коммунизмла пурнӑçра усӑ курӗ»,— тет С. В. Элкер кӗнекинчи лесник...

Пӗлекен çын вӑрманта темӗн те курать. Кӗнекере ват çын сӑнавӗсем, ачасене кирлӗ япаласем питӗ нумай. Кашни йывӑçах иккен темиçе тӗрлӗ усӑ парать. Шухӑшласа кӑна пӑхӑр: хальхи техника йывӑçсенчен çирӗм пин ытла тӗрлӗ япала туса кӑларма пултарать! Йывӑçран çеç те мар, вӑрман кассан юлакан туратсемпе çатӑркаран, хӑрӑк тункатасенчен, йывӑç хупписенчен т. ыт. те сӑмала, яхта çӑвӗ, скипидар, канифоль, йывӑç спирчӗ, глюкоза, витаминсем, эрех спирчӗ, генераторнӑй газ туса кӑларма пулать. Вӑл та сахал: çак япаласенчен заводсенче синтетически текен камфора, целлулоид, ацетон, кинопленка, аспирин, белковӑй çӗпре, формалин, искусственнӑй пурçӑн, линолеум, пластмасса тата ытти темиçе пин тӗрлӗ япала тума пултараççӗ.

Мӗскер унта йывӑçсем е çатӑрка! Вӑрман каснӑ чухне сирпӗнекен турпаса кӑна илӗр! Пӗр кубометр турпасран, химиллӗ майсемпе, заводра пин тенкӗлӗх тӗрлӗ япала туса кӑларма пулать (уксус кислоти, искусственнӑй пурçӑн е эрех тумалли спирт).

Вӑрманӑн, йывӑçсен усси кунпа çеç те çырлахмасть. Вӑрман таврари çӗре нӳрӗ парса тӑрать, уй-хирсене шӑрӑхран хӳтӗлет, çын сывлӑхне çирӗплетме пулӑшать, чӗрчунсемпе тискер кайӑксене пытарса усрать, илем кӳрет. Хитре ял тесе эпир йывӑçлӑ ялсене калатпӑр.

Йывӑççем çине пӑхсах, С. В. Элкер кӗнекинчи лесник иртнине те, хальхине те, пулассине те курать.

Акӑ пысӑк юман тункати ларать. Мӗн курма пулать ун çине пӑхсан?

Сӑмах леснике парар:

«Ку юмана вӑрçӑ умӗн, 1940 çулта каснӑччӗ... Унтан, туратти-мӗнӗпе татса купаласан, пурӗ 20 кубометр вутӑ тухрӗ... Унӑн хулӑнӑшӗ метр çурра яхӑн. Çак юман миçе çулта пулнине эпӗ... унӑн сийӗсем тӑрӑх шутласа пӗлтӗм. Вӑл 390 çула яхӑн ӳснӗ пулнӑ. 1550-мӗш çул тӗлнелле йӗкелтен шӑтса тухнӑ... 390 çул, этем ӗмӗрӗпе виççен, пилӗк çын сыпӑкӗн ӗмӗрӗсемпе танлашать... Çапла ӗнтӗ, çак юман, Хаяр Иван патша Хусана туртса илнӗ вӑхӑтра шӑтнӑскер, нумай историллӗ ӗçсене курнӑ ватӑ йывӑç пулнӑ. Степан Разин пӑлхавне, Пӗрремӗш Петр

патша саманине, унăн лашманĕсем пысăк юмансене касса, вĕсене вуншар-çирĕмшер лашапа Атăл хĕррине турттарнине, Пугачев вăрçине тата ытти нумай ĕçсене те курнă вăл. Ун чухне пирĕн асаттесемпе асаннесем хăрăмлă хура пӳртсенче нуша курса пурăннă. Вĕсене патша улпучĕсем ирĕккĕн сывлама та паман. Вырнаçнă çĕртен хăвала-хăвала янă, çуклă-пурлă пурлăхĕсене турта-турта илнĕ. Çавăн пек йывăр вăхăтсенче сĕм вăрмана тарса пытаннă çынсем, тен, çак юман айне те пĕр-ре çеç мар вырнаçса çĕр каçнă пулĕ...»

Кĕнекен кашни страницинчех Элкер ачасене мĕн те пулин çĕннине, халиччен пĕлменнине каласа парать. Пирĕн вăрмансенче халĕ электропăчкăсем ĕçлеççĕ. Вăтам йывăçа электропăчкă 2—3 минут хушшинче касса яма пултарать. Анчах 150—200 çул ĕлĕкрех «пăчкăсем те пулман. Çакна пула, ик-виçшер çĕр çул ӳснĕ юмансене пуртăсемпех касса сыпăланă... Пĕр юманах эрни-эрнипеле касса тирпейленĕ».

Кĕнекен чĕлхи çăмăл, ăнланмалла, пуян. Сайра тĕл пулакан диалектизмсене (пĕр-пĕр районта кăна калаçакан сăмахсене) ăнлантарса панă. (Сăмахран, çам, е çамлăх — çулçăллă вăрман, кăмăр, кăмăрлăх — вăрманта çĕрсе, хуçăлса е тăпăлса ӳкнĕ йывăçсем кĕпĕрленсе выртакан вырăн т. ыт. те.) Темиçе сăмаха çеç (шаймăк çын йăпшак, вараклании) тем пирки ăнлантарман.

## «ИНÇЕ ÇУЛСЕМ ТĂРĂХ»

Ку кĕнекере çул çинче курни-илтнисене çырса пыни çеç тес, унта кайран урăх кĕнекесем вуласа пĕлни те, асилӳсем те нумай. Писателĕн ик-виçĕ уйăх хушшинчи пурнăçне пĕтĕçтерсе кăтартса пани тес,— пурнăç çинчен шухăшланисем сахалтарах. Çав вăхăтрах ăна, авторĕ пек, ниме пĕлтермен пĕр сăмахпа «очерксем» тесе çеç хаклас килмест, мĕншĕн тесен унта очерк жанрне шăнăçманни те пайтах.

Кирек мĕн пулсан та, Уйăп Мишши çырнă «Инçе çулсем тăрăх» кĕнеке вулаканăн кăмăлне хускатать,— çавă паха.

Чи малтан унăн хуплашки куçа илĕртме тытăнать. Сенкер-кăвак тӳпе, симĕс тăрăллă пĕччен хыр... Аял хĕрринче — кĕнеке ячĕ. «Инçе çулсем тăрăх».

Кам кăна ĕмĕтленмен пуль çамрăк чухне инçетри

çулсем тăрăх çӳреме, тĕлĕнмелли япаласем курса пĕлме! Анчах пурне те тĕнче касса çӳреме тивмест. Вара эсĕ кĕнекесем вулама тытăнатăн. Кашни çĕнĕ кĕнеке сана темĕн те пĕр курнă çулçӳревçĕ пек туйăнать. Ана вуланипе эсĕ ĕмĕрне çитсе курман çĕршывсене çитсе куратăн, нихçан пĕлмен япаласене пĕлетĕн, палламан çынсемпе паллашатăн.

Анчах кашнинчех эс ĕмĕтленнĕ пек пулмасть çав. Çынсем пекех, кĕнекесем те тĕрлĕ пулаççĕ. Пĕри сана темĕн те пĕлтерессĕн туйăнать, вулама тытăнатăн та — мăк-мак тăвать те нимех те каласа параймасть. Теприне — вуланăçем вулас килет. Виççĕмĕшĕ — тӳрех тыткăна илет...

Уйăп Мишши кĕнекине шанса та ĕненсе алла илетĕн. Пĕр енчен — поэт çырнă проза. Нумай çулсем хушши сăвă-юрăсем çырса пурăннă этем проза çырма ларсан, кирек мĕнле пулсан та, хăйне евĕртерех, ыттисенчен уйрăмрах çыраканччĕ, тетĕн. Тепĕр енчен — «Инçе çулсем тăрăх»! Çула тухсан, кирек камăн та каласа памалли темĕн чухлĕ. Тата виççĕмĕш сăлтавĕ те пур. 1930-мĕш çулсенче Уйăп Мишши Чулхулари автозавода туни çинчен пурин асĕнче те юлмалла çырса кăтартнăччĕ.

Халиччен çӳресе курман çул пекех, кĕнеке малтан малалла туртать. Кашни утăмрах мĕн те пулин çĕнни тухса тăрать, курманни курăнать. Пурин çинчен те автор çав тери тĕплĕн каласа пама тăрăшать. Васкамасть вăл, хыпăнса ӳкмест — малалла виçĕ уйăх ытла курса çӳремелле-ха, вăхăт çителĕклĕ. Тата уншăн пурте çĕнĕ,— пирĕншĕн те çĕнĕ те интереслĕ пулассăн туйăнать ăна.

...Кăнтăр-Сахалинск хулине автор патне унăн мăшăрĕ пырса çитет,— ытти ĕçне пăрахсах, тенĕ пек, писатель ун çинчен те ним сиктерсе хăвармасăр каласа парать. Тинĕс çинче автор «тинĕс чирĕпе» аптраса ӳкет иккен — эпир ун çинчен те тĕплĕн вуласа пĕлетпĕр; çынпа паллашать — ун çинчен вулатпăр.

Тата тĕлĕнмелле — пурте чăннипех те интереслĕ! (Унăн «вăрттăнлăхĕ» çинчен каярахпа калăпăр.)

Авторăн стилĕпе паллаштарас тесе, пĕр сыпăк илсе кăтартар.

«Мускавран тухсанах пирĕн çул пĕр хушă çурçĕр еннелле пырать. Ку тăрăхра вăл Александров, Ростов, Ярославль хулисенчен иртет. Ярославль патĕнче Атăл урлă каçать. Унтан, Данилов ятлă станцинчен иртсен,

эпир çурçĕрелле каякан çултан пăрăнатпăр, хĕвелтухăçнелле каякан çул çине ӳкетпĕр.

Кĕçех çĕрле пулса килчĕ. Кĕске ыйхă çывăрса илнĕ çĕре акă ир те пулчĕ. Мускавран тухнăранпа пĕр талăк кайнă хыççăн эпир Киров хулине çитрĕмĕр. Кĕçех вăл та кая тăрса юлчĕ. Ку енче тăтăшах сĕм вăрмансем, сăртлă-çырмаллă çĕрсем тăсăлаççĕ. Пынăçем вăрманпа витĕннĕ сăртлăхсем, тарăн çырма-çатрасем ытларах та ытларах курăна пуçларĕç.

Пуйăс Урал тăвĕсем патнелле çывхарать. Акă, Пермь хули. Ку тĕлте Кама шывĕ урлă каçатпăр...» т. ыт. те, т. урăххи те. Тăршшĕпех çавăн пек — шăкăл-шăкăл та мăкăл-мăкăл. Вуланăçем темскер аса илме тытăнатăн. Кам çыратчĕ-ха çавăн пек? Ара, Эрнест Хемингуэй вĕт. Шăп кăна çавă. Кирлĕ мар çĕртенех вăл, сюжета малалла аталанса пыма пулăшман çĕртенех, бар тенинче (хупах пеккинче) ĕçлекен этем машина тара тытма кайнисем çинчен, машинине тупсан, ун çунатти çине тăрса килнисем, çитсен çĕре мĕнле сиксе аннисем çинчен тĕплĕн çырса каять. Ун пек калава е романа пĕрремĕш хут вулакан çын автор çав вырăнсене пусăмласах каласа панăран тем сиксе тухасса кĕтме тытăнать. Анчах вуласа тухать — çав тĕлтен хускалса кайса, нимĕн те пулса иртмест. Вăл йăлтах сюжет тулашĕнчи ĕçсем иккен. Е тата герой çĕçĕ туянни çинчен тĕплĕн каласа пани. А. П. Чехов сăмахĕсене — «пĕрремĕш актра сцена çине пăшал кăларса çакнă пулсан, виççĕмĕш актра вăл кĕрлеттерсе персе ямалла», тенине астăвакансем çĕçĕрен те мĕн те пулин сиксе тухасса кĕтме тытăнаççĕ. Анчах çĕçĕ те никама пусмасть, вăл эпизод та сюжет тулашĕнче-мĕн. Çапах эпир ăна юратса вулатпăр. Пире вăл пĕртте ытлашши пек туйăнмасть, йăлăхтармасть. Мĕнрен килет-ши вăл? Автор «пурнăç поэзине» кăтартма пĕлнинчен. Çав вырăнсене вуласа, эпир хамăр та тахçан такси шыранисене, арăмсене тунсăхласа кĕтнине, магазинсем тăрăх кирлĕ япаласем шыраса çӳренине аса илетпĕр те пирĕн кăмăл тулать. Лайăх япала — пурнăç, тетпĕр эпир. Пурнан пурнăçра темĕн тума та лекет. Ырă-сывă чухне çынна нимĕн те йывăр мар, савăнăç кăна. Тата, çав хушăрах, эпир авторăн ăслă куçне те куратпăр. Акă вăл герой утнине асăрхарĕ, акă çынсем поезд патнелле чупнине курчĕ...

Çук, кирек мĕн калăр та, килĕшет мана кун пек çырни. Курăр-ха эсир: писатель кĕнекери хăйĕн тĕп «йĕрне»

те манмасть, кулленхи пурнăçа та астусах тăрать, хăй çине те аякран ют çын куçĕпе пăха-пăха илет. Темле сарлака экранпа çутатса пынă пек, темелле-и ăна...

Чи малтан Эрнест Хемингуэй çапла çырма тытăннă, теççĕ. Каярахпа Эрих Мария Ремаркпа Опитц та, Уильям Фолкнерпа Сароян та тата ыттисем те çапла çыратчĕç.

(Паллах ĕнтĕ, ку пурин те çавăн пек çырмалла, тенине пĕлтермест. Кам мĕнле пĕлет — çавăн пек çырать.)

Ĕненмелле мар пулсан та, тĕп-тĕрĕсех: Хемингуэй произведенийĕсенчен пĕр йĕркине вуласа курман Микулай Иванчă Шелепи те пирĕн «хемингуэйла» çырма пĕлнĕ-мĕн. «Етĕрне уездĕнче çӳрени» очеркне вăл, ман шутпа, шăп кăна çавăн пек çырнă. Апла пулсан, вăл стиль Хемингуэй шутласа кăларнăскер çеç те мар пуль. Çавăнпа: çĕнни вăл тахçанах манăçа юлнă кивви, тени те хăшпĕр чухне тӳрре килет-и, тен?

Те ывăнса çитнипе, çырсан-çырсан Уйăп Мишши хăйне хăй хирĕçлеме тытăнать. Йĕрки-йĕркипе çырса пырать-пырать те вăл сасартăк пĕр «хăвăл» тăратса хăварать, унтан тепĕр «уçланкă» курăнса каять.

«Кăç пулса килнĕ çĕре пирĕн пуйăс Чита хулине çитрĕ...

Читара манпа пĕрле Мускавранах ларса килнĕ юлташсем, пĕр инженерпа унăн арăмĕ тата вĕсен икĕ ачи анса юлчĕç. Пĕр купере çакăн чухлĕ килсе çывăх паллашнă çынсемпе кăмăллăн сывпуллашрăмăр. Вĕсене хулана тухса ăсатса хăвартăмăр».

Çапла кăна. Мĕнле çынсем вĕсем, çав «çывăх паллашнă» этемсем, автор пĕр сăмах та шарламасть. Вĕсене эпĕ куратăп, вулакансем те курма тивĕç, тет пулас та, пире пурпĕрех нимĕн те курăнмасть.

Акă тата тепĕр «хăвăл»:

«Сакăр талăк хушши пĕр вакунта пĕрле килсе лайăхах паллашса çитме ĕлкĕрнĕ пассажирсемпе сывпуллашса, хулана тухатпăр»,— тет те автор нихăшин çинчен те пĕр сăмах каласа памасть.

Çынсен сăнарне кăтартас тĕлĕшпе Уйăп Мишши кĕнеке тăршшĕпех хăйне чарсарах тăрать. Хитре хушаматлă Украина сăвăçипе — Шеремет Микулипе — вĕсем Инçет Хĕвелтухăçĕ тăрăх икĕ уйăха яхăн пĕрле çӳреççĕ, çав хушăра Уйăп Мишши унăн ятне сахалтан та пĕр виç-тăватçĕр хут асăнать пулĕ, анчах хăйне, чĕрĕ çын пек, пĕрре те кăтартса памасть.

Тен, çынсен сăнарне ӳкерсе парайман Уйăп Мишши? Çук, тепĕр чух чĕп-чĕрĕ те сып-сывă ӳкерсе пама пултарать. Акă вăл «Кунашир утравĕ çинче» сыпăкра Юлия Ивановна Портновăпа тĕл пулса калаçни çинчен калама тытăнать те сисмесĕрех унăн сăнарне ӳкерсе парать. Василий Петрович Черненко та куç умне чĕрĕ пекех тухса тăрать.

Кĕнекери чи хитре сăнар вара, ман шутпа,— Раиса Аванская. Ун çинчен автор Амур çинчи Комсомольск хули витĕр иртсе кайнă чухне аса илет. Çула тухиччен-ех-ха вăл, автор патне пĕррехинче тахçан пĕрле вĕреннĕ хĕрарăм-тантăш Раиса Аванская хыпăнса пырса кĕрет. «Унăн хушамачĕ халь урăхла ĕнтĕ, Емельянова. Вăл тахçанах качча тухнă, икĕ ача çитĕнтерет»,— тесе асăрхаттарать писатель.

Раиса Емельянова-Аванская хăй Комсомольск хулин никĕсне хывнă çĕрте ĕçлени çинчен каласа пама тытăнать те, пирĕн куç умне малтанхи пилĕкçуллăхсенчи вĕри чĕреллĕ çамрăк чăваш хĕрĕн сăнарĕ тухса тăрать. Парти чĕннипе, комсомол путевкипе, вĕсем, хальхи пекех, чи кирлĕ стройкăсене пинĕ-пинĕпе тухса кайнă, пур йывăрлăхсене, чăрмавсене çĕнтерсе, çĕнĕ хуласем, заводсем тăва-тăва лартнă.

Ун чухнехи йывăр та телейлĕ кунсене Раиса Аванская халь савăнса та хурланса аса илет. «Эх, халĕ теппре кайса курасчĕ çавăнта!..» — тет. Анчах, çамрăклăх пекех, çын ĕмринчи вăхăтсем те пĕрре кăна килеççĕ-мĕн. Пурнăç — малаллах шăвать.

Асаилӳсем тенĕрен, «Инçе çулсем тăрăх» кĕнекере асаилӳсем нумай. Кама кăна тĕл пулмасть автор — пурте иртнине аса илеççĕ. Автор хăй те час-часах унччен çӳренĕ çулсене, унччен тĕл пулнă юлташĕсене аса илет...

Нумай япалана Уйăп Мишши чăн-чăн художник куçĕпе курать.

«Сентябрĕн 5-мĕшĕ. Хĕвеллĕ, хитре, ăшă кун. Сахалин утравĕн сăртлă-туллă, кукăр-макăр чăнкă çыранĕсем инçетелле курăнса юлаççĕ. Вĕсен тăршшĕпе, шапшурă эрешлĕ чĕнтĕр тытса тухнă пек, кăтра хумсен шурă кăпăклă аркисем вĕлтĕртетеççĕ». (118 стр.)

Çумăр çунине çапла кăтартнă:

«...океан хĕррине тухрăмăр — пĕлĕтпе шыва пин-пин çиппе çĕлесе пĕрлештернĕ, тейĕн, çумăр ярăмĕсĕр пуçне урăх нимĕн те курăнмасть». (137 стр.)

Тата тепĕр тĕслĕх.

«...эпир Итуруп утравĕ çинчен Кунашир утравĕ çине кайма тухрăмăр. Пĕр пысăк мар карап пире, океан хумĕсем çийĕн ярăнтарса, кăнтăр еннелле илсе кайрĕ.

Пиртен сылтăм енче Итуруп утравĕн ешĕл йывăç-курăкпа витĕннĕ сăрт-тăвĕсем, чуллă сакăлта çыранĕсем тăсăлаççĕ. Хăшпĕр тĕлте çав çӳллĕ çырансенчен океана юханшывсем сиксе юхаççĕ. Хĕвел çутинче вĕсем шапшурă алшăлли тăрăхĕсем пек аялалла усăнса йăлтăртатса тăраççĕ». (145 стр.)

Писатель-художник çеç çапла куçа курăнмалла кăтартса пама пултарать. Вулакан уншăн автора яланах ырăпа асăнĕ.

Хаçатри пек калану вырăнсем: «...индустрие аталантармалли условисем...» (13 стр.), «...машинăсем туса кăларакан гигантлă заводсене çитсе куратăн» (217 стр.); «...литература вечерĕ туса ирттертĕмĕр» (105 стр.), «Часах тĕлпулу ирттертĕмĕр» (160 стр.), «...тĕлпулу туса ирттертĕмĕр» (165 стр.) т. ыт. те.

Акă вырăсла шухăшласа çырнă тĕлсем: «Омуль ятлă пулă — Байкал чапĕ» (14), «Камчатка çинчи Петропавловск...» (53), «Сахалин... çине çитрĕмĕр...» (79), «Асăннă кĕнекере Чехов патша правительстви утрав çинче этемрен мĕнле тискеррĕн мăшкăлланине хаяррăн питленĕ» (66), «Вырăнти музее кĕрсе куртăмăр» (44), «Вырăнти юлташсемпе пĕрле...» (40) т. ыт. те. «Вырăнти» тенĕ сăмаха автор ытларах та юрататъ-мĕн. (Сăмах майĕпе каласан, «вырăнти юлташсем», тени пирĕн енче вырăнта ĕçлекен юлташсем, служащисем, тенине пĕлтерет.)

Шырасан, пысăк кĕнекере урăх çитменлĕхсем те тупма пулĕ. («Инçе çулсем тăрăх» кĕнекере 226 страница.) Анчах чи нумаййи унта якатсах çитереймен предложенисем, уйрăм кăлтăксем мар, лайăххи, халăха кирли. Ăна вуласа тухсан, çамрăксем те, ваттисем те çĕннине нумай пĕлĕç, халиччен çитсе курман вырăнсемпе паллашĕç, тăван çĕршывăмăр аслинчен тĕлĕнĕç. Уншăн вара ӳркенмен автора тавтума та юрать.

*1961.*

## ТАЛАНТЛĂ КĔНЕКЕ

«Çĕньял ачисем» кĕнекери ĕçсем иртнĕ вăрçă хыççăнхи çулсенче, «аслă тӳпепе аслă çĕр хушшинче, Чăваш

çĕршывĕнче», Çĕньялта пулса иртеççĕ. «Геройĕсем» — пĕчĕкçĕ Марине, унран виç-тăвата çул аслă Арçук, вĕсен амăшĕ Маюк, шурă чăх, Шурçунат ятлă хур чĕппи, курак... Паллах, Маринепе Арçукăн тантăшĕсем те пур. Кӳршĕсем те курăнкалаççĕ. Сăмахран, Элекса инке. Курăнаççĕ те вулакан асне кĕрсе юлаççĕ. Автор, юмахри асамçă пек, кирек мĕн çинчен çырсан та, ăна чĕрĕлĕх шывĕ сĕрнĕ евĕр чĕртсе тăрататать. Тепĕр чухне самантлăха çеç вĕлтлетсе иртет çын (лаша е тата мĕн те пулин), вăл та чĕрĕ! Автор искусствăн тĕп законне лайăх пĕлет: каласа памасть, тăршшĕпех кăтартать, кăтартать...

Кĕнекене юратса, хавхаланса çырнă. Çĕньяла автор вĕçен кайăкпа танлаштарать. Çуркунне ку ял «çунаттисене сарса, янкăр тӳпене çĕкленес кайăк». Хĕлле — çунат вĕçĕсене кăвак тĕтре ăшне пытарнă «лапсăркка шур кайăк». Кĕркуннесенче — «вут кайăк».

Ачисем те унта — ялне кура-мĕн. «Пурăнаççĕ кайăкялта вĕлле хурчĕ тĕслĕ куç харшиллĕ, утмăлтурат çеçки пек кăвак куçлă е кĕр касĕ пек хура çӳçлĕ, хура куçлă та йăлтăр кулăллă хĕрачасем. Пурăнаççĕ унта ши-и! шăхăракан, пĕр-пĕрипе шăла çыртса çапăçакан, хĕрачасене ура хурса ӳкерекен, кирлĕ пулсан, пурне те хӳтĕлеме хатĕр паттăр арçын ачасем, ашшĕ-амăшĕпе тан ĕçлекенскерсем».

Тата фантазийĕ мĕнле вĕсен! Пĕлĕт çине тĕлĕнмелле кинокартина курнă пек пăхса ларaççĕ. Кам мĕн курас тет — çавна курать. «Акă, утă капанĕ пек икĕ мăн пĕлĕт пĕр-пĕрин патне çывхарчĕç те, вĕсен хыçĕнчен вăрăм мăйлăскер, вăрăм уралăскер тухрĕ.

— Тăрна! Тăрна ку! — палласа илчĕ ăна Марине».

Тăрна-пĕлĕт çĕрелле пăхасшăн-мĕн. Анчах вăрăм мăйне уссан, ăна çĕклесси-çке, тет пулас та, мăйне тăсса, урисене вата çынла шутарса, шур пĕлĕтсем еннелле утать.

— Ку пĕлĕтсем — çеçкене ларнă улмуççисем,— тет çиччĕри «астроном».

Шыв хĕрне амăш çăпатине çума ансан тупнă йăлтăркка тӳме те пулин Маринене ахаль тӳме пек мар, юмах çĕршывĕнчи уйăх пек курăнса каять. Унта пурнакансем халь ĕнтĕ уйăхсăр асапланаççĕ пуль. Мĕнле пулăшма пулать вĕсене?

Икĕ хĕрача (пĕри тăвата çулхи Анюк, тепри эпир пĕлекен Марине) вăрахчен шухăшласа ларaççĕ. Тӳме-

уйăх шыва мĕнле лекме пултарнă-ши, теççĕ вĕсем. Тен, вăл курса çӳреме тухнă? «Апла пулсан, ăна каялла, çырмана ярас пулать. Пур çĕршывсене те çитсе куртăр, мĕн курни-илтнине каласа тĕлĕнтертĕр.

Анюкпа Марине çырмана анчĕç. Шыв йăрăлтатса юхать, çыран хĕрринчи курăка тайăлтарать. Хĕрачасем тӳмепе сывпуллашрĕç. Тӳме-уйăх йăлтăр çиççе илчĕ, шыв юхăмĕпе пĕр-ик хутчен çиеле тухрĕ те куçран çухалчĕ. Вăл аякка, Маринепе Анюк пулман-курман çĕршыва çул тытрĕ».

Тин калаçма вĕреннĕ ачасем те Çĕньялта хĕвелпе вылясшăн. (Космос саманинче пурăнатпăр-çке!).

— Пай! (Пар!) — теççĕ вĕсем. Вăл акă мĕне пĕлтерет иккен:

«— Анне, часрах хĕвеле тытса пар-ха! (Тен, тытса пыр?—*Хв. У.*) Çывăрас вырăнне эпĕ çĕрĕпе хĕвелпе выляса ларăп. Е алăка уç, хĕвел патне чупса хăпарса каям!»

Итлет хĕвел çынна. «Ачасен юрри тӳпене çĕкленет. Кăвак-шурă пĕлĕт витĕр ылтăн ярăмĕсене сапала-сапала, хĕвел тухать...»

Кĕнекере, çичĕ çулхи ача куçĕпе курса, чи тӳлек пурнăçа кăтартса панă. Ĕçлеççĕ çынсем, савăнаççĕ, ятлаçаççĕ, тӳрленеççĕ. Анчах пурте — «хамăрла»: лăпкăн, сăпайлăн. Автор та хăлаçланмасть, хăпартланмасть. Çуккине пур тумасть. Пуррине хăвăрах курăр, тет пулас. Тен, малтанласа хăйĕн вăйне шансах пĕтерменни те пулĕ. Шăкăл-шăкăл та мăкăл-мăкăл. Вулакан кăмăлне хускатмалли нимĕн те çук пек.

Чăнах, ара. Чи тĕлĕнмелли Маринешĕн — амăшĕпе пасара сысна çури сутма кайни. Чи пысăк хуйхă — вăрçăра вилнĕ ашшĕн пиншакне çухатни. Мĕнех вăл пирĕншĕн, пурнăç курнă çынсемшĕн, темелле пек.

«Пек» кăна çав. Кĕнекене тытатăн та, пĕрремĕш йĕркеренех сана уçă сывлăш варкăшĕ пырса çапать. Çĕнĕлле каласа хунисем, хăйне евĕр курма пĕлни, япаласене, пулăмсене, ĕçпуççене урăхла, кĕтмен енчен кăтартса пани...

«Мĕнле вăл урăхла? — тейĕ пĕр-пĕр скептик.—Çумăр çунине кирек кам та çумăр çуни тет-çке...»

Калани мĕнле те, кăтартма кашниех хăйне майлă кăтартать. Çапла пултăр тесен, нумай та кирлĕ мар-мĕн: авторĕ çеç талантлă пулмалла. Ку кĕнеке авторне тата вăл хĕрарăм пулни те «пулăшать-тĕр». «Яшка витĕр шăнкăртам курăнать», «Çу-ук-ла», «Курăк хушшинче»

сыпăксене хĕрарăм çеç çырма пултарнă. Художник-хĕрарăм.

Марине хур çитерме кайнине илĕр-ха тата. Мĕн тери хитре сăрланă ăна Ева Лисина. (Кĕнекене çавă çырнă.) Ытараймасăр тепĕр сыпăк çеç илсе парам.

«Хĕрача... патне хăйсен хур чĕппи какăлтатса пычĕ. Марине хавасланчĕ, унтан çавăнтах тарăхса кайрĕ.

— Çывăха ан кил луччĕ! Хам çимесĕр, сана çăвартине пара-пара çын турăм. Пархатарсăр! Мана суккăр терĕн пуль, эс сĕлĕ çине тарнине курмасть, терĕн пуль. Кай, кай кунтан.— Марине чĕппе çунаттинчен хуллен çапать.

Çак чĕпĕ чи кайран тухнăччĕ. Имшерккескерне Маринех ÿстерчĕ, ăна тырă, çемçе курăк тупса паратчĕ. Чĕп асси амаланчĕ, халь ыттисенчен те тăн-тăн, алла иленнĕскер, ялан этем енне туртăнать.

Хур чĕппи хальхинче апат ыйтма мар, выляма килчĕ пулас: кă-ăк, кă-ăк туса, Маринене сăхать. Ыраттармасть хăй, алла кăтăклать çеç.

Чи çывăх юлташпа пĕр хушă хирĕçнĕ хыççăн каллех килĕштернĕ чухнехи пек, савăнса каять Марине.

— Ан çиллен! Ху мар, сана аннӳ сĕлĕ çине ертсе кайнă!

Чĕп какăлтатса илет. Вăл çапла каланине пĕлтеретмĕн: «Чăнах анне ертсе кайрĕ, атте хыçалтан сыхласа пычĕ. Вĕсемсĕр те сĕлĕ çине каяттăм эп! Ма каяс мар? Куç курать, Маринерен тарма урапа çунат пур».

Асси чĕппĕн «ашшĕпе амăшĕ» «калаçни» мĕнле интереслĕ, курасчĕ сирĕн!

Алă хăй ăссĕнех çĕнĕрен-çĕнĕ татăк çырса илесшĕн те, çук, çитет, вулакан хăй вуласа савăнтăр. Лайăххи унта — савăнмалли те, хурланмалли те, кулмалли те — тем чухлĕ.

Лайăх вырăнсем тенĕрен, вĕсене эп хам туяннă кĕнекере палăртса пыма юрататăп: «Çĕньял ачисем» повеçре те паллă туса пытăм-пытăм та — пĕтĕм кĕнекене тĕрлесе пĕтертĕм.

Мĕнре çак кĕнекен «вăйĕ»? — Автор пултарулăхĕнче. (Тьху, куçăхтарас марччĕ!)

Ева Лисина ятне эп хамăр журналсенче унччен те асăрхакаланă, анчах калавĕсене вуламан. Начарри çителĕклех те пирĕн, йăнăшасран хăранă-ши? «Çĕньял ачисем» хыççăн ĕнтĕ çамрăк автор çырнисене шыраса тупсах вуласа пырăп.

Ырлани ку кӗнекере пӗр ҫитменлӗх те ҫук, тенине пӗлтермест. Тӗрӗс, чӗлхи «чӑвашла» ӗнтӗ. Ҫапах ачасене паянхи мӑн ҫын пек калаҫтарни те, якатсах ҫитерреймен вырӑнсем те тӗл пулаҫҫӗ-ха. Кӗнекене тепӗр хут ҫапса кӑларма ӗҫлес пулать-ха авторӑн. Унти общество пурнӑҫне те ытларах палӑртасчӗ т. ыт. те.

Ку ҫырӑва эп критика шучӗпе мар, вулакансене астарас тесе ҫеҫ ҫыртӑм. Авторне те ырӑ ӗҫшӗн тав тӑвас килчӗ.

*1972.*

## ПӖР КАЛАВҪӐ ҪИНЧЕН

Шел, пирӗн уйрӑммӑн калавсене е повеҫсене тӗпчекенсем ҫук. Литература теорийӗ тесен, эпир вӑл мӗн тӗслине те манса кайнӑ ӗнтӗ. Юрать, хӑшпӗр ыйтусемпе А. Артемьев ҫыркалать. Тен, ҫав статьясене, пӗр ҫӗре пуҫтарса, хӑҫан та пулин кӗнеке туса кӑлармалла? Писатель ӗҫӗ-хӗлӗ пирки ушкӑнпа пӗр кӗнеке хатӗрлесен те пӑсмӗччӗ. Ҫамрӑксем хутшӑннӑҫем хутшӑнса пыраҫҫӗ пирӗн литературӑна. Вӗренмелли ҫук вӗсене валли. Ҫавӑнпа чылай чухне очеркне калавран, калавне повеҫрен уйӑрса илме ҫук.

Чӑн та, мӗн вӑл калав? Повеҫӗ мӗн? Пӗчӗк роман-и е пысӑк калав? Очеркӗ тата?

Калав та яланах пӗр мар. 1940-мӗш ҫулсенчи калавсем 1930-мӗш ҫулхисенчен уйрӑм. Хальхи калавсене 1950—1960 ҫулхисемпе танлаштарма ҫук.

Урӑх вӑхӑт — урӑх ҫимӗҫ.

Ҫавсене тишкерсе тухаясчӗ критиксен,—те вӑхӑт тупаймаҫҫӗ, те хӑюлӑх ҫитмест. Куҫ хӑрать та алӑ хӑрамасть тенӗ-ҫке.

Юлашки ҫулсенче палӑрнӑ калавҫӑсенчен эпӗ ҫаксене астуса юлтӑм: Таллеров Лаврентие, Афанасьев Порфирие, Лисина Евӑна, Лисаев Ивана, Хӗветӗр Агивере. Вӗсен кашнин хӑйӗн теми, хӑйӗн «алли», хӑйӗн сӑнӗ. Ҫав вӑхӑтрах вӗсене пӗрлештерсе тӑраканни те пур — паянхи кун, пирӗн ҫынсем.

Ку авторсем калавсемпе ҫеҫ те ҫырлахмаҫҫӗ-ха, ытти жанрсем еннелле кармашаҫҫӗ. Пурте тенӗ пекех повеҫсем те ҫырса пӑхнӑ, очерксем кӑларнӑ. Тата пур ҫӗрте те ӑнӑҫуллӑ утӑмсем тунӑ. Сӑмахран, Лисаевӑн «Ашшӗ-

пе хĕрĕ» тĕрленчĕк нумай çулсем хушши пуранас япала. Вăл чăн-чăн самана документчĕ. Психологилле этюд.

«Хурăнсем чĕнмеççĕ» калавне те Лисаев тирпейлĕ çырнă. Сăнарсем чĕрĕ. Сăмах тути-масине лайăх туять автор. Калас сăнавсемпе шухăшĕ нумай ун. Калавне çеç урăхларах — трагедилле вĕçлемелле пулнă-мĕн. Вара вăл вулаканăн чĕрине ыраттарĕччĕ, произведенин пĕлтерĕшне ӳстерĕччĕ. Сывалми чирпе асапланакан хĕр хăй çинчен манса кайсах ыттисемшĕн тăрăшни — пирĕн совет çĕршывĕнче çеç пулма пултарас япала.

Таллеров Лаврентий халиччен ытларах кулăшла калавсемпе очерксем çырнипе паллăччĕ. Вĕсенче вара, тĕпрен илсен, икĕ тĕрлĕ сăрччĕ — шурри, хури. Пĕрисем — вĕçне çити лайăххисемччĕ, теприсем — начаррисем, путсĕррисем. 1975 çулта тухнă «Хурăн шывĕ» кĕнекере Таллеров пур тĕрлĕ сăрсемпе те усă курать, çынсене ăста художник пек ӳкерет — кирлĕ çĕрте кулать, тепĕр çĕрте тĕлĕнсе пăхса тăрать, савăнать. Ку калавсенче авторĕ мар хуçа — «геройсем» хуçа. Вĕсем тепĕр çур страницăранах мĕн туса хурасса, пирĕн пекех, авторĕ те пĕлмест, тейĕн.

Эпĕ, чăваш писателĕсен 30-мĕшсемпе 40-мĕш çулсенчи кĕнекисене вуласа çитĕннĕскер, «Пиçнĕ-пиçмен çырлине» калаври Урине ятлă япăлти хĕртен усаллине çеç кĕте пуçланăччĕ ĕнтĕ. Ун пек шухăшлама сăлтавĕ те тем чул: амăшĕ, Ялтак — карма çăвар, ашшĕ, Хумма, чĕлхесĕр янавар, хăй вунтăхăр çулхи вĕçкĕн хĕр, пĕр ĕçре виçĕ кун, тепĕр ĕçре пĕр уйăха яхăн тытăнкаласа тăнă та халĕ тата урăх ĕçе куçма хăтланса, çара пĕççисене кăтартса, авланнă колхоз председателĕпе уйсем урлă мотоциклпа вĕçтерсе çӳрет. Мĕн кĕтме пулать ун пек вĕлтĕрккерен?

Пирĕн произведенисенче Уринен малашнехи кунçулĕ паллăччĕ: вăл е часрах качча сиксе тухать те упăшки ĕнси çине хăпарса ларать, упăшкине çăварлăхласа ларать е таçта инçетри стройкăна тухса каять. Мĕн тума? Ухмахсене шырама.

Таллеров, эпир хăнăхнă йĕртен палт пăрăнса, Уринене комбайнер туса хурать. Калав вĕçĕнче куратпăр эпир: ку хĕрача, ĕçĕпе чапа тухса, пĕтĕм республикăна калаçтарас çын, çамрăксене хăй хыççăн ертсе каясскер. Пулас паттăр, тен, героиня.

Уринене çапла кăтартса панине ĕненетпĕр-и эпир? Çав тери ĕненетпĕр. Ун пек кăтартма «никĕс» те пулнă-

мĕн: вăтам шкултанах Урине комбайнер ĕçне алла илсе тухнă. Ĕçрен ĕçе куçасси те çавна пулах пулса пынă. Амăшĕ ăна, «таса» ĕçе вырнаçтарса, часрах качча парасшăн. Хĕрĕ — юратнă ĕçшĕн хыпса çунать. Ан тив, ун ашшĕ, лутра Хумма, тимĕрçĕ, шерте пек вăрăм арăмне Ялтака пăхăнса пурăнтăр, вĕсем, çирĕм çул хушши пĕрле пурăнса, пĕрре юнашар утса курман пулччăр; Ялтакĕ те кулăшларах ĕнтĕ. Анчах кам ĕç паттăрĕсем идеальнăй çемьерен çеç тухаççĕ тенĕ?

Тепĕр калавĕ «Çĕнĕ кӳршĕ Карачăм» ятлă. Вăл калав «геройĕ» те маншăн «паллакан палламан çын». (Гоголь каланăччĕ-и-ха ун пек?) Эпĕ те курнă ун евĕрлĕ «кутăн-пуçăн» çынсене, анчах те çав самантра урăх шухăшпа çӳренĕрен, те курма пĕлментен, мана тĕлĕнтерсе хытарсах ярайман вĕсем. Тен, хăнăхнă калăпа вырнаçман. Таллеров Карачăма скульптор пек ӳкерсе парать. Ялта эп ăна пин çын хушшинче палласа илмелле.

Пĕтĕмпех пирĕн умра пек Карачăм. Çав вăхăтрах тем уçăмлă марри те пур унра. Кăткăс çын вăл. Сана хисеплени çинчен калаçнă хушăрах вăл ним мар улталаса кайма пултарать.

«Чăваш ташши», «Сухăр Мĕкĕти» калавсем те вулакан асне юлаççĕ.

Чаплă Гете тахçан ĕлĕк «мои книги — это результат чтения чужих произведений», тенĕ пулсан та, Таллеров калавĕсенчи кашни сăмаха, кашни сăнара ĕненетĕн. Автор чăнах та курнă çав çынсене, пурăннă вĕсен хушшинче, калаçнă вĕсемпе. Нимĕн те кĕнекесенчен мар кунта, йăлтах пурнăçран. Çавăнпа шухăша яраççĕ вĕсем, ăстăна пуянлатаççĕ, сăнасарах пăхма вĕрентеççĕ.

Тата питĕ чăвашла çак калавсем. Акă темиçе тĕслĕх: «Ун пек фельетон геройĕ пулса тăнă хыççăн картишĕнчи анчăк куçĕнчен пăхма вăтанăн».

«...Урара пĕр пĕрчĕ вăй юлмарĕ».

«— Çичĕ çул вĕреннĕ пуçăмпа çу завочĕн директорĕ пулса тăтăм».

«...шăмă вырăннех кăшлать мана арăм» т. ыт. те.

Кам та кам вулама ĕлкĕреймен çак калавсене — вулăр та савăнăр.

*1977.*

## КУÇАРУ ЫЙТĂВĔСЕМ ПИРКИ САМАХ ХУСКАТНĂ МАЙ

Куçару ыйтăвĕсем пирки тăтăшах çыраççĕ пирĕн. Пĕрисем калаççĕ: вырăсла куçарнă чухне подстрочник тенине пĕтермелле, куçарас пулсан, тӳрех пĕр-пĕр чĕлхерен тытса куçармалла, çав чĕлхепе çырнă литературăна, çав çĕршыва лайăх пĕлмелле, теççĕ. Теприсем, вĕсене хирĕçлесе, подстрочнике хӳтĕлеççĕ, подстрочник тăрăх та чип-чиперех куçарма пулать, теççĕ. Кусем те, лешсем те, хăйсен сăмахĕсене çирĕплетес тесе, тĕслĕхсем иле-иле кăтартаççĕ. Вулакансем астăваççĕ пулĕ: тавлашура çĕр те пĕр тĕрлĕ ыйту хускалнăччĕ. Вĕсене халь пурне те аса илсе те пĕтереес çук. Чăваш писателĕсенчен «Литература и жизнь» хаçатра В. Иванов-Паймен пысăк статья çырса кăларчĕ. Çав ыйтупах «Октябрь» журналта П. Хусанкай та çырнăччĕ.

Тавлашу унпа вĕçленмерĕ. Октябрь уйăхĕнче * Мускавра совет çĕршывĕнчи писательсен союзĕн правлени Секретариачĕн анлă ларăвĕ пулса иртрĕ. Унта союзлă тата автономиллĕ республикăсенчен, крайсемпе облаçсенчен пуринчен те пĕрер-икшер-виçшер çын чĕнсе илнĕччĕ. Чăваш писателĕсенчен Мускава мана кайма тӳрĕ килчĕ.

Ларура сăмах пуçласа яраканĕ пирĕн çĕршыври чи паллă писательсенчен пĕри Константин Александрович Федин пулчĕ. Кăвар пек çивĕч куçлăскер, çӳллĕ те хытанка çын, вăл пĕр вунпилĕк-çирĕм минутсем іаларĕ пуль.

Вара докладчиксем тухрĕç: совет çĕршывĕнчи чĕлхесенчен куçарнă пирки Николай Корнеевич Чуковский каласа пачĕ; ют çĕршыв чĕлхисенчен куçарнă пирки Иван Александрович Кашкин пĕлтерчĕ. (Ун хушаматне юлашки сыпăк çине пусăмласа калаççĕ-мĕн.)

Камшăн мĕнле пулĕ те, маншăн докладчиксем мĕн çинчен калани кăна мар, вĕсем хăйсем те интереслĕ пулчĕç. Федин каланă чухне эпĕ, сăмахран, унăн кĕнекисене аса илсе лартăм. Çав тери йывăр пулассăн туйăнать вăл çырнă кĕнекесене куçарма. Константин Александрович пек сăмах ăстисем, пысăк художниксем, тирпейлĕ ĕçлекенсем тĕнчипе те ытлашши нумаях мар пуль.

---

* 1962 ç.

Çавăнпах-ши, килте ӳссе çитĕннĕ «тăлмачсем», куçарас тесе, ун кĕнекисем тавра питех хĕвĕшмеççĕ вара. Чăвашла эпĕ унăн произведенийĕсенчен В. Алакĕр тăрăшса куçарнă «Ленин сăнарĕ» ятлă калава çеç вуланă пулас. Тата кăçал ачасем валли куçарса кăларнă пĕр пĕчĕкçĕ кĕнекине курнăччĕ.

Н. Чуковский калаçнă чухне вăл çырнă «Балтийское небо» романпа унăн ытти кĕнекисем. Николай Корнеевич ют çĕршыв чĕлхисенчен ăста куçарма пĕлни аса килсе ларчĕ. Н. Чуковский Я. Ухсайăн «Кĕлпук мучине» вырăсла куçарас ĕçе те хутшăннăччĕ.

И. Кашкин ятне ют çĕршыв чĕлхисенчен куçараkансем хушшинче чи малтан тенĕ пек асăнаççĕ. Тăлмач-художник, теççĕ ун çинчен. Темиçе чĕлхе пĕлекенскер, И. Кашкин пуринчен ытла акăлчан чĕлхипе çырнă литературăсене тĕпчеме юрататьмĕн. Куçарасса вара Америка писателĕсен произведенийĕсене нумайрах куçарать, вĕсем пирки статьясем çырать. Э. Хемингуэйăн, У. Фолкнерăн, Э. Колдуэллăн вырăсла пичетлесе кăларнă кĕнекисенче кашнинчех тенĕ пек И. Кашкин хушаматне те курма пулать.

Паллă çынсем пирки калас пулсан, кунта кашни утăмрах кĕнеке хуплашкисем çинче тĕл пулакан чаплă ятсене куратăн. Ав, президиум сĕтелĕ хушшинче шапшурă çӳçлĕ Николай Семенович Тихонов шухăша кайса ларать. Ăна хирĕç Олесь Гончар вырнаçнă. Вĕсемпе юнашар пĕр енче — чĕрĕ палăк пек курăнакан Берды Кербабаев туркмен, тепĕр енче — «Ледовая книга» авторĕ эстон çынни Юхан Смуул, А. Салынский драматург...

«Тĕнчере пурте улшăнса пырать. Куçару ĕçĕн принципĕсем те улшăнаççĕ»,— тет Федин. Вăл эпир кĕнекесене, куçарусене пула ют çĕршывсемпе, ытти халăхсен культурисемпе паллашни çинчен калать. «Благодаря книгам, в наших душах поселены миры»,— тет вăл.

К. А. Федин СССРти халăхсем, кӳршĕллĕ пурăнакан республикăсем пĕр-пĕрин кĕнекисене сахал куçарни çинчен, пĕр-пĕринпе сахалтарах тĕл пулса калаçни çинчен калать. Ытларах куçарăр, ытларах паллашăр, тет вăл.

Сăмах вăл енне кайрĕ пулсан, пирĕн кӳршĕри тăванла халăхсен чĕлхисене пĕлекен писательсем те пур: Алексей Афанасьев — удмуртла, Яков Ухсай — пушкăртла та тутарла, Александр Кăлканпа Александр

Алка — тутарла пĕлеççĕ, тӳрех çав чĕлхесенчен чăвашла куçарма пултараççĕ.

Н. Чуковский те К. Федин шухăшнех каларĕ. Пĕрне-пĕри ăнланмасăр пĕр аслă пуласлăхшăн кĕрешме çук, терĕ вăл.

Аста куçаракансене аса илнĕ чух Н. Чуковский грузин чĕлхинчен куçарнă Н. Заболоцкий поэта, Вăтам Азири халăхсен чĕлхисенчен куçаракан С. Липкина, Л. Пеньковские, А. Тарковские, С. Шервинские, П. Антокольские мухтаса хăварчĕ. Н. Заболоцкий, Грузири классикăлла поэзие вырăсла куçарса, ăна вырăс культурин уйрăлми пайĕ туса хучĕ, терĕ Н. Чуковский.

Мĕн тери пысăк хак — урăх чĕлхепе çырнă произведенисене куçарса, çав куçару чĕлхипе калаçакан халăхăн ĕмĕрхи пуянлăхĕ туса хураççĕ! Пур-ши пирĕн ун пек кĕнекесем? Эпĕ А. С. Пушкинăн чăвашла «Борис Годуновне» аса илтĕм. Ăна Митта Ваçлейĕ миçе эрне е миçе уйăх куçарса ларнине пĕлместĕп эпĕ, анчах унти кашни сăнлăх, кашни шухăш маншăн чăвашла илтĕнет. Тахçан тата хамăр халăх хушшинче те мар, таçта урăх çĕрте, ĕлĕкхи пек каласан, «çичĕ ютра» пулса иртнĕ ĕçсем çинчен Пушкин хăех чăваш куçĕпе курса, чăваш ваттилле шăкăл-шăкăл каласа панă тейĕн çав. Тата акă мĕн паха: «Борис Годунов» культура шайĕпе вырăс халăхĕнчен аяларах тăракан чăваш вулаканĕсем патне «анман», хăй пирĕн вулакансене «çĕклет», «çӳлелле» туртать, пирĕн ăстăна пуянлатать. Хитре куçарнă вырăнсем-и? Пĕтĕм кĕнекипех. Нихăш сыпăкне ытарса пăрахса хăварас килмест. Акă, эппин, пĕр суйламасăрах.

«Мисаил.

Мĕскершĕн эс сĕлкĕш, юлташ? Акă Литва чикки, ху тахçанах ăмсаннă вырăн.

Григорий.

Литва çĕрне çитмесĕр те ман чун лăпланас çук.

Варлаам.

Мĕншĕн Литвана çав тери юратнă эс? Акă эпĕр пур вара — Мисаил аттепе иксĕмĕр — çылăх йĕннисем, мăнастиртен тухса шăвăннăранпа та нимĕн çинчен те шухăшламастпăр. Литва-и, Русь-и, пылак-и, йӳç-и: пире пурпĕрех, пултăр çеç эрех... акă вăл... кĕрекерех».

Чăвашла-и? Тăршшĕпех çавăн пек — шыв пек юхать. А. М. Горький çырнă «Фома Гордеева» та асран кайми Митта Ваçлейĕ пирĕн тăван халăхăмăрăн пуянлăхĕ туса хунăччĕ. «Фома Гордеева» чăвашла çĕнĕрен куçарма хăюлăх çитерекенсем урăх тупăнмĕç те, тетĕп эпĕ.

Л. Н. Толстой çырнă «Вăрçăпа мир» эпопейăна та куçарма тытăннăччĕ Митта Ваçлейĕ,— ĕлкĕреймерĕ...

Хитре куçаракансем пирĕн татах та пур: М. Сироткин (вырăсларан чăвашла, чăвашларан вырăсла, проза, поэзи — пурне те пĕр пекех лайăх куçарать), П. Хусанкай, А. Артемьев, Стихван Шавли, А. Кăлкан т. ыт. Анчах, темшĕн-çке, пуртерех вуламалли кĕнекесем çинче вĕсен аллисем мар, ытларах «хăюллăраххисем» курăнаççĕ. (Ку сăмах мĕне пĕлтернине каярахпа калăпăр.)

Доклад тăвакансем те, тухса калаçакансем те часчасах çакна асăнчĕç: куçарнă чухне сăмахсене мар, шухăша (дух) куçармалла, терĕç. Дух тенине ăнланса илмесĕр, писатель малалла мĕн çинчен çырнине пĕлмесĕр, сăмахсене çеç тепĕр чĕлхене «сявырза хорза» ларнине вырăссем «торгово-промышленный перевод», теççĕмĕн. Пуринчен ытла кунта ĕç туни, произведени шухăшне ăнланса илсе, ăна урăх сăмахсемпе каласа пама тăрăшни мар,васкани, часрах укçа ытларах тăвас тесе çунни, усламшăн вĕтеленни. Çав «торгово-промышленный» текен меслетпе куçарнă кĕнекесем пирĕн те тухкалаççĕ çав. Ун пек кĕнекесене вара судпа айăпласа вулаттармасăр та вулас килмест. Вăл «меслет» вулакансене кĕнекерен, писательтен пистерни каламасăрах паллă.

Меслетсем пирки калаçнă май тата тепĕр йышши куçару çинчен каласа хăварар. Ăна ларура А. Тарковский поэт-тăлмач каларĕ. Вăл «çăрине ватса кĕрсе куçарни» («перевод со взломом») тени-мĕн.

Ку тата мĕне пĕлтерет-ши — çăрине ватса кĕрсе «сявырза хони»? Акă мĕн иккен. Хăшпĕр хăюллă çынсен çав тери гонорар тăвас килет. Анчах, ыттисем пек, издательство мĕн те пулин куçарма парасса кĕтсе тăрсан, вăхăт нумай иртет. Тата издательстви те вĕсене ĕç хушсан та, хушмасан та пултарать. Вара çав хăюллă çынсем хăйсене е хăйсен арăмне е куккăшне килĕшнĕ пĕр-пĕр çăмăлтарах кĕнеке тупаççĕ те ăна часах куçарса хураççĕ. Чи кирли кунта — çав кĕнеке е куçаракана хăйне е, унăн арăмне килĕшни, вулакана килĕшессипе килĕшмесси çинчен вĕсем шухăшламаççĕ те. Ку вăл, вĕ-

сен сăмахĕпе каласан, «иккĕмĕш вырăнта». Вара çав алçыру пулса тăнă кĕнекене, пусмăрласах тенĕ пек, издательство планне кĕртеççĕ.

Ак хайхискер эпир тата тепĕр термин патне çитсе тухрăмăр. Ку вăл — «апат тиркесе (уяса) тăман тăлмач» тени. (Вырăссем ăна «всеядный переводчик» теççĕ-мĕн.) Паян вăл Шекспирпа Серва́нтес кĕнекисене, ыран вара чавсисене таварсах сурăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентерессипе çинчен куçарса ларать. Унăн ни принцип тени, ни авторсене хисеплени çук.

Тӳррипе каласан, тăванне юрамасть пулсан та, тӳррине тӳррипех калар: начар куçарнă кĕнекесем пирĕн те сахалах мар-ха.

Ку чухне «Пионеры на берегу озера разбили палатку» тенине «пионерсем кӳлĕ хĕрринче палатка çапса ватрĕç» тесе анекдотлах япăх куçарнисем курăнмасан та, вăтам куçарнисем çителĕклех-ха пирĕн.

«Япăх çырнă произведенисене издательствăсем пăрахăçлаççĕ, япăх куçарнă кĕнекесене — пичетлесе кăлараççĕ»,— терĕ ун пирки тарăхса Семен Липкин.

«Халтурăпа, тӳсме çук начар куçарнипе кĕрешме çăмăл, ăна кирек кам та курать, «вăтам» куçарнипе, хут пĕлекен çын куçарнипе — йывăртарах»,— терĕ И. Кашкин.

«Вăтам çеç куçарни ку чухне — япăх»,— терĕ çавах кĕскен. Пурте алă çупса ячĕç.

Пĕррехинче çакăн пек ĕç пулса иртрĕ. Шупашкар типографийĕнче вырăсларан куçарнă «Кулăшла калавсем» ятлă кĕнекене пичетлеме тытăннă. Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче рабочисем пуçтарăннă та пĕр калавне вуласа пăхрĕç — никам та кулмарĕ, теприне вуласа тухрĕç — каллех кулакан тупăнмарĕ.

— Ку кĕнекен ятне йăнăш хунă пуль, кунта пĕр кулăшла калав та çук,— терĕç вара печатниксем.

Эпĕ те илсе вуласа пăхрăм вăл кĕнекене. Тĕлĕнмелле! Вырăсла пурне те савăнтаракан, култаракан, хурлантаракан калавсем чăвашла куçарсан хурлантаракан калавсем çеç пулса юлнă. Кулăшĕ — типсе ларнă.

Мĕн пулнă, тетĕп. Аптранă енне вырăслипе танлаштарса вулама тытăнтăм. Çиелтен пăхсан, пурте тĕрĕсех пек ĕнтĕ. «Хлеб» тенине чăвашла та «çăкăр» тесе куçарнă. «Учитель» тенине е «учителех» хăварнă, е «вĕрентекен» тенĕ. Тата ытти те çавнашкалах. Пурте пур, пĕр кулăш çеç çук. Тата илемлĕ литература тени те çук

иккен. Вăл та типсе ларнă. Типĕтнĕ çĕрулми пек, шакăр сăмах купи тăрса юлнă.

Ак сире тĕрĕс куçару! Ку вăл куçарни мар, çине-çинех словарь çине пăхса подстрочник туни те мар, чипчипер сиккелесе çÿрекен кроликăн хырăмне мăка çĕçĕпе касса çурса каялла çĕлесе лартни. Чÿпĕк тултарнă хырăмне сĕвем çиппе мĕнле тăрăшса çĕлесен те, кролик пурпĕрех вилет.

Çавăнпа куçару ĕçĕ — искусство, теççĕ. Искусство тени вара — ĕмĕр тĕксĕмленми хаклăран та хаклă япала тунине (ÿкернине, сăрланине, çырнине, куçарнине...) пĕлтерет. Кашни çыннăнах сасă пур, кашни çынах юрлакалама пултарать, анчах кашни çынах халăха килĕшмелле юрлаймасть. Кунта нимĕн те тăваймăн ĕнтĕ.

Начар куçарнă кĕнекесен юхăмне пÿлсе хурас тесе, çав ларурах, Мускавра, издательствăсенче тата писательсен союзĕн правленийĕнче (хаçат вуласа хăнăхнипе — издательствăсем çумĕнче, тесе çырас килсе кайрĕ) илемлĕ литература куçарас ыйтусемпе ĕçлекен Совет тума сĕнес терĕç.

Япăх е япăхрах тухнă кĕнекесене пурне те начар тăлмачсем куçарнă теместĕп эпĕ. Пирĕн пĕлÿ е хăнăху çитменни те хуплать-ха, васкамалла пулса тухни те пĕтерет. Тепĕр чухне сисмен çĕртенех пĕр-пĕр юбилей çитсе тăрать те — ну, васкама тытăнатпăр вара, ну, кĕрлеттеретпĕр. Пĕр авторăн вунă сăввине — вунă тăлмач куçарса та пăрахать. Кĕнеки тухсан, вуласа пăхатăн та, сăвăсен пуххи вырăнне — винегрет пулса тăнă.

А. П. Чеховăн хăшпĕр калавĕсене халь эпĕ савăнсах тепĕр хут куçарăттăм. Ан тив, А. Артемьев, В. Алакĕр, Н. Сандров куçарнисем çаплипех юлччăр, «Драма» пек ахах пĕрчисене тепĕр хут куçарасчĕ. А. М. Горькин чылай произведенине те чăвашла çĕнĕрен куçарни пăсмĕччĕ. Шутсăр пăсмĕччĕ. Шутсăр пăсмĕччĕ! Генилле писательсен произведенийĕсене пĕччен-иккĕн куçарнипех ĕмĕре пымалăх туса çитерме кансĕр пуль çав. Темиçе çын юратса куçарсан, йышпа ĕçлесен, пĕринне пĕри пăхса тухса редакцилесен çеç мĕн те пулин тухма пултарĕ.

Халиччен мĕнлерех пулса иртетчĕ-ха пирĕн? («Иртетчĕ» те мар-ха, вăл халĕ те çавăн пекех.) Пĕр хăюллăрах юлташ (паçăр каланă пекки мар, чипер юлташах) пĕр аслă писателĕн пурте юратса вулакан кĕнекине тытать те васкаса кăна чăвашла куçарса пăрахать. Издательствăра ăна пĕр çамрăк редактора параççĕ. Лешĕ

алçырăвне тӳрлетмест, юсамасть, редакцилемест, вулакаласа, пăхкаласа çеç тухать, мĕншĕн тесен куçараканĕ — паллă çын, çулĕпе те унран аслă. Редакторĕ вара ĕнер-виçĕмкунсенче çеç студент пулнă. Куçарнă кĕнекене мĕн вуламалла ăна тесе, хайхи алçырăвне аслă редактор та вуламасть. Çапла кĕнеке пулса тухать...

Пĕр хăрама пĕлекен тăлмач мана хăй классиксене мĕншĕн куçарма пăрахни çинчен çапла каласа пачĕ: «Классиксен кĕнеки умĕнче эпĕ хама сăрт çамки умĕнчи шăши пек туя пуçларăм,— тет: — Пурпĕрех эп ун витĕр шăтарса тухаяс çук (йĕркеллĕ куçараяс çук!) тесе, хĕвелçаврăнăш катнă пек, сăмахсене çеç куçарса шĕкĕлчесе ларатăп,— тет.— Кĕнеке пулса тухсан, пăхатăп та — «пăтă»,— тет.

«Халь ĕнтĕ ăслăлантăм, хальхи писательсене çеç куçаратăп»,— тесе вĕçлерĕ ман юлташ хăйĕн калавне.

Пирĕн классиксем те, хальхи писательсем те пĕр чĕлхепех — вырăслах çырнă-çке, тесшĕнччĕ те — шарламарăм, ăнланмĕ, терĕм.

Çапла, писатель ĕçĕ пĕччен тумалли ĕç пултăр, анчах куçару ĕçне йыша хутшăнтарасчĕ.

Пĕлмен япала çинчен калаçать тесе, сăвăçсем ан çилленччĕр те, кĕскен кăна вĕсем вырăсларан мĕнле куçарнă пирки те асăнса хăварас килчĕ. Сăвăри кашни йĕркене, кашни сăмаха, кашни предложение йĕрки-йĕркипе чăвашла каласа пама тăрăшни яланах лайăх куçарнине пĕлтермест. Хаçатра калашле — вуçех урăхла. Ун пек куçарни кашнинчех тенĕ пек ăнăçсăр пулса тухать. Сăвăçăн ăмăрткайăк пек çӳлте вĕçекен шухăшне çĕр çумне туртса антарса шутарни, чуралла тĕплĕ каласа пани, кирек мĕн калăр та — куçарни марах. Çапла пулин те, куçарнă сăвăсене пирĕн поэтсем час-часах хăйсен кĕнекисене кĕрте-кĕрте яраççĕ. Ман шухăшпа, вăл пĕртте тĕрĕс мар. Пĕр енчен вăл куçарнă сăввăн авторне сума суманнине пĕлтерет. Тепĕр енчен тата вăл çапах та куçараканăн шухăшĕ мар-çке-ха. Куçаракан авторăн пĕр-пĕр сăнлăхне е шухăш юппине илсе, урăх сăвă çырсан кăна, «çав-çав автор майлă» е «çав автортан» тесе, харпăр хăй кĕнекине кĕртме юрать пулĕ. Акă, ун пек тĕслĕхсем: А. С. Пушкин Гораций одине ирĕклĕн куçарнă («Я памятник себе воздвиг нерукотворный» тесе пуçланакан сăвă), М. Ю. Лермонтов «Гĕтерен» тенĕ сăвă («Горные вершины спят во тьме ночной» тесе пуçланаканни. К. В. Иванов ăна 1908 çулта чăвашла

куçарса пичетленĕ), «Байронтан» тенĕ сăвă («Как одинокая гробница» тесе пуçланаканни) т. ыт. те. Ку вăл, паллах, пурте çавăн пек хăтланмалла тенине пĕлтермест. Тата пирĕн лайăх куçарнă сăвăсем çук, тесе те каласшăн мар эпĕ. Ун пек сăвăсем те, поэмăсем те темĕн чухлех, пурне те асăнас пулсан, кунта вырăн та çитмĕччĕ.

* * *

Ларура подстрочник пирки хытă тавлашрĕç. (Вулакансене асăрхаттарни.— Подстрочник тесе акă мĕне калаççĕ. Сăмахран, Н. И. Шелепин пĕр-пĕр сăввине вырăсла куçармалла. Анчах тăлмачĕ чăвашла пĕлмест. Вара ăна вырăсла та, чăвашла та чухлакан пĕрер çын сăвăласа мар, хаçатри заметка пекех вырăсла тĕплĕ каласа парать, сăввăн виçине кăтартать. Çавăн тăрăх тăлмач вырăсла сăвă çырать. «Чăвашларан çавă куçарнă», тесе лартса ярать вара аяла. Тĕрĕссипе хăй вăл чăвашларан мар, вырăсла подстрочникрен куçарнă.) Подстрочник тăрăх çеç куçарса ларакан тăлмачсене доклад тăвакансем те, тухса калаçакансем те хытă ятларĕç. Грузи поэчĕсене вырăсла куçарса пурăннă Н. Заболоцкий сăвăç грузинла вĕреннĕччĕ, А. Блокпа В. Брюсов поэтсем эрмен чĕлхипе интересленнĕ, мĕншĕн хăш те пĕр тăлмачсем Вăтам Ази поэчĕсене 40—50 çул куçарса пурăнса та пĕр сăмах ни узбекла, ни туркменла, ни казахла е кăркăсла вĕренеймен,— намăс, терĕç. Англи, Франци, нимĕç чĕлхисенчен куçаракансем те подстрочник тăрăх çеç куçарса пурăнсан, мĕн пулĕччĕ-ши, терĕç.

Вĕсем тавлашнă хушăра эпĕ хамăр республикăри ĕçпуççене аса илсе лартăм. Мускаврa пурăнакан тăлмачсене чăвашла пĕлменшĕн ятласан та, ятламасан та пырĕ, вăл, тепĕр тесен, вĕсен ĕçĕ, вĕсен ирĕкĕ. Анчах хамăр республикăра çирĕмшер, вăтăршар çул е çуралнăранпах чăваш çĕршывĕнче пурăнакан хисеплĕ тăлмачсем пĕр сăмах чăвашла вĕренмесĕр юлма ăс çитернĕшĕн те хурламалла, те мухтамалла ĕнтĕ? Чăваш литературипе интересленекен, пирĕн произведенисене вырăсла куçарма хăтланакан, куллен-кунах пирĕнпе юнашар ĕçлекен этемшĕн пирĕн чĕлхе те ют пулмалла мар пек ĕнтĕ. Туссен чĕлхи кирек камшăн та çывăх пулмалла.

Пирĕн произведенисене вырăсла куçарнă чухне подстрочник тăрăх мар, тӳрех чăвашла оригиналтан куçар-

сан лайăх пуласси кăламасăрах паллă. Чăпăл туна шыв-не кăларса сапнă чухне йăнăшпа ачине те кăларса ўкер-нĕ, тенĕ пек, подстрочниксем-мĕнсем туса аппаланнă хушăра произведени техĕмĕ те, хăйне евĕр сăнарĕ те таçта çухалать. Акă сире пĕр тĕслĕх. Халиччен эпир Иван Мучи çырнă «Чышкă тытăмне» те, И. Тăхтин «Ыт-тĕкелне» те, подстрочниксем тутарса, вырăс издательст-висене темиçе хут та сĕнсе пăхнă. Кашнинчех вăл ка-лавсене каялла тавăра-тавăра паратчĕç. Çырăвĕсенче вара е «темскер çитмест пек», е тўрех «начар», тесе çы-ратчĕç. Чăваш калавĕсене Мускаврa вырăсла кăларма хатĕрленнĕ май, «Чышкă тытăмĕпе» «Ыт-тĕкеле» Ми-хаил Яковлевич Сироткин тўрех вырăсла куçарчĕ. Хай-хи калавсенех Мускавра тепĕр хут вуласа пăхрĕç те: «О, хитре калавсем, пичетлес!» — терĕç.

Мĕн калама ĕнтĕ, чĕлхемĕре пĕлекен тăлмачсем çук-кипе çеç подстрочниксемпе аппаланма лекет. Подстроч-ник тени вăл начар произведенисемшĕн кăна лайăх. Унта пĕри пĕр сăмах, тепри тепĕр сăмах хушать те начар ка-лавах е сăввах вырăсла чиперленсе тухать. (Çав вăхăт-рах тата урăхла та пулать: çав тери хитре произведени-сем, урăх чĕлхене куçарсан, хăйсен тĕсне çухатаççĕ, тĕк-сĕмленсе юлаççĕ.) Çавăнпа эпĕ вырăсла чăвашлинчен ăста пĕлекен авторсемех: «Калавсене (е сăвăсене) вы-рăсла куçарттарасшăн та подстрочник тума кама па-рас-ши?» — тесе çўренине курсан, аяккалла пăрăнатăп. Чылай республикăсенче вырăсла пĕлекен авторсем («У нас в ауле» повесть авторĕ Евтых, тат çынни Авша-лумов калавçă, абхаз çынни Георгий Гулиа, «Навстречу жизни» роман авторĕ, осетин хĕрарăмĕ Езетхан Уруйма-гова т. ыт. те) тўрех вырăсла çыра пуçларĕç, кам та пулин мĕн те пулин хушса парасса кĕтсе, подстрочник-сем тутарса çўремеççĕ. Малашне кун пирки хăюллăнах калаçма пулассăн туйăнать. Енчен те эсĕ чăн-чăн ху-дожник пулсан, вăл кирек мĕнле чĕлхепе çырсан та си-сĕнет...

Юлашкинчен — критика пирки. Çук вăл пирĕн. На-чар куçарнă кĕнекесем пичетленсе тухаççĕ,— критика шăпăртах. Лайăххи тухать — критика каллех нимĕн те шарламасть. Вара эпир «лайăх тени — мĕн тени, япăх тени — мĕн тенисене» те пĕлми пулса каятпăр. Хăшĕ лайăх, хăшĕ начар — никам та пĕлмест. Кам мĕн вулас тет — çавна вулать, кам мĕн илес тет — çавна илет. Са-мотек.

Литературӑри ӗҫсене ҫынна кура хакласси те критика ҫуккинченех килет. Ҫав ҫын лайӑх ҫырма тивӗҫ, тетпӗр те эпир, вӑл кирек мӗн, кирек мӗнле ҫырсан та, тӗлӗнсе кӑна ларатпӑр: «Мӗнле лайӑх ҫырать вӑл! Мӗнле талант!» Теприн пирки: ку ҫынтан пайти пулас ҫук-ха, тетпӗр те, вӑл кирек мӗн ҫырсан та, ним вырӑнне те картмастпӑр. Вырӑсла куҫарма тытӑнсан ҫеҫ тепӗр чухне япӑх тени е вӑтам тени — лайӑх пулса тӑрать, «лайӑххи» — япӑха тухать. Критика тишкерсе тухнӑ пулсан, лайӑххине тата ытларах лайӑхлатма, начаррине тӳрленме пулӑшӗччӗ.

*1962.*

# ЭССЕ

## САЛАМОВ ПУРНĂÇĔ ПИРЕ МĔНЕ ВĔРЕНТЕТ

Эп астăвасса чăваш литературинче ун пек чаплă çын та çукчĕ пуль. Сăвăçсемсĕр пуçне, паллах ĕнтĕ. Пирĕн ик-виçĕ сăвăç ячĕ вăтăрмĕш çулсенчех Чăваш çĕрĕн чикки урлă каçнăччĕ. Пĕрисем мухтатчĕç вĕсене. Теприсем хурлатчĕç кăна. Кусем çав икĕ вăй пĕрне-пĕри çапăнса кăларакан вут çутинче ытларах та ытларах курăнса тăратчĕç.

Халĕ эп вĕсем пирки мар, пьесăсемпе калавсем çырнă пĕр юлташ пирки каласа парасшăн. Хушаматне унне Саламов тейĕпĕр, ячĕ Степан Викторович пултăр...

Мĕншĕн тĕрĕс ячĕпе каламастăн? — тейĕç. Мĕншĕн тесен çынни вăл тахçанах çĕре кĕнĕ. Уншăн халь кирек мĕн çырсан та пурпĕр. Пурăнакан тăванĕсене çеç кӳрентерме пултарать. Манăн вăл çынна тăрă шыв çине кăларас е питлес шухăш мар, ăна таварăс ĕмĕтпе те çырмастăп эп. (Мана вăл нимĕн те туман.) Ун пурнăçĕнчи хăшпĕр пăрнăçсене аса илсе, вулакансемпе пĕрле шухăшласа пăхас килет кăна. Тен, вăл хама ăнланса илме те пулăшĕ. Кашни çын пурнăçĕнчех мĕн енчен те пулин вĕренмелли пур. Çынна хурласа тăкма — çăмăл; хур тума ни пĕлӳлĕх, ни ăсталăх кирлĕ мар. Ăнланса илме— самаях йывăр вара.

Çынсем пурте япăх, эпĕ çеç лайăх теекен — йăнăшать. Хĕвел çинче те пулин хура пăнчăсем пур тенĕ. Çынна ырланă чухне те, хурланă самантсенче те хăвна ан ман. Хăвăнпа виçсе ил. Çынсем ырă пулсан, эс ху мĕнле? Сана ырă пулма кам чарать? Ыттисен çитменлĕхĕ пекки сан хăвăн çук-и?

Тăшман пирки çеç кураймасăр çырма пулать.

...Çапла, чи паллă çыравçăсенчен пĕриччĕ вăл. (Çак çурма çĕнĕ сăмах каярахпа Саламов пурнăçĕнче ытла та тĕрĕсе килчĕ. Тӳррипе те, ытарлăн та.) Хаçат-жур-

налсенче пичетленсех тăратчĕ вăл. Кĕнекисем тухатчĕç. Калавсем, очерксем, статьясем. Пьесисене театрсем лартнă. (Ĕçĕ эп Шупашкара киличчен пулса иртнĕ.) Прозăпа çыракансем ăна прозаик тетчĕç, пьеса çыракансем — драматург, критиксем — критик. Хăйне вăл драматург та критик тенĕ-мĕн. (Анкетăсенче çапла çырнă.)

Нумайăшĕ пиртен чăвашла çеç çыраççĕ. Степан Викторович чăвашла та, вырăсла та пĕрпекех ăстаччĕ. Тутарла пĕлетчĕ. Вăл ĕнтĕ пулас писатель çав халăхсем çывăхĕнче ÿснинчен килнĕ. Граждан вăрçи çулĕсенче салтакра та ытларах вырăс хушшинче çÿреме тивнĕ.

Пурнан пурнăçра темĕн те курать çын. Вăл тĕлĕшпе Саламов та ыттисенчен уйрăм пулман. Йăнăшнă та, тÿрленнĕ те. Ну, эппин, тен, кăшт ытларах йăнăшнă пуль, сахалтарах тÿрленнĕ. Хăш та пĕр чухне — ĕмĕрте пĕрре çеç те пулин — кашниех хăйне ыттисенчен лайăхрах тесе шутлать. Саламовăн ав ун пек шутлама сăлтавĕ те пулнă терĕмĕр. Хăрушă инкеке лексен, пĕррехинче ăна вырăссен аслă писателĕ хăтарнă. Тепрехинче облаçри парти организацийĕ пулăшнă.

(Эп каярахпа пĕлнĕ тăрăх, парти организацийĕсем Саламова пĕрре-иккĕ çеç те мар пулăшнă-мĕн...)

Ыррăнчен ырмасть, тет, çын. Пĕрмай алай туса тăрсан, мухтасан, чипер çын та атса каять. Саламов тавра çамрăксем кĕпĕрленсе çÿренĕ. Ара, чаплă çын-çке вăл. Ăна Мускавра пĕлеççĕ. Пысăк айăпне каçарнă. Пĕр калавне вырăсла, теприне акăлчанла куçарса кăларнă. (Вăтăрмĕш çулсенче ку вăл чăваш писателĕшĕн калама çук пысăк чысчĕ.) Çитменне Саламов — критик — çĕклеме те, путарса лартма та пултарать. Çавăнпа ăна çилентериччен çилентерменни.

Чăвашсем çапла каланă: малтан хăйне асла хуракан кайран кĕçĕне юлнă, тенĕ. Куна эп ĕçпуç малашне мĕнле аталанса кайнине асра тытса çыратăп.

...Тем пирки кĕмелле пулчĕ-çке ман ун патне. Саламов ун чухне Калинин урамĕнчи икĕ хутлă йывăç суртра аялти хутĕнче пурăнатчĕ. Пĕччен мар, çемйипе. Мана, унччен пĕр çул малтан çеç Шупашкара килнĕ хваттерсĕр çамрăка, пысăк чÿречеллĕ çутă пÿлĕмсем тĕлĕнтерсех пăрахрĕç. Тата — кĕнекесем. Тем чул кĕнеке. Энциклопедисем. Словарьсем. Хут купи. Хаçат-журнал. Вара тин хваттер хуçине асăрхарăм. Вăтам кĕлеткеллĕ-мĕн вăл. Хура çÿçлĕ, çутам сăнлă. Куçлăхпа. Таса кĕпе-тум-

тирлĕ. Çынпа ăшшăн калаçать. Сăнаса пăхать. Лăрма сĕнчĕ. Эп камне, ăçтан килнине ыйтса тĕпчерĕ.

Вăл вăхăта ман калавласкерсем ик-виççĕ тухнăччĕ те, Саламов куçĕ тĕлне те пулнă-мĕн вĕсем.

— Эсĕ таврари пурнăçа хăв вуланă кĕнекесем витĕр куратăн пулмалла, çамрăк йĕкĕт — партизансем çинчен çыратăн,— терĕ вăл мана.— Сан вырăнта эп хăв юратнă хĕрсене кăтартса парăттăм.

Ун сăмахĕ мана çилентермерĕ, савăнтарчĕ.

«Вăт ку писа-атель», тесе, мунчаран тухнă пек тăрласа сирпĕнсе тухрăм эп Степан Викторович патĕнчен. «Писа-атель» сăмаха тĕлĕнсе каланă май, эп пурне те пĕр харăс астуса тăтăм: хам Саламова курнипе хĕпĕртенине, вăл таса тумлине, хăюллине, хитре сăнлине, хваттерĕ ĕçлесе ларма аваннине, ун кĕнекисем нумаййине, Саламов мана тĕрĕс асăрхаттарнине.

Пурне те, пурне те!

Манăн ун произведенийĕсемпе тĕплĕнрех паллашас килчĕ. Вĕренмелле. Тепре курсан, калаçма. Пĕлме.

Пĕр вырсарникун эпĕ библиотекăна кайса лартăм. Малтан пьесисене пырса пачĕç. Ытла нумаях та марнĕн. «Çын йăнăшĕ», «Пиçен», «Завод чĕнет», «Панкрута тухни», «Хĕр...»

Хăшпĕрин ячĕсене халь манса кайнă.

Вуласа пĕтертĕм те хăраса ӳкрĕм. Мĕн пулнине хам та ăнланмастăп. Те тупа пуçланă юлташа сасартăк çухатрăм эп, те пуç тăрăх шыв ячĕç мана. Пьесисенчен чылайăшĕ килĕшмерĕçех тес мар ĕнтĕ, çырлахтараймарĕç. Вĕлерсех пăрахаймарĕç. Сăнарсем çук. Тăршшĕпех калаçаççĕ, калаçаççĕ. Унта та пулин пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмахсем кăна. «Геройсем» ни ӳсмеççĕ, ни улшăнмаççĕ. Чĕртсе тăратайман схемăсем. Пĕр аса юлмалли сцена, пĕр монолог çук.

Çапла шухăшларăм та эп чăваш драматургин «хуçалăхне» аса илсе лартăм. Пур-и унта çын кăмăлне хускатмалли пьесăсем? Нумаях мар, çапах пур. Чи малтан эп Ф. Павловăн вилĕмсĕр пьесисене, Н. Ефремовăн «Пуян Ќарукне», П. Осиповпа Н. Айзманăн хăшпĕр драмăллă произведенийĕсене картрăм.

Сцена çине тухса каламалли чаплă монологсемех, тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕрен ăнланмалли хирĕçӳллĕ е кăткăс сăнарсемех çук пулсан та, малашлăх аслă пирĕн. Пурăнма пулать.

Унтан эпĕ тепĕр тĕрлĕ те шухăшласа пăхрăм. Тен,

Саламов пьесисене вулама мар, сцена ҫинчен кӑтартма ҫеҫ ҫырнӑ? Сцена ҫинче чӗрӗлсе тӑрӗҫ вӗсем? Ҫирӗм темиҫемӗш ҫулсенче Чӑвашсен тӗп театрӗнче лартнӑ-ҫке-ха Степан Викторовичӑн пӗр-ик пьесине?

Ҫапла та иккӗленетӗн. Вӑл ҫулсенче пирӗн драматургсем те, куракансем те «ҫамрӑк» пулнӑ-ҫке, тетӗн. Ун чухне вӗсем хӑйсен ҫунат шӑтнине туйнипех савӑнса алӑ ҫупма пултарнӑ.

Тата эп хам? Ҫирӗм темиҫери йӗкӗт пурне те хӑй пӗлнӗ пек ҫырма ӗмӗтленет. Тиркеме юрататать.

Темӗн-ҫке, темӗн.

Аптранӑ кӑвакал кутӑн чӑмнӑ тенешкел, эпӗ Саламовӑн прозине тытрӑм. Тен, кунта ӑнӗ ман?

Повесть сыпӑкӗ. Калав. Татах калав. Фельетон. Шӳт пекки... Анчах шӳчӗ ытлашши кулӑшла мар. Кулак пулсан, вӑл, паллах ӗнтӗ, мӑн хырӑмлӑ, урлӑ уралла. Пупӗ — ҫӑткӑн. Патшалӑх пурлӑхне ҫаратакан — ухмах. Учреждени пуҫлӑхӗ — бюрократ. Сутуҫӑ — чее...

Пурте йӑлӑхтарса ҫитернӗ палӑрӑмсем.

«Ахаль» калавсенчен самай хитрисемех пур-мӗн. Ку мана пӗртте тӗлӗнтермерӗ. Ҫавна кӗтнӗ те эпӗ. Ҫапла пулмалла та вӑл. Ахальтенех писатель ятне илмен пуль сын. «Улюна» калавра Саламов хӗрарӑм пурнӑҫне хӗрлӗхрен тытӑнса икӗ ача амӑшӗ пуличченхи тапхӑра сӑнаса тухать. Ялти чипер хӗр пӗр йӗкӗте юратса пӑрахни; вӗсем пӗрлешни; Улюна упӑшки ӗҫке ерни; ун арӑмӗн кӑмӑлӗ хуллен сивӗнсе пыни; вӗсем уйрӑлса кайни...

Теприн аллинче ку «материал» роман ҫырма ҫитмелле. Саламов ӑна пӗр калава чыхса тултарнӑ. Хӑй хӗрарӑм пулнӑ пек курать вӑл Улюна чӗрине. Пур енчен те тӗпчет ӑна...

Вулакан ӗненет автора, мӗншӗн тесен, ӗҫсем йӑлтах ун куҫӗ умӗнче пулса иртеҫҫӗ.

Хӑшпӗр калавӗнче тем пулать-ҫке Саламова, кӑтартса пырать-пырать те вӑл сасартӑк калама тытӑнать. Хаҫатри пек. Апла та капла; революциччен ӗҫсыннисем япӑх пурӑннӑ...

Йкке икӗ хут тӑваттӑ, тенӗ майлӑ.

Тепӗр тесен, кун пек ҫырни те пирӗн хушӑра ҫӗнӗ япала мар. Ӗҫ ӳсӗмлӗрех пултӑр тесе-ши, вӑл «меслетне» ыттисем те час-часах усӑ куратпӑр.

Пӗр канмалли кун эпӗ (ун чухне кашни тӑватӑ кун хыҫҫӑн пиллӗкмӗшне канатчӗҫ) библиотекӑра Степан Викторовичӑн критикӑлла статйисене ыйтса илтӗм. Пӗр-

не вуласа пăхрăм, теприне вуларăм та... Мана çынсем ятлаçнине курса тăнă чухнехи пек туйăнса кайрĕ, пĕтĕм ăшчик тапранчĕ. Критикăлла статьясем мар, памфлетсем, фельетонсем, тейĕн. Такана çинчи вĕри шыв пек чӳхенсе тăраççĕ. Тумламĕсем сирпĕнсе лекнипех такама уртарса ярĕ. Пĕтĕм шывне пуç тăрăх ярсан?..

Аслă критиксен статйисем те вĕри ĕнтĕ. Анчах вĕсем тинĕс пек тарăн. Вĕсенче пурнăçа пĕлни, культура, пысăк шухăш. Саламов статйисенче — чăркăшу.

Шăп кăна çапла: классиксен статйисем — тинĕс, кунăн — кӳлленчĕк шыв. Пĕрисен — философи, кунăн — примитив.

Саламовăн ăслă статьясем çук теместĕп эпĕ. Пур, анчах сахал. Пуринчен ытла вăл çилленнĕ вăкăр пек кĕрмешет: хирет, тĕкет, ватать. Пĕр-пĕр писателĕн биографийĕнче хура пăнчă асăрхать — ăна виличчен каçармасть, тăрла-тăрла илет. Вăл унăн (Жаверăн) ĕмĕрхи тăшманĕ (Жан Вальжан).

Саламов çичĕ хут виçсе пĕрре касмасть, пĕр хут виçсе çиччĕ касать. Шухăшласа тăмасть, тӳррипе кастарать: начар, вăтам, лайăх (ун пек хак та пур Саламов чĕлхинче). Анчах мĕншĕн япăх, мĕн енчен лайăх — ăнлантармасть. Е пĕтĕмĕшле сăмахсемпе каласа иртсе каять.

Унăн кашни статйи хыççăнах хаçат-журналсенче шăв-шав тапранать. Редакцие пынă çырусене пичетлеççĕ, опровержени параççĕ, хаяр постановленисем кăлараççĕ. Акă унăн пĕр доклачĕ пирки чăваш писателĕсен 1934 çулхи пухăвĕ мĕнле решени йышăнса хăварнă пулнă:

«С. Саламов Р. писатель пултарулăхĕпе социализмла реализм çинчен тунă докладра... Р. пултарулăхĕнчи йăнăшсене большевикла уçса парайманнине, ун вырăнне писателе нимĕнле принципсăр тапăнса варалас çул çине тăнине палăртас».

Пухура тухса калаçакан пĕр юлташ, паллă писатель, Саламов пирки çапла та каланă:

«Пирĕн хушăра, литература ĕçне тăвакансем хушшинче, литература критикĕсен, литературăна ертсе пыракансен ятне илессишĕн тăрмашакан, ĕçе пăтраштаракан этемсем, формалистсем тата ыттисем те сахал мар. Çавнашкал çынсенчен пĕри — Саламов. Вăл чăнахах та ĕçе пăтраштаракан этем, формалист пулса тăнине эпĕ 1930 çултах, чăваш писателĕсен V-мĕш съездĕнчех, тăрă шыв çине кăларнăччĕ», тенĕ.

Вăл çулсенче пĕрне-пĕри тĕрлĕ ятсем парса пĕтерессинчен хăрасах тăман курăнать, çак çӳлерех асăннă паллă писатель çав пухурах Саламова механист, эклектик, переверзевец, вульгаризатор, демагог тесе пĕтернĕ. Шел пулин те, чылайăшне тĕрĕсех каланă.

Саламовăн критикăлла текен статйисене вуланă май, эпĕ уншăн хăра пуçларăм. Капла пурне те хăйне хирĕç тăратсан, мĕнле пурăнĕ вăл? — терĕм. Пĕрмаях йĕкĕлтесе, астарса, вăрçтарса лар-ха эс, мĕн пулса тухĕ? Тарăхтарсан, турчка та тавăрма пĕлет тенĕ-çке.

Тата акă мĕн тĕлĕнтерет: Саламова хирĕç чи хаяррăн тапăнакансем — Саламов вăрçнă çынсенчен ытла, вăл мухтаса çырнă писательсем. Мĕнтен килнĕ вăл — эп ăна тахçанччен ăнланаймарăм. Кур-ха эс: çын сан произведенисене юлташла тишкерсе çырать, ырришĕн мухтать, çитменлĕхсене мĕнле пĕтермеллисене кăтартса парать. Эс ăна, уншăн тав тăвас вырăнне — питрен суратăн. Лайăх-и вăл?

Шухăшласа ларсан-ларсан, манăн Саламов произведенийĕсенчен пĕр кĕнеке туса пăхас килчĕ. Хам ăшра. Сăнамалăх. Юрăхлă произведенисем тупăнĕç-и ун пĕр кĕнекелĕх? Эпĕ «Çын йăнăшĕ» пьесăна илтĕм. Мещенлĕхе питлени. Ырри çĕнтерни. Ку вăл ĕмĕрхи тема. «Пиçен» пьесăн тĕп шухăшĕ те — тĕн сĕрĕмĕпе кĕрешесси — халех кивелес çук. Калавсенчен эпĕ «Тăрлав», «Улюна», «Иванюк», «Мухтавлă Матви» ятлисене илтĕм, кулăшлисенчен «Çунатлă шоферпа» тепĕр юмореска хушрăм. Хамăр классиксем пирки çырнă ик-виçĕ статйине кĕртсен, хайхискер пĕр вун-вуникĕ листаллă кĕнеке пулать. Ытла пысăк кĕнекех те мар, анчах авторĕ ку вăхăта хĕрĕх темиçесенче çеç пулнине, вăл халь хĕрсе ĕçлеме кăна тытăннине шута илсен, сахалах та мар темелле.

Саламова иккĕмĕш хут ăçта тĕл пулнине астумастăп, калаçăвĕ çеç пуçра çиççе тăрать. Мĕн кăна пĕлмест иккен вăл! Мĕнле ăслă вăл. Мĕнле интереслĕ унпа калаçма. Хăйпе ларакан çыннăн кашни репликине вăл электричество токĕпе перĕнтернĕ пек туять. Кĕрĕп! хыпса илет, тавлашса кĕрсе каять, ĕнентерет. Тăрса утса çӳрет, чарăнать, пырса куçран чăрр пăхать. Унпа калаçакан çын хăйĕнчен икĕ хут кĕçĕнни те, ун умĕнче, паллă писатель умĕнче, никам пĕлмен çын тăни те, — тата ытти çĕр тĕрлĕ уйрăмлăх та уншăн ним те мар.

Тепĕр чух эс, кив кипке тăхăннăскер, палланă çынсене курса вăтантарас мар тесе, Атăл хĕрринчи буль-

варпа çĕрелле пăхса килелле утатăн. Сасартăк Саламов курать сана. Хитре тумланнă вăл, тап-таса хыръннă. Пушмакĕсем йăлтăр та ялтăр. Хăйĕнчен духи-одеколон шăрши перет. Сана тытса чарать те вăл, карлăк çумне пырса тăрса, тем каласа парать, ыйтса тĕпчет. Е столовăйне ертсе каять те санпа пĕрлех çĕрулмипе килька пулă çисе ларать.

Кĕскен каласан, хăйне мăнна хурассисем, хăпартланса çӳрессисем-мĕнсем пĕртте çукчĕ ун. Ача пек тӳрĕ кăмăллă та кăра çилĕллĕ этем пулнă-мĕн вăл. Хам эп Саламов хаярлăхне курман, çынсем каланинчен кăна пĕлетĕп.

Унпа калаçса тăнă чух çын хăйне бадминтонла выляна чухнехи пек туятчĕ. Ниçта пĕр саманта пăрăнма, уйрăлма çук. Вăл хăй хыпса çунса тăратчĕ, сана та тивертсе яратчĕ.

Ытла пурне те чĕре патне илетчĕ-çке вăл. Пурне те пĕлмеллеччĕ ун, пурне те вĕрентмелле, пур ĕçе те хутшăнмалла... (Куна каярахпа асăрха пуçларăм-ха эп.)

Пĕр сăмаха ку тĕрленчĕкре çине-çинерех каларăм пулсан та, татах çырма тивет. Çапла: тĕлĕнеттĕм эп. Чухăн хресчен ачи пулнă-çке Саламов, хăш вăхăтра ун чухлĕ вулама ĕлкĕрнĕ вăл? — теттĕм. Ăçта çитсе тухмасть калаçу — пĕлет Степан Викторович. Пĕтĕмĕшле пĕлнипе çеç те сахал-ха, хăш тĕлте мĕн çырнине астăвать. Вăл кĕнеке пирки пыракан тавлашăва хутшăнать.

Писательсем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ тет-мĕн: пĕрисем нумай çыраççĕ те сахал вулаççĕ, тет, теприсем нумай вулаççĕ те сахал çыраççĕ, тет. Саламов иккĕмĕш ушкăна кĕретчĕ пулмалла. Вăл вуламан кĕнеке юлмастчĕ, тейĕн.

Киле таврăнсан, эпĕ шухăша кайрăм. Мĕншĕн Саламов произведенийĕсем авторĕ пек мар? Хăй вăл çав тери интереслĕ. Ăна кунĕн-çĕрĕн итлесе ларсан та йăлăхмастăн. Произведенийĕсем, пичете юрăхлă пулсан та — кичем. Геройĕсем ăслă мар; йывăç урапа утса çӳреççĕ. Пурте пĕлекен сăмахсемпе калаçаççĕ *.

«Ма вара эсир пур айăпа, пур çитменлĕхе те Саламов çине йăвантарасшăн? Ун произведенийĕсенчи кăл-

* Вырăссен паллă писателĕ Николай Евдокимов хăйĕн «Реальность и воплощение» ятлă кĕнекинче кун пирки çапла çырать: «Писательпе ун кĕнеки яланах пĕр мар, çапах та вĕсем ашшĕ-амăшĕпе ачисенчен çывăхрах. Çыравçă хăйĕн кĕнекинчен япăхрах пулма пултарать, анчах ун пек пулма тивĕç мар вăл», тет.

тăксем ыттисен те чылайĕшин пур-çке ĕнтĕ», тейĕ вулакан.

Тĕрĕс, эпир асăннă айăпсем те, эпир асăнайманнисем те, е пурте пĕр харăс, е уйрăммăн-уйрăммăн, ытти писательсен кĕнекисенче те тĕл пулаççĕ. Анчах ма пурне те Саламов çине тиетпĕр-и? Сăмах ун пирки пынă-ран.

Çавăн пек вăт. Çынни (писателĕ) — интереслĕ, кĕнекисем — пулсан та пыраççĕ, пулмасан та темех мар. Пысăк çухатăвах мар. Çырма ларсан, писателĕн шухăшне такам тăлласа лартать тейĕн.

Урăхла та пулать иккен. Халăх çинче М. Зощенко пек тунсăх çын çукчĕ, теççĕ. Кĕнекисене ав пĕтĕм тĕнче вулать.

Пыр та пĕл эсĕ хăшĕ ăслипе хăшĕ ăслăраххине.

Темиçе çул хушши эпĕ Саламовпа ытла çывăхах пулман. Куркаланă ăна, тĕл пулсан, темиçе сăмах перкелешсе те илнĕ. Унăн литературăри ĕçĕ ăнсах пыманни çинчен те, çемйи саланса кайни çинчен те илткеленĕ. Анчах çывăххăн интересленмен. 1937—1938 çулхи ĕçсемпе вăрçă уйрăм çын ытăвĕсене курăнмиех хупласа кайнăччĕ.

Тепре Отечественнăй вăрçă хыççăн асăрхарăм эп ăна. Хваттерсĕр тăрса юлнă Степан Викторович вăл йывăр çулсенче таçта ялта пурăнатчĕ пулас, хулана килсе лекнĕ кунсенче ачисем валли кĕпе-тумтир туянасчĕ тесе чупатчĕ. (Ачисем ĕнтĕ ун виççĕмĕш пуслăх çитĕнетчĕç.) Хăй кăштах пусăрăннăччĕ вăл. Шухăш-кăмăлпа мар, шăмшаккипе çеç, çакна астăвăр. Аллăран иртнĕ-çке çын. Пурнăçĕ те ачашласах тăман пуль ăна. Мăйăх-сухалне вăл ик-виçĕ кун урлă пĕрре çеç хыракан пулнăччĕ. Тумтирри те çавнашкалччĕ...

Пĕрмай ўпкелешсе çўретчĕ вăл. Театрта ун пьесисене лартма пăрахнă иккен. Издательствăра кĕнекисене плана кĕртмеççĕ. Унта ĕçлекенсем Саламов хăйсенчен иртсе каясран хăраççĕ-мĕн. Пур çĕрте те тăшман ун. Кĕвĕçў. Ăна ытла ăслă пулнăран юратмаççĕ.

Саламовăн çапа пĕлмен пушши (хаяр статйисем) ĕнтĕ сисĕнмеллех хăйне хĕне пуçланăччĕ. Вăл çынсен ĕçне тиркетчĕ, çынсем ăна икĕ хут ытларах тиркетчĕç. Саламов, аслисене вулаттарса та пулин, тата шăллăрах статья çаптарса кăларатчĕ. «Тăшманĕсем» те парăма юлмастчĕç. Мĕншĕн тесен эсĕ çынна мĕнле виçепе виçетĕн, çынсем те сана çав виçепе виçеççĕ.

Чарӑнса шухӑшласа пӑхма, хӑйне хушакан ҫӗр те пӗр йӑнӑшран вуннӑшне те пулин, ну, эппин, пӗр пиллӗкӗшне ҫеҫ те пулин йышӑнма ӑна хӑйне пысӑка хуни чӑрмантаратчӗ. Пӗр айӑпне те — пӗрне! — йышӑнмастчӗ вӑл. Ҫук ун нимле айӑп та! Пӗр кӑлтӑк-ҫитменлӗх ун ҫут тӗнчере — литературӑна чун-чӗререн юратни.

Шел, Роден скульпторӑн ҫак сӑмахӗсем Саламов куҫӗ тӗлне пулман пуль. Е вуласа та асӑрхаман-ши вӗсене старик? «Халал» ятлӑ статйинче аслӑ француз ҫапла ҫырнӑ:

«Эсир пӗлетӗр-ҫке: сирӗнпе пӗр вӑхӑтра ӗҫлекенсенчен чылайӑшӗ интригӑсем туса, пуҫлӑхсем умӗнче йӑпӑлтатса чапа тухаҫҫӗ, пуйса каяҫҫӗ; анчах ан ӳпкелешӗр: вӗсем чӑн-чӑн художниксем мар. Ҫапах хӑшӗ-пӗри вӗсенчен ҫав тери ӑслӑ; эсир вӗсемпе кӗрешес тетӗр пулсан, ӗҫлеме сирӗн пӗр вӑхӑт та юлмасть, пӗтӗм пурнӑҫӑр ҫавӑнта иртсе каять. Сирте художник сӳнет».

Журнал редакцийӗнче ӗҫлеме тытӑниччен эпӗ те ҫапла шухӑшлаттӑм: кӳрентереҫҫӗ Саламова, теттӗм. Кайран пӑхатӑп та: чӑнах та вӑйлӑ мар ун произведенийӗсем. Чӗре хӗрӳлӗхӗ ҫук вӗсенче. Ҫырас килнипе мар, урӑх сӑлтавпа ҫырнӑскерсем. Шухӑшласа ҫитермен вӗсене. Пьесӑри пӗр хӗрарӑм 33-ре. Ун тӑван хӗрӗ 24-ра.

«Ҫын тӑххӑртах ача ҫуратма пултарайман, ӗненместпӗр», тесе ҫыраҫҫӗ вулакансем.

Ҫынна пӗр ятлама тытӑнсан, пурин те чӗлхе кӗҫӗтет пулас. Пурин те хӑтӑрса илес килет. Мӗн те пулин пичетлеме ӗлкӗрейместчӗ Саламовӑн — рецензисем тухса тулатчӗҫ. Пӗринчен пӗри хаяр. Пӗринчен пӗри йӗплӗ. Ҫитменне, чылайӑшне хирӗҫ ним калама та ҫук — тӗрӗс вӗсем.

Саламов хӑйӗннех перет: тӑшмансен ӗҫӗ ку, аллисенченех сисетӗп, тет.

— Итле-ха, Степан Викторович, нивушлӗ йӑлӑхтармасть сана пӗр сӑмах?

— Мӗн йӑлӑхтармалла?

— Пӗр ҫыннӑн ун чул тӑшман пулма пултараймасть. Ытла нумай вӑл. Пӗри урлӑ каларӗ — тӑшман. Урлӑ пӑхрӗ — тӑшман...

— Сана тӑшман теместӗп-ҫке? Тивӗҫлӗ пулсан, ятла мана.

— Уншӑн тавтапуҫ. Анчах пӗр тус кӑна сахал вӑл. Пӗр тӑшман пуличчен, ҫӗр тус пултӑр, тенӗ ваттисем.

— Кӗнеке тухсан, миллион тус пулать ман, курӑн ак.

— Эрнеччĕ те вĕт, паян эрнекун мар-ҫке.
— Ĕненместĕн-и?
— Ĕнентер эс мана.

Саламов хут листине шăкăр-шакăр туртса кăларать те сăмах пани е тупа туни пекки ҫырса парать. Ҫав-ҫав вăхăта эп (ҫулне, ҫулталлăк вăхăтне кăтартать) кĕнекене кăларса, пурнăҫа майлаштарса яма тăрăшăп. Сăмаха тытмасан, этем те мар эпĕ, тесе алă пусать. Хутне эп пуҫтарса чикетĕп *.

Мана та вулаттарать вăл сăмахлă произведенине.

— Ну, мĕнле? — тет тепĕр кун пырса кĕнĕ-кĕмен.

— Санăн мухтанине илтес килет-и е тĕрĕссине каласа-и?

— Манăн пичетлеттерес килет.

— Вăл паллă-ха. Урăх ҫын ҫырнă пулсан, ку пьеса, тен, халиччен тухса кайĕччĕ. Халĕ — выртать ав.

— Мĕншĕн?

— Хăвăнтан ыйт.

— Ҫавăн пекех начар-и вăл?

— Ун пекех мар. Вăтам произведени темелле. Ун хăраххисене пайтах вуланă эп. Шухăшĕ ун ни ҫĕнĕ, ни кивĕ. Сăнарĕсем шупка. Персонажсем пурте пĕр чĕлхепе калаҫаҫҫĕ. Эс ăна хăв та ним хавхаланмасăр ҫырнă, вулакан-куракан кăмăлне те хускатас ҫук вăл. Ҫавăнпа пичетлеме килĕшменнисем тĕрĕс тăваҫҫĕ.

Степан Викторович сăнĕ улшăннине кура, эпĕ кăштах ҫу сĕретĕп.

— Редакторсем шанаҫҫĕ сана. Эс лайăх ҫырма пултарасса такам та пĕлет.

Ку вăл, ăста ҫырассисем-мĕнсем, пĕр вунă-вуник ҫулсем каялла пулнă-ха. Халĕ, «тăшманĕсемпе» ҫапăҫа-ҫапăҫа, вĕсене «тăрă шыв» ҫине кăларса, йăлтах сапаланса кайнă Саламов. Шухăшласа ларма ун вăхăт та, кăмăл та ҫук пулмалла. Ăшне ав вĕчĕх тулнă.

— Ҫынсене начар ҫырма юрать-ҫке (кунта темиҫе ят асăнать Степан Викторович), ма эсир мана ҫеҫ классиксенчен вĕрентесшĕн? — хирĕлет вăл.— Тахҫанах пĕлетĕп эп вĕсене. Эсир катăк йĕмпе чупса ҫӳренĕ чухнех вуланă.

Куна вăл тĕрĕсех калать. Вуланă вăл. Вуланă ҫеҫ те мар, тишкерсе те тухнă. Тĕпчевлĕ статьясем ҫырнă. Ҫам-

---

* Саламовăн ун пек ҫырăвĕ-обязательствисем ман патра халĕ те упранаҫҫĕ-ха. Интересленекенсене кăтартма пултаратăп. *Автор.*

рăк писательсене пулăшма «Литература грамотин никĕсĕсем» ятлă кĕнеке те кăларнă.

— Сана начар ҫырма юрамасть, Степан Викторович. Эсĕ хăв, критик, писательсене ҫапла вĕрентнĕ. Санăн е классик пулмалла, е... мĕн...

— Мĕн? — тет те Степан Викторович, ун пичĕ улшăнать.

Вăл эпĕ мĕн каласшăн пулнине ăнланать («е ҫырма пăрахмалла»), ҫапах тӳсет-ха, ятлаҫмасть. Кĕҫех эпĕ Саламов мĕншĕн вăрҫманнине те тавҫăрса илетĕп. Тепĕр кунах вăл манăн ĕҫри сĕтел ҫине пĕр купа алҫырăвĕ пырса хурать — пьеса, темиҫе калав, пĕр статья. Шухăшĕ паллă ун: ман произведенисене тăшмансем пичетлемеҫҫĕ, эсĕ, тус пулсан, журналта кăларма пулăш вĕсене.

Эпир пĕр калавпа статйине суйласа илетпĕр. Ыттисене Степан Викторович ним каламасăрах портфельне пуҫтарса чикет.

Еҫ хыҫҫăн килелле утнă май, эпир Атăл хĕррине ҫитсе чарăнатпăр.

— Е виҫҫĕмĕш вариант та пур,— тетĕп эп, эрне каяллахи калаҫăва ҫĕнĕрен тапратса: — Начар произведенисене пичетлес тесен, санăн Саламов пулма пăрахмалла...

— То есть? — тет Степан Викторович, куҫлăхне хывса. Қапла вăл вуҫех курми пулать.

— Ҫиле хирĕҫ сурмалла мар...

Саламов чĕнмест.

Халĕ шухăшлатăп та, тен, чирлĕ пулнă вăл? Е ҫыранман тапхăр тулаштарнă ăна. (Писательсен ҫавăн пек мыскара та пулать, теҫҫĕ.) Эпĕ, вăл вăрҫманнине кура, «отна» тăлпанă ăна. Ҫамрăк ҫын ытла харсăр-ҫке.

— Пĕр сăмах ыйтсан, ҫилленмĕн-и, Степан Викторович?

Қунтан япăххиех нимех те пулмĕ-ха, тенĕ майлă, вăл аллине ĕшенчĕклĕн сулать.

— Ыйт атя...

— Ёлĕкрех эс лайăхрах ҫыраттăн-ҫке, мĕн ҫапса хуҫрĕ сана? Мĕн тери пичетлесшĕн ĕнтĕ, ҫук, мая килмеҫҫĕ. Начар.

Қун пирки Степан Викторович хăй те пуҫне ватнă пулмалла, тӳрех калаҫма тытăнать.

— Хĕрĕхура ятлă чĕрчуна утма вĕрентни ҫинчен илтнĕ-и эс? Қу чĕрчун ытла ним пĕлмесĕр чупса ҫӳретҫке, терĕҫ тет те ученăйсем хăш ури хыҫҫăн хăшне илсе

пусмаллине вĕрентрĕç, тет. Хайхискер, вĕтĕртеттерсе çеç ыткăнакан чĕрчун, кашни утма тытăнмассерен шухăша кайса тăракан пулчĕ, тет. Хăш урине малтан илсе пусмалла, хăшне кайран, хăшне варринчен? Юлашкинчен йăлтах пăтрашăнса кайрĕ, тет, мĕскĕн. Утма та манчĕ, тет.

— Эсĕ хăв ирĕкӳпе вĕреннĕ-çке?

— Пурпĕрех вăл. Ĕлĕкхи çынсем пĕри те литература теорине ятарласа вĕренсе ларман. Ун пек институтсем те пулман ун чух. А. С. Грибоедов дипломат пулнă. Ф. М. Достоевскипе Гарин-Михайловский — инженерсем, А. П. Чехов — врач, Л. Н. Толстой — çар çынни. Çавăн пек çынсем çеç литературăра çĕнĕ сăмах каланă.

Ун чухне ĕнентĕм эп Саламова. Халь шухăшлатăп та — çук, тĕрĕс мар вăл. Калас сăмаху чĕрӳне çунтарса тăрать пулсан, пĕлетĕн-и эс теори, çук-и, пурпĕр калатăн.

Саламов пурнăçĕ йăлтах хĕсĕнсе çитрĕ. Темиçе çул хушши ун пĕр япала пичетленмест. Ялта чухне капла та пурăнкаланă-ха вĕсем. Ялта çерçи вилмест. Ĕне чунĕ пулнă вĕсен. Çĕрулми.

Пурăна киле Степан Викторович ĕнине суттарнă. Унтан пӳрчĕпе хуралтисене. Кĕнеке тухсан, пурне те туянăпăр, тенĕ вăл. Халĕ вĕсем хула хĕрринчи çĕрпӳртре хĕсĕнкелесе пурăнаççĕ. Çемйи пĕр пус укçасăр ларать. Хăй унта-кунта тăранкаласа çӳрет. Тем хулăнăш портфельпе вăл. Саламов ăна нихçан та аллинчен ямасть. Çывăрнă чухне те вăл ăна пуç айне хурса выртать, теççĕ шăлйĕренсем.

Укçа-тенкĕрен сыпăнкаласа пытăр тесе, ачисене шеллесе, ĕçе вырнаçтараççĕ ăна — тухса каять, мĕншĕн тесен учреждени пуçлăхĕ, «сĕм вăрман» (ним пĕлменнисене Саламов çапла калать), писательрен темиçе хут ытларах укçа «сăптăрать» иккен. Кун пек тĕрĕсмарлăха Степан Викторович чăтма пултараймасть-мĕн.

Саламовпа килĕштерме те пулать — май шăлмалла çеç: ĕç ан хуш ăна, ĕçе хăçан пынипе ĕçрен хăçан кайнине ан сăна.

Пĕрмай тулашса çӳрет вăл. Кӳ çитмест те вăл апла мар. Плагиаторсем (литература вăррисем) хисепре ăв, халтурщиксем кĕнеке хыççăн кĕнеке кăлараççĕ, тĕрĕслĕхшĕн çунакан Саламов асап тӳсет. Пĕрре ак вăл пурне те тăрă шыв çине кăларать. Кунта ун (Степан Вик-

торович портфельне çапса кăтартать) çĕр те пĕр тĕрлĕ факт...

Қалаçать, калаçать, калаçать вăл. Пухура, çынсем патĕнче, урамра, редакцисенче — ăçта итлекенсем пур — çавăнта. Ӳпкелешет вăл. Çынсене питлет. Вăрçать. Тапăнать. Элеклет. Суять. Мĕскĕне перет. Пурте кураймаççĕ ăна. Çул памаççĕ. Хăйĕн, çырусемпе çăхавсемсĕр пуçне, пĕр çĕнĕ произведени çук. Йăлтах тахçан çырнисем. Пусăрăнса ĕçлесе ларма ăшĕнче ун нимĕн те юлман пулмалла. Пĕтĕмпех тăкса, акса, сапаласа пĕтернĕ Саламов. Сăмах вĕççĕн салатнă.

Тен, вăл хăйĕн нимĕн те çуккине туйса илнипе çапла хăтланнă? Хăйпе хăй кĕрешес вырăнне çынсемпе çапăçнă?

Аçтан ăнланăн пурне те. Çын чунĕ кĕрĕк çанни марçке, ăна тавăрса пăхма çук.

Саламов пурнăçĕн юлашки тапхăрĕ çапла вĕçленчĕ. Писатель ячĕпе усă курса, паллакансенчен укçа кивçен илме тытăннă вăл. Қамран çĕр, камран пин. Қам мĕн чул парать — çавăн чул.

Қаланă вăхăтра парăмне татайманнипе тата хăйĕн тăшманĕсем хĕтĕртнипе лешсем хайхискер хутсем çырасыра янă. Ун çумне Саламовăн ытти айăпĕсем хутшăннă.

Ана писательсен союзĕн членĕнчен кăларчĕç.

Юлашки кунĕсене вăл жалобăсем çырса ирттерчĕ. Қалавĕсемпе статйисем кĕске кăначчĕ, çырăвĕсем тем тăршшĕ. Анчах, хăй пурнăçĕ пекех, пăтранчăк, арăшпирĕш.

*1976.*

# ÇУЛ ЙЫХРАВĔ

## ÇУЛ ТЕРЧĔПЕ ÇУЛ САВĂНĂÇĔ

*Ура утсан, çул юлать.*
*Чăваш ваттисем каланинчен.*

Те çынсем куçса çӳренĕ тапхăртан юлнă канăçсăрлăх вăл, те хресчен пурнăçĕнчен юлнă хăнăху, кашни çулах мар пулсан та, ик-виçĕ çулта та пулин пĕрре санăн çул çӳресе таврăнмалла. «Выход» туса илмелле. Шăмшакка хускатмалла.

«Чирĕ» вăл çапла пуçланать. Килте лара-лара, йăлтах мăкланса каятăн пек эс. Аллу-уру хытса ларать. Шухăшусем кахалланаççĕ. Хăв ĕçӳ хăвна çырлахтармиpулса çитет. Таçти аякри стройкăра çеç, эс çук çĕрте чăн пурнăç кĕрлет пек. Каяйса курасчĕ çавăнта. Ĕçе хутшăнасчĕ. Унти йывăрлăхсен тути-масине астивсе пăхасчĕ.

Иккĕленкелесе, пĕрер эрне-мĕн ирттерсен, тухан та ута паратăн вара. Е мĕн çине те пулин ларса вĕçтеретĕн. Кирек ăçталла пултăр та — çул пултăр, тетĕн. Хăлхара çил шăхăрса пытăр. Йĕри-тавра аслă тĕнче сарăлса вырттăр.

Çурăм хыçĕнче рюкзак сан. Аллунта — туя. Билет илме черет тăратăн. Палламан çынсемпе калаçан. Пулман ялсемпе хуласенче савăнса утса çӳрен. Хăна килĕн коридорĕнче тул çутăласса кĕтсе ларан...

Байкал-Амур магистральне тунă çĕре çитсе тухрăм çапла. Анчах пурте çӳрекен Усть-Кут, Звездный, Магистральный, Бам (çавăн пек ятлă станци те пур), Тында таврашĕсене мар, аслă стройкăн чи хĕвелтухăçĕнчи вĕçне. Курас-тăк чи аякрине, чи йывăррине курас, терĕм.

...Аспа çӳрени лайăххине пĕле тăркачах ялан ăспа çӳрейместĕн çав, тепĕр чух шухăшламан ĕç те туса хуран. Эпĕ, пуш алăпа, тăр-пĕччен, ик эрнене тайгана кĕрсе кайнине илсен, темле кĕтмен çĕртен пулчĕ вăл. Ним хатĕрленмесĕр. Малтан хатĕрленсе хумасăр. Килтен çула тухнă чухне эп ун пирки виççĕ выртса пĕрре тĕлленмен.

Лере ҫитӗп те йыша хутшӑнӑп, тенӗ. Чи тӗрӗсси маншӑн ҫавӑччӗ. Пӗрисемпе пӗрер эрне, иккӗ ӗҫле. Теприсемпе туслаш...

Хурӑнлӑра пӑхап та — апла тума сахалтан ҫур ҫул кирлӗ. Ну, хӑть пӗр виҫ уйӑх. Мана виҫ эрнене янӑ. Унта та пулин икӗ кунӗ ҫул ҫинче иртрӗ. Ирӗксӗрех хайхискер, блокнотна йӑтса, «объектсем» тӑрӑх тулӑксӑр чупма тытӑнатӑн. Қаюра пек ҫӳрен. Ним курмасӑр. Ним ӑнланмасӑр. Темле поселок е лапам, сӑрт-ту ячӗсене асӑнаҫҫӗ. Ургал, Чегдомын, 29-мӗш километр, теҫҫӗ. Анчах Ургалӗ ӑҫта, 29-мӗш километрӗ мӗн, вӑл хӑш енче — пӗлместӗн. Шутлӑ кунсем чакнӑҫем чакса пыраҫҫӗ. Ӗҫӗ пулмасть. Ӗмӗтленнӗ пек пулмасть.

Киле таврӑнаспа тин кӑшт ӑнкара пуҫларӑм эп. Куҫсем уҫӑлчӗҫ. Эпир Хурӑнлӑра пӗккӗн пӗр вӗҫӗнче ларатпӑр иккен. Пулас чугун ҫул ҫинчи тепӗр поселок, Ургал,— пӗккӗн леш вӗҫӗнче. Тӳрӗ унта виҫҫӗр аллӑ километр кӑна. Анчах — кайма ҫук: ҫул ҫук. Тайга. Шыв-шур... Ургала ҫитмелле пулсан, халӗ поездпа пӗтӗм «пӗкӗ» тӑрӑх ҫаврӑнса тухмалла. Тавра ҫулпа. «Пӗккӗн» тӑрри — хальхи Ҫӗпӗр магистралӗ. Виҫҫӗр аллӑ километр вырӑнне вара пин километр ытла тӑваҫҫӗ.

Хурӑнлӑран Ургала тӳрӗ кайса пӑхнисем те пулнӑ. Унтан БАМ иртмелле-ҫке-ха. Пӗлтӗр кӗркунне, ҫӗр шӑнсан, пӗрисем вездеходпа ҫӳресе килнӗ. Ҫав хушша эпӗ ҫуран утса тухасшӑн. Пӗр ӗҫ пултӑр хӑть. Чугун ҫул хӑш тӗлте пулмаллине хам куҫпа курас. Ҫутҫанталӑкӑн никам тӗкӗнмен кӗтессипе паллашас. Строительсем тӳсмелли йывӑрлӑхсен ҫӗр пайӗнчен пӗрне те пулин хам ҫине илес.

Курманнин курас килет, курнин сурас килет, тенӗ-и-ха чӑвашсем? Ара, пулин. Халӗ каймасан, урӑх хӑҫан кӗрсе курӑп эп тайгаваррине? Пурӑннӑҫем ҫын ҫамрӑкланмасть, ватӑлсах пырать.

Пӗр-икӗ кун эпӗ ҫак ӗмӗтпе суйланса ҫӳрерӗм. Майлӑ та шухӑшларӑм, хирӗҫ те. Апла та, капла та.

Иккӗленӳсем ҫаксемччӗ:

Ирӗк пуҫҫӑн вӑл «ҫулпа» никам ҫӳреместь. Хабаровск писателӗсем (кунти, Инҫет Хӗвелтухӑҫӗнчи, ҫынсем! Тата пӗччен-иккӗн те мар, виҫҫӗн тан) кӑҫалхи май вӗҫӗнче Хурӑнлӑран Ургала тӳрӗ тухас тесе килнӗ-мӗн те — каймаҫ ав, кӗркунне, ҫӗр шӑнтсан, кӑҫӑпӑр, тенӗ.

Ку — пӗрре.

Унтан — карттӑ ҫук май.

Апăт та шиклентерет. Мĕн илмелле кӳ шăрăхра?

Самаях пысăк та чурăс Амгунь шывĕ урлă каçмалла пулать, теççĕ, ун урлă мĕнпе каçăп? Ашра вăрттăн шухăш илĕртсе, йăпатса тăрать — ан хăра, мĕнле те пулин майлашăнĕ, каçатăн, каларĕ тесе калăн, тет.

(Яланхи пекех, малтан шухăшланипе тайгара курни пĕре килмерĕç. Хама кĕтнĕ чи пысăк хăрушлăхсем пирки эпĕ тайгара тин пĕлтĕм.)

Кайма хĕтĕртекеннисем, хавхалантараканнисем — çаксемччĕ:

Хурăнлăран Ургала çити çеç те мар; малалла та (темиçе пин çухрăмри Мускав таранччех) тайга урлă телефон линийĕ тăсăлать. Эппин, тайгара ăна астуса тăракансем те пур-тăр-ха.

Пулас çул тăрăх геологсемпе тĕпчевçĕсем ĕçлеççĕ, тен, вĕсене курăп.

Тата чи йыхăраканни — малти пĕлмен çул. Тĕпсĕр кӳлĕ çынна хăй еннелле туртнă пекех, туртать, туртать вăл.

Тайгана эп юлташпа кĕрĕп тенĕ. Мана пĕр монтер, тĕне кĕнĕ эвенк çынни Иванов Владимир, ертсе кайма пулнăччĕ. Вăхăт çитсен, Иванова ямарĕç манпа. Ĕçре кирлĕ терĕç. Вара ман ирĕксĕрех пĕччен кайма тӳр килчĕ. Хăрассисем-мĕнсем çукчĕ-ха. Çукпа пĕрехчĕ. Мĕншĕн тесен çул мĕнле пулассине пĕлмен эп. Чĕрен пĕр кĕтессинче çеç темле сивĕ пăнчă сисĕнтерсе тăратчĕ. Пĕчĕк пăнчă. Пăр катăкĕ...

Тайгине эп унччен те куркаланă-ха. Анчах вăл кашни çĕртех расна-çке. Çĕпĕрте — кĕрĕ; карап тумалли йывăççем. Урал леш енчи тайга пирĕн йăлăм вăрманĕнчен те уйрăм мар пуль. Ку ак — çурçĕрти тайга...

Эпĕ çула тухма хатĕрленнине пĕлсен, пĕрисем, манпа пумай хут калаçнисемех, мана пуçласа курнă евĕр сăнаса пăхса илетчĕç те нимĕн те шарламастчĕç. Пĕр йĕкĕт, многотиражкăра ĕçлекен Ромашков Александр, вăрттăн çапла ыйтрĕ: «Çуран çӳресе курнă-и хăть эсир?» — терĕ. Тепри, кунти ĕçсен пуçлăхĕ, Виктор Михайлович Еремеев офицер, тата тӳрĕрех каласа хучĕ: «Сирĕн БАМ трассипе Ургала çитес килет-и? — терĕ.— Ку чухне, техника саманинче, ма çуран утса çӳресе асапланмалла? Вăхăта сая ямалла? Ыранах вертолетпа лартса яратпăр».

Çук, тайгана çиелтен çеç курса иртнипе çырлахас килмерĕ ман.

Пĕр эрне эпĕ хама çĕнĕ çĕр шыракан пек туйса çӳрерĕм. Пĕтĕмпе çĕнĕччĕ. Халиччен курманни. Унтан ăшри шĕкĕ вăранчĕ. Канăçсăрлăх. Таçта пурнăç тулашĕнче эпĕ. Пĕччен утрав çинчи Робинзон. Пур çĕрте те хĕрӳ ĕç вĕресе тăрать, пĕр эпĕ çеç ним тумастăп. Çапла кун иртет те çĕр иртет. Пурнăç та иртсе кайма пултарать. Эппин, çитет сӳпĕлтетсе çӳресе. Чăсрах Урăла тухас. Çынсемпе хутшăнас. Киле таврăнас. Сĕтел хушшине кĕрсе ларас. Ĕç каçалăкĕ вăл ман — шурă хут...

Эп васкаса ӳкрĕм. Ĕселенсе-хыпаланса шурлăхсем урлă каçрăм, вăрман витĕр чупнă пек утрăм, утнă пек чупрăм. Часрах, часрах...

Манăн пĕтĕм ĕмĕтĕм-шухăшăм та, тайгана килсе, çак çулпа утасси пулнă тейĕн. Такам хушнă ĕç. Урок.

Тухрăм эпĕ утса-чупса. Киле çитрĕм. Сĕтел хушшине васкаса кĕрсе лартăм. Çырма тытăнтăм та — пĕрне асăрхаман, теприне маннă...

Тĕрĕс калаççĕ-мĕн: писатель ĕçĕ вăл çырма пĕлни мар, курма пĕлни, теççĕ. Курма пĕлни те ăна тишкерме пултарни.

Ку — пĕр чăнлăх.

Тепри — акă мĕн. Командировкăна кайса курнипе-паллашнипе çеç нихçан та вăрăм ĕмĕрлĕ япала çырма çук. Эп çыраяс çук. Паллах, командировкăн та усă пур. Юна хускатать вăл. Шухăша хăвăртлатать...

Шăл суранĕ майлă вăл ман, çул йыхравĕ. Пĕр-ик эрнерен, виççĕрен лăшт ярать те, вара, хулана таврăнса, хăнăхнă ĕçе кӳлĕнетĕн. Анчах халь ĕнтĕ йăлтах урăх. Вăхăтлăха урăх. Пурне те чĕрĕ шывпа çуса илнĕ пек.

Çухатасси те, тупасси те часах çул çинче. Пуйăспа кайнине аса илетĕп. Эсĕ çуттуна сӳнтерсе çывăрма выртатăн. Пуç айĕнче вакун кустăрми шăкăлт-шакăлт, шăкăлт-шакăлт туса пырать, вакун кисренет, вентиляци труби чăнкăртатса кĕвĕ калать. Çывăрса кайма — çывăрса кайма хăтланса пынă хушăра сасартăк чĕре шар çурăлса каять, ăш хыпса илет. Эсĕ тĕлĕнсе, хĕпĕртесе тăрса ларатăн. Халиччен канăç паман тĕлли-паллисĕр шухăшу сан ярт уçă, хевтесĕр сăнарсем чĕрĕлсе тăнă, чи хитре те витĕмлĕ сăмахсем чĕлхе вĕçне кăтăкласа тăраççĕ. Вĕсене халех, вĕриллех хут çине ӳкерсе хумалла. Ирхине пĕр минут тăхтамасăр киле таврăнмалла е, пĕр-пĕр гостиницăна вырнаçса, çĕрне-кунне пĕлмесĕр çырмалла, çырмалла...

Тăрса çутă çутмэ ырă мар пек — çынсем çывăраççĕ. Вара сиксе чĕтрекен ăшчикпех пуçна минтер çине хуратăн. Ирччен пĕрре куç хупмасăр иртет, минтер пуçна çунтарать. Пулас савăнăç вăй панипе çеç эсĕ тўсмелле маррине тўсетĕн, чăтмалла маррине чăтатăн.

Меммеленмелли, çемçе кăмăла тўрре кăлармалли ирхине те тупăнать. Анса юлсан, ĕçре мĕн калĕç, тетĕн. Апла та капла. Хăвна шансах пĕтермесси те пур. Икĕ эрне-и, пĕр уйăх-и командировка срокĕ, çав хушша эсĕ вĕри çатма çинчи пек ăшаланса иртеретĕн. Сĕтел хушшине ларма ĕмĕтленсех кун кунлатăн та çĕр çĕрлетĕн.

Те ывăннипе, те хăнăхса çитнипе, командировка вĕçнелле шухăшсем унччен хиллех пĕçертми пулаççĕ. Вăрăма тăсăлнă савăнăç сĕвĕрле пуçлать. Сăмахсен çивчĕшĕ сўнет. Сăнарсем шупкалаççĕ.

Киле çитсе ўкиччен тата темиçе кун иртет. Унтан васкасах отчет çырса памалла. Тахçан пуçăннă ĕçсене пĕтерсе пăрахмалла. Пуху итлемелле. Юлашкинчен сĕтелў хушшине кĕрсе ларатăн та... çук, илĕртмест материал. Чĕрене ăшăтмасть. Çырсан та пырать пек ăна, çырмасан та тем мар. Пурне те астăватăн ху, анчах йăлтах — сивĕ. Шлак.

Çĕр хут та каланă эп хама паян, ак халĕ тумалли ĕçе нихçан та ўлĕмрене ан хăвар, юлнă ĕç çине юр çăвать тесе. Çĕр те пĕрремĕш хут каллех çав йăнăшах тунă. Вара ўкĕннĕ, ўкĕннĕ, ўкĕннĕ.

Пĕр писатель çапла калать: «В жизни человека важна только та минута, которая уже наступила, но еще не прошла, и кто ею не пользуется сполна, тот осел», тет. (Çын пурнăçĕнче çак çитсе тăнă самант çеç, паянхи кун çеç паха, кам та кам унпа туллин усă курма пĕлмест, çав тăп-тăр ухмах, тет.)

Çак сăмахсене шăп кăна ман пирки каланă.

— Тарăхтарать шăпам-ăраскалăм. Мĕнле кăна пуçне чикме ĕлкĕрет вăл пур çĕре те. Аçтан ун чухлĕ хирĕçўпăтрашу тупса çитерет! Çĕр çинче миллион, миллиард, триллион ĕç пуль, шăпа, шыравçă йытă пек, пĕрне те асăрхамасăр хăвармасть, пурне те ура хурать, хирĕçтерет, вăрçтарса ярать. Тепĕр чухне эп вăрттăн мĕн те пурлин туса хума хăтланатăп, тен, арăмпа ăраскалăм сисмесĕр юлĕç, тетĕп. Асту, юлĕç сисмесĕр. Вĕсем ăна манран малтан пĕлсе, палăртса хунă. Темиçе тĕрлĕ чăрмав шутласа кăларнă. Тĕлĕкре курăннă кĕселпе кашăк хуш-

шинчи конфликтран тытӑнса, чи пысӑк хирӗҫӳсем таранах — йӑлтах шӑпа «шӳчӗсем» вӗсем,— тесе, хӑйӗн пӗтӗм инкек-синкекӗшӗн шӑпине-ӑраскалне питлетчӗ ман пӗр юлташ. Конфликт сӑмаха вӑл пӗрремӗш сыпӑк ҫине пусӑмласа калатчӗ. Ко́нфликт тетчӗ. Ко́нгресс тетчӗ.

Ҫавнашкал ман ҫулҫӳревсем те хӑшпӗр чухне конфликтран тытӑннисем пулнӑ. Пӗррехинче эпӗ Совет Союзӗн чи инҫетри кӗтессисене ҫитсе курма шут тытрӑм. Каяс-тӑк каяс терӗм.

Анчах терт пур та термен (укҫа) ҫук-ҫке. Мана ҫӗн ҫӗре куҫарас тӗлӗшпе ӗҫлекен кантура ҫитсе пӑхма сӗнчӗҫ. Эшелонсем ӑсатма вӗсене ҫын кирлӗ пулаканччӗ, терӗҫ.

Кайрӑм ҫаксем патне.

— Вӑхӑтлӑха кирлӗ пулать, шута илсе хурӑпӑр,— терӗ мана кӑххӑм-кӑххӑм ӳсӗрекен Николай Васильевич Жуков.

— Инҫе каймаллисем те пур-и?

— Инҫисем те пулаҫҫӗ.

— Ҫӗнӗ Ҫӗр утравӗ ҫине е Камчаткӑна ҫитнех-и?

— Сахалина пӗр эшелон ӑсатмалла.

— Сахалин та пырать. Вӑл та Ҫӗрпӳ мар.

— Каларӑн. Вунӑ пин километр,— тесе, Николай Васильевич йӑл кулса илчӗ, вӑйсӑр аллипе ман адреса блокночӗ ҫине ҫырса хучӗ. Кирлӗ пулсан, систерӗп, терӗ.

Кӗтрӗм-кӗтрӗм эп Николай Васильевич чӗнессе, кӗтрӗм-кӗтрӗм те кӗтме те манса кайрӑм. Ҫул шухӑшӗ ман тахҫанах урӑх шухӑшпа улшӑнчӗ. Килтен те тухас килместчӗ пӗр хушӑ. Унтан чирлесе ӳкрӗм. Мана больницӑна хучӗҫ.

Больницӑран тухсан, пӗр вӑхӑт сывалмаллаччӗ, вӑй пухмаллаччӗ пуль-ха. Ӑҫта та пулин кайма мар, ҫул пирки шухӑшланипех ман ун чухне ҫӳҫпуҫ вирелле тӑратчӗ. Шӑп ҫав кунсенче эп Николай Васильевичран ҫыру илтӗм. Тепӗр виҫӗ кунтан Сахалина тухса каймалла, эшелон хатӗр, эсир ун комиссарӗ, начальникӗ ҫавҫав юлташ пулать, тесе пӗлтерет ыр кӑмӑллӑ пуҫлӑх. (Шел, эпир тавранниччен пурӑнайманччӗ вӑл.)

Мӗн тӑвас тен эс, сӑмах патӑн — тытма пӗл. Ирӗксӗрех ҫула тухма тиврӗ...

Кӗнеке ҫырма ҫӑмӑл-и? — тесе ыйтаҫҫӗ тӗлпулусем вӑхӑтӗнче вулакансем,

Камшăн мĕнле пуль ĕнтĕ вăл. Тата — произведенине кура пуль.

Каласçĕ-çке-ха: кĕнекесем — ачасем пек, теççĕ. Вăхăтсăр «çуралнисем» часах вилеççĕ. (Вулакан манса каять вĕсене.) Вăл произведенисене çырма та кирлĕ пулман. Çырни те пырĕччĕ (авторĕсем вĕсене аллисене хăнăхтарма çеç те çырма пултарнă), пичетлемелле пулман.

Вăхăтлă çуралнисем хушшинче те, çынсен хушшинчи пекех, пысăк талантсем сахал. Ĕмĕре юлмаллисем вара тата та сайрарах. Пинтен пĕри.

Ман пирки калама та кирлĕ мар пуль? Эпĕ ытла та мĕшĕлти. Чакаланса ларма юрататăп. Çынсем каласçĕ: эпир малтан шухăшласа хуратпăр та вара шăкăр-шăкăр çеç çырса пăрахатпăр, теççĕ. Эпĕ, ав, чылай чухне... хут çинче шухăшласа ларатăп.

Паллах ĕнтĕ, сасартăк пырса хупланă шухăшсем те пулаççĕ. Ун пек чухне çырса кăна ĕлкĕр.

Унтан çынсем пĕр-пĕр произведени çырнă чух малтан хăртаса кăна каятпăр, теççĕ. Шухăшне часрах хут çине ӳкерме. Қайран вĕсем, çав писательсем, алçырăвне якатса тухаççĕ. Çавăн пирки каланă пуль-çке пĕр сăвăç — «хумханмасăр, савăнмасăр лартăм сăвă юсаса», тесе.

Кунта та çынсем пек мар эпĕ. Çырса хунă тĕл е сыпăк мана, унăн авторне, пур енчен те çырлахтармалла пулса çитмесĕр те эпĕ малалла каяймастăп.

Çук, ман ĕç пирки калаçни мĕнле çырмалла марри çинчен калаçни кăна пулĕччĕ.

Йывăр ĕç теççĕ — писатель ĕçĕ. Эсĕ чăн-чăн çыравçă пулсан, санăн чунна илет вăл. Анчах эсĕ ӳпкелешместĕн уншăн, савăнатăн çеç. Пĕр вăхăтра темиçе çын пурнăçĕпе пурăнасси, темиçе çын шухăшне шухăшласси — мĕн пултăр тĕнчере унтан ырри! Персонажсем хушшинче сан уйрăммăнах юратнă çынсем те, тăшмансем те, сана итлеми пулса, хăй пĕлнĕ пек пурăнма тытăннисем те пулаççĕ. Сăмахран, «Таната» романри усламçă хĕрне Паçана эпĕ кĕнекине çырса пĕтерсен чылайран тин ăнланса илтĕм. Ытла ăслах мар çын кăна тесе эп ăна. Сăнĕ-пуçĕ те хăйне тайăнччĕ ун. Лутра вăл, пăсăк куçлă; пĕрмай тарласа çӳрет... Пĕррехинче тинкererex пăхрăм та эп ун çине — чунлă вăл. Чĕп-чĕрĕ çын. Юратма та пĕлет Паçа. Хăй мĕнлине те курать. Эпĕ ăна, аларан тытса, çавăтса пынă чух Паçа схемăччĕ. Ман аларан,

автор аллинчен, вĕçерĕнчĕ те вăл темиçе утăм çеç хăй тĕллĕн ярса пусрĕ — чĕрĕлсе тăчĕ. Манекена чун кĕчĕ. Çавăнпа çакнашкал вывод турăм эп (çынсем тахçанах пĕлнĕ чăнлăха пĕлтĕм): «геройсене» нихçан та пусмăрламалла мар иккен. Ирĕкре пулмалла вĕсем.

Произведенири юратнă персонажа автор ытлашши ачашласа пăсса ярасси те пулать пирĕн ĕçре. Ах, героя пăсас марччĕ, лайăх ĕçсем кăна тутарасчĕ, ырă сăмахсем çеç каластарасчĕ тетĕн те — вăл пылакланса каять, хевтине çухатать.

Пĕр кĕнекене çырассишĕн кăна миçе пин километр тумарăм пуль эп! Çĕпĕре темиçе хут çитсе çаврăнтăм. Таймырта пулса куртăм, Болгари çĕршывне, океан варринчи Шри Ланкапа юмахла Индие кайса килтĕм. Самолетпа вĕçрĕм, поездпа çӳрерĕм, машинăпа ыткăнтăм, лашапа, пăланпа, йытăпа çӳреме тиврĕ. Çуран мĕн чухлĕ утман пуль тата.

Киле таврăнмассерен кашнинчех курни-илтнине çыра-çыра хунă. Çапла «Çĕпĕр хапхи», «Шушăра ирттернĕ пĕр кун», «Тăвалла сукмакпа», «Индире курса çӳрени» т. ыт. тĕрленчĕксем çуралчĕç. Вунă çултан пĕр пысăках мар кĕнеке — «Çул кĕнеки» пуçтарăнчĕ.

Çырлахтараççĕ-и мана çав очеркссем, çул çинчи дневниксем? БАМ çинчен çырнине халь пулсан савăнсах çĕнĕрен сухаласа тухăттăм эпĕ. Çĕпĕр тĕрленчĕкĕсенче те каласа пĕтерменни нумай. Анчах пурнăç малтан мала шăвать те, çыраканăн та пĕр вырăнта тăма çук.

*1976.*

## ТУПМАЛЛИ

### ҪАЛАВСЕМ


Кӗнеке . . . 3
Хупахри тытӑҫу . . . 7
Сӑпай Ѷаҫук . . . 15
Пиччӗшӗпе шӑллӗ . . . 55


### ЧАВАШ ҪЫРАВҪИСЕМ


«Тӑхӑръял» авторне асӑнса . . . 86
Шелепи пурнӑҫӗнчи виҫӗ самант . . . 91
Тӑхтипе паллашни . . . 96
Иван Мучи кӑмӑлне . . . 106
Вӗрентекен . . . 111
Шавлыне асӑнса . . . 115


### ВЫРӐС ҪЫРАВҪИСЕМ


Чӑваш ҫӗршывӗнчен тухнӑ поэт-радищевец . . . 119
Н. Г. Гарин-Михайловский ҫинчен . . . 123
Н. Д. Телешов . . . 129
Пирӗн аслӑ тусӑмӑр Горький . . . 141
Халӑх поэчӗ . . . 151
А. А. Фадеева аса илни . . . 159
С. В. Диковский . . . 167


### ЮЛТАШСЕН ЕҪӖ-ХЕЛЕ


«Ешӗл хунав» . . . 175
«Инҫе ҫулсем тӑрӑх» . . . 178
Талантлӑ кӗнеке . . . 183
Пӗр калавҫӑ ҫинчен . . . 187
Куҫару ыйтӑвӗсем пирки сӑмах хускатнӑ май . . . 190


### ЭССЕ


Саламов пурнӑҫӗ пире мӗне вӗрентет . . . 200


### ҪУЛ ЙЫХРАВӖ


Ҫул терчӗпе ҫул савӑнӑҫӗ . . . 213

*Федор Ермилович Уяр*

**Сила слова**

На чувашском языке

Редактор
*П. Е. Димитриев*

Художник
*А. И. Миттов*

Художественный редактор
*А. А. Афиногенов*

Технический редактор
*Н. В. Васильева*

Корректор
*Р. К. Куприянова,*
*А. А. Васильева*

Сдано в набор 29.11.79. Подписано к печати 16.05.80. НТ 35313. Формат 84×108 1/32. Бумага типографская № 1. Гарнитура литературная. Печать высокая. Физ. печ. л. 7,0. Усл. печ. л. 11,76. Учетно-изд. л. 11.78. Тираж 4000 экз. Заказ № 6439. Изд. № 47. Цена 90 коп.

Чувашское книжное издательство, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли. г. Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

## ХАКЛӐ ВУЛАКАНСЕМ!

Юлашки вӑхӑтра Чӑваш кӗнеке издательстви ҫакӑн пек ҫӗнӗ кӗнекесем пичетлесе кӑларчӗ:

**Агаков Л. Я.** Вырӑс каччи. Повесть. 184 стр. Хакӗ 75 пус.

Кӗнекере Совет влаҫӗ ҫирӗпленнӗ ҫулсенче чӑваш ялӗнче пулса иртнӗ кӗрешӗве сӑнласа панӑ. Вырӑс каччи Минай Гвоздев, чӑваш ҫӗршывне продотрядпа килнӗскер, вырӑнти кулаксемпе, тӗрлӗ таркӑнсемпе хӑюллӑн кӗрешет.

**Андреев А. Ҫ.** Сахалинӑм, манӑн Сахалин... Сӑвӑсем. 112 стр. Хакӗ 15 пус.

**Арсентий Андреев** (1937—1968 ҫҫ.) пултаруллӑ та пысӑк пуласлӑхлӑ сӑвӑҫсенчен пӗри пулнӑ. Хӑйӗн сӑввисенче вӑл ӗмӗрхи тайга витӗр чугун ҫул хывакана, пушхирсенче ҫӗнӗ хула ҫӗклекенсене, тырпул ӳстерекенсене мухтать. Унӑн лирики хӑйне евӗрлӗ, шухӑшӗ тарӑн та пуян.

**Долгов В. А.** Ленин сӑнарӗ — халӑх чӗринче. Статьясем. 208 стр. Хакӗ 50 пус.

Кӗнекене кӗртнӗ статьясенче автор аслӑ ҫулпуҫ сӑнарӗ чӑваш совет литературинче мӗнлерех палӑрнине ҫутатса парать.

**Лукин А. В.** Ҫӗр тӗнелӗ. Сӑвӑсемпе поэмӑсем. 96 стр. Хакӗ 15 пус.

Хӑйӗн ҫӗнӗ кӗнекине поэт Тӑван ҫӗршыв, коммунистсен партийӗпе вилӗмсӗр ҫулпуҫӑмӑр В. И. Ленин, Атӑл тӑрӑхӗнчи аслӑ стройкӑсем, ҫамрӑксен туслӑхӗпе таса юратӑвӗ ҫинчен ҫырнӑ сӑвӑсемпе поэмӑсем кӗртнӗ.

**Луч Г. В.** Ҫӗтӳҫ шӑхличӗ. Повеҫсемпе калавсем. 192 стр. Хакӗ 40 пус.

Повеҫри Кирукпа Верук сӑнарӗсем вулакана таса чунлӑ, вӗри чӗреллӗ паттӑр ҫынсем пулма чӗнеҫҫӗ.

**Осипов П. Н.** Пьесăсем. 480 стр. Хакĕ 1 тенкĕ те 80 пус.

Кĕнекене паллă драматургăн «Айтар», «Кушар», «Икĕ каччăн пĕр шухăш», «Ылханлă йăх», «Кăкламан тымарсем» тата ытти пьесисене кĕртнĕ.

**Теветкел Н. А.** Хĕвел вăййи. 96 стр. Хакĕ 20 пус.

Кĕнекене Николай Теветкелĕн суйласа илнĕ сонечĕсене кĕртнĕ.

**Тимбай А. В.** Ăнтăлу. Сăвăсем. 1112 стр. Хакĕ 15 пус.

Кĕнекене вăрçă темипе çырнă сăвăсем кĕнĕ. Поэт Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче çапăçнă, йывăр аманса килне таврăннă. Кĕнекери чылай сăвва вал çапăçу лăпланнă самантсенче е госпитальте сывалнă чухне çырнă.

**Эйзин П. Е.** Çĕмĕрт çути. Сăвăсем. 96 стр. Хакĕ 10 пус.

Хăйĕн сăвисенче автор тăван тавралăх илемне кăтартса парать, çуралнă çĕршыва юратма вĕрентет, унăн пуянлăхĕпе тăнăçлăхĕшĕн ĕçлеме, кĕрешме чĕнет.

**Юхма М. Н.** Ватă хурама вăрттăнлăхĕ. 264 стр. Хакĕ 55 пус.

Писателĕн çĕнĕ кĕнекине «Вăрман кĕнеки», «Будайка ачи», «Ачалăхри туссем» тата ытти повеçсемпе калавсем кĕнĕ. Кĕнекен тĕп шухăшĕ — çутçанталăка юратма вĕрентесси.

Хаклă вулакансем! Эпир сире асăннă кĕнекесене вуласа тухма сĕнетпĕр. Хăвăр шухăш-кăмăлăра çак адреспа çырса пĕлтерме ыйтатпăр: 428000. Чувашская АССР, г. Чебоксары, пр. Ленина, 4. Чувашское книжное издательство.



90 пус.

4138 Н

ЧАВАШ КЕНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ